**Михаил СУНТАЛ**

# *ИКĔ ТĔНЧЕ ХУШШИНЧЕ*

Фантастикăллă повеçсем

**ШУПАШКАР 2009**

ББК 84 Чув 7-4
С 90

СУНТАЛ Михаил.
С90 ИКĔ ТĔНЧЕ ХУШШИНЧЕ. Фантастикăллă повеçсем. Шупашкар, 2009. – 225 с.

Повеçсенче çырса кăтартнă пурнăç чăваш ялĕнче икĕ ĕмĕр хушшинче пулса иртет. Шкул ачисем ял тирпелĕхĕпе çĕр пулăхлăхĕшĕн тăрăшаççĕ. Пуласлăхра пĕтĕм тавралăх вĕсене çăтмах пек курăнса тăрать. Çав ĕмĕтпе пурăнакан ачасем ял ваттисемпе шкул учителĕсем пулăшнипе тăван çĕр вăрттăнлăхĕсене уçса параççĕ, пĕр-пĕринпе туслă, юратуллă, çĕрпе шыва, ўсен-тăрансене, чĕрчунсене кўрентермесĕр пурăнма вĕренеççĕ. Вĕсем тăрăшнипех Çĕр çинче чăн çăтмах пурнăç пуçланать.

Повеçри сюжетсем шкул программипе пĕр килеççĕ, пурнăç ăçтан тата мĕнле пуçланса кайнă пирки шухăшлаттараççĕ, ачасене ĕмĕтленме, чунлă тĕнче тата тĕрĕс пурнăç туса хума хистеççĕ.

Вăтам тата аслă классенче вĕренекенсем тата шкул учителĕсем валли.

ББК 84 Чув 7-4

# ТĔЛĔК

...Ванюк тĕлĕк тĕлленет. Вăл таçта Тибета авалхи аслашшĕсем патне кайнă пек. Йĕри-тавра - Çĕр пуçланса кайнă вăхăтрисемех пуль - çӳллĕ-çӳллĕ тусем. Ванюк хăй те питĕ çӳлте пулас. Кунта пĕрмай хĕвеллĕ. Тӳпе кăн-кăвак. Ту тăррисем шап-шур. Кунти тĕнче нихăçан та улшăнмасть тейĕн. Ванюк хăй те темле пĕр пĕчĕк ту пек туять хăйне. Мĕн-ма тесен кунта тусемсĕр пуçне урăх нимĕн те çук.

Чулсем çине такăна-такăна утса пырать Ванюк. Пушмакĕ те çĕтĕлсе пĕтнĕпе пĕрех ун, – чул атă-пушмака пит çиет. Эх, шел, тет вăл, куками илсе панăччĕ, халь тин ĕнтĕ кунта хальхи пек чаплă пушмак тăхăнса та кураймăн... Хырăмĕ те выçнă ун...

Ăçтаччĕ халь куками кăмакаран тин çеç пĕçерсе кăларнă тутлă-тутлă шăршлă тул çăкри?.. Асаплансах çитнĕ ача варне алăпа тыткаласа сăтăрса пăхать, шăтнă пушмак пуçĕнчен тухса тарма тăнă ура пӳрнисене пытаркалать. Ара, чул çине лектерсе ним те мар вĕт амантма пулать! Вара, ку ту хушăкĕнчен те хăтăлса тухаймĕ вăл. Ашшĕпе-амăшне те, Нинука та – тек кураймĕ. Ун юратнă хĕрĕ Нина пит хитре. Хĕр сăн ӳкерчĕкне каччă хĕврех чиксе çӳрет, тепĕр чухне кăларса пăхать те вара, чунĕ таçта çити кайса кĕрет. Халĕ те акă, чăтаймарĕ, асапне сирес терĕ пуль, ал тупанĕ çине вырнаçакан сăн ӳкерчĕке кăларса пăхрĕ. Хĕр, чăн та, ытла

хитре. Куҫа шартарсах ярать. Тутлă-тутлă пулса каять каччă чĕринче. Чĕре самантрах тăван ялта мĕн пулса иртнисене аса илет. Ах, ҫав хурăн айĕ! Мĕн чухлĕ хӳтлĕх, мĕн чухлĕ юрату пӳрмен-ши вăл Ванюкпа Нинука! Ҫав хурăн пулинччĕ кунта!..

Ҫапла пĕр асапланса та, пĕр савăнса пыракан ача сисмерĕ те, куҫа курăнми темле сукмак ҫине тухса пычĕ. Ҫул турри хăй илсе тухрĕ пуль. Ванюк такăнас мар-ха тесе, пуҫне ҫĕклемесĕр утса пыраканскер, сасартăках пĕр йывăҫ умне пырса ҫапăнчĕ. Йывăҫĕ те, йывăҫах мар пуль. Темле хытса кайнă, ҫулҫи те лайăххăн курăнмасть. Пĕчĕккĕ хăй... Ҫулҫи вырăнне кунта мĕн тем чухлĕ тĕрлĕ-тĕслĕ татăк е хăюсем ҫакса тултарнă. Ҫулҫисем те ҫавна пулинех палăрмаҫҫĕ. Ҫук мар вĕсем. Анчах, пĕрех ку темле авалхи киремет йывăҫне ас илтернĕ пекех... Ташкилтре те ҫапла йывăҫ пурччĕ. Унта пурăнакансем мĕн халĕ те авалхи чăваш тĕнне тытса пыраҫҫĕ... Вĕсен масарĕ те расна. Унта хĕрессем мар, ҫак ту хушшинчи пек шурă-шурă чулсем купаланса выртаҫҫĕ. Ванюкăн тăван ялĕнче те, Мижерте, ун пек масар пулнă теҫҫĕ. Пĕринче унти пĕр кĕмĕл ҫĕрре пĕр хĕр тупса тăхăннă тет те, хĕне кайса вилнĕ... Тетĕн хӳри кĕске, тет. Тем самантра тем чухлĕ япала куҫ умне тухса вĕлтлетсе илчĕ йывăҫ умĕнче тăракан ача пуҫĕнче. Ҫук, хăрас тăвасси те пулмарĕ ун. Мĕн хăрамалли тет!? Кун пеккине кăна курман вăл! Тĕпсĕр кӳлĕ тесенех кашни ҫыннăн сехри хăпать! Ванюк вара... унта темиҫе те пулнă.

Ҫапла хастарланса тăракан ача, йывăҫ ҫине тимлесерех пăхрĕ те, ах, турах, ун ҫумне

сĕвĕнсе ларнă шап-шур сухаллă старике курах кайрĕ. Сӳ-ӳ! сӳлетсе илчĕ ача чĕри. Тин çеç никам та çукчĕ вĕт-ха унта! Ăçтан сиксе тухрĕ вара ку ват çын? Йăвашшăн пăхать хăй. Ахăртнех, ача пит хăраса ан ӳктĕр тесе пăшăрханать. Хăй пĕр сăмах та чĕнмест. Ача мĕн тăвасса кĕтет. Ачи вара ку, пит хăраса тăраканни мар та, ватă енне пĕр утăм ярса пусрĕ те, кеххĕм-кеххĕм! тукаласа илчĕ. Чим-ха, тем ун пек чăхăмласа мар, вăл чăнласах «салам пултăр!» тесе каласшăнччĕ вĕт-ха. Халь вара чĕлхе çыхланнă ача ним калама аптраса тăчĕ. Чике сухаллă старик çавнă сисрĕ пулас, хăй те чисти ача пекех кĕххĕм-кĕххĕм! тутаркаласа сухалне шăлкаласа илчĕ. Сана та «салам пултăр!» терĕ пулас. Кун пек килсе тухнăшăн иккĕшĕ те савăнса кайрĕç, пĕр-пĕринчен ыйтса пĕлме тытăнчĕç.

Старик Каткей ятлă мĕн. Таçтан илтнĕ пек ку ята. Таçта Ванюк чĕринче тахçантанпах янăрать пек ку ят. Анчах ăçтан мĕн килнине тӳрех ăнланса илеймерĕ-ха ача. Старик вара кунта виççĕр çул ытла пурăнать мĕн. Çын çапла нумай пурăнма пултарни Ванюка пĕрре те тĕлĕнтермест. Вăл хăй те çĕр çултан кая мар пурăнасшăн. Вĕсен йăхĕнче пурте нумай пурăннă теççĕ. Анчах тăхта-ха, Мижер ялне пуçарса яракан çын мар-и-ха ку, Каткей текенскер. Шкулта каланăччĕ. Çĕвĕç Хĕветри, биологи учителĕ Хĕветĕр Хилипччă каланăччĕ. Акă ăçтан пĕлет вăл ку ята! Каткей вăл яла пуçарса яраканскер! Унăн вуникĕ ывăл пулнă тет. Апла, вăл та унăн пра-прамăнукĕ!

- Каткей тете, эсир кунта мĕн туса ларатăр вара? – кăшкăрса ячĕ Ванюк, хăй

тĕлĕннине пытараймасăр, - эсир тахçанах вилнĕ вĕт-ха!

- Çук вара, - кулкалать мучи. – Эпĕ, – хăвах ăнланса илтĕн, – сан юнра, мăнукăм. Эпĕ нихăçан та вилес çук. Эсĕ те вилместĕн. Эсĕ питĕ нумай-нумай çул пурăнăн. Акă çак панулмине çисе пăх-ха, мĕн тути калĕ вăл сана.

Ванюк умĕнче тăракан лутра кăна йывăç тем самантра ялтăрса илчĕ те куçа çулçăсем хушшине пытаннă улмасем курăнса кайрĕç. Чисти килти пахчари пеккисемех, леш эмел улми, сукмак хĕрринчи... Кăлтăр-кăлтăр кусса анса каятчĕç талса ӳкнĕ улмасем, çил кăшт килсе çапсассăнах. Ванюк çав улмуççи айĕнче çуллахи ăшă кунсенче ĕмĕтленсе ларма юрататчĕ. Тепĕр чухне тĕлĕрсех каятчĕ. Ун пек чухне ăна ним те кирлĕ марччĕ, телейлĕччĕ вăл, чунĕпе таçта çити вĕçсе каятчĕ. Кăвак тӳпери шурă пĕлĕтсенче тем тĕрлĕ чĕрчунсем куратчĕ, калаçатчĕ те... Халь çав улмуççин пĕр улми каллех акă ун ал тупанĕ çинче. Тутлă-тутлă шăршă сăмсана кăтăклать...

- Çи, - тет хайхи ку асамçă. Ку вăл, Каткей ятлăскер, асамçă çын пулнине Ванюк тӳрех ăнланса илчĕ-ха, анчах вăл сĕннĕ панулмине çиме те юрать, те юрамасть... – Çи, – тет. Çисен тĕнче чăнлăхне пĕлĕн. Кун пек каласан тӳрех пуçа пурнăç йывăççин сăнарĕ пырса кĕчĕ. Çав йыăç çимĕçне çинĕ мар-и-ха Адампа Ева? Çинĕ те усалпа ырă мĕнне тӳрех ăнланса илнĕ. Ай, тин тĕшмĕртрĕ ача, ку мĕн пĕлӳ йывăççи! Ăна çынсенчен турă хăй пытарнă пулас та çак тусем хушшине, вара халь мĕн тет, унăн çимĕçне Ванюкăн та тутанса пăхмалла пулать-и?! Ванюк хăраса кайрĕ. Ку панулмине

çисен вăл ырăпа усала уйăрма тытăнĕ. Усалĕ вара вăл кĕттермĕ, час килсе çапăнĕ. Ырри – куçа та курăнмĕ...

- Çи, - тет ача тăхтаса тăнине куракан старик. - Çи, ан хăра. Ăна çисен эсĕ тĕнчене çăлакан пулăн. Темле питĕ йыăр килсе тухсан та тăван çĕре пăрахмăн, унтах çăтмах туса çитерĕн те, нумай çул ача-пăчаллă пурăнса курăн.

Чăн та, Ванюк та çапла шутлать мар-и-ха. Мижер ялне вăл тахçанах çăтмах пек курать. Биологи учителĕ ăна çапла курма вĕрентнĕ. Кунта, тет, эпир çăтмах туса хурăпăр. Ачасем, Ванюк та кулатчĕç кăна. Çăтмах туса хурсан аванччĕ тетчĕç. Акă халĕ мĕн тăвăпăр-ха, ĕненĕпĕр-и çав халаплă ĕмĕте, е çук? Эх, чăнласах çапла килсе тухсан мĕнле лайăх пулнă пулĕччĕ те... Ача савăннипе каçăхсах каять. Куç умĕнче тулли шывлă çырма-çатрасем, вĕсем тавра улма-çырлаллă садсем... Уйра тырпул, вăрманта кайăк-кĕшĕк. Ялта вара – ача-пăча сасси. Ванюк ачасене пит юрататать. Шăллĕ-пиччĕшĕ çук пирки-и, хуларан канма килекен Антонпа вылять. Ăна ял пурнăçне хăнăхтарать.

Çавă ӳкерчĕк хавхалантарчĕ пулĕ Ванюка, кап! çыртса илчĕ тахçантанпах кăтăклантаракан, алă лаппи çинче тĕрлĕ тĕслĕн ялтăртатса выртакан панулмие. Чун таçта кайса кĕчĕ... Тусем те мар иккен. Ванюк килти пахчарах, сукмак хĕрринчи эмел улмуççи айĕнче выртать. Аллинче ун çыртăк. Те чăнласа пулчĕ ку, те чăнласа мар шутларĕ Ача, аллинчи панулмие çавăркаласа. Çапла анраса ларакан Ванюка çав вăхăтра çурăмран такам çемçен кăна кăлт! тĕкрĕ. Унтан кăлтăрттарсах кулса ячĕ. Нинук

мĕн. Хĕр хыçалтан siksе тухрĕ те ача аллинчи панулмие ярса илсе шатăрт! çыртрĕ... Тем пулчĕ. Вăл пĕрре кăвакарса, тепре хĕрелсе кайрĕ. Унтан тата хытăрах кăлтăрттарса кулса ячĕ те сукмак тăрăх анаталла чупса анса кайрĕ. Тыт мана, тыт, терĕç унăн шуррăн-шуррăн курăнса вĕлтĕртеттерсе пыракан шурă урисем.

Ванюк чăтаймарĕ. Сиксе тăчĕ те хĕр хыççăн ыткăнчĕ. Халь тин иккĕнтен ĕрĕхтерсе пыраççĕ. Мĕнле хитре иккен вăл çамрăклăх тени! Каччă хĕре хăваласа çитрĕ те ыталаса хăй тавра темиçе хутчен çавăрса илчĕ. Вара тем пулчĕ. Иккĕшĕ те ураран ӳксе çырма хĕрнелле йăваланса кусса кайрĕç. Шыв хĕррипе шăтса тухнă сарă-сарă чечеклĕ ама хупах хушшинче пĕр кана сывламасăр тенĕ пек шăпăрт выртрĕç. Ванюк каччă айне пулнă хĕре хăй те сисмерĕ, тем самантра чăпăрт! тутарса чуп туса илчĕ. Нинук татах тем кĕтсе пуль куçне хупрĕ. Хĕртен ыра-ырă шăршă кĕрет. Ку вăл эмел улминчен те тутлăрах пек. Пуçа çавăрать. Хĕрпе татах тем тăвас килет пек. Çук, Ванюк хăяймасть. Халь вăл хăй те хĕр пекех пĕр кăвакарса, пĕр хĕрелсе кайрĕ. Юрать Нинук курмасть. Хăйĕнчен хăй вăтанса кайнă каччă сиксе тăрать те хĕре çĕклесе илет, ура çине тăрататать. Пĕр-пĕрне куçран пăхăймаççĕ пулин те иккĕшĕ те питĕ телейлĕ курăнаççĕ. Çурта çутмалли кăна юлать тейĕн, тутисем хăлха таран сарăлнă, шăлĕсем, халь-халь çисе ярасла асавланнă, куçĕсем... куçĕсем те çиçĕм пек çиçеççĕ. Пĕр-пĕрне курманни кăна. Курманни лайăх та пулчĕ. Тин кăна темле кулăшла саманта тӳссе ирттернĕскерсем ахăрсах кулса ячĕç. Халь тин кулма та юрать ĕнтĕ. Мĕн

ёмётленни хăй тĕллĕнех пурнăçланчĕ. Çав панулми пулăшрĕ тем! Хĕр аллинчех-ха вăл, мур илешшĕ! Çавра çыртăка алăрах туйса илнĕ хĕр ăна тепĕр хут шатăрт! çеç çыртса илчĕ. Питĕ тутлă пулчĕ пулĕ çав, каллех кăлтăрттаттарса кулса ячĕ те çыртăка каччăна сĕнчĕ. Ванюк та пĕр шутласа тăмасăрах татах та татах çыртса илчĕ. Панулмирен ним те хăвармарĕ. Вăрри мĕнĕпех çисе ячĕ. Халь тин тутă тесен те юрать. Пурнăç йывăççин çимĕçне тутанса курнă каччăпа хĕр халь тин çырма тăрăх тем калаçса анса кайрĕç.

Вĕсем мĕнле кайнине улмуççи кăна курса тăчĕ. Акă каччăпа хĕр вĕлтрен пусса илнĕ çыр хĕрне çитрĕç те шыв урлă каçма тытăнчĕç. Каçми питĕ интереслĕ пулчĕ. Çырма урлă çил йăвантраса янă ватă йăмра выртать. Вăл калама çук питĕ пысăк. Виçĕ хăлаçа та кĕрес çук. Аслашшĕ лартниех. Акă ватăлса çитнĕ те вăйлă çил ăна йăвантарса янă. Усси çавă пулчĕ-и-ха? Йăмра кĕпер пулчĕ. Сарлака пулсан та каçнă чухне вулли силленет. Тарăн çырмана халь-халь персе анас пек пыраççĕ алăран ал тытнă каччăпа хĕр. Хушăран тем кулнă пекки те илтĕнет. Хăраççĕ пулинех. Акă вĕçне çитсен чупса тенĕ пек кайрĕç те йăлт-ялт! сиксе анчĕç çыран тепĕр енне. Йăмра вулли силленсе кăна юлчĕ. Çил килсе çапрĕ-и, эмел улмуççи те тайăлса илчĕ. Улма ӳкрĕ. Кăлтăр-кăлтăр! кусса кайрĕ вăл сукмак тăрăх çырма еннелле

# ТĔПСĔР КӲЛĔ

Çуллахи каникул хăвăрт иртет. Ванюкпа Нинук çавна пĕлсе тăрса кашни кун шкула васкаççĕ. Мĕн-ма тесен вĕсен унта биологи учителĕ йĕркеленĕ сăнав станцийĕ пур. Ачасене çĕр уйăрса панă. Çав çĕр çинче кашни шкул ачи хăй кăмăлланă пахча-çимĕçне ӳстерет. Кăçал билогипе экзамен. Ăт, çав экзамента мĕнле паллă лартса парасси пĕтĕмпех çакăнтан, мĕнле ĕçленинчен килет. Хĕветĕр Хилипччă ял тавра çăтмах туса хурасшăн, çавна пула мар-и халь ачасен те çав çăтмах пирки шутлама тивет. Ванюк ăна темшĕн ял тавра мар, пачах урăх çĕрте – икĕ çырма пусĕнчи тĕпсĕр кӳлĕ патĕнче курать. Мĕн-ма тесен Ванюк унта темиçе хутчен те кĕтӳ кĕтнĕ, тапăра аннă, выртса та çывăрнă, вылянă, ĕмĕтленнĕ. Вырăнĕ те вăл, калама çук илемлĕ. Сăртра ката. Унта хурăнĕ, хырĕ, чăрăшĕ – акаци тата – йăлт пĕрле ларса тухнă. Юнашарах тата, кăшт утсан, хамăр вăрман. Вăл пысăк, унта тем те пур. Хир сыснисем те тĕл пулаççĕ. Çăл кусĕ вара, пăхса выртатăн та, пăлл-пăлл! туса тапни курăнать. Мĕнле вăй тапса тăрать-ха çапла пĕр вĕçĕмсĕр, кăна никам та пĕлмест. Хĕветĕр Хилипччă та чухласа илеймест. Ванюк вара чухлать. Таçта шалта темле пурнăç пур, çав сывлать. Пулли тесен, пулли вара кунта шапăлтатса пурăнать! Алла йывăç тымарĕн лăссиллĕрех вырăнĕсене чиксе яратăн та пĕр ывăç çырма пулли туртса кăларатăн. Ку та тĕлĕнтерет. Мĕншĕн тесен ытти çырмасенче ун пек мар. Пулă тени халь ниçтах та çук. Кунта вара...

Нинукăн та хăйĕн ĕмĕчĕ пур. Вăл çав çăтмах тенине темшĕн ял çырминче курать. Нижер çырми ахаль те пит хитре. Вăл çирĕклĕ, йăмраллă, курăклă – вĕлтĕренлĕ те! Акă юлашки çулсенче çырмана тем те пĕр тăкса тултарчĕç. Ку Нинука пит тарăхтарать. Хăй вăл ниçта та нимле çӳп-çап та пăрахмасть. Кун пеккине хĕрача «таса çĕр» операци тет. Енчен те кам та пулин пĕр пĕчĕк спичка кăна пăрахнă пултăр, çавна çĕр курать пулать – асап кăтартать. Уй куçлă, вăрман хăлхаллă тенĕ пек, çĕр, ун шучĕпе, йăлт курать, çыннăн кашни хусканăвне сыхласа тăрать. Нинука çавăнпа та çак Нижер çырми те темле чĕрĕ япала пек курăнать. Чăн та, темĕнле юмахри çĕлен евĕр авкаланса выртать мар-и-ха вăл, чун юратнă çырма!? Мĕн чухлĕ çăмхалла выляман пуль унта, шыва кĕмен, сурăх-ĕне кĕтмен... Çуркуннепе ял кĕтĕвĕ тухиччен çынсем килти выльăха çырмана кăларатчĕç. Темшĕн çав çырмара курăкĕ те маларах тухатчĕ, çăрарахчĕ те тата. Енчен те Нижер çырми тăрăх йăмрасем кăна мар, чечексем те лартса тухсан, кирлĕ çĕрте пĕвесем пĕвелевсе тухсан епле аван пулĕччĕ. Çын çӳремелĕх асфальт сукмаксем хывсан вара атăпа мар, çӳлĕ кĕлĕллĕ пушмаксемпе те шаклаттарса çӳреме май килĕ. Çӳресен-çӳресен ларса канмалăх саксем, беседкăсем туса тултарсан вара... Вара вăл чăнласах çăтмах вырăн пулса тăрĕ.

Çапларах ĕмĕтленсе ĕçлеççĕ хĕрпе каччă. Йăранĕсем вĕсен юнашарах та пĕр-пĕрин çине ĕнерхи пăтăрмаха аса илсе пулинех чăлтăртаттарса пăхса илеççĕ. Чунĕсем хăйсен савăк. Акă, вĕсем ытти ачасенчен маларах

хӑйсен йӑранӗсене ҫумласа тухрӗҫ те ӑҫта тарса пытанмалла-ши тесе ун-кун пӑхкалама тытӑнчӗҫ. Унтан сасартӑках пӗр-пӗрин патне туртӑнса илчӗҫ те пӗр ытама кӗрсе ӳкрӗҫ. Ҫав вӑхӑтрах хӑраса ӳкрӗҫ. Ҫын курсан тем калӗ. Анчах пурте пуҫӗсене пӗкнӗ. Ҫум ҫумлаҫҫӗ. Вӗсем мӗн хӑтланнине никам та курмасть. Капла тӑнӑҫлӑха кура тепре те ыткӑнатчӗҫ-и каччӑпа хӗр – пулмарӗ. Ҫав самантрах ҫум ҫумлакан ачасен ушкӑнӗ патне ҫывхарса килекен биологи учителӗ курӑнса кайрӗ. Хӑй тем хӑй тӗллӗн мӑкӑртаткаласа пырать пулас. Ял ҫыннисем тепӗр чухне ун пирки ку ҫын ӑсран тайӑлнӑ пуль текелесе те илеҫҫӗ. Ҫав ҫӑтмах тӑвас тениех пӗтерет ӑна, ӑсран кӑларать. Ун пек идея, чӑн та, ахаль ҫын пуҫне пырса кӗрес ҫук. Кунта темле кӑшт ухмах пулни кирлӗ. Ӑт, ҫавӑн пек ӑсран кӑштӑ тайӑлнӑ ҫын вӑл Хӗветӗр Хилипччӑ. Анчах Ванюк урӑхла шутлать. Ачана вӑл тепӗр чухне ҫӗр ҫине аннӑ темле турӑ пекех туйӑнать. Ара, хура чике сухалӗ кӑна мӗне тӑрать. Акӑ халӗ те вӑл ӑна чӑн-чӑн пророк пек вӗҫтерсе килет.

- Ҫумласа пӗтерсенех икӗ ҫырма пуҫне лартнӑ хунавсене сыхлама каятпӑр, - тет учитель. - Ӗнер такамсем каллех кӗтӳ кӗртсе янӑ, чылай йывӑҫа пӗтернӗ.

- Каяс, - тет Ванюк учитель шухӑшӗ хӑйӗн шухӑшӗпе пӗр килнишӗн савӑнса. – Эпир вӑл кӗтӳҫе тытса паратпӑр-ха пӗрре, – тет чышкисене чӑмӑртаса.

- Ҫук, - хутшӑнать калаҫӑва Нинук. – Ун пек юрамасть. Эпӗ унпа, Тулай Иванӗпе, хам калаҫса пӑхатӑп. Вӑл ман тӑван вӗт. Мучи эпир мӗн тунине ӑнланмасть. Ача-пӑча вӑййи

тет. Кӗтӳ ҫӳретмелли вырӑн хӑвармастӑр тет. Ара, чӑн та, ҫырма тӑршшӗпе йывӑҫ лартса тухсан выльӑхсене ӑҫта ҫӳретӗпӗр-ха эпир?

Хӗрачапа пӗрле ыттисем те шухӑша каяҫҫӗ. Ӗлӗкрех Самать патӗнчи уйра курӑка шӑварса ӳстермелли уй пулнине те ас тӑваҫҫӗ-ха вӗсем. Ҫав таса уй мӗншӗн пӗтнине кӑна ӑнланмаҫҫӗ. Пӗтерекенӗсем пулнӑ-ҫке. Такамсем пӑрӑхӗсене вӑрласа кайнӑ. Ачасем лартнӑ йывӑҫсене пӗтерекенсемех мар-ши вӗсем, ҫав ҫынсем?

- Выльӑх ҫӳретмелли вырӑн та тӑвӑпӑр. Ятарлӑ ҫаран уҫатпӑр. Шурта, акӑ, курӑк шӑвармасӑрах лайӑх ӳсет. Шывне кӑна кӑшт типӗтмелле. Ирригаци теҫҫӗ-и-ха?

- Тӗрӗс, - ырлать ку шухӑша учитель. Халӗ вара хунав сыхлама тухатпӑр.

Пӗр ушкӑн ача, ҫавна ҫеҫ кӗтнӗ тейӗн, икӗ ҫырма пуҫӗ еннелле кӗпӗрленсе шкул пахчинчен самантрах тухса кайрӗ. Унта пӗве вӗт-ха! Эх, шутлать кашни, эх, кӗретпӗр те шыва, тытмалла вылятпӑр. Ҫӑвӗ те кӑҫал пит шӑрӑх тӑрать. Чуна шыв чӑххи пек шыва чӑмса кӑна тупма пулать пек туйӑнать. Калас пулать, икӗ ҫырма пуҫӗ патне ҫитес тесен Сӑхӑт шывӗ урлӑ каҫмалла, Тишле текен вырӑнпа иртмелле. Вара тин пысӑк пӗве патне ҫитсе тухатӑн. Пӗви пысӑк. Ун таппинче тӗпсӗр ҫӑл куҫ тапса тӑрать. Шывӗ ҫавӑнпа пуль тап-таса.

Пӗр ушкӑн ача чӑтса тӑраймарӗ, ҫитес тенӗ ҫӗре ҫитеспе ӗрӗхтерсех чупса кайрӗ. Чупнӑҫемӗн хӑшӗ-пӗри кӗпе-йӗмне хывса пырать. Кам маларах чупса ҫитсе шыва сикет теҫҫӗ пулинех. Ванюк чи малта. Хӗрсем хыҫаларах юлнӑ. Чӑмпӑлт-чампӑлт! сиксе пӗтрӗҫ чупса ҫитнӗ ачасем шыва. Шыв ҫийӗн халь тытмалла

вылякан ачасен чăй-чайĕ кăна илтĕнсе тăрать. Çакна таçта аякка юлнă Хĕветĕр Хилипччă та илтет.Васкать хăй. Ача хыççăн ăçта ĕнтĕ ĕлкĕрсе пырăн? Учитель питĕ кăмăллă. Акă темиçе çул вăл ачасем пулăшнипе Сăхăт тăрăх вăрман ÿстерет. Икĕ çырма пуçĕнче ку ĕç пушшех те ăнассăн туăнать. Анчах такамсем вăрмана кĕрсе каяççĕ те йăлт ватса тухаççĕ. Тин çеç ÿссе çитнĕ хурăнсене милĕклĕх тесе касса йăвантарса яраççĕ. Хамăр ялсемех ĕнтĕ, урăх кам пултăр, шутлать ватă çын. Камне те чухлать. Çав Тулай Иван йăхăсемех пуль, урăх кам пултăр. Çавсем тулайран куçса килнĕ. Ял йăли-йĕркине ниепле те йышăнасшăн мар. Малашне те кун пек пулсан, тен, шутлать вăл, каçхине сыхлама тухма тивет.

Учитель утса çитнĕ çĕре ачасем шыва кĕрсе те тухрĕç. Тĕпсĕр çăл куç тавра пуçтарăннă та çÿçĕсене хĕвел çинче типĕтсе лараççĕ. Хăшĕ-пĕрисем ÿпĕнсе чĕрĕ те сиплĕхлĕ шыва ĕçсе пăхаççĕ.

- Çак шыва ĕçекен паттăр пулать тет, - пуçлать таçтан илтнĕ пĕр юмах Ванюк.

- Тетĕн хÿри кĕске, тет, - пÿлет ун шухăшне Çтаппан. Çавра куçĕ хĕсĕк. Тем кансĕрлет пулинех ăна.

- Эпĕ ку халапа кăна мар, шывне те ĕненетĕп, çавăнпа эпĕ те ĕçетĕп, - Нинук та пĕшкĕнсе шыв ĕçет.

- Эпĕ вара пачах урăхла халап илтсе, - каллех пÿлет Çтаппан. – Кам ку шыва ĕçет – качака пулать.

Ку пурне те килĕшет. Пурте ахăлтатсах кулса яраççĕ те çăл куç хĕрне упаленсе пырса шыв ĕçеççĕ, качака пек мекеклетеççĕ. Çат!

тутарса çав вăхăтра, Çтаппан çăл куçа аякрах та мар выртакан чул таткине пăрахать. Шыв сирпĕнĕвĕпе йĕпеннĕ ачасем чалт! çеç айккинелле сиксе ўкеççĕ. Çтаппан ахăрса ярать. Анчах ачасене ку пĕрре те килĕшмерĕ, курăнать. Кушака кулă, шăшине куççуль тенĕ евĕр Çтаппан çине пурте ун-кун пăхкаласа илчĕç те – сасартăк ăна пур енчен те ярса илсе шыва печĕç. Шывран шăмпăртаттарса тухакан ачана курсан пурте хальхинче хăйсем ахăрса кулса ячĕç. Пуринчен ытла Нинук кулать. Ун кулли шăнкăрав сасси пек илтĕнет. Мĕншĕн апла кулнине вăл хăй анчах пĕлет пуль. Ванюк та ун çине кăшт тĕлĕнерех пăхса илчĕ. Тен, каччă та чухларĕ. Ара, Çтаппан пĕрмай Нинук çумĕнче явкаланса çўрет мар-и?

- Ну, эпĕ сире, куншăн ахаль хăвармăп, - шăл витĕр сăрхăнтарса калать Çтаппан.

Ачасене ку каллех ахăрттарса ярать. Халь тин вĕсене ним те кирлĕ мар. Халь вĕсем пўрне кăтартсан та кулма хатĕр.

Халĕ ĕнтĕ вĕсем, таса шыва ĕççе вăй пухнăскерсем, темле тăшманпа та кĕрешме пултараççĕ. Çавăнпа савăнаççĕ. Çăл куç кăна темле пăтранса хуралса выртрĕ. Анчах уни-кунине никам та асăрхамарĕ. Учитель те çитрĕ. Хĕветĕр Хилиппчч̆ă вĕсене вăрман тавра тăратса тухрĕ. Калас пулать, аякрах та мар ют ял кĕтĕвĕ те çўрет. Тулай Иванĕ те акă çырма тăрăх çаврăнса çитет. Ял кĕтĕвĕ Сăхăт тăрăх çўресе тăранса çитеймест. Çавна пула кĕртет те кĕтўçĕ выльăха, тăрантăр тет. Ăнланма пулать. Çапах та, кăна кашни ача пĕлет, енчен те лартнă пĕр йывăça пĕтĕмпех упраса ўстернĕ пулсан кунта тахçанах, Сăхăт тăршшĕпех,

вăрман кашласа лармалла. Халь вара вăрман вырăнне çара çырма. Çу шăрăх тăрать те пурçук курăкĕ типсех кайнă. Çавна пĕле тăркачă пĕрех ачасем хытă тăраççĕ. Хăйсем лартса ӳстернĕ вăрмана никама та кĕртесшĕн мар.

Хурала, ку хăй тĕллĕнех пулса иртрĕ, Нинук Ванюкпа пĕрле лекрĕ. Мĕншĕнне, тен, чухлама та пулать, каччăпа хĕр пĕр-пĕрне килĕштнерининине тĕрĕссипе пĕтĕм ял пĕлет.

Акă вăл çăтмах пуçламăшĕ, – шутлать çамрăк çын. – Кашни йывăç ăна пурнăç йывăççи пек курăнать. Мĕн-ха вăл йывăç? Нимех те мар пек. Темле пĕлĕтелле кармашнă туна тата хĕвел еннелле ыткăннă çулçăллă туратсем кăна. Çапах та кунта темле вăрттăнлăх пур пек. Ахальтен мар-çке-ха халăх киремет йывăççисене пурнăç йывăççисем вырăнне хурса пуç çапнă. Ахальтен мар Библире те çырса кăтартнă тăрăх çав йывăç çăтмахра ӳснĕ пулать. Ырăпа усал йывăçĕ тенĕ ăна. Çĕр çинчи пĕрремĕш çынсем Адампа Ева çав йывăç çимĕçне çине пулать те... ырăпа усала уйăрма пуçланă, çын пулса тăнă. Йывăç çĕрпе пĕлĕте кăна мар, йывăç çынна турăпа çыхăнтарса тăрать пулмалла, – аташсах каять тем те пĕр шутласа пыракан Ванюк. Юнашар утса пыракан Нинукпа кун пек шухăша пайлама вăтанать, ыйтсан кулса вилĕ тет. Çапах та пырсан-пырсан, пĕр чĕнмесĕр пыраймастăн вĕт-ха, ыйтрĕ-ыйтрех.

- Нинук, - темшĕн такам илтесрен хăранă пек пăшăлтатса ыйтать Ванюк пĕр пысăк кăна йывăç тĕлне çитсен. – Нинук, эсĕ çак йывăçсенче мĕн куратăн?

– Вĕсем мана темле хăйсем тĕллĕн пурăнма пултаракан чĕрчунсене аса илтереççĕ. Никамран та ним те ыйтмаççĕ. Парас тесен вара пĕр иккĕленмесĕр çимĕçне те, сулхăнне те йăлтах пама хатĕр. Йывăç хĕрарăма аса илтерет. Ачине те хăех çуратса пырать. Пурнăç пуçламăшĕ вăл, пурнăçа тăсаканĕ те. Тен, малашлăхĕ те!

– Каларăн та вара, - каçса кайсах кулать Ванюк? - Ку тĕнчере, апла, çынсем те юлмĕç.-

– Кун пек пурăнсан, тен, юлмĕç те. Мĕншĕн тесен çын хăй ларакан турата касать. Вара турачĕпе пĕрлех персе анать. Акă, пăх, мĕн туса хунă кунта!

Куç умĕнче темле хăрушă ӳкерчĕк. Тин çеç паркаланса ӳссе çитнĕ çамрăк хурăна такам тĕпренех касса янă. Милĕклĕх пултăр тенĕ ĕнтĕ. Ешĕл турачĕсене иртнĕ. Хурăнăн шăмми-шакки кăна выртса юлнă.

Хурланчăклă ачасем ним тума аптранă енне йăвантарса янă хурăн туни çине пырса лараççĕ. Хурăн касакансене пĕр енчен ăнланма та пулать пек. Ара, Ванюк хăй те мунча хутсан лапка çине хăпарса ларса хурăн милĕкĕпе мĕн вăйран кайиччен çапăнма юратать. Хурăн сиплĕ, хурăн сăваплă, хурăнра леш тĕнчене кайнă ватăсен вăййĕ, чунĕ. Ахальтен-им çимĕк кунĕ çăва çинчи хурăн милĕкĕпе çапăнса çăвăнса тасалнă тет пирăн мăн асаттесем. Хальхи масарсем те вĕт йăлт хурăнлă. Милĕкне çеç касмаççĕ. Çылăх теççĕ пулас. Кунта вара юрать тет! Ах, мур илесшĕсем!

Лараççĕ çапла шутласа икĕ çамрăк. Пуласлăх çинчен шутлаççĕ. Мĕнле пурăнĕç пулас ачисем? Ванюк ашшĕ каланă тăрăх тахçан Сăхăт тăршшĕпех вăрман пулнă. Пĕр ĕмĕр

тăршшĕнчех вĕт, асăрхăр, пирĕн асаттесем çав вăрмана пĕтернĕ те хунă. Ас тăвать-ха, Ванюк та, Макарсен йĕтемĕ патĕнче Микки сăртĕнче темиçе хăлаçлă юман ларатчĕ. Халĕ вăл та çук. Вăл юмана хăçан кам касса янине Ванюк ас тумасть. Ку хурăна касса яраканне те камне пĕлмест. Кăнтăрла мар, курăнать, касса янă çак ешĕл хурăна! Каçпа, çынсем курман, çӳремен чух.

- Акă мĕн, - калать хăй шухăшне ача. – Ку йывăççене касакана пирĕн каçпа сыхламалла пулать. Тухатпăр-и, каçхи сунара?

- Тухмасăр! – килĕшет Нинук. Вăл та питĕ тарăхнă. Тарăхасса тарăхнă-ха та, анчах амăшĕ ирĕк парĕ-и-ха ăна çĕр хута кунта пĕр çамрăк кăна каччăпа çӳреме.

Калас пулать, Нинукăн амăшĕ, Марье аппа, калама çук кăмăллă хĕрарăм. Çапах та, хĕрĕ каçпа килте çук чухне урама пĕрре кăна мар тухса пăхать. Амăшĕн чунĕ канăçсăрланать. Ачи çумра пулсассăн вара – лăпланать. Çакна Нинук питĕ лайăх чухлать. Ара, пĕрре кăна мар ыйтса кайма тивнĕ те! Акă пĕринче кӳршĕ яла спектакль лартма тесе кайнăччĕ. Шкул ачисем хĕлле çапла ялтан яла концертсем лартса çӳретчĕç. Пĕччен мар пулсан та питĕ-питĕ хытарса каласа кăларса ячĕ ун чухне амăшĕ. Çавăнпа пăшăрханать хĕр. Кунта та пĕччен мар та... Анчах пĕччен ĕ марри хăй пĕр каччă!

Çак шухăшсем хăвăрт кăна вĕлтлетсе иртрĕç пуçĕнче. Хĕр пĕр хăраса та иккĕленсе илчĕ. Куçĕ касса янă хурăн çине ӳкрĕ. «Çук, – каллех тарăхса кайрĕ вăл, – хурăнсене пĕтме памастпăрах!».

Ытти ачасем, вĕсем пекех хурала тухнăскерсем, ăçта мĕн туса çÿренине те чухламарĕç Ванюкпа Нинук. Кĕтÿ янă хыççăнах кĕлт-калт каçхи апат çырткаларĕç те калаçса татăлнă пекех пĕр вăхăт тĕлнех укăлча умĕнче тĕл пулчĕç. Нинук амăшне кинона каятăп тесе каласа хăварчĕ. Ванюк, паллă, ним те каламан.

Çуллахи хĕвел майĕпен анать пулсан та тахăш вăхăтра таврана тĕттĕм чаршав карса илнине ачасем сиссе те юлаймарĕç. Вăхăчĕ те пулмарĕ. Ванюк кăвайт чĕртес терĕ. Хăрăк туратсем пуçтаркаларĕç те канма тĕпсĕр çăл куçĕ çумнех пырса ларчĕç. Таврара шăплăх хуçаланать. Ăшă. Пăчăхса çитнĕ Ванюк выртсах шыв ĕçет. Пĕрре кăна мар асăрханă, çак çăлри шыва ĕçсессĕн, таçтан темле хăватлă вăй кĕрсе каfive. Хальхинче те ача хăйне сасартăках паттăр пек туйса илчĕ.

– Килтĕр кăна кунта хурăн касма, - тет вăл хĕр умĕнче паттăрланса. – Эпĕ ăна час тăн кĕртсе илетĕп.

– Çук, - ун пек тивместпĕр, тет, хĕрĕ. – Эпир ăна ăнлантарса кăна парăпăр.

– А, мĕн ăнлантарса парасшăн вара эсĕ çав хурăна шеллеме пĕлмен анкă-минкĕне? Вăл вĕт нимĕн те ăнланмасть. Ăна, анрана, милĕк кирлĕ мĕн! Кай та кас урăх çĕртен...

– Ăçтан кастăр-ха вăл – урăх çĕртен? Урăххи ăçта тет?

– Чăн та, - шухăша каять ача. Ял йĕри-тавра урăх ниçта

та хурăн кати курăнмасть. Милĕкĕ вара кирлĕ. Ванюк хăй те мунчара ешĕл те сиплĕ милĕкпе питĕ реххетленет. Ашшĕ вара ун пĕр вунă хут та çапăнать пуль. Юрать-ха хурăнĕ вĕсен -

картишĕнчех сарăлса ларать те – милĕкне темĕн чухлех килтен тухмасăрах хатĕрлеме пулать. Килте хурăн çуккисен вара мĕн тумалла тет? – Акă мĕн, - тет вăл сасартăках. – Вăрă текенскерне, эпир ăна милĕкне хамăр касса парăпăр!

- Мĕнле, апла? – ăнланмасть хĕрача.

- Ак çапла, - тет те арçын ача çумри пĕр хурăн тăррине упăте пек йăпăр-япăр хăпарса каять. Хĕр тĕлĕнсе кăна пăхса тăрать. Часах ун умнех тенĕ пек милĕклĕх каснă хурăн турачĕсем вĕçсе тенĕ пек персе анма тытăнаççĕ. Тем самантрах ача, çамрăк çав, хурăн турачĕсене иртсе те пăрахрĕ. Хĕр вĕçсе аннă туратсене купаласа пычĕ. Акă пĕр хурăнранах хĕл каçмалăх милĕк пулчĕ те!

Акă халĕ милĕк хатĕрлесе ĕшĕннĕ икĕ çын купа çине канма тесе выртнă та кашни хăй шухăшне шухăшлать. Вĕсем шăпланса выртнине кура катари шăпчăк вăранать. Вăл та вĕсен шухăшнех тăсать пуль, ши-ши! шăхăрать. Ачасен чунĕ çав вăхăтра таçта кайса кĕрет. Чунсăр вĕсем халь. Икĕ кĕлетке кăна. Чунĕ вара шăпчăк пулса вĕçсе кайнă, шăпчăк пулса юрлать. Пĕччен мар тата. Акă вăхăт нумай та иртмерĕ, хурăн катинче шăпчăксен хорĕ юрлама пуçларĕ. Тĕнче, хăй теме пула савăннипе, каçса кайса тем калать, тейĕн. Тӳпери çăлтăрсем халь-халь талса анаслăн ялтăраççĕ. Тен, персе те анаççĕ пулĕ, анчах тулли уйăх çути йăлт хупласа хунă та çăлтăр ӳкни курăнмасть. Мĕн ӳкни! Ванюкпа Нинук çăлтăрĕ тӳпере-ха! Вĕсем ӳкиччен халь нумай пурăнмалла... Хурăн çав çутă çинче кĕмĕл тĕслĕ хĕрупраçă пек чалтăртаттарса тăрать. Уйăх тăкса тăран сĕтлĕ

çутă айĕнче çав хĕр шыва кĕрет пек. Асамлă шывĕ пуçĕнчен пуçласа куçа шартаракан шурă-шăрă ури патнех йăпăртаттарса чупса анать те сасартăках йĕп чиксен те куç курман тĕттĕм мĕлке ăшĕнче çухалать. Çакă тĕлленчĕк каччăна ăнтăхтарсах ярать.

Хĕр те анрасах кайнă курăнать. Унăн пуçĕнче те хурăн шухăшĕ. Анчах вăл ăна урăхларах курать. Хурăн ӳсет-ӳсет те кайран вутă пулать. Çулăмĕ унăн питĕ хĕрӳ. Пĕр çунма пуçласан кĕрр! кăна хыпса илет. Хĕр те çапла. Ун чĕри ӳссе çитнĕ хурăн пек çунать. Çапла пулма ăна питĕ канлĕ, лайăх. Татах та татах çунас килет. Хĕл тăршшĕпе, çук – пурнăç тăрршшĕпех çапла çунса ăшăтса пурăнас килет ун çынсене. Пуринчен малтан ашшĕпе амăшне, ял çыннисене... Çунать хĕр, çунать... Хăй мĕншĕн çуннине те чăнласа пĕлсе çитерейместь. Çав вăхăтра шăпчăксен хорĕ питĕ вăйланса çитрĕ те темле хăй пĕр хăватлă симфони пек янăрама тытăнчĕ. Çакна каччăпа хĕр те илтрĕç. Чĕрисем шăпчăксемпе пĕрле чăнласа юрласа ячĕç. Чĕре варнех кĕрсе ларчĕ çакă. Çук, çут çанталăк хăватлăн кăна юрату пăтине чĕренех çапса кĕртсе лартнă вăхăтра вĕсем кĕлт те пулин хускалмарĕç. Мĕнле хытса выртнă çаплипех выртрĕç хурăн милĕклĕх каснă пĕр купа çинче. Халь тин ĕнтĕ вĕсем çак пĕрлĕхрен нихăçан та уйăрăлаймĕç, çут çанталăкпа ялан пĕрле пулĕç.

Шатăрт! тутарчĕ çав вăхăтра такам каçса кайса юрлакан катара. Вăрă! Вăрă килнĕ. Çут çанталăк илемĕпе ăнтăхса выртакан ачасем самантрах тăна кĕчĕç. Япăрт! сиксе тăчĕç те ним хăрама пĕлмесĕр сасă илтĕннĕ енне

ыткăнчĕç. Каçхи вăрă вăл хурах пусма та пултарать вĕт-ха! Ăçта унта! Ун-кун шутлама вăхăт пулмарĕ. И-ях! тесе кăшкăрса сиксе тухрĕç Ванюкпа Нинук уйăх çутиллĕ хурăн уçланкине. Кăна кĕтмен хура мĕлке пек арçын хăранипе хутлансах ларчĕ. Хирĕç тăма тет-и? Таçтан хуп-хуран курăнакан катаран сиксе тухнă ачасем ăна хăрушă тискер кайăксем пекех курăнчĕç пулĕ? Аллинчи пуртă хăех тухса ӳкрĕ...

– Руки вверх! – кăшкăрать арăсланса çитнĕ Ванюк. – Хăйне халь вăл вăрçăри паттăр пек туять.

– Кам эс? – ыйтать хĕр питне пытаракан çынран. Пытаратни-пытармастни, пăхмасăрах паллă, ку çын – Тулай Иванĕ.

Ачасем ăна тĕрткеле-тĕрткелесех хăйсем паçăртарах ларнă купа çине туртса антараççĕ. Арçын хирĕç тăмасть. Ăçта унта! Хăранипе вăл халĕ те сиксе чĕтрет. Ăт, сана хурăн милĕкĕ тесе çӳре кунта! Чĕлхесĕр пулса юлатăн вĕт. Кăшт сывлăш çавăрса илнĕ çын тин хăй умĕнче камсем ларнине тавçăрса илчĕ.

– Э-э-й, мĕн эсир, мĕн туса çӳретĕр кунта? Хăратса вĕлеретĕр вĕт.

– Хурăн касакан тискер кайăка тытма тухрăмăр. Акă лекрĕ те алла. Ыранах сана пĕтĕм халăх умĕнче сут тăватпăр.

– Ун пек намăс ан кăтартăрах! – тилмĕрет Тулай Иванĕ,

– Мунча кĕме милĕк хатĕрлес терĕм те, эпĕ мĕн, йывăçĕсем ӳссе кайрĕç те – çӳле хăпараймастăп çав.

Ку тĕрĕс ĕнтĕ. Хурăнсем çамрăкрах чухне ял çыннисем вĕсене милĕклĕх тесе иртсех тăчĕç.

Çавна пулах пулĕ хурăнсем питĕ хăвăрт та яштака ӳсрĕç. Халь тин, чăн та, ешĕл вулăсем çӳле кайнă та...

– Акă мĕн, Иван мучи, – тет мĕн тумаллине ăнланса илнĕ ача. – Эпир эсĕ килессе пĕле тăркача сана валли хурăн милĕклĕх кассах хутăмăр. Акă, пĕр купа, ил. Сана валли кăна мар, малашне ял çыннисем валли те касса парăпăр. Пурте хĕл каçмалăх милĕклĕ пулччăр. Эсĕ те, Иван мучи, сывлăхлă пул!

– Тавах, тавах! – тет ним калама аптраса ӳкнĕ ватă çын. Çапса пăрахаççĕ пулĕ тенĕччĕ. Çупкă вырăнне çу çитереççĕ.

– Ай, аван! – савăнса каять Нинук. – Вăл та Ванюк ватăна çапса пăрахать пуль тесе питĕ хăраса ӳкнĕччĕ. Тата Тулайсем тăван лекеççĕ те – ăна питĕ аван мар пулчĕ. – Атя, эпир сана ăсатсах яратпăр. Ан хăра, милĕкĕсене те çĕклесе çитерсех парăпăр.

Ку шухăш Ванюка та килĕшет. Ватă çын чĕнмест. Тем мăкăртатнă пек кăна илтĕнет ачасем милĕксене мучин вăрăм кантрипе çыхнă вăхăтра. Нумай кирлĕ-и, акă вĕсем виççĕн катаран тухрĕç уйăх çутиллĕ сукмакпа ялалла танккарĕç. Танккарĕç тени тĕрĕсрех. Мĕншĕн тесен темле пит çутă пулсан та мĕлкеллĕ. Çутă ӳкмен ланкашкасем курăнмаççĕ. Çав тĕлте ура лăнках каfive. Танкăлтаттарать. Нинука, вăл хыçалтан утса пырать те, кулăшла пек курăнать. Анчах хĕр кулмасть. Ун пуçĕнче тепĕр курăну...

... Вăл хурăн. Ӳссе-ӳссе кайнă. Ун çине никам та хăпараймасть. Ун патне çынсем милĕк касма килеççĕ те ун-кун пăхкаласа тăраççĕ.

Ешӗл туратсем питӗ ҫӳлӗ пирки милӗк касаймасӑрах каялла килӗсене саланаҫҫӗ. Хурӑн та хурланать. Милӗкне вӑл питӗ кастарасшӑн. Анчах мӗнле майпа тет? Уй-уй! тет хӑй сисмесӗрех саспа ыттисем пекех танкӑлтатса пыракан хурӑн пулса тӑнӑ хӗр. Вӑррӑмсене анчах ытларах та аяккарах вӗҫтермелле. Вара кашни ҫул ҫӗнӗ пӗчӗк хурӑнсем шӑтса тухӗҫ, ӳснӗҫемӗн милӗк касмалӑх пулӗҫ. «Апла, апла, – уҫҫӑнах каласа ярать ӗмӗтленсе пыракан хӗр, – ӳснӗ пӗр хурӑнсемпе юнашар тепӗр хурӑн кати ӳстермелле. Илтетӗр-и?» Тӑп чарӑнаҫҫӗ малта пыракансем. Илтмесӗр. Каҫхи шӑплӑхра шӑппӑн каласан та илтӗнет.

– Чӑн та, – тет Ванюк, хӑй те ҫак ыйтупа анраса пынӑскер. Кӗркуннепе хурӑн вӑрри пуҫтарӑпӑр та Сӑхӑт тӑршшӗпе тепӗр ката ӳсмелӗх акӑпӑр. Тепӗр ҫул тата, тепринче те...

– Пӗрисем ватӑлса ҫитнӗ ҫӗре теприсем кӑтраланса ӳссе пырӗҫ, – пытараймасть хӑй савӑнӑҫне хӗр. Кӑлтӑр-кӑлтӑрр! кулса ярать. Каҫхи шӑплӑхра ку кулӑ тӗлӗнмелле асамлӑ илтӗнет. Хыҫа юлнӑ шӑпчӑксен хорӗнчен те ирттерет. Ку асамлӑха ҫамрӑксем кӑна сисеҫҫӗ пулӗ ҫав, ватти вара каллех тем мӑкӑртаткаласа илет.

– Тем ҫав, тем ҫав, ун пек пулсан аванччӗ те. Выльӑхсем пӗтереҫҫех пуль.

– Выльӑхсем мар, ҫынсем пӗтереҫҫӗ! – хӗрӳленет каччӑ. – Хӗшӗ-пӗрисем вӗсенчен те тен...

– Тавлашмастпӑр, – хутшӑнать хӗрача. – Мӗн тӑвас тенине пурпӗрех тӑватпӑр. Пирӗн таврара та ҫӑтмах пек ҫут ҫанталӑк пулӗ.

Нижерпе Сăхăт тăрăх садсемпе катасем ӳссе ларĕç. Çырма тăршшĕпех пĕвесем. Пĕвесенче çап-çутă пулăсем. Пĕвесем хыçĕнче пĕчĕк гидроэлктростанцисем. Утса уçăлса çӳремелĕх сукмаксем. Ик айккипе чечексемпе ларса канмалăх тенкелсем...

- Сем-сем-сем-сем! – ехĕлтетсех кулать мучи. Ăна та чун кĕчĕ пулас. Кун пек пулсан вара ĕçлеме те кирлĕ мар. Çăтмахри пек ĕçсе-çисе кăна пурăн.

– Ха! – кулса яраççĕ çамрăксем. – Ĕçле-ĕçле çи! – Ха! кăшкăрать ахрăмлăн Сăхăт çырми. Ахăртнех вăл та ку харсăрсемпе пĕрле ĕçлесшĕн. Вăл та çăтмахлă пуласшăн.

Çимĕк хыççăнах шкул ачисем биологи учителĕ ертсе пынипе пĕтĕм ял халăхне хурăн милĕкĕ касса пачĕç те акатуйне хатĕрленме тытăнчĕç. Тĕпсĕр кӳлĕ патĕнчи хурăн кати вара шакла пуçлăн ларса юлчĕ. Çавă питĕ пулăшрĕ те ăна. Унсăрăн...

## Çил-тăвăл

Актатуй тесен ват карчăк та хускалнă тет. Аслă классенче вĕренекенсем Сăхăтпуç вăрманне ушкăнланса каяççĕ. Нимех те çук ĕнтĕ унта çав вăрманта, анчах, тен, тем пур та... Ахальтен мар чăтăмсăррăн кĕтеççĕ вăл вăййа. Ĕлĕк чух вăйăра вăй виçнĕ, ухăран та пенĕ тет. Халĕ тин лаша чуптаркаласа пăхаççĕ. Кĕрешкелççĕ тепĕр чух. Волейболла тесен вара кашни çулах ялпа ял тупăшаççĕ. Ванюк та ял командинче. Юлташсем пăшăрханса çеç тăраççĕ. Вĕсен те

выляса илес килет. Мижерсем вĕсем нихçан та маххă паман тесе кăшкăркаласа тăраççĕ. Çапла килсе тухрĕ те – Ванюксем çĕнтерчĕç. Ярмăркка тăрăх кăштă çӳрекелерĕç те çĕнтерĕве уявлама тесе тĕпсĕр çăл куçĕ патне каяс терĕç. Ку шухăш пурне те килĕшрĕ. Ара, унтах пĕве, хăтлă, хăнăхнă тата...

Уявласси мĕнĕ, шăрăх та, шыва кĕрсе реххетленнĕ хыççăн хĕвел çинче хĕртĕнсе выртатчĕç вĕсем, таçтан е тахçан тем шăхăрни илтĕне пуçларĕ. Тĕлĕрсех кайма пуçланă Ванюк куçне уçрĕ. Тĕлĕнмелле ӳкерчĕк. Тĕпсĕр çăл куçĕ çийĕн темскер çăмăллăн кăна çаврăнма пуçларĕ те çӳле-çӳле хăпарса кайрĕ. Тĕтĕм е сĕрĕм пек япала пулчĕ ку. Ачасем те илтрĕç çакă сасса. Самолет вĕçет пулĕ тесе, пуçĕсене ун-кун пăркаласа пăхрĕç. Нимĕн те курăнмарĕ. Лăпланчĕç. Ванюк та тин çеç мĕн пулса иртнине манса кайрĕ. Куçĕ ун Нинукĕннипе тĕл пулчĕ. Чăлтăрр! çуталса кайрĕ каччă чĕринче темĕскер. Хĕр куçĕ тĕпсĕр çăл куç пек тарăн та таса. Курнăçем курас килет, пăхнăçем вăй кĕрсе пырать... Ĕçĕччĕ çапла асамлă куç вăйне каччă, тĕпсĕр çăл куçри таса та техĕмлĕ шыва ĕçнĕ пек ĕçĕччĕ... Кĕлетки те Нинукăн, ну, чисти гимнасткăнни пекех. Шыва кĕмелли костюмпа çеç тăрса юлнă хĕр, паллах, каччă хăйне манса кайсах ун çине кăна пăхса выртнине питĕ лайăх туять. Анчах хăй мĕн туйнине нимпе те кăтартмасть. Ăна темшĕн ку питĕ савăнтарать. Тутлă пек темле. Телейлĕ пек. Намăс та мар. Мĕн намăсĕ? Мĕн пĕчĕкрен пĕрле ӳснĕ те. Пĕрле вылянă, ĕçленĕ, апат çинĕ, çывăрнă та... Хĕр халиччен çапла хитреленсе кайнине вара вăл пĕрре те курман, асăрхаман. Кăкăрĕ тата, темле

ту пек çěкленсе тǎрать! Çапла шутласа илчě те каччǎ тин аванмарланса кайрě. Юрамасть терě кун пек шутлама. Хěр кӳренме пултарать.

Акатуй кунě питě лǎпкǎ, шǎрǎх тǎрать. Кǎнтǎрла та иртрě, час киле каймалла шутлаççě ачасем. Кǎшт тепěр хут шыва кěрсе тухас-и тесе шутласа тǎракан Ванюк сасартǎк вǎрман хыçěнчен темле хура пěлěт хǎвǎрттǎн çěкленсе килнине курчě те тǎп чарǎнса тǎчě. Çав вǎхǎтрах шǎплǎха çурса тем шǎхǎрса ячě. Хаяр сывлǎш хумě харǎссǎн килсе çапрě. Хурǎн кати хашǎлл! сывласа илчě. Сывласа илчě те шǎтǎр-шатǎрр! хуçǎлма тытǎнчě. Ачасем тавра тем пысǎкǎш туратсем самолетсем пек кармашса вěçсе иртеççě. Куç курми тусан çěкленчě.

– Выртǎр, çěре выртǎр! – кǎшкǎрса ячě Ванюк. Хǎй вара ǎçталла тармаллине чухласа илеймесěр ун-кун чупкалать. Уçǎ вырǎнта пулсан лайǎхрах пек.

Шари! çухǎрса ячěç хěрсем. Ял еннеле тарма тытǎнчěç. «Вырт!» - терě çумранах чупса иртен Нинука Ванюк, хǎй çумне туртса антарчě. Çěре ӳкмен пулсан вěсене çав самантрах таçтан вǎрмантанах вěçсе килнě турат çаклатса каятчě пулě. Лап! турě тепěр тем пысǎкǎш йывǎç хěрпе каччě выртнǎ çěрпе юнашарах. Юнашарах! Лǎштǎр-р! хупласа хучě вěсене тем пысǎкǎш турачě. Шǎпланчě. Унччен те пулмарě шартлаттарса аслати кěрлеттерсе ячě – витререн тǎкнǎ пек çумǎр çума пуçларě. Халь тин вǎл питě çапса çǎвать, утма та памасть. Хěрпе каччǎ, йывǎç айěнчен йǎраланса тухнǎскерсем, хӳтлěх шыраса пěр хурǎн айне чупса кайса тǎчěç. Усси çук. Турачěсене милěклěх тесе иртнě хурǎн шыв ярать. Çумǎртан хуплаймасть.

Аслатиллĕ çумăрта йывăç айне тăма хушмаççĕ тата. Аслати çапать. Çапах та вăрманта халь ăшăрах пек. Хурăнран ярса илнĕ хĕр халь унран тем тусан та хăпас çук. Каччă хĕре çумăртан хупăрлас тесе хăй кĕлеткипе хупăрларĕ. Çавăнпа Нинук аптрамарĕ. Таçтан ун чунĕнче тăвăлтан хăранине пăхмасăрах калама çук пысăк хаваслăх çуралса çĕкленсе илчĕ те ăна тем калаттарса çухăрттарса ячĕ. Хăй те ас тумасть мĕн кăшкăрнине. Ванюк каланă тăрăх вăл темле никам илтмен, темле «или-кили, кай!» тесе кăшкăрнă имĕш. Кайран каласа кулса вилетчĕç çамрăксем. Çил-тăвăллă çумăр айĕнче вара пачах урăхла. Витререн тăкнă пек çăвакан çумăр шуралнă темле стена пек курăнать, утма памасть. Çавна пула çыпçăнса тăнă та ĕнтĕ хĕрпе каччă хурăн çумне. Çавă пулăшать. Хĕр вара, çил-тăвăл килĕшнĕрен-ши, хавасланса тăрать. Ачасене вĕсене мĕн, шӳтлесе пултăр. Акă вăл Ванюка тĕртсе ячĕ те çумăр айĕнче ташлама пуçларĕ. Ку хăй çумăрчăкла вылянă чухнехи пек пĕр асам пулчĕ. Калама çук хитре пирĕшти пĕр вăхăт вĕттĕн-вĕттĕн чупрĕ, тепĕр вăхăтран путек пек тринк-транк сикрĕ. Ванюк та чăтса тăраймарĕ. И-ях! тесе кăшкăрса ячĕ те ăмăрткайăк пек хĕр тавра çаврăнма тытăнчĕ. Ку ташă калама çук хитре пулчĕ пулас. Ытти çамрăксем те таçтан, йывăçсем хыçне пытанса тăнă пулинех, уçланкăна сиксе тухрĕç те çумăр лашлаттарса çунине пăхмасăрах авалхи чăваш ташшине яра пачĕç. «Ай-а рай-а, айа-райа-рай-йа!» илтĕнет пек пĕр вĕççĕр кĕвĕ çумăр ташшинче. «Ăт, ку акатуй-тăк акатуй!» – шутлаççĕ ташша çапакан çамрăксем. Пĕлмеççĕ-ха вĕсем çил-тăвăл мĕн туса хунине. Ялта кашни

пӳрт тӑррисӗр тӑрса юлнӑ, пӳрт умӗнчи йывӑççене, çутӑ юписене йалт йӑвантарнӑ, пралукӗсене татса пӗтернӗ. Анчах кун çинчен халлӗхе тӗпсӗр çӑл куçӗ патӗнче ташлакансенчен нихӑшӗ те пӗлмест. Çут çанталӑк вӑйӗ акатуйпа пӗр килнӗ те – çамрӑксене савӑнтарать.

Пӗр уйӑха яхӑн пуль тӑрмашрӗ ял халӑхӗ, çил-тӑвӑл мӗн сиен кӳнисене пӗрех пӗтӗмпех юсаса пӗтерейменрӗ. Кашни киле çутӑ кӗртнӗ хыççӑн, пӳрт тӑррисене хупласан тин лӑш! пулчӗç. Халь тин каллех юратнӑ хурӑн кати патне пухӑнчӗç ачасем. «Мӗн пулса тухрӗ-ха ку?» – теççӗ. Хальхинче Хӗветӗр Хилипччӑ та пӗрле. Вӑл кунта мӗн пулса иртнине пӗлетех ӗнтӗ.

– Тӑвӑл пирӗн таврара кӑна çӳренӗ. Юнашар ялсенче пӗр çил те çӗкленмен, – пуçларӗ хӑй урокне учитель. – Ку çеç те мар, пур çӗрте те питӗ шӑрӑх тӑрать, ниçтан пӗр пӗлӗт татки шуса килни çук. Çумӑр кунӗнче те çаплаччӗ. Акатуй кунӗ тӳпе янкӑрччӗ вӗт!

– Янкӑрччӗ, – теççӗ ачасем учитель ӑçтарах шуçтарса пынине ӑнкараймасӑр.

– Апла, ку тӑвӑл пирӗн ял тӑвӑлӗ кӑна. Вӑл пирӗн ялтан тухнӑ.

Кун пек шухӑш ачасене анратсах пӑрахать. Чӑн та, тап-таса тӳперен сасартӑках çил-тӑвӑл йӑтӑнса анать, тем чухлӗ шыв тӑкӑнать. Ӑçтан тет кун чухлӗ çумӑр. Атлантика енчен нимле циклон та куçса килмен. Ытти таврари ялсенче çумӑр çуман.

– Эль кӳллинчен тухнӑ пулӗ. Çавӑнтан тухсан çумӑр питӗ вӑйлӑ пулать теççӗ, – тӗшмӗртем пекки пулать Ванюк.

– Мĕн ухмаххи, – кулать Çтаппан. – Тен, калăн, çак пĕчĕк çăлран? Ачасем пурте кулса яраççĕ.

– Ним кулăшли те çук кунта. Ку çăла эпĕ тахçантанпах сăнатăп. Пĕрре те ахаль çăл мар вăл. Тĕпсĕр çăл. Авал пирĕн ял çыннисем вĕрен ярса пăхнă тет. Тем чухлĕ ярсан те вĕçне янă чул тĕпне çитеймен тет, – темле çулпа чуптарать учитель.

– Тетĕн хӳри кĕске, тет, – каллех пăсланать Çтаппан. – Учитель пулсан та хăвăр темле халапсене ĕненетĕр. Вĕсене каласа кăтартса пирĕн ăса та пăтрататăр.

– Кашни халапрах мĕнле те пулин тĕшĕ пур. Халап ахаль çуралмасть. Ун никĕсĕ пур. Çавна шыраса тупасшăн эпĕ. Ăна тупас тесен вара пысăк пĕлӳ кирлĕ.

– Çумăрĕ-мĕнĕ ку, чăнах та, питĕ усал пулчĕ. Эль кӳллинченех тухрĕ пулĕ, – халăх шухăшĕ хыççăн каять Нинук. – Пăр çапмарĕ те, пĕрех йăлт ватса пĕтерчĕ.

– Асăрхарăр-и эсир, – пӳлсех калать Хĕветĕр Хилипччă. – асăрхарăр-и?

– Мĕне? – харăссăн ыйтать класс.

– Турачĕсене иртмен йывăççем кăна хуçăлнă. Çил вăйне хăйсем çине илнĕ те персе аннă. Çара туратлисем шăхăрса кăна ларнă.

– Авă ăçтан тухнă апла çав шăхăрнă сасă! – шăхăрсах кăтартать Çтаппан. Ачасем каллех кулаççĕ.

– Кулă мар-ха кунта, – каять шухăша учитель. Ун хыççăн шкул ачисем те шухăша путаççĕ.

Ванюк та шухăшлать. Ун куçĕ умĕнче темшĕн Çтаппан шăл йĕрни, çăл куçа чул

пăрахни тухса тăрать. Татах та темскер пур пек. Анчах мĕнне тавçăрса илме хĕн. Тăвăл умĕн çăл çийĕн тем мăкăрланнă пек ас тăвать ача. Мĕне пĕлтернĕ-ши вăл? Тĕпсĕр çăл пурнăçĕпе çыхăнман-ши ку тăвăл? Ку çăл куç та ял енчен пăхсан Эль кӳлли енчех. Тен, пирĕн ялти çăл куçĕ Эль кӳллипе çыхăннă? Калаççĕ-çке, ку та халап анчах та, калаççĕ-çке Эль кӳлли Хура тинĕспе çыхăннă тесе. Ун тĕпĕнчен карап ванчăкĕсем тухаççĕ пулать. Апла, тен...

– Тăвăл ниçтан та мар, тĕпсĕр çăл куçран тухнă! – саспах персе ярать хăй шухăшне ача.

Кăна илтсен пĕр ушкăн ача тата хытăрах кулса ярать. Пуринчен ытла Çтаппан ахăрать. Хырăмĕнчен тытсах йăваланать çĕр тăрăх.

– Ну, каларан та вара эс! Ха-ха-ха! Çак юшкăнлă пĕчĕк çăлран çавăн чухлĕ шыв епле çĕклентĕр. Çилĕ тата! Йăлт хуçса пĕтерчĕ вĕт!

– Ненай çав, – текелет учитель.

– Атьăр-ха, атьăр! Пырса пăхар мар-и çăл куçĕ патне? – чĕнет пурне те Нинук. Темшĕн ун пĕрмай Ванюк хутне кĕрес килет. Вăл тĕрĕс каланă пек туйăнать. Хăй çапла мĕншĕн хăтланнине вăл пĕрре те чухламасть.

Çавна çеç кĕтнĕ тейĕн. Пурте чупса тенĕ пек тĕпсĕр çăл куçĕ патне пырса пăхаççĕ. Пăхаççĕ те хăраса каялла чакса каяççĕ. Пăл-пăл! тутарса юшкăнланса юхса выртакан пĕчĕк çăл вырăнĕнче тап-таса та çав вăхăтрах, питĕ тарăн пулнипе пуль, хуп-хуран курăнакан пысăк кӳлĕ выртать. Çийĕпе пĕчĕк хумсем кăтраланса выляççĕ. Таврара шăп. Никам та пĕр сăмах та калаймасть.

– Нивушлĕ çак пĕчĕк çăлтан тухрĕ вара ку тăвăллă çумăр? – шăппăн, темрен хăраса калать Хĕветĕр Хилипччă. – Мĕн сăлтава пула?

– Ваттисем калани, апла, тӳрре тухать, – халăх ăслăлăхне пĕтĕм чунран туйса илсе калать Нинук. – Тепĕр чухне эпир ахалех ĕненмесĕр тăратпăр. Тĕшмĕш тетпĕр. Акă, пирĕн ял халăхĕ çĕр кăвапине, икĕ çырма пуçне, килсе ларнă тет. Чăн та, акă, парк çумĕнчех çĕр путнă вырăн пур. Туй халăхне çăтнă тет-и? Вăл вырăн питĕ хăрушă! Киремечĕ те... икĕ çырма пуçĕнче!

– Халапласа кайса шутласан. çĕр-Аннемĕрĕн çамки те, çăварĕ те, кăкри те пур, – хĕрача шухăшне малалла тăсать Ванюк. Пирĕн Çĕр – хăйех организм. Микки сăртне выртса тăнласан, çĕр чĕри тапнине илтме пулать имĕш! Эх, ман юлташăм Антон хуларан каникула килсе çитейменрĕ, вăл географ, тем те пĕлет, мĕн те пулин хушса калатчех ĕнтĕ.

– Мĕнле килмен, килнĕ вăл! Сана курас тесе вара пĕрре те хыпса çунмасть, – йĕкĕлтешет Çтаппан. Антон аслашшĕпе пĕрле вите тăррине витнине те пĕлет, шарламасть. – Эсир каланисем тĕрĕс пулсан, апла, Çĕр планета та чĕрĕ организм пек ăс-тăнлă килсе тухать. Ăçтан чĕрĕ тата ăслă пултăр вара вăл çак тăпра? – Урипе тăлт! тапать ашкăнчăк ача. Унтан теме пула тарăхса кайса ури айĕнчи чула илсе çĕре шаплаттарса çапать. – Ку йăлтах вилĕ япала! Мĕн пултăр вăл вилĕ япалапа? Унпа эсĕ кирек мĕн ту, уншăн пулсан пурпĕрех.

– Вилĕ тетĕн! Çавăнпа, апла, эсĕ чулпа çапрăн-и? Çĕре ыраттармасть терĕн-и? – Ванюк

куçĕ умне Çтаппан çăл куçа тем пысăкăш чул пăрахни сиксе тухать. Йăлт сирпĕтсе пĕтерчĕ ун чухне. – А-а! сасартăк тĕшмĕртсе илет ача – Эсĕ мар-и-ха вăл, çăла чулпа çапаканни! Çавна пула вĕт çăл çилленчĕ! Чĕрĕ мар пулать? Çĕр чĕрĕрен те чĕрĕ. Акă вăл хăй çиллине мĕнлерех кăтартрĕ!

Кун пек каланă хыççăн пурте хăраса-хăраса çăлран тата аяккарах чакса каяççĕ. Çтаппан тин çеç çĕре чулпа çапрĕ мар-и-ха? Акă вăл çилленĕ те – пурне те çăтса ярĕ. Çĕр çăтнă вырăн кунта, тесе калĕç вара кайран. Пĕр ушкăн ашкăнчăк ачасене çăтнă тейĕç. Хăшĕ-пĕрисем хăйсем сисмесĕрех ăçта тарса çухалма май килет-ши тесе ун-кун пăхкалама тытăнаççĕ. Çав вăхăтра тата, çил çĕкленчĕ-и, таçтан темле шăхăракан сасă тухрĕ. Унччен те пулмарĕ – пĕр ушкăн ача кашкăртан хăранă пĕр кĕтӳ сурăх пек ял еннелле тапса сикрĕ. «Эсир ăçта таратăр?» – тесе учитель кăшкăрни те вĕсемшĕн халь ним те мар.

## Хула ачи

Антон юлташĕсемпе пĕрле пулас тесе хыпса çунать пулсан та чунне хытарсах аслашшĕ мĕн каланине чунтан парăнса тăвать. Тумасăр? Вите тăррине сӳсе кайнă, ватă çын унта хăпараймасть. Антоншăн пулсан вара ку ним те мар. Сирсе пăрахнă хăмасене чылайăшне çапла тăрăшкаласа çапса тухрĕ те вите тăррине канма тесе ларчĕ.

Кунтан, ҫӳлӗ ҫӗртен, аякка курӑнать. Йӗритавра уй-хир, икӗ вӑрман, Сӑхӑтпа Нижер шывӗсем. Тӗлӗнмелле хитре. Икӗ ҫырма пуҫӗнче ачасем лартнӑ вӑрман. Анчах мӗн ку? Тӗпсӗр ҫӑл куҫ енчен пӗр ушкӑн ача ӗрӗхтерсе чупса тухрӗ те пӗр чарӑнмасӑр тусан кӑларса яла кӗрсе ҫухалчӗ. Тепӗртакран, вӑхӑт нумай иртрӗ-и, хапха умӗнче Антон! тесе кӑшкӑрни илтӗнсе кайрӗ. Ку Ванюк пулчӗ. Юлташӗ патне чупса ҫитрӗ ҫитрех. Пашкана ернӗ ача тем каласа ӑнлантарать. Анчах ӑна Антон та, ун аслашшӗ те ним чухлӗ те ӑнланмаҫҫӗ.

– Ҫӑл ҫӑтать, ҫӗр ҫӑтать! – темле тӳрех ӑнланса илме те май ҫук сӑмахсем тин хӑлхана кӗчӗҫ.

– Мӗн, мӗн? Илтӗнмест, – тет ҫӳлте ларакан Антон.

Аялтан япӑх илтӗннӗрен Ванюк вите тӑррине хӑпарса кайрӗ. Халь тин тата уҫҫӑнрах каларӗ.

– Ҫил-тӑвӑл мӗнрен тухнине пӗлтӗмӗр, – ӑнлантарчӗ хыпӑнса ӳкнӗ ача. Унтан хӑйсемпе мӗн пулса иртнине васкаса каласа пачӗ. Ку калава Антон аслашшӗ те илтрӗ. Кхм-кхм! текелет итленӗҫем. Антон чӗнмест. Унтан тем аса илнӗ пек пулать.

– Вӑхӑт ҫитрӗ, апла, – тесе хушса хурать Антон. Хӑй темле питӗ вӑрттӑн шухӑшлӑ. Тем пӗлет вӑл, чӑн та.

– Мӗн вӑхӑчӗ ҫитрӗ? – ним те ӑнланмасть Ванюк.

– Тавӑру вӑхӑчӗ. Ку вӑхӑта тахҫантанпах кӗтеҫҫӗ. – хальхинче ку сӑмахсем тата вӑрттӑнтарах янӑраса каяҫҫӗ. Ачана, халь ҫеҫ Ҫтаппан ҫӗре чул ҫапса хӑратни ҫитмест, Антон

каланинчен тата хăрушăрах пулса каять. – Çĕр планета ахаль япала мар, вăл тем пысăкăш кристалл, – малалла тăсать хăй сăмахне хулари тусĕ. – Вăл питĕ хăвăрт шутласа илме пултаракан машина, хăйне майлă питĕ пысăк компьютер. Кăна халĕ наука питĕ лайăх çирĕплетсе парать. Çĕр кашни япалана, кашни пулăма ас туса тăрать. Кайран кирлĕ пĕтĕмлетӳсем тăвать. Çăл тавра тухнă çил-тăвăл та çав пĕтĕмлетӳ пулма кирлĕ,

– Кхм-кхм! – текелет Антон аслашшĕ. – Çĕре, чăн та, кӳрентерме юрамасть. Эпĕ, акă, çĕр чавас умĕн, кирек мĕн калăр та, кĕл тăватăп, çĕртен ăна хускатма хăйнăшăн каçару ыйтатăп. Çĕре ăна ăнланас пулать. Вăл сассăр кăшкăрать пулать, анчах ăна илтекен çук.

– Тĕрĕс, питĕ тĕрĕс калатăр, асатте! Çĕр çине сурма та юрамасть! Хулари çĕр сывлаймасăр выртать. Ăна йăлтах асфальтпа хупланă. Çавăнпа вăл ăна йăлт çуркаласа таткаласа пĕтерет. Çавăншăнах хула çыннисене тусанпа чыхăнтарать. Асфальтне вара, асфальтне йăлт сурса вараласа пĕтереççĕ. Пăхма намăс. Çĕр мĕнле чăтать тулькkăш?

– Хулара пĕлместĕп те, пирĕн ялта вара таса. Çапла-и, Михха мучи? – мухтанам пекки тăвать Ванюк.

– Тасарах ĕнтĕ, çавăнпа кунта канма тесе килетĕп те. Ялта лайăх. Лăпкă. Шăп. Хулари пек мар. Тин сунă сĕте ĕçни хăйех мĕне тăрать. Ман Машка мĕнле пурăнать унта, асатте?

– Чиперех. Кĕтӳ яриччен нумай юлмарĕ, чăт кăштах. Енчен те, пит ĕçес килсен, акă, сивĕтнĕ сĕт пур, час илсе тухатăп.

– Илсе тух-ха, апла. Ăш хыпрĕ. Акă ку вите тăррине эпир Ванюкпа час витсе пăрахатпăр.

Ват çын кăштăртаткаласа киле кĕрсе кайрĕ. Çамрăксем хăма çапма тытăнчĕç. Шап та шап! тутараççĕ. Хăмисем сарлака та ĕç хăвăрт пырать. Хăйсем шухăша путнă. Пĕр сăмах та чĕнмеççĕ.

– Пĕлетĕн-и, тусăм, енчен те Çĕр çапла шутлама, туйма пултарать пулсан, тен, ăна урăхларах пĕтĕмлетӳ тума хистемелле? Вăл пире тăвăлпа мар, юратупа тавăртăр, – хускатать сăмахне Ванюк.

– Шутлав машинĕ мĕн шутласа пама ыйтатăн, çавна шутласа парать. Енчен те çĕр планета хăйне майлă компьтер пулсан, апла, вăл мĕн тумаллине йăлт ăнланать. Кăтартса çеç парас пулать.

– Мĕнле сăмахпа каласа кăтартса пама пулать-ши вара ăна?

– Кăна вара пĕлместĕп. Компьютер цифрăсене кăна ăнланать. Çĕрĕн те хăйĕн сăмахĕ пур пулĕ?

– Пур, пур! Мĕнле çук пултăр? – мăнукĕсене пулăшасшăн чупкалать тин çеç пĕр курка сĕт йăтса тухнă мучи. – Эпĕ çĕрпе кашни кунах калаçатăп-иç! Вăл мана ăнланать. – Мучи çӳллĕ çамкине пĕркелентерет. Шап-шур çӳçĕ хăйĕн çил вĕрнипе арпашăнса пĕтнĕ. Çавăнпа та вăл темле асамçă пекех курăнать. – Акă паян эпĕ ăна мĕн каларăм, пĕлетĕр-и?

– Мĕн-н?! – теççĕ харăссăн анраса кайнă çамрăксем. 21 –мĕш ĕмĕрте çĕрпе калаçакан çынна курма питĕ интереслĕ. Тен, вăл çĕр чĕлхине пĕлекен пĕртен пĕр çын. Урăх çук.

Аслашшӗ ҫӗрпе калаҫма пултарнинчен пуринчен ытла мӑнукӗ тӗлӗнет.

– Кала-ха, апла, кала пӗр-икӗ сӑмах. Эпир те итлесе пӑхар.

– Мӗнех. Акӑ, итлӗр. – Мучи ҫӗр ҫине чӗркуҫленсе ларчӗ, куркари сӗтне ҫӗр ҫине кӗлт тумлатрӗ. – Тавах сана, тӑван ҫӗр, пире ҫуратнӑшӑн, анне пек пӑхса ӳстернӗшӗн. Яланах пулӑхлӑ пул, ҫӑкӑр-тӑварсӑр ан хӑвар. Эпир вара сана хисеплӗпӗр, юратӑпӑр, мӗн кирлине йӑлт парӑпӑр. Пуҫ ҫапатпӑр, ан пӑрах хӑвӑн ачусене. – Ватӑ ҫын виҫӗ хутчен ҫӗре ӳксе пуҫ ҫапрӗ, куркари сӗте тутанса пӑхрӗ. Унтан куркана вите тӑрринче ҫак асам ӗҫе пӑхса ларакансене тӑсса пачӗ. – Ӗҫӗр, эсир те. Пехил пулать.

– Асатте, эсӗ мӗн, ҫак сӑмахсене ҫӗр ӑнланчӗ тетӗн-и? – сӗте сыпкӑмӑн-сыпкӑмӑн ӗҫсе хирӗҫлет Антон. – Ҫӗр вӑл ҫын мар, компьютер. Эпир те, сӑмах май, ӑнланса пӗтермерӗмӗр. Ҫӗр ыйтни мӗн вара вӑл?

– Апат, ҫӗр апачӗ. Урӑх мӗн пултӑр? Акӑ эпӗ кӗлӗ умӗн сӗт тумлатса патӑм, ҫӗр пулӑхлӑ та тулӑхлӑ пултӑр тесе кашни кунах ӑна эпӗ шӑваратӑп, тислӗк хурса паратӑп. ҫуркуннепе вара ана ҫине лавӗ-лавӗпех тислӗк кӑларатӑп. Ҫӗр ҫакна питӗ лайӑх ӑнланать.

– Тислӗк хывнине ӑнланма пулать пуль-ха. Кунта ҫӗр ҫаврӑнӑшӗ пурнӑҫланса пырать. Мӗн чухлӗ илнине каялла тавӑрса паратӑр. Вара ҫӗр, кӑшт ытларах парсассӑн, лайӑхлансах пырать. Кӑна ӑнланма пулать. Анчах та кӗлӗ сӑмахӗсем мӗне пӗлтереҫҫӗ? – Ача шухӑша путать. Ванюкпа Михха мучи те шутлаҫҫӗ. Ҫӗр те, тен, шутлать. Картишӗнче шӑп. – Акӑ мӗн! – кӑшкӑрсах

ярать Антон. Сăмахĕсем вĕсем çĕр моделĕ вĕт! Çĕр çаврăнăш моделĕ. Çын чăн малтан çĕре сăмах каласа евĕрлет. Асăрхарăр-и, кĕлĕре тырпул туса илни кăна мар, чӳк туса тавăрса пани те пур. Чӳкĕ, çăкăр-тăвар хывни, символ кăна. Чăнни – тислĕк хуни, çĕре тăранмалăх апат пани. Çавна евĕрлесе парать те кĕлĕ. Ăнт!

Кун пек ăнлантарса пани пурин кăмăлне те каять. Капла туни çĕре çаратни мар ĕнтĕ вăл. Халĕ, акă, пĕрмаях пĕлтерсе тăраççĕ, унта та кунта катастрофа. Çĕр çилленет. Выçă вăл. Мĕн пуррине йăлт туртса илеççĕ те унран, çийĕнчен тата лач! тутарса сурса хураççĕ. Кăна çын мар, çĕр те чăтаймасть. Çавна систерсе «вăхăт çитрĕ!» тесе каларĕ те Антон. Хулара çав пĕтес вăхăт çитни паллăрах пуль çав. Ялта ун пекех мар.

Шухăшлав малалла пырать. Икĕ çамрăк вите тăрринче шак та шак! тутараççĕ. Шухăшĕсемпе, çӳлте лараççĕ те, таçта çити вĕçеççĕ. Антон Çĕр-компьютерпа мĕнле ĕçлемелли пирки, Ванюк вара Çĕртен çĕнĕрен çăтмах тума ыйтса пăхасшăн.

– Енчен те çĕрпе тĕрĕс ĕçлесе пырсан эпир çĕр çинче çăтмах туса хума пултараятпăр-и? – пĕлтерет вăл биологи учителăн шухăш-ĕмĕтне. Çав райри пурнăç йывăççине те тепĕр хут тавăрса парас килет ман тăван халăхăма тепĕр хут. Унсăрăн ытла та усалланса ухмахланса кайрăмăр.

– Ненай, – тет мучи. – Çăтмах вăхăчĕсем иртсе кайрĕç пулĕ вĕсем. Пурнăç йывăççи тесен, Самать патĕнче уйра халĕ те пĕр хурама ларать. Çавă ĕнтĕ вăл, пурнăç йывăççи тени! Анчах ун патне халь тин никам та пырса кĕлĕ

каламасть, чӳк тумасть. Ватă хăй. Çапах та ăна никам та пырса тĕкĕнмест, касмасть. Апла, халăхра çав эсĕ калакан ăнлав, пурнăç йывăççи тени, упранса юлнах. Çăтмахĕ вара... Çăтмах вăл ĕçлесен кăна пулать. Ĕçлес пулать. Вара тин сĕтел ури авăнмалăх апат-çимĕç пулать. Тавралăх та татах илемленет.

– Ку тĕрĕс пуль, анчах та Çĕр-планета хăй те ухмах мар терĕмĕр, вăл та çав çăтмах çулне шырать пулĕ. Ĕлĕк-авал çын хăй ухмахлăхĕпе, пĕтĕм технипе килсе çапиччен çут çанталăк, паллă, ирĕклĕрех сывланă ĕнтĕ вăл. Халĕ те сывласшăн. Çакна ăнланса илни пире те, çĕре те пулăшатех. Эпĕ сисетĕп, час тем пулать пек. Çĕр-Анне вăранчĕ.

– Тем пекехчĕ. Анчах çав вăхăт пĕрех ырă сăмах каласа ĕçлемесĕр çитеес çук. Çавăнпа та...

– Çавăнпа та çав кĕлле эпĕ те каласа пăхатăп, – тет вите тăрринче сиксе аннă Ванюк. Антон, атя, эс хирĕç мар-и?

Акă тĕнчере нихçан пулман пулăм. Икĕ арçын ача çĕр умне чĕркуçленсе ларнă та кĕлĕ тăваççĕ. Мĕн калаççĕ, паллă мар. Чăвашăн ун кашнин хăйĕн кĕлли тет. Канон çук. Ку енĕпе вăл питĕ ирĕклĕ. Антон компьютерпа калаçнă пек калаçать пуль. Ванюк çăтмахра ӳсен пурнăç йывăççине ыйтать. Ватти те кĕл тăвать. Вăл çамрăксене сывлăх ыйтса кĕл тăвать, нумай пурăнччĕр тет. Мăнукĕсем çапла ăслă, тăнлă-пуçлă, ырă кăмăллă та ĕçлĕ пулнишĕн савăнать мучи. Ванюка та мăнук вырăннех йышăнать. Ара, кашни çул мĕн пĕчĕкрен Антонпа пĕрле вăл. Хулари тусне ял пурнăçне хăнăхма вĕрентрĕ. Халь тин Антон тем тума та пĕлет.

Çурт тăвас тесен çурт тăвать. Раствор çăрать, кирпĕч хурать, чул кăларать. Утă вăхăчĕ çитсен вара ниçта кайса кĕме пĕлмест. Уттине те çулать, тавăрса типĕтет, сип-симĕс курăка çак вите тăррине кĕртет. Ĕне кĕтӳ тесен, кĕтĕве те каять. Машка сĕтне юрататъ те кĕтӳрен килнĕ ĕнене пĕр михĕ чĕрĕ утă çулса паратъ. Антонăн, мĕн калас, туман ĕç çук, алли пырать ун. Кăмăлĕ те пит хитре. Çавăнпа та ватă çын икĕ тусшăн пит савăнать, ыр сунать. Ку çамрăксем тăван çĕре нихçан та сутмĕç, ыттисене те çĕре çĕмĕрме памĕç, тет вăл.

Акă вĕсем кĕл туса пĕтерчĕç пулас та тем калаçса пӳрте кĕрсе кайрĕç. Тем самантран Ванюк темле кĕнеке йăтса тухрĕ. Уçкаласа пăхрĕ те çаплипех вула-вула килнелле танккарĕ. Тепĕртакран Антон та кулкаласа тухрĕ. Вите тăрри витсе ывăннă мучи канма выртрĕ пуль. Антон пĕчченех. Акă вăл сасартăк сип-симĕс курăклă картиш варрине йăванса кайрĕ те лăпланса выртрĕ. Икĕ аллине ик айккинелле сарса пăрахнă хăй, куçне кăвак пĕлĕтелле тинкернĕ. Савăк ăна, канлĕ халь çĕр ытамĕнче. Апла, хула ачи тин тăван çĕрне тупрĕ пулать. Унпа пĕр пулса кайса вăй илет те акă вăл Çĕр-планетăпа компьютерпа калаçнă пек калаçма пуçлать. Çав калаçу çапла çĕр кăкăрĕ çинче канлĕн кăна выртнă чухнех пуçланчĕ мар-и?

## Протоценоз

Çил-тăвăл хыççăн чылай вăхăт иртрĕ. Шкул ачисем йăлана кĕнĕ йĕркепе çĕнĕ катана

выльăх ватасран тесе хурала çӳрерĕç, шкул пахчинчи йăрансене ӳстерчĕç. Кашнинчех вĕсемпе пĕрле Антон та пулчĕ. Тăваттăн çӳрерĕç вĕсем. Антон, Ванюк, Çтаппан тата Нинук. Икĕ çырма пуçне те темиçе хутчен шыва кĕме кайса килчĕç, анчах нихăшĕ те тĕпсĕр çăл патне тек пырса пăхмарĕç. Хăрарĕç пулать. Ку ютшăну чылая пыратчĕ-и, калама та хĕн. Эльпуçĕнче та Мишерти пек тăвăллă çумăр тухнă тенине илтсен, чăтаймарĕç çăл куçĕ патне кайса килме шут тытрĕç. Чăнласах хăраççĕ пулас, пĕр сас кăлармасăр, шиклĕн кăна ура пускаласа утса пычĕç çамрăксем çав асамлă вырăн патне. Мĕнле-ши? Тĕпсĕр çăл куçĕ вара тĕлĕнмеллипех тĕлĕнтерчĕ. Вăл ĕлĕк мĕнле пулнă çаплипех тăрса юлнă. Хум вылятса выртакан таса та тарăн пысăк кӳлĕ вырăнне куçа пăл-пăл! туса тăракан шыв юххи тăрăнчĕ. Юшкăнланса кайнă хăй. Ĕлĕкхи пекех. Ванюк мĕн ас тăвасса çаплаччĕ вăл. Тĕпсĕр çăл каллех юшкăнпа тулса ларнă. Йĕри-тавра вара! Йĕри-тавра, кăна чăн малтан Антон асăрхарĕ, калама çук симĕс курăк шăтса тухнă. Тата ку курăкĕ темле нихçан курманни!

– Мĕн япала ку? – ыйтать Антон. – Эпĕ кун пек курăк курман. Ятне те пĕлместĕп. Калас пулать, ачасем таврара ӳсекен кашни курăк ятне пĕлеççĕ. Сахал мар вылянă курăкла. Вăййи çапла. Кашни ача тĕрлĕ курăк татса килет те пĕрин çав курăк ячĕсене каласа тухмалла пулать. Пĕлмессерен çĕр ăшне пĕкĕ аврипе шĕвĕр патака çапса кĕртеççĕ. Тепĕр чухне, курăк ячĕсене пĕлменрен ĕнтĕ, вăл çĕр ăшнех çапăнса кĕрсе каять. Ăт, çав çĕр ăшнех кĕрсе кайнă шĕшлĕне пĕрре кăна мар шăлпа

туртнă Антон. Ун чухне çĕрĕ те çăвара кĕрет. Çавăнпа та çĕр тутине ача питĕ лайăх чухлать. Халь тин асăрханă курăк ятне вара вăл пĕлмест. Каллех çĕре çапса кĕртсе лартнă шĕвĕр патака шăлпа туртма тивет-и?

– Чăн та, – Нинук курăка çăлса пăхать. Сăмси патнех илсе пырса шăршлать. – Ай-уй! Пит тутлă шăршлă ку, çемçе тата.

Ачасем пурте алăра нихçан та тытса курман курăка татса шăршласа пăхаççĕ. Ванюк, те юрать те юрамасть текелесе, çыртса та пăхать. Тути те лайăх пек. Çтаппан курăка урипе тапса тăпăлтарать.

– Тупнă курăк... Курăк курман-им? Курăк-тăк курăк. Ун пекки, курăр, тем чухлех шăтса тухнă.

– Ан тив! – тет Нинук. – Ку ахаль курăк мар. Ку сиплĕ курăк. Вăл тинтерех çеç шăтса тухнă пулас. Ĕнер мар вицĕм кун эпир хурала тухнă, кун пеккине асăрхаманччĕ.

– Акă мĕн, – аса илет Антон. – Машка каякан кĕтӳ кунтах çӳрет, ĕне питĕ тăранса киле пуçларĕ. Пахчари курăка çулса парсан та çимест. Сĕчĕ вара... питĕ тутлă пек.

– Тулай Иванĕ те питĕ мухтанать тет. – хушса хурать Нинук. – Ĕнесем халь питĕ тăранса килеççĕ. Эпĕ лайăх кĕтӳçĕ, уншăн мана эрех памалла тесе калать тет. Кĕтĕве катана кĕртме пăрахнă-ха вăл. Тен, çак курăка çисе тăранаççĕ выльăхсем?

– Ха-ха-ха-ха-ха! – юри кулам пекки туса кулать Çтаппан. – Тен, ку сирĕн Аслă çаран пулать. Хăй тĕллĕнех, шăвармасăрах ӳссе тăрать. Ĕнисем те çимесĕрех тутă пулаççĕ. Çулма та,

акма та, типӗтме те кирлӗ мар – хӑй тӗллӗнех ӳссе тӑрать. Ха-ха-ха!

– Мӗн терӗн, хӑй тӗллӗнех! – пӗшкӗнет ҫӗр ҫумне Ванюк. – Пӑхӑр-ха, пӑхӑр, курӑк хӑй тӗллӗн тенӗ пек питӗ хӑвӑрт ӳсет. Эпир калаҫса тӑнӑ вӑхӑтра вӑл пӗр шит пуль ӳснӗ. Кун пек вӑрӑм марччӗ вӑл. – Ванюк курӑка татса малтанрах татнипе танлаштарать. Чӑн та, тем самантра курӑк чылай ӳснӗ. Ку куҫ кӗрет.

Аптраса ӳкнӗ ачасем шӑп тӑраҫҫӗ. Ванюка тахҫан каланӑ кӗлӗ сӑмахӗсем аса килеҫҫӗ. Вӑл Антонпа тата Михха мучипе пӗрле кӗл тунӑ чухне ҫӗртен хӑй тӗллӗнех хӑвӑрт ӳсекен курӑк пама ыйтнӑччӗ. Вӑл ыйтнине никам та илтменччӗ. Ӑна вӑрттӑн кӑна шалти саспа ыйтнӑччӗ. Ара, ҫӑтмахри курӑк вӑл хӑй тӗллӗнех пӗр вӗҫӗмсӗр ӳсет-иҫ! Антон пуҫӗнче вара ҫӗр ҫаврӑнӑшӗн моделӗ ҫаврӑнать. Курӑк айӗнчех темле юшкӑн выртнине вӑл кӑна асӑрхарӗ-ха, ҫак юшкӑнтан килмест-и ку пулӑм? Юшкӑн вӑл питӗ пулӑхлӑ. Авалхи чӑваш несӗлӗсем ҫырма икӗ пуҫӗнче пурӑннӑ чухне, Месопотами теҫҫӗ-и халь, ҫакӑн пек юшкӑнлӑ ҫӗр ҫинче тырпул туса илнӗ тет. Ҫавӑнтах пулнӑ мар-и-ха Библире ҫырса хӑварнӑ ҫӑтмах ҫӗр? Ҫӗр ҫаврӑнӑшӗ, ҫӗр ҫаврӑнӑшӗ! ҫаврӑнать ача пуҫӗнчи шухӑш. Нинук вара илем пирки шутлать. Эх, епле илемленсе каять пуль Сӑхӑт ҫырми ку курӑк ярса илсен. Халӗ вӑл кӗтӳ иртмессерен тусанпа мӑкӑрланса тӑрать. Типӗ, ҫара, чӑнкӑ... Йывӑҫ та лартса пӑхнӑ унта. Каймасть. Ку курӑк, тен... Ҫтаппан та питӗ тӗлӗннӗ. Айван та вилӗ текен ҫӗр каллех тем ҫуратса парать. Анчах ача пуҫӗнче ку чӗрӗлӗх мар, пач урӑххи хуҫаланать. Кӑна, чӑн пулсан,

алла мĕнле çаварса илме пулать-ши, шутлать вăл. Куракĕ питĕ хăвăрт ӳсет пулсан питĕ пысăк кĕтӳ те кĕртсе яма пулать. Куракĕ ӳссех тăрĕ, ĕнисем мăнтăрлансах пырĕç... Çтаппан вара вĕсене сутса укçа тăвĕ. Лайăх ку!

– Ака мĕн! – тет çĕнĕ хуçа. – Эпĕ кĕтӳçĕ пулатăп. Çак куракпа тăрантарса нумай-нумай ĕне ĕрчетĕп те пасара кайса сутса нумай укçа тăвăп. Ку ĕçе урăх никам та ан кĕрештĕр. Эпĕ хам.

Кун пек пĕр кĕтмен çĕртен тунă пĕтĕмлетӳ ачасене култарса ярать. Мĕн хуçи? Малтан ку пулăмăн сăлтавне тупас пулать-ха. Тен, вăл ку пĕрре те ырра мар. Усала, тен, ку?

– Кунта, чăн та, темле майсем уçăлса пыраççĕ пулас, – тет Ванюк. – Курак çăтмахри пек ӳсет. Ака эпир ĕмĕтленсе тăнă вăхăтра вăл татах ӳснĕ. – Ача тепĕр ывăç курак татса танлаштарса пăхать. Курак татах ӳснĕ...

– Апла, ку, – хăвăрт шутлать компьютер хуçи, – ыранччен пирĕн çӳллĕш ӳсет. Вара мĕн тумалла тет унпа? Тен, чăн та, Çтаппан калашле, кĕтӳ кĕртмелле... Сĕтлĕ пулатпăр.

– Ан калаçăр, ӳстĕр! – вылятать куçĕпе хĕр. – Кунта авлхи мезозойри пек тем çӳллĕш курак ӳстĕр!

– Ĕнесем динозаврсем пек çӳреччĕр! – ашкăнчăклăн аталантарать хăй шухăшне Çтаппан.

Кăна илтсен пурте ахăлтатса кулса яраççĕ. Атьăр-ха, теççĕ, эпир те çăл куç шывне ĕçсе пăхар, тен эпир те Улăп пек ӳссе кайăпăр. Кула-кула ачасем ӳпĕнсе çăл шывне ĕçеççĕ. Тем, пит ӳсни курăнмасть. Вĕтĕрех. Анчах чунĕсемпе кусем чăн Улăпсем. Хăйсене хăватлăн туяççĕ.

Ара, кашнин хăйĕн ĕмĕчĕ те-ха. Ĕмĕтрен асли вара вăл мĕн пултăр?

Каçхине, паллă, ĕнесем каллех питĕ тăранса килеççĕ. Тăвăл хыççăн икĕ çырма пуçĕнче курăк ешерсе кайни çинчен ялта халĕ ĕнтĕ пурте пĕлеççĕ, кайса та пăхĕччĕç, анчах каç пулса килни кансĕрлет. Килти ĕçсем те пур, вĕсене курăк курма тесе пăрахса тухса каяймăн. Çавăнпа та ял халăхĕ пит хыпăнса ӳкмерĕ. Çумăр лайăх лӳшкенĕ, паллă, курăк çумăр хыççăн хăвăрт ӳсет. Ыран кайса пăхăпăр терĕç те, çывăрма выртрĕç.

Хĕветĕр Хилипччăн кăна ыйхă килмерĕ. Ачасем ашшĕ-амăшĕсене кăна мар, мĕн пулса иртнине чăн малтан биологи учителне каласа панă пулнă. Хăй куçпа курман пулин те ачасем калани питĕ курăнчăклă курăнса выртрĕ. Икĕ çырма пуçĕ. Вăл вырăн мĕн ĕлĕкренпе хăй асамлăхĕпе палăрса тăнă. Темле аваллăхлă вырăн. Ахальтен мар пуль çав чăвашсем, кашни ял çапла, икĕ çырма пуçне пырса ларнă. Масарĕсем те икĕ çырма пуçĕнче. Авалхи шумерсенченех тухнă пулас ку йăла-йĕрке. Вĕсем те икĕ çырма пуçĕнче пурăннă пулать. Ку пĕрре. Тепре çав вырăн питĕ юшкăнлă пулнă. Унта тырпул туса илме, выльăх ĕрчетме меллĕ. Тĕпсĕр çăл Эль куӳллипе, Хура тинĕспе, тен, апла, Вăта тинĕспе те çыхăннă тени тата питĕ интереслĕ. Халăх халапĕнче тем пур пек туйăнать. Архетип, теççĕ-и-ха? Халăх пĕрре пуçа кĕрсе ларнă шухăша нихăçан та пăрахмасть. Ламран лама куçса пырать çав шухăш. Мĕнле шухăш? Мĕнли пултăр, паллă, çав авалхи икĕ çырма пуçлă вырăна пур çĕрте те курасси, унта авалхи пек пурнасси... Вăл вырăн çăтмах пек

пулнă. Пĕр пилĕк пин çул каярах çавăнта реххетленсе пурăннă чăвашсем. Çав вырăна, апла, ниепле те манса каяймаççĕ пулать! Çак кĕтмен шухăш учителе кравать çинчен çĕклесе тăратса лартать. Каяс, тет вăл, халех кайса пăхас çав тĕле. Çуллахи каç кĕске, çитнĕ çĕре çутăлать те. Учитель тăхăнчĕ те çула тухрĕ.

Ванюкăн та ыйхи килмерĕ. Унăн хăйĕн шухăшĕ. Тата вăл çав çăлри шыва ĕçнĕ хыççăн каллех хăйне питĕ вăйлă туять. Тем туса хурас пек шухăшласа выртать вăл. Çав юшкăнпа усă курса, ăна таврари уйсене хывса тухсан, тырпул тухăçне ӳстерме пулать пек туйăнать ăна. Акă еплерех ӳсет курăк. Халь ĕнтĕ вăл ир енне Ванюк çӳллĕш те пулчĕ пулĕ. Халь тин, тен, ăна çулса пăрахмалла та силос тумалла. Вара ĕнесем хĕлле те сĕт лайăх антарĕç... Типĕтсе хурсан та аванччĕ... Юшкăнĕ, юшкăнĕ вара ăçтан? Сиплĕ тата хăй!

Антон та çывăраймарĕ. Вăл та ыттисем пекех çил-тăвăл тупсăмне шырарĕ. Çавăн чухлĕ шыв куç пек пĕчĕк çăлтан тапса тухни, пĕтĕм таврари уйсене вăйлă çумăр çутарса шăварни тĕлĕнтерчĕ ăна. Шыв ниçтан та мар, çĕр тĕпĕнченех тухнă. Апла, çав шыва Çĕр чăмăрĕ хăех хатĕрлесе панă. Таçтан Атлантика енчен килмен ĕнтĕ вăл! Килнĕ пулсан Мижере çитиччен нумай-нумай çĕрте çунă пулĕччĕ...

Нинукăн та ыйхи кĕске пулчĕ. Çывăрса кайнăччĕ вăл. Тĕлĕк куратчĕ. Çтаппанпа Ванюк хĕршĕн тӳпелешсе кайнă пек. Нинук çакна кӳлĕ хĕрринче темшĕн питĕ савăнса пăхса тăрать. Уншăн çапăçаççĕ-çке! Çав вăхăтра, вăйăран вăкăр тухать теççĕ-ха, сасартăк иккĕшĕ те çав тĕпсĕр кӳлле ӳкрĕç пек те ним йĕрри-паллисĕр

пăл-пăл! туса тăракан авăрта çухалчĕç. Хĕр хăраса кайрĕ. Вăранчĕ. Ванюка темле инкек кĕтет пекех туйăнчĕ.

Çтаппан та куçне хупмарĕ. Çав кӳлĕ таврах çӳрерĕ. Темле питĕ пысăк укçа тума пулать пек туйăнчĕ ăна. Темле усă курма пулать пек çак пулăмпа. Кирек мĕнле пулсан та унăн çак кӳлĕ хăватне алла илмелле, ун патне никама та пыртармалла мар. Вара вăл та пуян пулĕ...

Тул çутăлсах çитрĕ. Çĕнĕ кун пуçланасса чăтăмсăррăн кĕтсе выртакансем ĕнтĕ пурте çула тухнă. Тĕпсĕр çăл куçĕ тĕлне чăн малтан учитель çитсе ӳкрĕ. Таврара, чăн та, сип-симĕс. Кун чухлĕ курăка кунта Хĕветĕр Хилипччă нихăçан та курман. Çăл куçĕ вара улшăнман пек. Ĕлĕкхиллех тапса выртать. Чĕреллĕ тейĕн. Учитель курăка татса пӳрнипе йăвалаcа пăхать. Вăрăмах та мар вăл. Çĕр хута ӳсмен те пек. Ара, каçхине хĕвел çути çуккă вĕт, ăçтан ӳстĕр! Фотосинтез хĕвел çутисĕр пыраймасть. Биологи учителĕ, урăх пит нимех те тупайманскер, курăка тăпăлтарса илсе целлофан пакет ăшне хучĕ. Унтан çăлран тапса тăракан юшкăна тепĕр пакета тултарчĕ. Шывне пĕчĕк кĕленче савăтне ячĕ. Тĕпчемелле, тет.

Çак ĕçсемпе аппаланнă вăхăтра чăн малтан Ванюк персе çитет. Ун хыççăнах ыттисем те. Шкул ачисем каллех пурте пĕрле. Халь тин учитель те пур. Вăл ăнлантарса парасса кĕтеççĕ. Анчах Хĕветĕр Хилипччă нимех те калаймасть. Тĕпчемелле, тет. Çавăнпа та ачасем ун-кун пăхкаласа тăчĕç-тăчĕç те таврара нимех те улшăннине курмасăрах учитель сĕннипе шкулалла çул тытрĕç. Унта лаборатори пур.

Ачасем кайсанах кӳлĕ хĕрринчи пĕр çĕр тĕмески хускалчĕ пек. Курăк та чашăлл! çĕкленсе илчĕ. Ара, хĕвел тухнă мар-и? Хĕвел тухсан пурнăç килет! Вăхăт нумай иртрĕ-и, çав тĕмеске шартлаттарса çурăлса кайнă сасă кăларчĕ, татах çĕкленчĕ те çĕр айĕнчен асамат кĕперĕ евĕр темле çавра тĕм курăнса кайрĕ. Куçа шартарса чăлтăрр-чăлтăрр! çиçрĕ. Кăна никам та курмарĕ.

Учителпе ачасем шкул лабораторинче лараççĕ. Хĕветĕр Хилипччă курăка шыв банкине лартнă, шывне пипеткăпа окуляр айне тумлатнă та микроскоппа пăхать. Çук, ахаль шыв мар ку! Унта темле «çапăçу» пырать. Шыв тумламĕ тулли тем чухлĕ кăткăс молекулăсем. Пĕрисем ӳссе пайланса пыраççĕ, теприсем вĕсене тапăнса çăтса çисе яраççĕ. Çак тупăшу хăйне майлă пĕр çаврашка пек курăнать. Куç умĕнче темле асамлă кустăрма çаврăнать тейĕн. Пин-пин кустăрма. «Пурнăç çаври!, – пырса кĕрет ăсчах пуçне пĕр шухăш. – Акă ăçта вăл пурнăç çаври!» Хĕветĕр Хилипччă чике сухалне сăтăркалать. Алли чĕтрет хăйĕн. Тути мăк-мăк! тукалать.

– Кунта-кунта, – тет вăл, – темле пурнăç. Акă пăхăр-ха!

Ачасем черетĕн кĕпĕрленсе микроскоппа пăхаççĕ. Ахлатса тĕлĕнни, уйлатни кăна илтĕнсе тăрать пĕр вăхăт лабораторире.

– Мĕн ку? – ыйтаççĕ харăссăн.

Никам та ним те шарламасть. Шăп. Çав вăхăтра хĕвел пайăрки пӳлĕм тăрăх майĕпен шуса кĕрет те микроскоп çине ӳкет. Хĕвел çинчи тумлам тĕрлĕ тĕслĕн ялкăшма тытăнать. Ку пурнăç питĕ хитре, шутлаççĕ ачасем.

– Ку авалхи ценоз, протоценоз ку! – тахçан студент чухнех вёреннине аса илет учитель. – Çĕр çинче йăркеленнĕ тĕрлĕ-тĕрлĕ япаласен çаврăнăшне эсир пĕлетĕр ĕнтĕ, вĕреннĕ. Шыв çаврăнăшĕ унта, сывлăш çаврăнăшĕ, апат çаврăнăшĕ... Çавăн йышши çаврана куратпăр эпир. Анчах ку тахçанхиех, пĕр-икĕ миллиард çул пуçланса кайниех. Вăл ку тарана çитиччен мĕнле упранса юлма пултарнă-ши? Эволюци текенни пур вĕт-ха. Халь ăна эпир тăпрапа ӳсентăран тата чĕрчун хушшинче йĕркеленнĕ çыхăнусенче куратпăр. Апат циклĕ, теççĕ. Çут çанталăкра вĕт кашни тепринпе апатланса пурăнать. Кашни тепĕрне çиет.

– Кунта та, шыв тумламĕнче те, пĕр молекула тепĕр молекулăна çиет вĕт! – ахăрса кулса ярать Çтаппан. Çак япала, ахăртнех ăна пит килĕшет.

Ачасем ун çине кăнн! пăхса илеççĕ. Нинук çилленерех те. Ара, кунта ним кулмалли те çук-иç! Авалхи пурнăç хальхи мар ĕнтĕ вăл. Çапах та ун сĕмĕ пирте упранса юлнах пуль. Çавна сисеççĕ çамрăксем. Çавна туйса илчĕ те учитель.

– Эпир урăх ним те мар, эпир протоокеанăн пурнăçĕпе тĕл пултăмăр. Пĕр икĕ-виçĕ миллиард çул каялла Çĕр чăмăрĕ çинче çапларах шыв пулнă теççĕ. Çав шывра чи пирвайхи пурăнăç пуçланса кайнă. Молекула тенисем молекулăсем те мар, вĕсем чи пирвайхи организмсем, чи пĕчĕк клеткăсем!

– Курăкĕ ку вара ăçтан? – ыйтаççĕ ачасем. – Ĕлĕк кун пек курăк пулман ĕнтĕ.

– Курăкĕ, – банкăри пĕр ывăç курăка алла илсе хĕвел çинче çавăркалать учитель.

Çавăркаланăçем курăк яшăлтатса илнĕ пекех туйăнать. – Курăкĕ ку хăмăр вăхăтранах. Хулара газонсене акса ӳстереççĕ вара, çавă ку. Шур ути пекрехскер.

– Пылчăкĕ мĕн?

– Пылчăкне час пăхатпăр, – тет ăсчах. Биологи учителĕ ачасене чăн ăсчах пек курăнать. Хăй те вăл питĕ хавхаланса кайнăскер, темле питĕ çутă сăнлă. Хура куçĕсем çиçеççĕ кăна. Акă вăл пылчăк тумламне тĕпчеме пуçларĕ. Пӳлĕмре паçăрхи пекех шăп. Ванюк ахаль те тăсланкăскер тӳп-тӳр хытса тăнă та тата çӳлĕ курăнать. Антон пуçне пĕкнĕ. Вăл пĕчĕкрех, çавăнпа та тата лутрарах курăнать. Çтаппан вара, çавра куçлăскер, куçне тата чарса пăрахнă та шăши тытма тухнă тăмана пек – час кама та пулин çăтса ярасла пăхать. Нинук хăй те чисти хĕвел сăнлăскер питĕ хавасланса тăрать, кĕтет, мĕн пулать-ха тет. – Пулчĕ, – тет учитель. – Ку пылчăк фермент йышши япала, энзим. Халь курăк питĕ хăвăрт ӳснине ним те мар ăнлантарса пама пулать. Ку пылчăк курăкшăн чи лайăх апат, вăл ӳстерет курăка. Урăхла каласан, таса тислĕк.

– А–а–а! – ăнкарса илеççĕ шкул ачисем. – Авă еплерех шуса пынă сĕм авалхи пурнăç!

– Апла, эпир ку тислĕкпе усă курса питĕ тухăçлă тырпул туса илме пултаратпăр вĕт, – тет Çтаппан. Ун куç умĕнче темле питĕ пысăк хуçалăх. Чашкăрса ӳсекен курăка çисе самăрланса кайнă ĕнесем, кашласа ларакан тырпул...

– Тĕпсĕр кӳлĕ тавра эпир чăн-чăн çăтмах çĕршыв туса хурăпăр, – ĕмĕтленет Ванюк. –

Унта, тен, кайран акă пурнăç йывăççи те шăтса ӳсĕ!

– Çĕр чăмăрĕ ăшĕнче авалхи океан шывĕ упранса юлнă пулас, – тĕшмĕртет Антон. – Çĕр хăй те çапла шыв тума пултарать–и, тен...

– Халь тин эпир чăн çынсем пек пурăнма пуçлăпăр. Пĕр-пĕринпе хирĕçмесĕр, пĕр-пĕрне кӳлешмесĕр... Çĕр пире хăй кăмăлне кăтартрĕ. Ан хирĕçĕр, терĕ. Вара сирĕн ялта та çăтмах туса хума пулать, терĕ. Çĕр пиртен çĕр хут ăслă, чунлă, хăйне пăрахманшăн пире çĕр тĕрлĕ ырлăх кӳрет.

– Ай, епле лайăх ачасем эсир, савăнтаратăр хăвăрăн ватă учителĕре. Эсир калани пурте тĕрĕс пуль, анчах та ĕмĕтсем пурнăçланччăр тесен ай! мĕн чухлĕ ĕçлеме тивет. Çут çанталăк пире шанс пачĕ пулас, шанчăк кӳчĕ, апла. Çав шанчăка тӳрре кăларасчĕ. Эпĕ сисетĕп, ку пуçламăш кăна. Тĕпсĕр кӳлĕ тени, ăна вĕт ватăсем пире валли упраса хăварма пултарнă, татах та тем те пĕр кĕтартĕ. Хатĕр тăрăр. Те ырра ку, те ырра мар – хам та пĕлместĕп.

Ватă çын калани пурне те шухăша ярать. Чăн та, темпе тĕл пулнă-ха ачасем. Мĕн кӳрсе килет ку пулăм? Кăна никам та пĕлмест. Анчах çамрăклăх тени аптăраса тăрать–и вара? Пĕр ушкăн ача тем канашласа илчĕ те капăрр! çĕкленсе лабораторирен тухса кайрĕ. Учитель вĕсене чарма шутламарĕ. Кайччĕрех, терĕ. Унта тĕпсĕр çăл куç патĕнче чăнласах тата тем пулса иртессĕн туйăнчĕ.

# Пурнăç йывăççи

Ачасем шкул лабораторинче ĕçленĕ вăхăтра, чăн та, тĕпсĕр кӳлĕ тавра тем те пулса иртрĕ. Çĕр тĕмески тенĕскер, халь тин асамат кĕперĕ тĕслĕ йывăç пулса тăчĕ. Курăкĕ тесен, курăкĕ пит ӳсмерĕ те. Кашни ӳсентăранăн хăйĕн ӳсĕмĕ пур ĕнтĕ унăн. Ӳсес вырăнне вăл туратланчĕ, пуç кăларма хатĕрленчĕ. Пурнăç кунта халь вĕресе кăна тăрать. Ачасем çитнĕ çĕре, пĕр иккĕленмесĕр калама пулать, икĕ çырма пусĕнче темле çăтмахлă тĕнче хуçаланма пуçланă. Пурнăç йывăççи ӳсет. Адампа Ева кăна курăнмаççĕ. Ан васкăр-ха, тен, вĕсем те пулĕç. Ăна-кăна, малалла мĕн пулассине никам та пĕлмест. Мижер ялĕ çине тĕнче хăй йăтăнса анчĕ, е, тĕнче хăй пурнăçне тепĕр хут туса пăхасшăн? Тĕнче чăваш ялне суйласа илнĕ те...

Суйласа илекенсем татах тупăннă. Икĕ çырма пуçĕнче питĕ хитре йывăç ӳссе ларнине чăн малтан Тулай Иванĕ курнă. Ĕне кĕтӳ çитерсе çӳренĕ чухнех асăрханă вăл ăна. Паллă, унăн та çав йывăçа хăйĕн аллине ярса илес кăмăл çуралнă. Ачасем лабораторире пуçа ватса ларнă чухне, пĕр вăрра вĕреннĕ çын вăрлама пăрахаймасть теççĕ çав, асамат кĕперĕ пек йăлтăртаттарса тăракан йывăçа каллех милĕклĕх пултăр тенĕ-и, çын ан куртăр тесе вăрттăн кăна йăпшăнса пынă та ун çине пурттине кач! çеç лартнă. Мĕнле лартнă, çапла хытса кайнă. Ачасем пырса çитнĕ çĕре вăл чутах вилсе кайман. Çĕр хута çапла йывăç ӳссе ларни пурне те тĕлĕнтернĕ, тен, халь тин ĕнтĕ тĕлĕнтермен те. Паллă, çăл куçри шыв та,

унтан сирпĕнсе тухнă юшкăн та питĕ сиплĕ, тулăхлă япаласем. Апла, мĕн тĕлĕнмелли пултăр? Çапах та йывăçа пуçласа курнă атьсем ахлатсах янă. Тулай Иванĕ мĕн хăтланнине те тӳрех ăнланса илнĕ вĕсем. Ăна шалкăм çапнă. Куçĕпе тем выляткаласа тăрать хăй, тути тем калать пек, анчах сасси тухмасть. Калас тени каламасăрах паллă. Тулай Иванĕ каллех вăрă ĕçне пуçланă. Анчах та ку йывăç милĕклĕх хурăн мар пуль çав, кунта тем урăххи пур. Пуртă каснă тĕлтен темле симĕс сĕткен юхать, патне пыма çук шăршă тухать. Ку хăрушă япала пулнине чăн малтан Ванюк ăнланса илчĕ.

– Патне ан пырăр! – тет вăл. – Ку йывăç наркăмăш кăларать пулас. Хăйне сиен кӳресрен сыхлать. Хăйне хăех сиплет. Путнă çĕвви, акă, хупланнăпа пĕрех.

– Иванне шалкăм çапнă, – шеллет хăйĕн тăванне Нинук. – Çăл шывне сапса пăхар мар-и? Çав шыв сиплĕ пек.

Нинук никам та хускалманнине кура çăл патне хăй чупса анса каять. Йывăç, калас пулать, икĕ çырман пуçĕнче шăтса ӳссе ларнă. Çăлĕ вара вăл аялта, айлăмра.

– Карттуспа йăтса кил, – ывăтса парать хăй карттусне Çтаппан. Вăл та çăл хăватне ĕненет пулас.

Карттус тулли шыва чăн малтан Тулай Иванне ĕçтерчĕç. Унăн сиксе чĕтрекен тутисем ăна йăлтах тенĕ пек тăкса пĕтерчĕç. Юлашкине Ванюк йывăç суранĕ çине сапрĕ. Шыв, чăн та, сиплĕ мĕн. Ял кĕтӳçĕ çăмăллăн сывласа ячĕ. Йывăç суранĕ куç умĕнче тенĕ пек тӳрленчĕ. Çĕвви те палăрмасть.

– Юмахри чĕрĕ шыв пулĕ ку? – тет çакна çăвар карса пăхса тăракан Антон. Хулара ӳснĕскер, вăл ун-кун япаласене пит ĕненсех каймасть, тĕшмĕш, тет. Анчах хăй кусĕпе хăй курни ăна çапсах пăрахать.

– Йывăçăн сĕткенĕ вара – вил шыв! Чутах вĕлерсе пăрахатчĕ вĕт мана! – кăшкăрса ярать чун кĕнĕ Тулай Иванĕ.

– Эс вилнĕшĕн никам та хурланас çукчĕ! – ĕрлешет Çтаппан. Ун пусĕнче хăйĕн темле шухăш пур пулас.

– Ун пек мар-ха, ун пек мар! – мирлештересшĕн тăрăшать Нинук. – Çилленме кирлĕ мар. Ку йывăç, йывăç та мар-ха, пĕтĕм Çĕр чăмăрĕ пирĕн кашни хусканăва курса сыхласа тăрать пек. Тен, вăл çын мĕн каланине те ăнланать, хăй кăна сăмахпа калаймасть. Эпир вара, çĕре чунсăр тесе шутлаканскерсем, ним те ăнланмастпăр. Çавна пулах тен сиен кӳретпĕр.

– Сиен кӳрес текенсем темшĕн тупăнсах пыраççĕ тата! – тарăхать Ванюк. – Хурăнлăха сыхланă чухнехи пек сыхлама пусламалла мар-и ку йывăçа?

Хурала тухас текенсем нумай. Çавăнпа та ачасем шăпа яраççĕ. Шăпи кама тухать тетĕр? Паллă, Ванюкпа Нинука суйласа илет шăпа. Тен шăпа та мар, тен, йывăç е çĕр хăй суйласа илет... Çапла калаçкаласа шӳтлекелесе тăнă хыççăн ачасем килĕсене саланас терĕç. Хырăмĕсем те выçнă ĕнтĕ вĕсен, мĕн тăвăн. Акă кăшт уксахлакан Тулай Иванне çавăтрĕç те ялалла танккарĕç. Ванюкпа Нинук каçхи апат çинĕ хыççăнах çырма пусĕнче тĕл пулма пулчĕç. Çтаппан çав калаçу вăхăтĕнче пит пăхкаларĕ

вĕсем çине, тем шутларĕ çавра куçĕсене хĕскелесе, ăна çамрăксем сисмерĕç.

Икĕ çырма пусне Ванюк каçхи шуçăм сӳнicченех пырса çитрĕ. Нинук çуккă-ха. Ара, амăшне пулăшать пуль. Хĕрачан килте ĕç нумай. Ĕне те сумалла, яшка та пĕçермелле, хăйне те юсакаламалла... Каçхи шевле çинчи йывăç тата хытăрах йăлтăрать. Темле пăхрĕ-пăхрĕ те ун çине ача, йывăç юман пекрех курăнса кайрĕ. Анчах ку урăхла юман. Ун çулçи кăвак! «Кăвак юман вĕт ку!» – пырса кĕчĕ пусне пĕр шухăш. Таçта пĕр халапра вуласаччĕ. Тахçан авал çĕр çинче кăвак юмнсем ӳснĕ тет. Хăйне майлă пĕр сорт ĕнтĕ. Çав юмансем упраса пурăннă пулать чăваш халăхне. Анчах тăшмансем, йывăç вăйне сиснĕ те, йăлт касса пĕтернĕ. Вил шывĕ те çăлайман вĕсене. Çавăн хыççăн халăх хăвачĕ чакма тытăннă. Йывăççене те пуç çапма пăрахнă. Пуç çапма тет-и, йăлт касса пĕтернĕ. Ватăсем каланă тăрăх икĕ çырма пуçĕнче ĕлĕк вăрман кашласа ларнă. Халь, акă, çап-çара. Пурнăç йывăççисĕр пуçне ăна урăх ним те илемлетмест. Вăл та мĕнле йывăç пулни паллах мар. Тем кăтартĕ–ха вăл... Çапла шухăшласа ларакан ача хĕр пырса ларнине те сисмерĕ. Нинук выляса тенĕ пек кĕлт! тĕксен кăна хăйне ярса илнĕ шухăшсенчен хăтăлчĕ.

Нинук уява тенĕ пек шап-шур кĕпе тăхăннă. Çӳçне причёска тунă. Хăйĕнчен тутлă шăршă килет. Тĕлĕнсе пăхса ларать Ванюк хăй Нинукĕ çине. Пĕчĕк кăна хĕрача пĕр самантрах тенĕ пек хĕр пулса тăнă. Нинук пĕр кана пĕр шарламасăр ларчĕ.

– Ванюк, эсӗ вӗренсе тухсан ӑҫта каяс тетӗн? – кӗмӗл саслӑн янӑрать каҫхи шӑплӑхра хӗр сасси.

– Ялтах юлатӑп, мана нимле хула та кирлӗ мар.

– Вӗренес теместӗн-и вара эсӗ?

– Пурнӑҫ хӑех вӗрентет. Кирлӗ пулсан акӑ пурнӑҫ йывӑҫҫинчен ыйтатпӑр. Вӑл, Библи тӑрӑх, ырӑпа усал кӑна мар, пӗлӳ йывӑҫҫи те! Ҫак пирӗн умри те Библире ҫырниех мар-и?

– Пулӗ те! Ева Адама ҫав йывӑҫ ҫинче ӳсекен панулмие ҫитернӗ пулать халап тӑрӑх, – хӗрача ҫак сӑмахсемпе сиксе тӑрать те пурнӑҫ йывӑҫҫи тавра ҫаврӑнкалама тытӑнать. – Халапӗ тӗрӗс пулсан таҫта ҫакӑнта, ку йывӑҫӑн та, ҫимӗҫ пулмалла...

– Ӑна Адама ҫитерсен мӗн пулать тет? – Ванюк кулса ярать. Хӗре хӑваласа ҫитсе ярса илет. Ҫапла тӗрткелешсе тӑнӑ вӑхӑтра ҫӳлӗ курӑк хушшипе Ҫтаппан йӑпшӑнса шуса пынине те курмаҫҫӗ-ха вӗсем. Ҫтаппан вара Ванюк хӗре чуп тума тӑнӑ вӑхӑтра чалт! кӑна сиксе тухать. Каччӑпа хӗр хӑранипе пӗр-пӗрне вӗҫертсе яраҫҫӗ. Намӑсланаҫҫӗ те...

– Мӗн туса ҫӳретӗн эсӗ кунта? – Чун кӗрет чӑн малтан Нинука. Кама сыхлатӑн?

– Сире сыхлатӑп. Эсир тем туса хурасран хӑратӑп.

– Тупӑннӑ сыхлавҫӑ!– тутине пӗркелентерет Нинук. – Эсӗ пире кансӗрлетӗн, кай! Ванюк чӗнмест. Хӑй тарӑхнине пытарать. Ҫакна кура Ҫтаппан тата паттӑрланать.

– Сыхлама сирӗн мар, ман тухмаллаччӗ. Ку ман йывӑҫ!

– Тепĕр хуçа тупăнчĕ. Пĕри пуртăпа касса яратчĕ... Тепри тата мĕн тăвасшăн?

– Касса яма эпĕ ухмах та мар! Ку йывăçăн, акă пăхăр, çимĕçĕ те пур. Ăна сутса укçа тума пулать.

Йывăç тăрринче, чăн та, темле çаврака япала йăлтăрать пек. Каçхи шуçăм ăна хĕрлĕ тĕс кĕртнĕ. Илемлĕн, илĕртӳллĕн ялтăрать. Алă татас тесе хăех тăсăлать.

– Татса парас–и, Нинук? – тет Çтаппан. Хĕр пуçне кăна сĕлтет. Çтаппан çĕлен пек авкаланса туратсем хушшипе çӳлелле хăпарса каять. Вăл, пĕрре пăхсах курăнать, вăйлă ача. Акă, йывăç тăрринчи çимĕçе татас тесе аллине тăсать, анчах çитерейместь. Ним тума аптранă енне, ялти улмуççисене пĕрре кăна мар силлесе курнă-ха та, тытать силлет йывăç вуллине. Хĕрлĕн кăна ялкăшса çакăнса тăракан çимĕç пат! тăвать çĕр çине ӳксе.

– Талчĕ! – кăшкăрать хĕр. Аллинче хăйĕн тĕнче çимĕçĕ. Тăрăхласкер. Тутлă-тутлă шăршă килет. Нинук чăтаймарĕ пĕтĕм кăмăлтан ăх! тесе илчĕ те çатăрт! çыртса илчĕ. Килĕшрĕ пулас, тĕнче çимĕçне Ванюка тăсса пачĕ. Каччă иккĕленерех пăхкаласа тăчĕ-тăчĕ те тепĕр енчен шатăртаттарса çыртса илчĕ. Кăштă çеç тăрса юлнă çыртăка çавăркаласа пăхкаланă хыççăн таçта çити çӳллĕ курăк ăшнелле вăшт! ывăтса ячĕ.

– Эй, мана валли вара ăçта? – тени кăна илтĕнсе юлчĕ çимĕç çыртăкне тĕттĕмелле вирхĕнтернĕ чух. Йывăç тăрринчи Çтаппан çухăрса кăна ячĕ, çав вăхăтрах йывăçпа тем пулса иртрĕ. Вăл темле пĕчĕкленнĕçем пĕчĕкленсе пычĕ, хăрчĕ темелле-и, тин çеç тем

пысăкăш ӳссе ларнăскер, пĕтрĕ. Çухалчĕ. Ун тăрриче ларнă Çтаппан ним пулман пек халь çĕр çинче урипе турат çине пуснă пекех пусса тăрать. Турачĕ вара çук.

– Мĕн ку? – теççĕ аптраса ӳкнĕ ачасем. Йывăç хăй çимĕçне пачĕ те çухалчĕ вĕт. Кактус пек. Вăл çеçкене ларнă хыççăн вилет тет. Çтаппан тарăхнипе карттусне хывса çĕр çумне çавăрса çапать.

– Сире пула! – тет вăл. – Пит кирлĕ пуль эсир мана? – Çак сăмахсемпе вăл палт! çаврăнать те ял еннелле таплаттарса утса каять. Ванюкпа Нинук иккĕш çеç тăрса юлаççĕ. Халь тин теме сыхламалла тет ĕнтĕ? Вĕсем те пăшăрханаççĕ. Йывăç çухалчĕ. Курăкĕ те ку пит ӳсмерĕ. Пылчăк вăй панă чухлĕ кăна ӳсрĕ. Пылчăкĕ тислĕк выранне пулчĕ ĕнтĕ. Нинукпа Ванюк ним тăвайман енне пурнăç йывăççи пулнă вырăна çурăмпа çурăмăн пырса ларчĕç. Ларчĕç кăна лăшш! кайрĕç чунĕсем. Ванюк таçтан-таçтан тĕнче тăрăх çаврăнса килнĕ пек те яла, халь йăлт пĕлет пек. Пурнăç йывăççи мĕнне те пĕлет вăл.

Пурнăç йывăççи вăл халăх пĕлтерĕшлĕ япала. Ку йывăç çĕрпе пĕлĕте кăна мар çыхăнтарать, пĕтĕм тĕнчене пĕр çĕре пĕтĕçтерсе тăрать. Хăй тавра вăл сывлăша, çĕвел çутипе çĕр ăшĕнчи пулăхлă япаласене çавăрттарать те пурне те пурнăç парать. Çавăнпа ăна пурнăç йывăççи тенĕ те! Пĕр пĕтĕмĕшле илсен тĕнче аталанăвĕн пĕр пиççе çитнĕ çимĕçĕ. Кам ăна ас тивсе пăхать, çавă тĕнче пĕлтерĕшлĕ пулса каять. Пурнăç йывăç тавра çаврăннине ăнланса илнĕ халăх ун патне пырса пуç çапать. Çавăнпа мар-и вара, «юман пĕтсен, чăваш пĕтет» тесе

каланă пирĕн ватăсем! Чăвашĕ пĕтсен, пĕтĕм тĕнче пĕтет. Ара, йывăç пурнăçне ăнланса пурăнакан пĕртен пĕр халăх пулнă пулĕ вăл, чăваш халăхĕ! Ахальтен-им ачасем Сăхăт çырми тăрăх йывăç лартса ӳстересшĕн, ахальтен-им кăвак хуппи пек ялтăрса çĕкленчĕ тĕнче йывăççи? Ун çимĕçне Ванюкпа Нинук та тутанса пăхрĕç.

Нинук та мĕн тумаллине пĕлет. Унăн урăх нимĕн те мар, унăн ача çуратса халăха вăйлатмалла. Пирĕн халăх вăйлă пултăр тесен чыслă та ăслă ачасем кирлĕ. Хальхи пек лавкка умĕнче ерех ĕçсе супса ларакансем мар, пĕтĕм тĕнчене çăтмах туса хума пултаракан вăйлă йĕкĕтсемпе сăпайлă хĕрупраçсем кирлĕ. Ванюка вăл нумай-нумай ача çуратса парĕ... Вĕсене халăха мĕнле кирлĕ, çапла пăхса ӳстерĕ! Çапла шутласа илчĕ те Нинук тата хытă хĕрелсе кайрĕ. Юрать çурăмпа çурăм ларнă та Ванюк хĕрача çапла пăлханса кайнине курмарĕ. Савнă хĕрĕ тем хускаласа илнине–çех туйса илчĕ.

Ванюк та канăçсăрланчĕ. Унăн та тем тăвас килет. Шкул вĕренсе тухать пулин те çак тĕнчене пурнăç йывăççи пек пĕрре те хăй çине илмен-ха вăл. Хăйне вăл пĕрре те çак тĕнче варринче туймасть. Мĕнле-ха, апла, вăл вĕт халĕ çĕр кăвапи çинче ларать. Ун тавра мар-и вара пĕтĕм уçлăх ялтăрса тăрать. Ванюк хăйне турă пек туять. Вăл çĕнĕ йăх пуçласа ярĕ. Нинук ăна нумай-нумай ача çуратса парĕ. Ачисем пурте турă шайĕнче пулĕç. Çук, пĕри те таçта тухса тарса пĕтмĕç. Тĕнче аслă та, Мижер ялĕ пĕрре–çех. Тепĕр тесен, кирек ăçта кайсан та ăсĕсĕне çивĕчлетсе каяллах тăван яла çаврăнса çитĕç. Ял хальхи пек ватă çын пек

тĕмсĕлсе суккăрланса লармĕ. Урам ача-пăча сассинчен тек талмĕ...

Çапла ĕмĕтленсе ларчĕç Ванюкпа Нинук. Халь тин вĕсем ĕнтĕ ахаль ачасем мар. Вĕсем пулас чăваш тĕнчине хăйсем çине илнĕ. Çап-çамрăк вĕт-ха вĕсем!Нивушлĕ çапла паттăрланма хал çитереççĕ-çитереççех! Çитермесĕр! Кĕçтенттин сăввисене вуламан-им,Çеçпĕл вилĕмĕпе пиçĕхмен-им? Вĕсем те вунулттăра - çирĕмсенче кăна пулнă. Тен, вĕсем те пурнăç йывăççин çимĕçне çисе курнă? Курнă, паллах. Пурнăç йывăççи вăл ним те мар, вăл халăх çимĕçĕ. Кам халăх пурнăçĕпе пурăнса асапланса курать, ун çимĕçне тутаннă пекех пулать. Хура-шур курсан кăна ыррипе усаллине тавçăрса илетĕн. Ял тавра çăтмах туса хурас текенсем вара хĕн-хурне кăна мар, юратун тути-масине те туйса илчĕç пулас. Юратăвĕ те вĕсен ахалли мар, халăх пиллени, турă пани. Вăхăтлăха ыр курас та тарас тени палăрмасть вĕсен шухăш-кăмăлĕнче. Чĕрисенче чи таса туйăм – пĕрремĕш юрату. Анчах мĕнле ăслă юрату вăл! Халăх çуратаслă юрату! Вăхăтлăх юратусем вĕт çуратса тултарчĕç çав лавкка умĕнче супса ларакан ачасене. Кусем ун пек кун пек йăхлă пулмĕç. Вĕсем пĕчĕк чăваш ялĕнчех çăтмах туса хурĕç!

– Ванюк! – чăтса тăраймарĕ хĕрача, ун енне çаврăнса.

– Нинук! – хĕрпе харăс тенĕ пек кăшкăрса ячĕ каччă.

Иккĕшĕ те чĕркуçленсе куçа-куçăн тăчĕç. Чĕтрекен тутисем хăйсем тĕллĕнех пĕрлешрĕç. Çĕр кăвапи хăй пĕрлештерчĕ тейĕн, ĕмĕр уйăрăлми çыпçăнса ларчĕç икĕ кĕлетке. Савăк та иккен пĕр çын, пĕр чун, пĕр кĕлетке пулса

тăма! Нинук халь Нинук та мар, вăл хăйне Ванюк пек туять. Вăл, хĕрача пулсан та ун пекех вăйлă, ун пекех ăслă. Ăна мĕн кирлине йăлт пĕлет. Уншăн вăл тем тума та хатĕр. Ванюк та хăйне темле хĕрарăм пек курать. Унăн та пулас кил-йышне амăшĕ пек пуçтарса тăрас килет. Нинука акă хăйне юратнинчен хытăрах юратĕ. Хăвна кăна юратни мĕн вăл, ним те мар. Çынна юратни вара, çынна юратни кăна çынран çын тăвать. Çавăнпа мар-и вара пĕтĕм чун-чĕререн юрататать Нинука Ванюк?

Ятран чĕннисĕр пуçне урăх пĕр сăмах та каламарĕç çамрăксем. Пурпĕрех пурне те ăнланчĕç. Ара, тĕнче йывăççин çимĕçне çинĕ мар-и, çинĕ те ăсланнă, пĕр-пĕрне кăна мар, тĕнчене те ăнланакан пулнă. Çав самантра пĕтĕм çут çанталăк та шăп тăнăскер, сасартăк пĕр харăссăн юрласа ячĕ. Ку вăл тăри хорĕ пулчĕ. Таçта çӳлти ирхи шуçăм çапнă уçлăхра тинкерсе пăхсан та куçа курăнман тăрисем каçса кайса савăнаççĕ. Тĕнче авалхи чăваш тĕрри пек тĕрĕлтетсе тăрать. Пĕтĕм сывлăш чĕтренет тейĕн! Çав чĕрĕ сывлăш ăша кĕрет, чуна çĕклет, пĕр-пĕрин çумне лапчăнса çыпăçса ларнă çамрăка чĕтрентерет. Чĕтретсех пăрахатчĕç-и ку тăрисем, çав вăхăтра ялти автансем шарлаттарса авăтса ячĕç. Ку тĕнче вăраннин пулчĕ. Çамрăксем те сасартăк темле тутлă ыйхăран вăраннă пек пулчĕç. Шарт сикрĕç. Тем туса хурасран хăрарĕç пулинех! Çамрăк вĕт-ха, юн тени те вылять вĕт-ха! Ялт! çеç сиксе тăчĕç çĕр кăвапи çинчен. Ун-кун пăхкаларĕç. Тăна кĕрсе пынăçем çап-çара выртакан Сăхăт çырмине, икĕ çырма пуçĕнчи пĕчĕк катана тин асăрхарĕç. Çырма тăрăх шап-

шур тĕтре явекаланса юхать. Тĕпсĕр кӳлĕ тĕлĕнче пушшех те çăра пек. Тем явăнать унта. Чĕнет пек. Ванюкпа Нинук пĕр пĕрин çине чăлтăртаттарса пăхса илчĕç те, эпир нимрен те хăрамастпăр тенĕ евĕр алăран алă тытса çав çавăрăнчăклă шурă çăвар еннелле утса кайрĕç.

Тĕтре витĕр утса тухсанах ирхи шуçăм ӳкнĕ çăл пичĕ ялтăраса кайрĕ. Шăнкăр-шăнкăр юхса выртать çăл шывĕ. Пăл-пăл! тапса тăрать чĕри. Çĕр каçа хурал тăрса ăш хыпнă пулĕ çав, ачасем харăссăн ӳпне выртсах çăл куçран таптаса сиплĕ шыв ĕçрĕç. Чĕрĕ шыв пуль çав. Ĕçрĕç те йăлтах лăпланса çитрĕç. Халь тин мĕн тумаллине те пĕлеççĕ ĕнтĕ вĕсем. Чăн малтан çак тĕпсĕр кӳлĕ юшкăнне кăларса пĕтĕм уйсене, çырма çатрасене тăкса тухас пулать. Çил-тăвăл кăларса та тăкма пулĕ те, анчах ун пек пĕрре тăкса курнă – çитет. Юшкăнпа тăрантарнă çĕрсене вара кирек мĕн ларт – пурте ӳсме тивĕçлĕ. Акă епле ашкăрать ун пек пулăхлă çĕр çинчи курăк. Ĕнертенпе шур ути тата ӳснĕ. Ăна çулса илсе типĕтмелле пулать пуль ĕнтĕ. Ку пĕччен тумалли япала мар. Çын кирлĕ. Кунта шкул ачисен вăйĕ çителĕксĕр. Ваттисемпе калаçса пăхас пулать.

Çак шухăшсемпе каччăпа хĕр çăл хĕрринчен çĕкленсе илчĕç те ялалла уттарчĕç. Таврара темле туй пырать тейĕн. Ванюкпа Нинук шур акăшсем пек ярăнса утса пыраççĕ. Çӳлте тăри юрри кĕрлет. Пĕр кĕтмен çĕртен пуç çийĕн кияк! тесе текерлĕк вĕçсе иртет. Вăшт!вăшт!вăшт! илтĕнет çунат сасси. Хĕвел тухать. Сăхăт çыранăнчен икĕ çырма пуçĕ чăнах та çăтмах пекех курăнать. Тĕнче кашни ир тепĕр хут пуçланать иккен! Тĕнче пуçламăшĕнче

акă çĕр çинчи пĕрремĕш çынсем утса пыраççĕ. Адампа Ева-и, çук. Кусем Ванюкпа Нинук. Пулас чăваш çĕрĕн пĕрремĕш ачисем. Мижер ачисем. Çут çанталăкпа пĕр пулса кайнă çын чунĕсем. Шарр! авăтса яраççĕ чĕрисем. Чăлтăррăн пăхаççĕ куçĕсем. Шыв пек юхаççĕ уттисем.

– Ванюк, – чĕнет тусне хĕр. – Ялта çăтмах туса хурсан эсĕ мана мĕн илсе парăн?

– Мĕн кирлĕ-ха вара сана?

– Чаплă машина.

– Ха-ха-ха! – кулса ярать каччă. – Машинпа мĕн тăван?

– Вăштлаттарса ярăнса çӳретĕп, – тем кăтăклать хĕр чĕрине.

– Ан калаç! Эпир машин илсе мухтанса çӳреме çуралман.

– Çтаппанăн пур-çке!

– Ăна ашшĕ илсе панă. Хăй укçипе илмен.

– Ну, хамăр укçапа илсен...

– Çук, юрамасть. Хамăра валли тин пирĕн ним те тума юрамасть. Мĕн туни йăлт çĕр валли пултăр!

Хĕрача чĕнмест. Тутине тăп тытнă та тем шутлать. Кам пĕлет, мĕн шутлать хĕр чĕри. Тен, ун патша майри пулас килет! Ярăнтарса кăна пырĕ акă. Чăн та, майра тейĕн. Яртлаттарса кăна пыраççĕ. Анчах сисĕнет, уттисем вĕсен, тем расна.

Уттисем ниçта та мар юлташĕн килĕ тĕлне, Михха мучи патне илсе çитерчĕç. Антон çывăрса тăнă-ши? Ши-ик! шăхăрса пăхать Ванюк. Кхм-кхм! илтĕнет хирĕç.

– Çывăрать-ха, вилнĕ пек çывăрать, ан вăратăр, – мăкăртаткаласа тухать картишĕнчен Михха мучи. Сухалне тем шухăша кайса сăтăркалать. Чĕлĕмне пакклаттарать. – Çĕрĕпех тем аппаланса ларчĕ. Çĕр-аннепе калаçмалли темле аппарат тăватăп тет-и? Çĕрпе пĕр чĕлхе тупмалла имĕш. Айван ача.

– Айванах та мар, тен. Антон ăшĕнче вут çунать, çути çĕр çине ӳкет, – пĕр кĕтмен çĕртен каласа хучĕ Ванюк. Тусĕ хутне кĕрес терĕ пулĕ. Анчах ăçтан пĕлет-ха вăл Антон мĕн туйнине?

– Ĕлĕк çĕр те макăратчĕ теççĕ ялти ватăсем, – Ванюк хутне кĕрет Нинук. – Анне ман халĕ те каçхине çĕр мĕн калаçнине тухса итлет. Анчах эсир кун çинчен никама та ан каласа парăр, кулса вилĕç.

– Кулмалли кунта ним те çук. Айван тесе эпĕ ăна та, сире те кӳрентерес тесе мар каларăм. Кам çĕре юратать, тахçанах ун чĕлхипе калаçать. Марье аппа, сан аннӳ пулать-ха ĕнтĕ, кăмăлĕпе те питĕ йăваш та, ыттисенчен хытăрах илтет пуль çĕр мĕн каланине.

– Эпĕ те пĕлетĕп пек, –васкатать пĕр васкамасăр калаçмалли калаçăва Ванюк. – Такам каласа пачĕ, хам та пĕлместĕп. Тен, пурнăç йывăççи пĕлтерчĕ кăна? – Ванюк Нинукран пулăшу ыйтса пăхать.

– Эпĕ те тем пĕлетĕп пек, – тет хĕр каччă енне туртăнса.

– Мĕн, мĕн пĕлетĕр вара эсир, апăршасем? – лĕхлетет мучи.

– Акă мĕн! Пурнăç йывăççи каларĕ, мĕн терĕ, чĕлĕм туртма юрамасть терĕ, – сасартăк персе ячĕ, сăмсине пăркаласа тăракан ача. Ара, çил майăн вĕçен табак тĕтĕмĕ ун сăмсине кăна

мар кăтăклать, куçне те паçăрах çиет. Çавна чăтаймарĕ курăнать.

Кăна илтсен пурте ахăрсах кулса ячĕç. Питĕ кирлĕ пулĕ темле йывăçа мучи туртнипе туртманни!

– Эпĕ табак туртнине ăçтан пĕлтĕр-ха вăл, сан пурнăç йывăççи?

– Мĕнле пĕлмест пултăр? Хăвăрах çĕр те калаçать терĕр-иç! Ман шутпа, çĕр эпир халĕ мĕн калаçса тăнине те илтет. Илтет кăна мар, калаçăва та хутшăнать. Анчах эпир ăна, мăнтарăнсем, илтместпĕр те, кирек мĕн каласан та хурав параймастпăр.

Кун пек калани пĕрре те култармасть. Шухăша кăна ярать. Чăн та, енчен те çĕр хăй халлĕн пурăнма пултаракан чĕрĕ организм пулсан, мĕн-ма вара ун çинче мĕн пулса иртнине тĕрĕслесе тăмалла мар тет? Вăл хуçа вĕт!

Ачасем пĕр кана шăп тăраççĕ. Паçăрхи тăрисем кăна таçта кайса кĕресле тĕрĕлтетеççĕ. Мучине те тем пулчĕ пек. Пӳрнине пĕçерте-пĕçертех чĕлĕмне сӳнтерме тытăнчĕ.

– Пурнăç йывăççи тата мĕн калать? – интересленет ват çын.

– Эрех ĕçме юрамасть, тет. Акă мĕн! – хастарланать ача. – Пĕтĕм пăтăрмах çавăнтан тухать. Çын эрех ĕçсен çĕр те çынпа пĕрле ӳсĕрĕлсе каять тет. Пĕтĕм ӳсен-тăран анкă-минкĕленсе каять.

– Мĕн-мĕн-мĕн? – тет чăнласах анкăминкĕленсе кайнă мучи. Вăл, калас пулать, чĕлĕм кăна мар туртать. Вăл эрехе те тепĕр чухне яркалать. Ват çын аванмарлансах каfive. Ĕç кунта ача çапла каланинче те мар. Таçтан

сиссе илчӗ Михха, ҫӗр те, шыв та, йывӑҫ та – пурте вӗсем ҫын мӗн тунине сӑнаса пӑхса тӑраҫҫӗ, хӑйсене сиен кӳрекенсене сивлеҫҫӗ.

– «Уй куҫлӑ, вӑрман хӑлхаллӑ», теҫҫӗ-и-ха? – хутшӑнать калаҫӑва Нинук. Вӑл та халь хӑйне курӑк пек туять, вӑл та йӑлт илтет, ӑнланать...

– Мӗн ӗҫмелле тет вара? – тарӑхать мучи.

– Ӗҫ мӗн тусан та, уявра та хӑйӗн савӑнӑҫӗпе хурланӑвне пирӗн халӑх эрех ӗҫсе палӑртать. Ку вӑл халӑх йӑла-йӗрки.

– Халӑхӑн тени ҫут ҫанталӑкӑн тенине пӗлтермест, – хӗрсех тавлашать ҫамрӑк ача. – Эпир савӑнса тӑнӑшӑн мӗн-ма ҫӗр-шывӑн хурланса выртмалла тет. Ҫын та, тепӗр тесен, ҫут ҫанталӑкӑн пӗр пайӗ. Апла, ун туййӑмлӑ пулмалла. Ҫут ҫанталӑк пек савӑнмалла, ҫут ҫанталӑк пек хурланмалла.

– Мӗнле хурланса савӑнать вара вӑл?

– Пулса, тӑранса, чечекленсе ҫитсен савӑнать пек. Ҫын та ҫаплах вӗт. Ӗҫ тусан, япалана илемлетсе ҫитерсен чун савӑнать. Тем ҫитмесен – хурланать. – Ӗҫе ӑна туса ҫитермелле тет, ҫапла калать пурнӑҫ йывӑҫҫи.

– Пурнӑҫ йывӑҫҫи, пурнӑҫ йывӑҫҫи! Эпир те унран ӗлӗк тем те пӗр ыйтса, анчах вӑл пире ун пек кун пек сӑмахсем ним те каламан, – мӑкӑртатать халь чӗлӗмӗсӗр, уяв черккисӗр тӑрса юлнӑ ҫын. – Ӗҫ ӗҫлесе савӑнмалла тетӗр-и эсир?

– «Ӗҫле–ӗҫле ҫи», тенӗ ӗлӗк. Ӗҫлесе ҫитерсен ҫинӗ, ҫитермесен выҫӑ ларнӑ. Апла, савӑнӑҫӗпе хурлӑхӗ те ҫав ӗҫе ҫитернипе ҫитермен хушшинче. Каларӑмӑр, ҫитерсе пырсан эпир телейлӗ. Ҫитермесен... Акӑ мӗн! – хавхалансах каять ҫамрӑк тӗпчевҫӗ. – Эпир эрех ӗҫсе кайнин

сăлтавĕ - ĕçе вĕçне çитерме, тăрлама пĕлменнинче!

– Чăн та, – кăна эпĕ хам та асăрханă, – килĕшет мучи. – Ĕлĕкрех эпир питĕ тĕплĕ ĕçлеттĕмĕр, эрехе те ĕçместĕмĕр. Уяв мĕнсене те сăра кăна ĕçсе ирттерсе янă. Халĕ вара ĕç сапаланса кайрĕ, алă мĕн пырса тытать йăлт юрăхсăра тухать тейĕн. Çавна пулах, ĕç савăнăçĕсĕр тăрса юлнă та, çитменнине çитерес тесех ĕнтĕ, эрех ĕçетпĕр. Вара сăлтавсăрах савăннă пек пулатпăр.

– Туман ĕç тăман кăларать, – курăк пек пулнă хĕрача та сас кăларать. – Эпĕ те ăнлантăм! Çын тени ĕçне те туман, вăхăт иртсен мухмăрланнă та... Пушшех те хурланнипе татах ĕçет, каллех савăннă пек пулать. Кунран кун çапла пурăнсах вилсе каять. Хăй те çук, ун ĕçне те никам та туман, тин.

– Çавах та савăнмасăр та пурăнма май çуккă вĕт-ха, парăнмасть мучи. Паллă, вăл хăйĕн чĕлĕмĕпе черккине тавăрасшăн.

– Ĕç тунине юрласа-ташласа, ырă сăмах каласа, çынпа пĕрле ларса çут çанталăк панă çимĕçе çисе-ĕçсе паллă тумалла. Çавă кăна! – çирĕплетет хăй шухăшне Ванюк.

Пурте шухăша каяççĕ. Шăп. Вăхăтлăха та пулин пуплеме чарăннă çынсен хăлхине тăри юрри шăранса кĕрет. Вăштăр-вăштăр çил ўт-пĕвĕсене ачашлать. Хĕвел ăшши çупăрлать. Лайăх. Лайăх пулмасăр! Ĕç тусан кăна мар, тĕрĕс шухăша, тĕрĕс сăмахпа палăртсан та савăнать çын. Ун пек чухне вăл хăйне турă пекех туять. Ванюкпа Нинук та, Михха мучи те чунĕсемпе питĕ лăпкă, вăйлă. Халь тин вĕсем пурнăç тупсăмне те тупрĕç, тен,

апăршасем. Пурнăç çаврине те, акă, çут çанталăка мĕнле кирлĕ, çапла çавăрттарса ярĕç те... Ял кăна мар, пĕтĕм тĕнче çăтмахланса кайĕ...

– Мĕн эсир кунта пит шухăша путса тăратăр? – шарт сиктерчĕ çав вăхăтра Антон сасси. – Вăл та тăри сассипе вăранчĕ пулас.

– Мĕн-ха, эпир çĕр сассине тăнлатпăр-ха, – хуравлать ним калама аптраса Ванюк.

– Çĕр сассине? – интересленсе каять хула ачи. – Ку питĕ интереслĕ. Кашни япалан хăйĕн сасси пур. Ку, паллă. Калăпăр, çуртăн та хăйĕн калаçăвĕ. Ăна ăнланма пĕлмелле. Вăранса кайрăм та ирпе, тăнласа выртатăп. Шăп. Çав шăплăхра тем янăрать пек. Лăпкăн, канлĕн янăрать пек. Юрă тесен юрă мар. Темле сасă.

– Хĕртсурт юрлать пуль? – кулса ярать Нинук. Унпа пĕрле пурте кулса яраççĕ. – Анне калать. Хĕртсурт кĕнчеле арлама тухса ларать тет. Çав вăхăтра юрлать тет.

– Тетĕн хӳри кĕске, тет. Кунта хĕртсурт мар. Кунта япали хăй янăрать. Кашни япалан, çуртăн та, хăйĕн чĕтренĕвĕ. Кашни япала хумлă. Çав хумсем хăлхана кĕреççĕ те. Ăнт, тăри юрри епле хумлăн-хăмлăн килсе çапăнать. – Ача пуçне каçăртсах кăвак тӳпенелле пăхать. Çав вăхăтра ун пичĕ ахаль те тăрăхласкер тата тăрăхланать.

– Çĕр-Аннемĕрĕн те, апла, хăйĕн хумĕ пулма кирлĕ! – тусне пулăшмаваскать Ванюк. – Эс техникăна пит лайăх пĕлен, тен, вĕсене, çав хумсене те, тупса палăртма пултарăн?

– Палăртма пулать, паллах. Анчах мĕнле хумсем-ши вĕсем?

– Çил-тăвăл тухас умĕн мĕнле питĕ вăйлă шăхăрчĕ вăл, çав хум, – çил пек шăхăрма пăхать Нинук.

– Çук, çил, тетĕн-и? Çил тени сывлăш куçни çеç. Çĕр сасси вара вăл çĕр ăшĕнче мĕн пулса иртнипе çыхăнса тăмалла. Мĕн пулни – паллă мар.

– Мĕн пулса иртнине эсĕ ăна шыраса тупатăнах вĕт! – хавхалантарма тăрăшать Антона Нинук.

Пĕр вăхăт каллех пурте шăп пулаççĕ. Тем тĕрлĕ ыйту умне тухса тăнăскерсем хăйсем те анрасах кайрĕç пулĕ. Пурнăç йывăççи те кунта, тĕпсĕр çăлкуç та, çил-тăвăлĕ, çĕрпе таччăн çыхăннă чăваш пурнăçĕ... Ăçтан пурне те татса парăн... Пурнăç йывăççи пулăшсан кăна!

– Эпир мĕн вĕт-ха, Михха мучи, сирĕнпе канашлама килтĕмĕр, – пат! татать шăплăха Ванюк. – Эпир кунта Нинукпа шутларăмăр-шутларăмăр та, тĕпсĕр кӳлĕри юшкăна кăларса хамăр уй-хирсене, çырма-çатрасене пăрахса тухас терĕмĕр. Çав юшкăн вĕт-ха кӳлĕ тавра тăкăннă та тăвăлта... Курăк ăнт! мĕнле хăвăрт ӳсет. Çапла тусан, тен, пирĕн ялта та чăн çăтмах пуçланĕ.

– Çăтмах? Мĕн çăтмахĕ! – кулса ярать мучи. – Çăтмах пирки чиркӳ çыннисенчен ыйтмалла. Кунта ман пĕлӳ çитмест.

– Çук, çăтмахĕ пулать–и, пулмасть-и, юшкăна кăларма пулăшу кирлĕ. Шкул ачисен вăйĕ çителĕксĕр. Ял халăхĕ мĕн калать-ши, тетпĕр. Эсир вара, чи ватти, ял старости. Эсир мĕнле калатăр, çапла пулать.

– Пур-çке вăл çапла агротехника мелĕ. Сапропелла теççĕ-и-ха. Юшкăн ĕнтĕ. Тепĕр

чухне вăл кӳлĕсенче пухăнса каять те ӳсен-тăран валли питĕ пахалăхлă япала пулса тăрать.

– Мĕншĕн ыйтас мар, – шухăша каять ват çын. – Ял пухăвне ыранах пухатпăр. Халăх мĕн калать.

– Тата тепĕр япала пур-ха.

– Мĕн тата?

– Пурнăç йывăççи çухалчĕ вĕт.

– Çухалчĕ! – харăссăн кăшкăрса яраççĕ пурте. – Мĕнле майпа? Мĕншĕн? Сире сыхлама хăварнă вĕт-ха!

Ачасем хăйсемпе пулса иртнĕ пăтăрмахсене каласа параççĕ. Пурне мар, паллах. Çимĕçне çинине те, Çтаппанпа хирĕçсе кайнине те пĕлеççĕ халь тин. Йывăç мĕншĕн пĕтнине никам та ăнланмасть.

– Тен, биологи учителĕ, Хĕветĕр Хилипччă пĕлет? – тĕшмĕртет Нинук. Хăй вăл биологине пит юратать те, учителĕ те пурне те пĕлет тесе шутлать.

Ку шухăшпа пурте килĕшеççĕ. Ачасем ушкăнланса ун патне кайма тухаççĕ. Михха пичче юлать. Ун хăйĕн шухăшĕ пур. Çав чĕлĕмпе черкке вырăнне мĕн шыраса тупмалла-ши тет вăл. Ара, ун паçăрах табакне те туртас килет, ăш канмалăх кăшт сыпсан та юрать текелет ăшра. Ачасем кайсанах пӳрте кĕрет те чей лартса ярать. Яппунсен чей культури питĕ вăйлă аталаннă теççĕ. Вĕсем чей ĕçсех ăшне кантараççĕ. Чăвашсем вара... Енчен те эрех-сăра вырăнне чей майлăрах сиплĕ шыв хатĕрлеме вĕренсе çитсен мĕнле лайăх пулнă пулĕччĕ. Çут шыв, тейĕпĕр. Çут шыв? Ара, тĕпсĕр çăлкуçран ĕçсен вăй кĕрет теççĕ мар-и-ха? Çав кӳлĕ патне часовня туса лартас пулать те чиркӳ урлă

«светить» тусах ёнтĕ, халăха çав шыва ĕçме хăнăхтарас. Пулчĕ те. Ĕç туса çитерсен те, уявра та çав шыва ĕçсе сăмах калас, унпа хăналаннине чи пысăк чыс теес. «Шывран таси, шывран хакли çук», теççĕ. Халăх тахçанах каланă. Шута илменни кăна. Савăнса кайнă мучи чĕлĕмне туртса кăларчĕ. Туртса ярас тенĕччĕ. Ас илех кайрĕ. Ара, пурнăç йывăççи туртма хушман вĕт! Тепĕр тесен, мĕн-ма вара пит çав пӳтсĕр тĕтĕме тăрăшсах çăтмалла тет. Çăтмалли урăххи те пур вĕт-ха. Сăмса айĕнчиех. Паллă, мĕнни. Йĕмми-мĕнни, сывлăш ёнтĕ вăл! Унсăр эпир пĕр минут та пурăнаймастпăр. Çăтатпăр кăна çав сывлăша. Асăрхамастпăр та. Мучи сывлăша тарăннăн сывласа илчĕ те, тĕлĕнсех кайрĕ. Ун сăмсине табак шăрши çапрĕ. Пӳрт стенисем тĕтĕмпе тулса ларнă та, халь тин ёнтĕ вĕсенчен çав тĕтĕм шăршине нимпе те хĕссе кăлараймăн. Алăка уçса ярсанта сĕвĕрĕлес çук ку табак шăрши. Çавна шăршласа çывăратăп вĕт, шутларĕ ватă çын. «Ватă çын, тăватă çын». Кунта та майне тупрĕ Михха мучи. Ара, терĕ вăл яланхилле. Табак вырăнне таса сиплĕ сывлăш туртма вĕренес пулать. Сывлăш гимнастика, теççĕ-и-ха! Çак сăмахсемпе урама тухрĕ, унти сывлăш та тивĕçтермерĕ. Пахчана кĕчĕ. Кунта сиплĕрех те тутлăрах пек. Тарăннăн сывласа илчĕ. Тутлă-тăтлă пулса кайрĕ. Татах та татах сывларĕ. Пуçĕ çаврăнсах кайрĕ. Ку чĕлĕм туртнинчен те лайăхрах пек туйăнчĕ. Акă мĕн, акă ăçта пурнăç тупсăмĕ! Кашни килте таса та сипле сывлăш пахчисем кирлĕ. Унтах ларса канмалли е гимнастика тумалли хатĕрсем пулччĕр. Ватă çын çын курмас-и текелесе ун-кун

пăхкаласа илчĕ те аллипе унталла-кунталла сулкаласа илчĕ. Чĕркуççийĕсене хуçлатса ларма пăхрĕ. Пулмарĕ. Йăвансах кайрĕ. Хăй çапла ача пек хăтланнинчен кулкалам пекки тăвать. Хăтланăвĕсем айванрах пулнине ăнланать. Чăн та, пĕр тепĕр çын айккинчен пăхса тăрас пулсан, мучи çапла шапа пек çапкаланса тăнине курсан кулса вилĕччĕ. Кулĕçĕ те, акă. Ват çын пуçĕнче пĕр шухăш тĕвĕленет. Ыран пухура юшкăн кăларасси çинчен çеç мар, халăх пурнăçĕ пирки те сăмах хускатас. Унсăр мĕнле пултăр! Урăхла юрамасть. Юрамасть кун пек пурăнма. Кăçал çур çулта кăна автан авăтман яла вун тăваттăн тухса кайрĕç. Кун пек нихçан та тăкăнман, теççĕ, мижерсем. Мĕн пулчĕ? Мĕн пулни паллă ĕнтĕ вăл. Эрех ĕçсе, табак туртса вилсе пĕтеççĕ. Ĕçне туни те халь тин ĕнтĕ çук. Пĕрлешӳллĕ хуçалăх та саланса пырать. Ăт! çак вăхăтра темле пурнăç йывăççин çимĕçне çинĕ ачасем пырса кĕреççĕ те халăха мĕнле пурăнмаллине вĕрентме пуçлаççĕ. Шăна пек тек вилесшĕн мар вĕсем, мур илесшĕсем! Çамрăк пулсан та ăслă. Çут çанталăкĕ те чăтайми пулчĕ пулас. Кутранах тапса илчĕ мар-и, акă. Мучи тинтерех кăна юсаса çитернĕ вите тăрри çине пăхса илчĕ. Юрать Антон килсе пулăшрĕ-ха. Пĕччен тăрса юлсан çапла çав вăл, кирек кам та килсе кӳрентерме пултарать.

Михха мучи, халь тин вăтанма пăрахрĕ пулас, хăюллăнрах суллакаласа илчĕ те аллисемпе пӳрте кĕрсе кайрĕ. Тепĕртакран каяллаваскаса тухрĕ. Аллинче ун шыв йăтмалли пысăках та мар канистра. Пӳрт умĕнче чарăнса тăрса каялла пĕрре кăна пăхса илчĕ. Тем сăмахĕ каласа пăхса илчĕ те чике

сухалне çил çинче вĕçтерсе икĕ çырма пуçĕ еннелле таплаттарчĕ.

Ачасем шкула кĕпĕрленсе кĕнĕ чухне биологи учителĕ микроскоп умĕнче ларатчĕ. Вăл та çĕр çывăрман пулас. Куçĕ хĕрелнĕ. Сăнран ĕшеннĕ пекрех курăнать. Вĕренекенĕсене курсан пит хавасланса кайрĕ, хăвăрттăн сиксе тăнăран пуль, пуканне йăвантарса ячĕ. Хăй те кайса ӳкрĕ. Ку питĕ ăнсăртран пулса иртрĕ те ирĕксĕрех пурте ахăлтатса кулса ячĕç. Учителтен те ним те мар кулма пулать иккен. Хĕветĕр Хилипччă хăй те кая юлмасть. Ахăраççĕ кăна. Тĕнче те аахăрать тейĕн. Кăшт лăпланчĕç те мĕн пулса иртнисене каласа пачĕç. Татах кулчĕç. Учитель юшкăн кăларас ĕçе ырларĕ. Хăй тĕпчевĕпе паллаштарчĕ.

– Ку шыври микроорганизмсем питĕ хăвăрт аталанаççĕ. Малтанрах курнисем пĕр икĕ-виçĕ миллиард çул каярах пурăннă пулсан, халь тин мироскоп айĕнче сăнанисем пĕр миллиард çул каярарахрисем. Питĕ аталаннăскерсем! Эволюци çĕнĕрен пуçланчĕ тейĕн. Кун пек пулсан, нумай та вăхăт иртмĕ, çĕр çине çĕнĕ чĕрчунсем килĕç. Мĕне пĕлтерет ку? Эпĕ нимĕн те ăнланмастăп. Кун пек пулсан час темле динозаврсем те çĕнĕрен сиксе тухĕç.

Çук, динозаврсенчен те мар, çӳçне тăрмакласа, куçне чарса пăрахса калакан учителĕ курнă ачасем хăранипе унран каялла чакса каяççĕ. Хăрамасăр, тĕпсĕр кӳлĕрен эпир нихçан та курман чĕрчунсем сиксе тухсан çынсен вара ăçта кĕрсе каймаллла тет? Кашни ача пуçĕнчех мĕлтлетсе илчĕ çакă. Мĕлтлетсе илчĕ те, ку тата кулăшла пек туйăнса кайрĕ. Мĕн динозаврĕ? Каçса кайса кулаççĕ халь

ачасем. Хырӑмӗсене тытса пӗр-пӗрне пӳрнепе тӗллесе «динозавр!», «питекантроп»!», теççӗ. Çитрӗ савӑнмалӑх самант. Учитель те кулать. Ăçта кайса кӗрӗн?

– Ку вӗт, мӗн вӗт, – чарӑнать кулма Ванюк. – Çӑл пиртен тепӗр хут çын туса хурасшӑн вӗт. Хальхисем пӑсӑк тет. Çӗнӗ эволюци пуçлать. Çӗре чулпа çапнӑран çапла пулчӗ ӗнтӗ ку.

– «Çӑла ан сур, ӗçме кирлӗ пулать», теççӗ. Ӗне кӑтӳ çӑл патне тапӑра аннӑ вӗт. Унтах ӗне тени мӗн ӗнтӗ, сыснӑ-шӑнӑ, çӑла вараланӑ. Тулай Иванӗ вӑл, хӑвӑрах пӗлетӗр, тен, хӑй те çавӑнтах тула тухнӑ. Çӑл çилленсе çитнӗ те...

– Çӑл çеç мар, çӗр хӑй тарӑхса кайнӑ. Вӑл пирӗн кашни хусканӑва сиссе пӗлсе выртать. Ăçта унта чул, пирус тӗпне çӗр çине пӑрахма юрамасть. Сурма ту юрамасть, апла. Çӗр чӑмӑрӗ калама çук хӑватлӑ шутлав машини. Тен, вӑл турӑ пекех хӑтланма пултарать. Енчен те çӗнӗрен эволюци пуçлать-тӗк, çапла пулма пултарать.

– Чӑн та çапла пулсан, ку пирӗншӗн, пӗтӗм этемлӗхшӗн калама çук пысӑк хӑрушлӑх кӑларса тӑратать. – хӑрама пӑрахмасть Ванюк. – Эпир пач кирлӗ мар килсе тухатпӑр. «Юман пӗтсен чӑваш пӗтет» тесе ахальтен каламан пуль. Пурнӑç йывӑççи те пӗтрӗ вӗт. Мӗн сӑлтава пула куç умӗнче тенӗ пек сӳнсе сывлӑшра ирӗлсе кайрӗ?

– Кун пекки пур-ха вӑл. Пур япала та пӗтет. Йывӑç кӑна мар, çын та вилет, – лӑплантарать учитель. – Хӑш-пӗр кактуссем çеçкене ларсанах хӑраççӗ, пулӑсем те пур ун йышшисем. Вӑлча сапаççӗ те вилеççӗ. Хӑраса

ӳкме кирлӗ мар. Тен, кам пӗлет, пурнӑҫ йывӑҫҫи тепре шӑтса тухӗ.

– Вӑл та пуль, халь тин ӑнланса пыратӑп, пиртен кӑна килме пултарать. Эпир ӗлӗкхиллех сӗмсӗррӗн йӑлт таптаса пырсан тӗнче йывӑҫҫи кӑна мар, ҫын хӑй те пӗтет. Кӳлӗ акӑ тепре ҫил-тӑвӑл кӑларать те, пурне те ҫӗр ҫинчен шӑлса тӑкать.

Ку каллех хӑратать. Пӗрре тӳссе курнӑ та, тӑвӑл мӗнне пурте пӗлеҫҫӗ. Тӑвӑл шӳтлеме юратмасть. Ун пек ан пултӑрччех, шутлаҫҫӗ шкул ачисем. Вара вӗт вӗсен йӑранӗсем те пӗтеҫҫӗ. Экзамен та тытаймаҫҫӗ. Пурнӑҫ чӑн экзамен тыттарнине хальлӗхе вӗсем тӑнкарса илеймеҫҫӗ курӑнать. Пӗрремӗш чан ҫапнӑ ӗнтӗ. Илтрӗ-ши ӑна халӑх? Ыранхи пухура мӗн калӗ вӑл?

Михха мучи, тӗпсӗр ҫӑл куҫӗ умне ҫитнӗскер, шыв ҫийӗ ҫине тӗлӗнсе пӑхса ларчӗ. Вӑл, чӑн та, чисти чӗрӗ чун пек курӑнать. Шыв ҫийӗн ҫутӑ хум вылять, тӗпӗнчен чӗре пек пӑл-пӑл! тапса тӑрать. Мучи кӗл тума хатӗрленчӗ. Кӑшт шухӑшласа ларнӑ хыҫҫӑн шыв умӗнче ӳксе пуҫ ҫапрӗ. «Ырлӑх-сывлӑх парсамччӗ, – аран-аран илтӗнет мӑкӑртаткалани, – ӗҫ хыҫҫӑн ӗҫсе ӑша кантармалӑх, уявра сыпса савӑнмалӑх пар, таса шывӑм. Эпӗ ҫӑл куҫран кӑшт ӑсса илнӗшӗн каҫар, эпӗ сана уншӑн ӗҫпе тавӑрса парӑп. Час сан юшкӑна кӑларса тӗрлӗ-тӗслӗ курӑк ӳстерӗпӗр, ҫӑлри сиплӗ шывпа шӑварӑпӑр. Айӑп ан ту, сип пар, пил пар пурӑнма». Ҫак сӑмахсемпе ват ҫын, мӑчавӑр темелле-и ӗнтӗ ӑна халӗ, ҫӑла ӳпӗнсе пӗр сыпкӑн шыв ӗҫрӗ, унтан таса та ҫап-ҫут шыва канистрӑпах ӑсса илчӗ.

Шыв çийĕ çав вăхăтран вĕттĕн-вĕттĕн хумханса илчĕ. Ялтăр-ялтăр! çиçрĕ хум тăрри. Тăрисен хорĕ тата хытăрах кĕрлерĕ. Кун пек каланисем çут çанталăка килĕшрĕç пулас. Мучие хăйне те питĕ канлĕ пулса кайрĕ. Вăй та кĕчĕ пек. Шыв çине татах ĕçес тесе ӳпĕнчĕ те, тĕлĕнсех кайрĕ. Çăл куç тĕпĕнчен тенĕ пек ун çине темле палламан çын пăхса илчĕ. Сухаллă хăй, анчах сухалĕ шурă мар, хура. Пит-куçĕ те темле çамрăк – çиçет кăна. Тахçан таçта курнă пек ку çынна. Тӳрех ăнкарса та илеймерĕ мучи ку вăл хăй пулнине. Çамрăкрах чухне çаплаччĕ вĕт-ха!

Шыв ĕçесси пулмарĕ. Шухăша кайнă мучи, мучи те мар пуль халь, сиплĕ шыв тултарнă канистрине çĕклерĕ те çăмăллăн кăна килĕ еннелле утса кайрĕ. Акă вăл чĕрĕ шыв, чĕрĕ шыв, мĕлтлетрĕ ун пуçĕнче. Эпир вĕт ку таранччен вил шыв ĕçсе пурăннă. Ку вара чĕрри, çан-çурăмпа сăн пите çĕнĕлĕхпе вăй кĕртекенни! Эрех мар. Сăра та мар. Чĕр шыв кирлĕ пире! И-ях! кăшкăрса ячĕ утса пыракан старик. Ку хăйĕншĕн те питĕ ăнсăртран пулчĕ пулас. Чарăнса тăчĕ. Хăй тăрăх пăхкаласа илчĕ. Çамрăк çын пек ахăлтатса кулса ячĕ. Ял еннелле çил пек вĕçтерчĕ. «Чĕрĕ шыв! Чĕрĕ шыв!» – илтĕнсе юлчĕ аякран.

## Халăх вăйĕ

Пуху кун пек кĕрлесе тăрасса никам та кĕтмен пулас. Лавкка умĕнчи лапамра пĕр çĕре яхăнçын пуçтарăннă. Хĕрарăмсем уйрăммăнтарах

тăраççĕ. Ваттисем тепĕр çĕрте. Çамрăксем çукпа пĕрех. Нумаях та мар ачасем биологи учителĕ тавра пуçтарăнса тăнă. Мĕн пулать те мĕн килет тесе шутласа тăраççинех кусем.

Михха пичче пухăва шăп та лăп каласа хунă вăхăтпа пуçларĕ. Кĕтӳ хунă. Тĕп ĕççене пуçламан. Çавăнпа та пулĕ кашни хăйне ирĕклĕ те çав вăхăтра пăшăрхануллăрах туять. Ара, юлашки вăхăтра ялпа тем те пĕр пулса иртет те – пăшăрханмасăр! Староста та пăшăрханать.

– Юлашки вăхăтра, – пуçлать вăл тахçанах тĕвĕлесе хунă шухăшне, – ял пĕтес патнех çитрĕ. Мĕн туса пурăнать ял халăхĕ – калама та хĕн. Сăмахран, акă, шкул хупăнас хăрушлăх сиксе тухрĕ. Ялта вĕт пĕр вăтăр ача пур–и, шкула каяканни? Вĕсем те, ӳсерех панисем, Ташкиле çӳреççĕ. Кун пек пулсан шкул пĕр-тепĕр вунă çултан хупăнать. Кăçалхи çур çулта кăна вунă тăватă çынна çăва çине ăсатрăмăр. Кун чухлĕ çын нихçан та вилмен. Çуралнисем вара икĕ ача. Хăвăрах танлаштарса пăхăр. Пĕр тепĕр алă çултан, апла, ял та пĕтет. Мижер ялĕ тахçантанпах чаплă та хăватлă ял пулнă. Халĕ вара? Халĕ акман-вырман çĕрсем те пур. Халĕ, тен, пире çĕр те кирлĕ мар? Пĕрлешӳллĕ хуçалăх пĕтсе пырать. Фермăсем пушă лараççĕ. Ялта ваттисем кăна тăрса юлчĕç. Мĕн тесе хăваласа кăларса ятăр ачăрсене тăван килĕрсенчен? Мĕн, ют çĕрте кăна укçа çапма пулать терĕр-и? Укçа тесе ял çапла юхăнса вырттăр-и? Мухтавлă Мижер ялĕ çĕр çинчен çухалтăр тетĕр-и?

Михха пичче пĕр кана чарăнса илчĕ. Ял халăхĕ кĕрр! кĕрлесе кайрĕ.

– Çĕр–Аннемĕр те кун пек лару-тăрăва чăтайми пулчĕ пулас, – тухса тăчĕ маларах Хĕветĕр Хилиппчă. – Иртнĕ çил-тăвăла пурте ас тăватăр. Сăхăт çырминчи пулă çухалчĕ. Уйра путене авăтма пăрахрĕ. Кураксем те вĕт йăва çавăрма пăрахрĕç. Выльăх-чĕрлĕх пĕтсе кайрĕ. Тырпул та вĕт, халĕ ĕлĕкхи мар. Гектартан пĕр çирĕм центнер илсен савăнса тăратпăр. Ку тухăç çителĕксĕр. Çавăнпа та чухăн пурăнатпăр мар-и?

Халăх тата хытăрах кĕрлесе кайрĕ. «Мĕн тумалла тет вара?» – илтĕнет унтан та кунтан. Ку шухăша шутламан мар. Ку шухăш тахçантанпах пуç тӳпинчен шăтарса тухнă та кашни кун ял çийĕн вĕçсе çӳрет.

– Акă мĕн! – пуху варринех сиксе тухать Ванюк. – Çырмасене, уйсене юшкăн кăлармалла. Тислĕк вырăнне пултăр. Юшкăнĕ тĕпсĕр кӳлĕре чылай. Тата ахальли те мар пулас. Çил-тăвăл хыççăн вăл ăçта ӳкнĕ, çавăнта курăк питĕ хăвăрт ӳсет. Кӳлĕ хĕрне йывăç та ӳссе ларнăччĕ... Анчах вăл теме пула пĕтрĕ. Курăкĕ вара ӳсет. Енчен те ял халăхĕ юшкăн кăларас ĕçе хутшăнсан, ял таврa, çырмасенче те курăк ешерме пуçлĕ. Вара тин выльăх шучĕ ӳсĕ. Тырпул та тухăçлă пулĕ.

Шкул ачи çапла хĕрӳллĕн калаçни ял халăхне тĕлĕнтерсе ячĕ. Кулкалакансем те тупăнчĕç.

– Мĕн тĕпсĕр кӳлли пултăр? – шăл йĕрет Тулай Иванĕ, – Курăс хутмалăх та çук. Юшкăнĕ те унта пĕр çăпала ăсса илмелĕх.

Кăна илтнĕ халăх ахăрсах кулса ярать. Ара, Тулай Иванĕ çав калаçнă вăхăтра пуçне çын илтмеллех шан-шанн! çапса кăтартать. Тăм писменсем тет ĕнтĕ.

– Юшкăнне кăларма пулĕ-ха ăна, сапропелла, теççĕ, – лăпкăн кăна тăсать ача шухăшне ял агрономĕ, вăлах пĕрлешӳллĕ хуçалăхăн ертӳçи, Галина Ивановна. – Анчах удобренисемсĕр те май килмест. Вĕсем вара хаклă. Илме укçа çук. Сухалама, акма-вырма техника çитмест. Вĕсем те пĕтнĕпе пĕрех. Мĕн тумалла тет. Кăна никам та пĕлмест.

Калас пулать, Галина Ивановна, вăлах Петрова, питĕ тарăхса çитнĕ. Анчах çав тарăхăва халăх умĕнче вăл пĕрре те кăтартмасть. Мĕн-ма тесен халăх тахçанах ĕçлеме пăрахнă. Кăшкăрса та пăхнă вăл, усси пулман. Халăх пĕрлешӳллĕ хуçалăх ĕçĕнче хăйне тек тупайман, тарма тытăннă. Хуçалăх ертӳçисем те, вĕсем умлă-хыçлăн темиçе улшăнса пычĕç, тарса пĕтрĕç. Вара тин, ку ĕçе хăрарăм кăна пултарать тесе, ял халăхĕ Галина Ивановнăна ертӳçĕ пулма суйларĕ. Хăй питĕ патвар вăл.

– Ку пĕтен тĕнчене çĕнĕрен пуçласа ярас пулать. Акă мĕн! – хĕрӳленет Ванюк. – Тĕпсĕр кӳлĕ хăй çапла калать.

Пĕр лăпланса шухăша кайса тăран халăх тепре кулса ярать.

– Пурнăç йывăççи хăй çапла каларĕ! – тек пытарса тăраймасть хăйсенпе мĕн пулса иртнине Ванюк. Вăл çак пĕр-икĕ кунтах мĕн тӳссе ирттернине каласа парать. Вĕсем мĕн çăтмахри пĕлӳ йывăççин улмине çинĕ. Халь тин мĕн тумаллине те пĕлеççĕ. ку сăмахсем халăха ухмахлантарсах яраççĕ. Хăшĕ-пĕрисем чулпа çапса хăваласа яма та хатĕр.

– Кай кунтан! – хăмсарать ăна Тулай Иванĕ. Хăйне вăрăпа тытнăшăнах кураймасть

тем? – Тупăннă кунта пĕлӳçĕ! Сансăрах пĕлеççĕ. Акă агроном мĕн калать! – Çак сăмахсемпе ачана тĕрте-тĕртех халăх хушшине кĕртсе ярать. Аптраса ӳкнĕ Ванюк хирĕç тăмасть. Çтаппан çавăнпа усă курса ун карттусне куç таранах пусса лартать. Лĕхĕл-лĕхĕл! кулать хăй.

– Тăхтăр-ха, тăхтăр, – ача хутне кĕрет учитель. Кунта ним кулмалли те çук. Çут çанталăка ăна итлеме пĕлес пулать. Йывăç та тем те пĕр каласа кăтартма пултарать. Вăл япăх ӳсет-тĕк, апла, çĕр япăх. Çĕре лайăхлатас пулать. Çавă кăна. Кунта ним кулмалли те çук. Юшкăнĕ те вăл ахальли мар пулас.

Хĕветĕр Хилипччă халăха хăй тĕпчевĕпе паллаштарать. Юшкăнĕ те, шывĕ те питĕ чĕрĕ япаласем мĕн. Енчен те вĕсемпе усă курма мел тупсан, питĕ лайăх пулнă пулĕччĕ тет. Халăх пĕрех иккĕленет.

– Çав панулмине эпĕ те çинĕ! – таçтан вăй тупăнать вăтанса тăракан Нинукăн. Ара, каччăпа пĕрле пулнă-ха та! – Эпĕ те пĕлетĕп. Эпир туса илекен тырпула, пĕтĕм çимĕçе хăй халлĕн ӳсме вĕрентес пулать. Çапла каларĕ мана пурнăç йывăççи.

– Мĕнле-мĕнле? – аптраса ӳкет агроном. – Кун пеккине илтмен.

Кун пеккине пухăва пухăннă хĕрарăмсем те илтмен. Нинука питĕ сăнаса пăхаççĕ. Кам хĕрĕ пулчĕ-ха ку, текелеççĕ.

– Кашни ӳсен-тăран пĕр-пĕрне пулăшса, хӳтĕлесе тăрать. Çемьери пек. Калăпăр, эпĕ те вĕт аннене пулăшатăп, анне те мана ас тутарсах тăрать. Çут çанталăкра пур япала та пĕр-пĕринпе пулăшуллăн çыхăнса тăрать. Вăрман, пурте пĕлетĕр вĕт, хăй тĕллĕнех ӳсет.

Çаранра та тем тĕрлĕ курăк. Ахальтен мар ку. Пирĕн те çапла тума ăс çитересчĕ. Вара акмасăр тумасăр тыр вырса илĕпĕр.

Ку пушшех те савăнтарса ярать. Хальхинче хĕрарăмсем те кулкалаççĕ. Ай, ку сан Марье аппа, сан хĕрачу тем те пĕлет текелеççĕ. Нинук вара, каласса каларĕ те, каласанах питĕ вăтанса кайрĕ. Вăлт! çеç çаврăнса ачасем патне Ванюкпа юнашар кĕрсе тăчĕ.

– Эпĕ малтанлăха сăнавлă участок туса пăхма сĕнесшĕн, – тăсать хăй шухăшне биологи учителĕ. – Шкулти йăрансем ытла та пĕчĕккĕ. Эсир пире пĕр вунă гектар çĕр уйăрса парсан, эпир ăна хамăрах пăхса тăрăпăр. Техникăпа пулăшма тивет, паллах.

Учитель калани халăха ӳкĕте кĕртет. Тулай Иванĕ те халь тин кулма пăрахать. Агроном та пулăшма хатĕр. Халăх икĕ çырма пуçĕнчен пуçласа Самать таран ахалех тăсăлса выртан çĕре сăнавлăх уйăрса пама килĕшет. Юшкăн турттарма та çывăх. Тен, ĕç ăнса пырсан, шыв пăрăхĕсем те хума май килĕ. Çапла шутларĕ халăх. Апла, йăлт пĕтмен-ха Мижер çыннисем. Акă тепре авалхи пек çĕкленсе илĕç те, тĕнчипех çăтмах туса хурĕç.

Тепĕр кунне пĕтĕм халăхпа тенĕ пек юшкăн кăларма тухрĕç. Кашни витре йăтнă. Ара, ял ĕçченĕ вăл мĕн тумаллине каламасăрах пĕлет. Машинпа вĕт унта патне пыраймастăн. Шурлăхлă. Экскаватор та кĕреймест. Витрепе вара сăрта йăтма пулать. Машинĕ самосвал йышши кирлĕ. Çавăн йышшине панă та хуçалăх ертӳçи.

Халăх пухăнсан Михха мучи мала тухса тăчĕ те, çăл умне чĕркуçленсе ларчĕ. Пуç тайса тем мăкăртатма тытăнчĕ. «Каçар пире, – тет пулас ку ăрăмçă, – эпир сана усал тума килмен. Пулăшу ыйтатпăр. Юшкăн пар. Шыв пар. Ахаль тумăпăр. Тырпул ăнса пулсан сана та тăрантăпăр. Мĕн чухлĕ илсен те тĕппи сан ан курăнтăр». Çак сăмахсемпе мучи ӳксе пуç çапрĕ те ывăçпа шыв ăсса илсе пĕр-икĕ сыпкăм ĕçрĕ. Юшкăнĕпе питне сĕрчĕ.

Тĕпсĕр çăл куçа çакă килĕшрĕ пулас. Шыв çийĕн вĕттĕн-вĕттĕн хумсем çĕкленчĕç. Хĕвел çути хум тăррисенче пин-пин çутă çутрĕ. Çут çанталăк та ыр сунать тейĕр. Ват çын хыççăн учитель сĕннипе пурте çапла шыв ĕçсе пылчăкпа сĕрĕнчĕç. Халь тин айккинчен пăхсан ку кулăшла та курăнать пуль, анчах пурте питĕ савăнса тăраççĕ те, пурне те вăй кĕрсе кайнă та, шӳт-кулă кăна янăраса тăрать икĕ çырма пуçĕнче. Ан тив, халь тин вĕсем тăван çĕрпе вараланнă, ан тив, тен, вĕсем авалхи Месопотамине аса илчĕç... Халăх юнĕ вăраннă, ку пĕрре пăхсах курăнать. Акă Михха мучипе Хĕветĕр Хилипччă вĕрентсе пынипе Самать енчи уй çине пылчăк купи хыççăн пылчăк купи ӳссе ларма тытăнчĕ. Салатма кирлĕ мар теççĕ. Çумăр çусан çĕре хăех сăрхăнса анса каять. Çумасан шăваратпăр теççĕ. Акмалли мĕнне учитель малтанлăха курăк кăна акса пăхасшăн.

Çак ĕçе аякран пăхса тăрсан, халăх темле пушар сӳнтерме пуçтараннă, тейĕр. Çынсем черетленсе тăнă та алăри витресене пĕрин аллинчен теприне парса тăраççĕ. Ĕç хăвăрт пулса пырать. Çĕр «пушарĕ» те, пур пулсан, кун пек ĕçлесен час сӳнет. Савăнăçлă хăйсем.

Кун пек пĕрле карр! тăрса ĕçленине ас тумаççĕ те. Ваттисем кăна «ĕлĕкчĕ те, ĕлĕкчĕ» текелеççĕ. Çамрăксем «пуçра çавра çĕлĕкчĕ» тесе шӳтлеççĕ. Ку нимене пурте тухнă пек те, çапах та Тулай Иванĕпе Çтаппан курăнмаççĕ. Ахăртнех вĕсем ку ĕçе ĕненмеççĕ.

Пĕр кун тăршшĕнчех, «халăх сурать кӳль пулать», теççĕ-и-ха, юшкăна турттарса та хучĕç. Тĕпсĕр кӳлĕ вара мĕнле пулнă, çаплипех юлчĕ. Юшкăнĕ те пĕтмерĕ, шывĕ те хухмарĕ. Çăл куç чĕри ĕлĕкхи пекех пăл-пăлл! туса тапса тăрать. Апла, вăл чăнласах тĕпсĕр! Ăна, тен, малашне пуç çапма тытăнмалла. Çапмалла-и, çапмалла мар-и, пĕрех, анчах та кашни пĕлет, ку чĕрĕ шывсăр тек пурăнма май çук. Çут çанталăк çынна хăй аллине тăсса пачĕ. Чĕрине те уçрĕ. Хăйне усал тунисене те манса кайрĕ, тен. Ара, çын тени, ун ачи-иç! Халĕ тин пĕтĕм çĕр-шыв ачисем мĕн хăтланнине çĕр амăшĕ пек кăмăллăн пăхса выртрĕ.

## Хăрушă ĕç

Тепĕр кунне ир-ирех, хĕвел тухиччене вăранса кайрĕ Ванюк. Шăм-шак тем сурать пек. Ĕнер кунĕпех ĕçленĕ те, ăнланмалла ĕнтĕ. Ку çеç те мар-ха. Тем, ун чĕри сасартăк пăшăрханса ӳкрĕ, инкек пулассăнах туйăнать, çавăнпа та ача вырăн çинчен хăвăрт кăна сиксе тăчĕ те тумланса урама тухрĕ. Тем çитмест ăна. Тен, тăри тени? Тăрисен хорĕ çуккă вĕт! Тӳпе шăп тăрать. Сӳӳ! туса çӳçенсе кайрĕ ача чĕри. Ырра мар ку! Ванюк хăй те сисмерĕ,

ӑнланмарӗ те, тӗпсӗр ҫӑл куҫ еннелле тапса сикрӗ. Ҫавӑнта темскер пулнӑ! Ҫӗмрен пек вӗҫтерсе чупса ҫитрӗ вӑл кӳлӗ хӗрне. Унта, ҫапла, инкек!

Такам ҫӑл куҫне тем пысӑкӑш чул пӑрахса хупласа хунӑ. Шарт! сикрӗ ача чӗри. Ҫил-тӑвӑл тухсан тем курса ларӑпӑр! Хӑвӑртрах! Ванюк ҫӑл кутнех чупса пычӗ те чула илсе пӑрахма тӑчӗ. Ӑҫта унта? Тем пысӑкӑш чул хускалса кӑна илчӗ. Кун пек йывӑр чула пӗччен йӑтаяс ҫук. Ҫӑла вӑл пусӑрласах хунӑ. Шывӗ те тухмасть. Ҫук, кун пек юрамасть тесе ача тепӗр хут тапӑнса пӑхрӗ. Хальхинче ҫӗклесе мар, шутарса пӑхас терӗ. Чул, чӑн та, хускалчӗ. Аялта пылчӑклӑ-ха та, шутарма та пулать пуль. Татах, тата хытӑрах мекӗрленчӗ ача. Кӑвапи талса кайиччен мекӗрленчӗ. Ҫӑл усӑлсах ҫитнӗччӗ ӗнтӗ. Шывӗ те юха пуҫланӑччӗ. Ҫав вӑхӑтра шалта тем талт! туса талса кайрӗ. Ача самантрах сывлӑшсӑр пулса ларчӗ. Хускалаймасть те. Кӑвапа тӗлӗнче питӗ-питӗ хытӑ ыратать. Кӑвапи талчӗ пулинех! Ку пӗтӗмпех пӗр кӗтмен ҫӗртен пулса иртрӗ те, ача аптранипе ним тума пӗлмерӗ. Пӗлсен те ним те тӑваймӑн. Кӑвапа тӗлӗнче ыратни хускалма та памасть. Шыв шӑнкӑртатса юхни кӑна кӑшт лӑплантарать ача чӗрине. Ҫӑл куҫ ӗлӗкхи пекех пӑл-пӑлл! тутарса тапать. Таврара шӑп. Ҫав вӑхӑтра хӗвел Сӑхӑт ҫырминчен сиксе тухрӗ, хӗвел пайӑркисем шыв ҫийӗн выляма пуҫларӗҫ. Халь тин пурте йӗркеллӗ пек ӗнтӗ. Анчах пӗрех тем ҫитмест. Тавралӑх ытла та шӑп. Шӑнкӑр-шӑнкӑр! шыв юхни кӑна илтӗнет. Унччен те пулмарӗ, тӑрисен хорӗ сасартӑк пӗр харӑссӑн юрласа ячӗ. Ку хӑй пӗр симфони пулчӗ. Ванюк

вар тӗлӗнче ыратнине пӑхмасӑрах тин кӑмӑллӑн кулса выртрӗ. Пулчӗ, терӗ пулас. Халь тин тӗпсӗр кӳлӗ ҫилленес ҫук. Ял ҫийӗн те ҫилтӑвӑл ҫӗкленмӗ... Унӑн куҫ умӗнче ванса пӗтнӗ ял ӳкерчӗкӗ куранса илчӗ, куранса илчӗ те мӗлке пек ҫухалчӗ. Тек ун пекки пулмӗ! Ача шухӑшӗпе пӗр пулса, ҫӑл куҫ та «тек ун пекки пулмӗ» тенӗ пекех варкӑш ҫил кӑларса ача ҫӳҫӗсене вӗҫтеркелесе илчӗ. Чуна ку пушшех те лӑплантарчӗ. Тав тунӑ пекех пулчӗ.

Михха мучи ҫав вӑхӑтра ҫул ҫинче пулчӗ. Чӗрӗ шыв ӑсса килем-ха текелесе тем мӑкӑртаткаласа пычӗ вӑл. Ун хӑйӗн шухӑшӗ пур вӗт-ха! Ҫав сӑра-эрех вырӑнне халӑх тӗпсӗр ҫӑл куҫ шывне ӗҫме тытӑнсан тем пекехчӗ. Чӗрӗ шыв темрен те хӑватлӑрах пек. Вӑй кӑна мар кӗртет, чуна та темле вылянтарса ярать. Куҫпуҫӗ вара эрех ӗҫнӗ чухнехи пек пӗрре те анрамасть. Хальхи ҫамрӑк ачасем, аттун, шутлать ват ҫын, шыв вырӑнне урнӑ ӗне сӗтне ӗҫме пуҫларӗҫ вӗт. Аллинче ун пӗр пушӑ витре чӑнкӑртаткаласа пырать. Чӑнкӑр-чӑнкӑр! илтӗнет шӑпланнӑ тавралӑхра. Тем ун пек пулакан марччӗ-ҫке ирпе, шутлать мучи, ҫанталӑк улшӑнать-и, тем. Ҫав вӑхӑтра тӑри хорӗ юрласа яни ӑна шарт! сиктерчӗ. Ҫӳлте-ҫӳлте, куҫ курман ҫӗрте тӑрисем теме пӗлсе каҫса кайса юрлаҫҫӗ. Михха мучине ку питӗ килӗшет. Апла, йӗркеллех пулать тет.

Йӗркеллех те мар ҫав. Ҫӑл хӗрринче ахлатса выртакан ачана курсан вӑл хыпӑнса ӳкет. Ку шурлӑхлӑ ҫӗре ҫапла тем пысӑкӑш чул ӑҫтан килсе выртнинчен тӗлӗнет. Халь тин Ванюк каласа ӑнлантарса пани те ҫырлахтармасть старостана. Витрине ҫӑл кутне

пӑрахса хӑварсах ял еннелле чупать. Хӑвӑртрах васкавлӑ пулӑшу чӗнсе илес те чула ҫӑл хӗрринчен тата аяккарах шутарса хурас тет. Вӑхӑт нумай та иртмест, яла васкавлӑ пулӑшу машини персе ҫитет, врачсем пулӑшнипе Ванюка пульницӑна леҫеҫҫӗ. Ванюкӑн кӑвапи талнӑ.

Усал хыпар утпа ҫӳрет теҫҫӗ. Нумай та вӑхӑт иртмест ял халӑхӗ тӗпсӗр кӳлӗ патне пухӑнать. Вӑй питти арҫынсем чула самантрах ҫавӑрса хураҫҫӗ те тата аяккарах шутарса хураҫҫӗ. Ҫук, таҫта илсе каймаҫҫӗ. Ҫакӑнтах пултӑр, теҫҫӗ. Халь тин ҫӑл кутне пыма ҫӑмӑлрах пулӗ, ҫӑрӑлмӗ. Чула кам илсе килсе хуни пирки те калаҫкалаҫҫӗ. Анчах алӑран ярса тытман та кама пит пӳрнепе тӗллесе кӑтартӑн. Шавлакаласа тӑнӑ хыҫҫӑн халӑх саланать. Кашнин килте хӑйӗн ӗҫӗ пур, кунта пуҫ ватса тӑнипе вӑл малалла каяс ҫук. Ҫӑл куҫӗ те, чулӗ те мӗнле пулнӑ ҫаплипех выртса юлаҫҫӗ. Саланнӑ ҫынсенчен пӗри те чул ҫине темле саспаллисем ҫырса хунине асӑрхамасть.

Учитель тавра пуҫтарӑннӑ шкул ачисем вара Ванюк патне пульницӑна кайма шут тытаҫҫӗ. Пуричен ытла Антон пӑшӑрханать. Пульница, калас пулать, икӗ ҫырма пусӗнчен чылай аякра, район центрӗнче ялтан пӗр вунӑ ҫухрӑмра вырнаҫнӑ. Ҫавӑнпа та ачасем ҫула ҫурранах тухаҫҫӗ. Автобус мӗн кӗтсе вӑхӑт ытларах та иртет терӗҫ пулӗ ҫав. Акӑ пӗр ушкӑн ача тем калаҫса ҫул тӑрӑх тусан кӑларса таплаттарса пырать.

– Мӗн тума ярса тытнӑ-ши вӑл ҫав чула? – пӑшӑрханать Нинук. – Кайран та, ҫын пухӑнсан та илсе пӑрахма пулнӑ вӗт-ха ӑна.

– Паттăра тухасшăн пулнă пулĕ, - ним пулман пек каласа хурать Çтаппан. Утнă чухне хăй пĕрмаях хĕр çумнерех пыма тăрăшать. Ун çине куç хӳрипе те пулин пăха-пăха илет. Çакна Нинук та сисмест мар.

– Тăхтаса тăма та май килмен пуль, – хӳтĕлет тусне Антон. – Мĕншĕн тесен çĕр çилленсе кайма пултарнă. Вара каллех ял çине тăвăл килсе çапатчĕ. Ванюк çавна пĕле тăркача васканă та, тăхтаса тăма юраман.

– Кам килсе хунă-ши чулне? Ăна пĕччен çын йăтаяс çук, – тĕшмĕртет Нинук.

– Кирек кам пулсан та вăл питĕ хура чунлă çын. Тепĕр тесен чулĕ вăл çăлтан аякрах та мар икĕ çырма пуçĕ тĕлĕнче выртатчĕ мар-и-ха? Ĕлĕк унта киремет йывăççи пулнă тет. Авалхи чăвашсен çăви те çавăнтах пулнă тет, – тем те пĕлет Антон. Аслашшĕ каласа панă пулинех!

– Тетĕн хӳри кĕске, тет. Ăçтан пĕлетĕн вара эсĕ ку япаласене? Эсĕ ял ачи те мар вĕт-ха, – утнă çĕртех ура хурам пекки тăвать Çтаппан.

– Асатте каласа парать мана. Вăл тем те пĕлет. Чăваш халăхĕ çав киремет йывăççине касса янăшăн пĕтет, тет. Çав йывăç питĕ хитре пулнă, тет. Кăвак юман майлă пулнă, тет.

– Ха-ха-ха! – кулса ярать Çтаппан. Урипе тапа-тапа тусана Антон çинелле ярать. Тем çиллентерет ăна. Мĕн çиллентернине хăй те пĕлмест. – Кăвак юман мĕнне кам пĕлет, кам курнă?

– Çав, эпир курнă пурнăç йывăççиех пулман-ши вăл? – тĕшмĕртет Нинук. – Вăл та питĕ хитреччĕ. Асамат кĕперĕ пек ялтăрса

тăратчĕ. Çухалчĕ. Касса ярасран хăрарĕ пулинех. Тулай Иванĕ те ун тавра явăнса çӳретчĕ мар-и-ха, – тахçан хурăн катине сыхланине аса илет хĕрача. – Унран тем те кĕтме пулать. Эсĕ те ун таврах явкаланса çӳреттĕн. Улмине те эсĕ татрăн.

– Эпĕ мĕн, ман сире пулăшас килчĕ. Улми вара мана тивĕçмерĕ те, – кӳренем пекки тăвать Çтаппан.

– Сан валли те пулман вăл, апла. Ан пăшăрхан.

Ачасем пĕр кана пĕр чĕнмесĕр утаççĕ. Час вĕсем шкултан вĕренсе тухĕç те пурнăç çулĕпе малалла утса кайĕç. Мĕнле пулĕ ĕнтĕ вăл. Кашнин хăйĕн шухăшĕ. Антон шутлав машини çинчен шутлать. Нинук Ванюка хĕрхенет. Çтаппан вара хĕр çине пăхса пырать. Темле вăрттăн шухăш тĕвĕленет ун пуçĕнче. Вăл шкул пĕтерсенех хулана вĕренме кайма шутлать. Эх, тет вăл ăшĕнче, Нинук та пĕрле пулсанччĕ... Кашнин хăйĕн шухăшĕ...

– Итле-ха, – тет Çтаппан Нинука хăй патне туртса илсе. – кăшт юлса утар-ха. Ман санпа калаçмалли пур.

– Мĕн тата! Васкамалла пирĕн.

– Халь тин сан васкамалли çук. Вăл чирлĕ. Тек акă ура çине те тăраймĕ. Грыжа ун. Сиплесе ярсан та, хăвах пĕлетĕн, каллех çав тĕлтех тепре пулать. Йывăр япала тек çĕклеме юрамасть. Ялта та вăл тек пурăнаймĕ. Ялта йывăр ĕçлемелле.

– Мĕнле хăятăн эсĕ çапла калаçма! – хăмсарать аллипе хĕр. – Эпир ялтах çăтмах тăватпăр тенĕ.

– Ха! – кулам пекки тăвать каччă. – Ялта никам та ку таранччен çăтмах мар, ырă пурнăç та тăвайман. Ял вăл тамăк. Кунта эсĕ резина атăпа фуфайкăсăр пуçне урăх ним те кураймăн. Ха!

– Ялта укçаллă пулма çук-им вара?

– Çук! Мĕншĕн тесен ял хула аллинче. Унăн хулари çынсене тăрантса пурăнмалла. Хуларисем вара ĕçлемесĕрех çиеççĕ. Тутлă çиеççĕ тата!

– Ан тыттар. Ĕçлемесĕр мĕнле çиĕн?

– Мĕнле-мĕнле? Пасарта сутă туса, акă мĕнле.

Хĕрача чĕнмест. Кун пек каланисене вăл хăй те пĕрре кăна мар илтнĕ-ха. Амăшĕ те ăна килте ан юл тет. Ман пек пылчăк çăрса ан пурăн тет. Кашнин амăшĕ хăй ачине ырă сунать, лайăххрах пултăр тет. Ку, паллă.

– Атя, пĕрле кайăпăр хулана. Мĕн тăван халь çав чăлах Ванюкпа? Эпир хулара çăтмах туса хурăпăр. Кайсан эпĕ сана качча илĕп. Тух мана качча!

– Кĕтсех тăр! – мăнаçланать хĕр. Анчах ун чĕринче темле çĕлен явăнать тейĕн. Темле ĕмĕт. Хула. Ялтăртатать кăна. Ун хăйĕн хваттерĕ, машинĕ, тăхăнмаллисем... Ялти амăшĕн пĕр пĕчĕк пӳрт мар ĕнтĕ, чăн та. Çапла мĕскĕн пек пурăнса ирттерме çуралман ĕнтĕ вăл, чăн та. Ванюк та... Ванюк çине тек шанма юрамасть. Усси пулас çук.

– Ну, мĕнле, – хистет каччă.

Хĕр чĕнмест. Вăл иккĕленет. Кун пек юратăва сутнă пек пулать вĕт-ха. Тепĕр тесен... Юрату вăл лайăх, анчах кашни кун çиес килет. Çитет серте яшки çисе пурăнса. Ялта ытлăн-

çитлĕн аш-пăш та лекмест. Амăшĕн пенсипе нумай малалла кайăн-и?

– Юрать, – тет хĕр шăл витĕр. – Анчах качча илес пирки ан та ĕмĕтлен. Малтан пирĕн вĕренсе тухмалла-ха.

Маларах утса кайнă Антон вĕсем мĕн калаçнине тăнламарĕ. Ун хăвăртрах тусĕ патне çитсе ÿкес килчĕ. Тем пулнă ĕнтĕ унпа, тем пулнă. Михха пичче кăвапи талнă терĕ. Мĕн япала вăл? Антон пуçне çĕклесе пăхрĕ. Çÿлте тăрисем тĕрĕлтеттереççĕ. Тăрисем ачасен пуçĕсем çинчен каймаççĕ. Ялта та çапла каçса кайса тĕрĕлтеттеретчĕç, халĕ те çаплах. Вĕсен юррипе пырса кĕчĕç те вĕсем хула майлăрах йĕркеленĕ район центрне. Пырса кĕчĕç те тăри юрри те вĕçленчĕ.

Пульницăра выртакан Ванюк та канăçне çухатнă. Операци тумалла теççĕ. Грыжа. Йывăр çĕклеме юраман çав. Халь тин ĕнтĕ ним те тăваймăн. Хăрамаллиех ним те çук тесе лăплантараççĕ тухтăрсем. Анчах ача чĕри вырăнта мар. Вăл тĕпсĕр çăл куçпа çыхăннă ял шăпи пирки шутлать. Пурнăç йывăççи те куç умĕнчех. Çут çанталăкпа пĕр чĕлхе тупма вĕренсе çитсен кăна телейлĕ пулма пултарассăн туйăнать. Çавăнта кăна çăлăнăç. Акă пĕр пĕчĕк япала кăна тейĕпĕр, çĕр çине ан сур, тейĕпĕр. Çакна тытса пырсанах çын лайăх енне йăлт улшăнса каяссăн туйăнать. Чăн та, хăвна кун кăтартнă Çĕр-Аннемĕр çине мĕнле çапла сурса хума вăй çитет-ха çынсен. Ку, паллă, ăна пăхăнтарас тесе тунă япала. Çынна та вĕт, пăхăнтарас тăвас тесен, мĕнле те пулин майпа япăхлатса кăтартма тытăнаççĕ. Айван та вăл, ухмах та, мĕскĕн те... Вара çав çынпа тем те

тума юрать пек килсе тухать. Ара, эсӗ унран аслӑрах та, ӑслӑрах та. Апла, ӑна пӗтерме сан право та пур. Тӑн кӗртме ӗнтӗ...

Кун пек шухӑшсем ача пуҫне нихҫан та кӗрсе курман та Ванюк хӑйӗнчен хӑй тӗлӗнсе выртать. Пурнӑҫ йывӑҫҫин ҫимӗҫне ҫини пулӑшать тем! Тем те пӗлет вӑл халь. Енчен те ялта тӗп-тӗрӗс ака ҫаврӑнӑшне йӗркелесе ярсанах ҫӗр лайӑхланма пултарасса та пӗлет. Мӗн хыҫҫӑн мӗн акмаллине те чухлать ҫак пӗчӗк агроном. Ӳсен-тӑрансен пурнӑҫне те, вӗсене мӗнле тӑрантмаллине те чухлать пек. Ҫӗре ҫулран ҫула лайӑхлатса пырсан кӑна тырпул тухӑҫӗ ӳсет. Ун пек пултӑр тесен выльӑх нумай тытмалла, уя тислӗк кӑлармалла. Выльӑхӗ пултӑр тесен курӑк акмалла. Пулчӗ те. Ҫӗр ҫаврӑнӑшӗ хӑй тӗллӗнех ҫаврӑнса йӗркеленсе каять. Ҫавӑнпа та хальхи хуҫалӑх ертӳҫине Ванюк ӑнланмасть. Мӗншӗн вӑл ӗне фермине пӗтерчӗ-ха? Тем, ахальтен мар ку!

Ҫавӑн пек шухӑшсемпе аташса выртакан пульница пӳлӗмне пӗр ушкӑн ача йӑтӑнса кӗни Ванюка савӑнтарсах ячӗ. Халь тин вӑл пӗччен мар. Нинук та кунтах! Юлташӗсем тем те пӗр ыйтса пӗлеҫҫӗ, каласа та параҫҫӗ. Операцирен хӑрамалла мар теҫҫӗ. Ванюк халь хӑй те хӑрамасть. Вӑл халь нимрен те хӑрамасть. Час акӑ ял лайӑхланса ҫӗнелсе кайӗ те...

– Акӑ мӗн! Эпӗ кунта пульницӑра чылай шутласа выртрӑм та, чӑн малтан, пӗтнӗ ӗне фермине тепӗр хут хута ямалла терӗм. Выльӑх-чӗрлӗхсӗр май килмест.

– Фу! – терӗ пӗр кӗтмен ҫӗртен Нинук, – вара пирӗн фермӑра ӗҫлемелле пулать-и? Таса

мар, пархатарсăр ĕç. Эпĕ вара хулана вĕренме каятăп. Топ-модель пулатăп.

– Манăн та ёне хӳрине пăрса çӳрес килмест. Тулай Иванĕ пур вĕт, çитет. Çитмесен эс пулăшатăн, – лĕхĕлтетсе кулса ярать Çтаппан. Эпир Нинукпа хулана каятпăр.

– Апла иккен. Эпĕ вара хуларан яла килетĕп. Ялта кунта ĕç май таран. Пуринчен ытла çĕрпе, ӳсен-тăрансемпе пĕр чĕлхе тупма вĕренмелле. Вара, вĕсене ăнланса илсен кăна пурнăç малалла кайĕ тетĕп. Эсир çак ырлăхран тарса каясшăн-и-ха вара?

– Мĕн ырлăхĕ вара кунта. Кунта укçа тума май çук. Укçасăр вара халь мĕн пурнăç? Хĕрсен те кунта мĕн туса пурăнмалла тет. Ĕлĕкхи пек çĕтĕк фуфайка тăхăнса çӳремелле тетĕр-и?

Хулара та ĕçе уяв тумĕпе çӳремеççĕ, – хуравлать Антон. – Хулара мĕн çу сĕрсе хунă тетĕр-им? Телей тение ăçта çуралса ӳснĕ, çавăнтах тупмалла!

– Çук вара! Кирек мĕн калăр та, эпĕ фуфайка тăхăнса çӳрес çук. Хула хĕрĕсенчен мĕнрен япăх вара эпир. Вĕсен асфальт тăрăх чаплă туфлисемпе шаклаттарса çӳремелле тет, пирĕн вара пылчăк çăрмалла...

– Ун пек каламастăнччĕ вĕт-ха эсĕ ĕлĕк, мĕнле шăна çыртса илнĕ сана? Эсĕ мар-и-ха вара вăл ялта та çăтмах туса хуратпăр текенни, – аптрасах каять Ванюк.

– Мĕн çăтмахĕ! Акă мĕн курса выртан ху та. Эсĕ вĕт тек ху та ялта ĕçлеймĕн. Кăвапи талнă çын тек вăй хурса ĕçлеймест ĕнтĕ вăл. Санран мĕн усси тет халь.

– Ă-ă! Акă мĕнле иккен кунта лару-тăрусем, – сасартăках ăнланса илет Ванюк. – Апла, эсĕ тек ялта пурăнас тесе те шутламастăн...

– Çук. Çын асапланса мар, ырлăх курса пурăнма çуралнă. Хĕрарăм валли вара ялта нимле хăтлăх та çук. Анне те ялта ан юл тет. Ман пек кунта пылчăк çăрса ан пурăн тет.

– Мĕнех, – сасартăк кичемленсе каять ача. Ыттисем чĕнмеççĕ. Çтаппан кăна тутине сарса пăрахнă. Кун пек килсе тухасса вăл хăй те тĕлленмен курăнать. Хĕр тени хăех ун аллине кĕрсе ӳкет вĕт!

– Тĕрĕс калан, Нинук! Эпир, эсир кунта кирек мĕнле çăтмах туса хурас тесе тăрăшсан та, ялта юлмастпăр. Çăтмах тенине ăна хулара тахçанах туса хунă. Ялта кунта ухмахсем кăна пурăнаççĕ, – хăпартланать Çтаппан.

– Эсир вара мĕн, çăкрсăр-тăварсăр тăрса юласран та хăрамастăр-и? – ыйтать вĕсенчен Антон. – Çăкăр тени асфальт çинче ӳсмест вĕт-ха вăл.

– Укçа пулсан таçта та ӳсет, – пур кăмăлтан ăхăлтатать Çтаппан. Нинук та, пĕрре пăхсах паллă, ку шухăшпа килĕшет.

Кун пек калаçнисем Ванюк кăмăлне хуçсах пăрахаççĕ. Аманни çитмест. Инкек çине синкек тенĕ пек кун пек калаçнисем тата хытăрах амантаççĕ мар-и? Хальхинче кăвапинчен те хытăрах. Хальхинче чĕреренех пырса çапаççĕ. Кам тетĕр тата? Ун юратнă хĕрĕ, савнă Нинук. Ах, çав хĕрарăм тени! Епле чее вăл. Кăшт кăна юрăхсăра тухрĕ, çавăнтах пăрахма хатĕр. Ача куç умне сасартăк чеен кăна пăхса тăракан Нинук сиксе тухать. Аллинче хăйĕн панулми,

акă вăл ăна татах çыртса илчĕ е вă-шт! ывăтса ячĕ. Акă мĕн, тĕшмĕртет каччă. Нинук хĕр пулса çитнĕ те хăй шăпи пирки шутлать. Ялта пурăнсан ăна пĕтессĕн туйăнать. Хулара вара вăй илсе тата хитреленсе каяссăн пек... Тĕрĕсех те пуль ку. Кăна Ванюк та ăнланать. Вăл та çав пĕлӳ йывăççин çимĕçне çисе курнă, вăл та мĕн тумаллине пĕлет. Анчах унăн ялтах юлмалла, ялтах çăтмах туса хумалла. Çавă пурнăç йывăççине тепĕр хут ӳсерсе çитĕнтерсен те аванччĕ те... Çук пулĕ çав. Çĕтрĕ пулĕ вăл...

– Мĕнех, – ассăн сывласа илет Ванюк. – Çулу такăр пултăр. Яла килес тăвас пулсан вара кĕрсе тухма манса ан кай. Хулара ху патша майри пек мĕнле пурăннине хăть мухтанса каласа парăн.

– Апла пулсан, чипер юл, – терĕ те хĕр вăрт çаврăнса тухса кайрĕ. Ун хыççăн Çтаппан тапса сикрĕ. Пĕр сăмах та каламарĕ. Пӳлĕмре пĕр кана шăплăх хуçаланчĕ.

– Ан кулян, тусăм, – хускатрĕ çав шăплăха Антон. – Эпир санпа акă тем те пĕр шутласа кăларăпăр. Хĕр тени шанчăксăр çав вăл. Хĕр чухне хĕрĕх теççĕ-и-ха? Туслăх вара ĕмĕрлĕхе.

Çав сăмахсемпе Антон Ванюка пырса ыталарĕ. Икĕ тус тем шутласа тем чухлех ларчĕç. Врачсем пырса операцие хатĕрленмелле темен пулсан, тен, татах та ларатчĕç пулĕ, çавă татрĕ вĕсен тĕл пулăвне. Антон Ванюка ырлăх-сывлăх сунса, тепĕр кунне килме шантарса пульницăран тухса кайрĕ.

## Юрату асапĕ

«Инкек çине синкек», тесе ахальтен каламаççĕ мĕн. Ванюк пусĕ çине умлăн-хыçлăн йăтăнса аннă пăтăрмахсем ачана анратсах пăрахрĕç. Унăн чи таса юратăвĕ, пурнăç хыттăнрах килсе çапсанах, ăна пăрахса хулана тухса каясшăн. Вĕренмелле-ха, ку та тĕрĕс. Вĕренмесĕр те май килмест. Анчах мĕншĕн çав вĕренес тени хулапа кăна çыхăннă вара?

Асапланса çитнĕ каччă куçĕ умне савнă хĕрĕпе пĕрле çӳренĕ самантсем сиксе тухаççĕ. Мĕнле хаклă вĕсем халь тин! Акă Ванюкпа Нинук каçхи çутăра çăтмах евĕр курăнакан Сăхăт çырми тăрăх уçăлса çӳреççĕ пек. Хăçан пулса иртнĕ ку самант? Нумай та вăхăт иртменччĕ вĕт-ха! Халĕ вара тахçан-тахçан пулса иртнĕ пекех туйăнать. Ун чухне вĕсем çиччĕмĕш класра вĕренетчĕç пулас. Пĕчĕк ача пекех пулнă çав, вăтаннă. Пĕр-пĕрне ыталас вырăнне çырмари хурăнсене ыталаса çӳретчĕç. Йывăç урлă çапла пĕр-пĕрне юратни халь тин кулăшларах та курăнать. Каччă кулса илет. Çав вăхăтрах кунта калама çук пысăк тасалăх, пĕтĕм тĕнчене юратмалăх туйăм палăрса тăрать. Çав ыталаса ӳстернĕ хурăнсем халь тин тек каччăпа хĕре кĕтсе илеймĕç ĕнтĕ. Ванюк чĕри ыратса-ыратса каять. Ача хăй чĕринчен хăй тĕлĕнсе выртать. Макăрать те мар-и-ха вăл. Вĕри куççулĕ, пĕрремĕш юрату куççулĕ, пит çăмартийĕ тăрăх юхса анать. Ăна та асăрхамасть каччă. Мĕншĕн тесен унăн халĕ кăвапи кăна мар, чĕри те ыратать. Ун чухне, хальхи пек ас тăвать, çав çуллахи тĕттĕм каç çап-çутăччĕ. Тулли уйăх

çути айĕнче пĕтĕм тĕнче кĕмĕл тĕслĕн ялтăрса выртатчĕ. Нинук пичĕ çав сĕтлĕ çутă айĕнче шап-шуррăн курăнатчĕ. Каччă ун çине ытарайми пăхатчĕ. Вăтаннипе пуль хĕр хурăн айнерех кĕрсе тăма тăрăшатчĕ. Унта вара хуп-хураччĕ. Хурăн туни кăна шурă çурта пек çунса çутатса тăратчĕ. Пĕр хурăнне çапла икĕ енчен ыталаса тăнă чухне мар-и-ха вĕсем ялтах пурăнас, ял вырăнĕнче çăтмах туса хурас тесе калаçрĕç. Ун чухне Ванюк пуçĕнче Нинукпа пĕрле пурăнмалли çурт проекчĕ те çуралнăччĕ.

Тĕлĕнмелле проект. Çурт тени вăл çут çанталăкран уйăрălса тăмалла мар. Вăл йывăç пек ӳсмелле. Çав йывăç айĕнче Адампа Ева евĕр пурăнма шутланă та Мижер ачисем. Йывăçпа пĕрлех ӳссе ватăлма шут тытнă. Ачисем валли те, çуралнă-çуралманах пурăнмалăх йывăç лартма шухăшланă. Пӳрт стенисене те çӳлех мар ӳсекен йывăçсенченех тума май пур вĕт-ха. Калăпăр, пĕр ват юман айĕнче шĕшкĕпе çăка пит лайăх пĕр-пĕринпе килĕштерсе пурăнаççĕ. Ку прокта Ванюк шӳтлесе кăна шутласа кăларнăччĕ. Ара, ун чухне «Тарзан» ятлă кино курнăччĕ мар-и çак. Акă ăçтан шăтса тухнă ку идея! Вăл çеç те мар. Халь тин ăнланать ача, çут çанталăкра пĕр япалана та тивме юрамасть. Йывăç касни вара чи пысăк çылăх шутланать. Йывăç та чĕрĕ чунах вĕт-ха вăл! Пурнăç йывăççи! Мĕнле чунпа ăна касса вута ярăн? Апла, чи кирли, чăн малтан тумалли ĕç вăл – çут çанталăка сиен кӳресрен сыхланасси! Çакă ансат шухăш Ванюка хавхалантарса ячĕ. Ыратнисем те манăçа тухрĕç. Пĕр самант. Хурлăхпала савăнăç хушшинче пурăнни пулчĕ ку. Пĕр самант çеç çав. Савăнăç

тени самантлăха кăна килет. Хурлăхĕ халĕ, акă, ĕмĕрлĕхе пулĕ...

Çапла пĕр вĕриленсе те пĕр сивĕнсе выртакан чирлĕ çын пӳлĕмне çав вăхăтра хирургпа пĕрле медсестрасем пырса кĕчĕç, ачана, малтанрах каласа хунă пекех, операци тума илсе кайрĕç. Операци мĕнле иртнине Ванюк ас тумарĕ, çывăрттарса янă хыççăн вăл темшĕн, тĕлĕкре ĕнтĕ, аманнăскер, тĕпсĕр çăл куç кутне çитсе ӳкрĕ. Ача Михха мучи пек çăлран пулăшу ыйтрĕ кăна, шыв питĕ вăйлă тапса тухрĕ те Ванюка йăлтах хупласа хучĕ. Икĕ çырма пуçĕнче тем пысăкăш кӳлĕ. Çав кӳлĕре çарапакка ача çăмăллăн кăна ишсе çӳрет пек. Пулă тейĕн. Хаваслă хăй. Ишрĕ-ишрĕ те чăтаймасăр кăшкăрса ячĕ. Çав саспа вăранса кайрĕ... Вăл операци сĕтелĕ çинче выртать мĕн. Сасси те... Ыратнипе кăшкăрса янă пулас. Кăвапа тĕлĕнче халĕ те ыратать.

«Ан хăра, – тет хирург тăна кĕнĕ ачана, – ыратни иртсе каять вăл. Паллах, малашне йывăр çĕклеме юрамасть».

Йывăр çĕклеме юрамасть пулсан ялта мĕнле пурăнмалла тет-ха, чăн та, аса килет Нинук калани. Çĕр ĕçĕ йывăр, вăл – паттăрлăх. Кам çĕр ĕçĕпе пурăнать, çавă чăн паттăр та чи таса çын. «Таса çын!». «Таса çын»!». «Таса çĕр!». Явăнаççĕ чирлĕ ача пуçĕнче тем тĕрлĕ шухăшсем. Енчен те, чăн та, çĕр çине темле ăпăр-тапăрсем пăрахмасан, сурмасан... Ăна ача пек таса курса тăрсан, çын хăй те чунпа тасалса, вăйланса каяссăн туйăнать. Мĕн çитмест, мĕн çитмест çынна? Чăн малтан тасалăх çитмест. Унтан вара хитрелĕх, чăнлăх, ырăлăх... Тем те çитмест халь ача чĕрине.

Анчах пĕрремĕшĕ вăл, паллă, тасалăх. Çав тасалăха çухатма пуçланă вĕт вăл хăй те! Акă Нинука та кĕвĕçет, ялтан каяс тенĕшĕн питлет. Хĕрачана хăй ирĕкĕпе хăйне мĕн кирлине суйласа илме памасть. Юрататăн пулсан савнă çын валли тем те туса пама хатĕр тăмалла вĕт-ха ăна! Тĕнче аслă. Ял кăна мар илĕртет Ванюка, хăйне те. Вăл та, тен, космонавт пулса çăлтăрсем патне вĕçсе кайĕччĕ. Юрамасть. Çут çанталăк ăна, тен, хăй суйласа илнĕ. Ун аллипе хăйне ыра тăвасшăн. Хăйне кăна мар, пĕтĕм ял халăхне, пĕтĕм тĕнчене çăласшăн. Çакăн пек шухăшсем ăçтан тата мĕн тума пырса кĕнине те ăнланамасть ача. Ача кăна вĕт-ха вăл! Вун çиччĕре кăна! Çапла çамрăк пуçпах тĕнче шăпине хăй çине илет. Халь тин вăл пуриншĕн те яваплă пек туять. Нинукшăн та! Кайтăрах! Пурнăç акă ăна хăех каяллах тăван ялах çавăрса илсе килет. Пурнăç çаври çапла вăл. Эсĕ ăçта кирлĕрех, çав тĕлех çавăрса илсе çитерет.

Çак шухăшсемпе лăпланса Ванюк каллех çывăрса каять. Хальхинче ку сиплĕ ыйхă. Тĕлĕкне вара каллех, çавнах курать. Вăл тĕпсĕр кӳлĕре шыва кĕрет пек. Шывĕ тăрна куçĕ пек таса, хумĕсем кĕмĕл тĕслĕ. Пулă пек ярăнса ишсе пырать вăл. Тутлă ăна, кăмăллă, сиплĕ... Сасартăк темле сасăсем илтĕнсе каяççĕ. Таçта çапăçу пырать пек. Ванюк шывра та мар иккен. Вăл тимĕр хĕç йăтнă, вăл пĕчченех, Тишле юлташĕпе кăна тăрса юлнă... Ыттисем, пĕрле çапăçнисем, тахçанах çĕре кĕнĕ. Акă халĕ вĕсене те тăшмансем хупăрласа илнĕ. Икĕ çырма пуçĕнчех пек ку. Анчах аялта тем пысăкăш шыв. Тинĕс те, тен. Çавăнпа та вĕсем

халь тин тек ниçта та кайса кĕреймĕç, çакăнтах çапăçса вилмелле пулать. Ванюк та мар вăл халь. Ячĕ те ун, тĕлĕнмелле те, Самать. Çапла, çапла! Çакă икĕ çырма пуçне мижерсем халĕ те Самать теççĕ. Упраса хăварнă пулать пархатарлă ял халăхĕ çак хаяр çапăçура пуçне хунă çын ятне. Халăхшăн пуçне хунă çынна, никам та, чăн та, манас çук. Чанк-чанк! хĕм кăларса янăратаççĕ пăлат хĕçсем. Самать ăста вăйпут. Çĕршер çапăçура туптанă хăйĕн ăсталăхне. Халĕ те, кăна питĕ шанать вăл, ăна никам та çĕнтереймĕ. Самате тăван çĕр хăй пулăшса тăрать. Самать вăйлă, Самать хăватлă! Анчах çав вăхăтра ăна хыçалтан такам пырса çапать. Çаврăнса пăхать те вăйпут хыçалта хăйĕн юлташĕ Тишле тăнине курах каять. Вăл çĕкленĕ пулать ун çине хĕç, ун çилли касрĕ пулать-и-ха чĕрине? Тишле тăшмана парăнса хăй пурнăçне çăлас тенĕ. Вăл улшăннă. Çав вăхăтрах, вилес патне çитнĕ Самать хăй те пачах урăх çын пулнине ăнланса илет. Вăл Ванюк! Ăна касаканĕ – Çтаппан!

Темле питĕ хăраса вăранса каять Ванюк ку ыйхăран. Вăл пульницăрах выртать пек. Хырăмĕ те паçăрхи пекех ыратать. Тен, паçăрхинчен те хытăрах. Чăнах та такам хĕçпе чикнĕ пекех ыратать ун кăвапа тĕлĕнче. Анчах ача шăп выртать. Тĕлĕкрен тĕлĕнет. Ăнланать те. Çăл куçа чул пăрахса пусарса хураканĕ никам та мар – Çтаппан. Пулăшакнĕ те пулнă – вăл та хамăр ял çынниех. Тулай Иванĕ. Çавсем кустарса антарнă та икĕ çырма пуçĕнчи тем пысăкăш чула çăл çине. Çавсем кăна курăнмарĕç Самать уйне пылчăк кăларнă чухне. Çтаппан Нинука илĕртсе хулана илсе каяс тени

те ахаль мар. Куç умĕнчех – çĕлен пек авкаланса пурнăç йывăççи çине хăпарса кайни те. Ун чухне те вăл Ванюкпа Нинука сыхласа çӳренĕ. Намăссăр, кĕççе пит! Çĕлен!

Шак-шак-шак! илтĕнет çав вăхăтра алăкран шаккани. Кĕме ирĕк панине кĕтмесĕрех алăк уçăлса каfive те пӳлĕме канистра шыв йăтнă Михха мучи кĕрсе тăрать.

– Эпĕ сан валли сиплĕ шыв илсе килтĕм, – тет вăл. – Акă тĕпсĕр çăл куç шывне ĕçсе пăх-ха. Час чĕрĕлетĕн. Эпĕ ĕçкелерĕм те çак кунсенче, халĕ хама питĕ вăй-халлă туятăп.

Мучи, пĕрре пăхсах паллă, чăн та, темле çамрăкланнă пек курăнать. Сухалĕ те ытла кăвак мар. Куçĕ те çамрăкăнни пек чалтăртаттарса пăхать. Ача килĕшессине кĕтсе тăмасть мучи. Тумбочка çинчи пĕр стакана шыв тултарса ĕçтерет. Лăш! пулса каять чирлĕ çын ăш-чикки.

– Акă, операци тунă вырăна та сĕрер-ха. Эпĕ пĕр ывăç пылчăк илсе килтĕм çав çăлран. Вăл та сиплĕ пек туйăнчĕ. – Ырă çын алли çыпăçуллă. Вăр-вар сĕрсе ячĕ кăвапа тĕлне вăл çав Самать уйне кăларнă сарă пылчăка. – Врачсене ан кала. Хирĕç тăма пултараççĕ. Ан шиклен. Пулăшать.

– Тав, – теме çеç хал çитерет ача. Шывпа пылчăк сиплĕ пулнине вăл хăй те ĕненет. Пĕрре кăна мар ӳпне выртса ĕçнĕ вăл тĕпсĕр çăл куç шывне. Тӳрех вăй илнĕ пек пулнă. Кăшт ларса каннă та ним пулман пекех малалла талпăннă. Икĕ çырма пуçĕнчен, йывăççем лартса тултарнăччĕ те ун чухне, выльăхсене кĕртмен. Çавăн чухнех Ванюк хăйсен ĕни валли вăрман сыхлама тухсан, пĕр мих

курăк татса кĕретчĕ. Вăрман курăкĕ сиплĕ тетчĕç. Ĕнине те вăл хăех сăватчĕ. Пĕчченех пурăнать халь Ванюк. Ун чухне те пĕччченех пек. Амăшĕ чирлĕччĕ. Ашшĕ ун яла килсе те курăнмастчĕ. Халĕ акă амăшĕ те çуккă. Вăл вилнĕренпе ĕнтĕ чылай вăхăт иртрĕ. Çавăнпа та Ванюк хăйне питĕ тăлăххăн туять тепĕр чух. Ялтан унăн та тепĕр чух таçта çити тухса каяс килет. Анчах амăшĕ тăван киле ан пăрах тени тытса тăрать. Çав сăмаха халь тин каланă пек аса илет те, каллех вăй кĕрет. Ара, амăшĕ чĕртнĕ вучаха епле сӳнтерĕн-ха!?

Çав курăк миххине йăтни аса килчĕ Ванюка. Халь тин ун пек мар ĕнтĕ. Халĕ ялта пурте люцерна акса илеççĕ те хĕл каçмалăх курăм çителĕклех хатĕрлеççĕ. Шыв ĕçнĕ хыççăн вĕлт! кăна çĕклесе илетчĕ çав миххе Ванюк... Вĕлт! çĕкленсе ларчĕ вырăнпа выртакан ача. Хăйне темле вăйлă пек туйрĕ. Кăвапа тĕлне кĕпе аркине çĕклесе пăхрĕ те унта нимле çĕвĕ те курмарĕ. Операци тунă хыççăн темле çĕвĕ пекки те пулин пулмаллах вĕт-ха вăл! Мучи те тĕлĕнет. Хыпашласах пăхрĕç. «Ара, чĕрĕ шыв ĕçĕ вĕт ку»! – теççĕ. Мучи Ванюка тепĕр стакан шыв тултарса парать. Чирлĕ çын, чирлех те мар пуль халь, ĕçет. Юмахри пек туять хăйне. Вырăн çинчен тăрса ларать. Иккĕшĕ те ку япалана курсан савăннипе ахăлтатса кулса яраççĕ.

Çав вăхăтра палатăна хирург пырса кĕрет. Хăраса ӳкет. Ванюка вăйпа тенĕ пек вырăн çине вырттарать. Пăхать. Тĕлĕнет. Нимĕн те ăнланмасть. Каласан та ĕненмест. Кирек мĕнле пулсан та, операци тунин ним палли те çук пулсан та, пульницăрах юлма ыйтать. Пĕрех

сана пăхмалла тет. Заключени çырмалла. Мучипе Ванюк килĕшеççĕ.

Хирург тухса кайсан ватă çынпа çамрăк ача пĕр авăк шăп лараççĕ. Пуçра тĕрлĕ шухăш. Тĕпсĕр кӳлĕ тĕлĕнтерме пăрахмасть. Ку пĕрре. Тепри – Ванюк юратăвĕ. Сывалса çитнĕ ача пушшех те тунсăхлать. Халь тесен халь сиксе тăрса тухса тарĕччĕ ку пульницăран, çук – юрамасть. Сăмах панă. Йĕркеллĕ пултăр тенĕ. Ванюк та халĕ ĕнтĕ, операци тунă хыççăн, хăйне пысăк çын пек туять. Ун умра пысăк ĕçсем. Эх, Нинук юнашар пулнă пулсан-и?

– Акă мĕн шутласа хутăм эпĕ, – тататть шăплăха мучи. – Чăваш килĕ сиплĕ сывлăшлă, чĕрĕ шывлă, çĕр кăвапаллă пулмалла.

– Анне ăшшиллĕ, хĕрӳ вучахлă, таса çĕрлĕ, – хушса хурать ача.

– Нумай ачаллă, юратуллă, çемьеллĕ... Çавăн чухне кăна телейлĕ пулĕ чăваш ачи, – ахăртнех хулана тухса кайнă ывăлĕшĕн тунсăхласа калать Михха мучи. Вăл та пĕччен юлнă, арăмĕ вилнĕ. Юрать-ха мăнукĕ Антон килкелесе каять. Вăл пулман пулсан мĕн уссиччĕ ку пурнăçа пурăнни?

Мучипе ача, шутласа ларма вăхăт тупăннă-ха та, ял пурнăçĕ еплерех пулмалли пирки шутласа каяççĕ. Ванюк хăй шухăшĕпе çирĕпленсех çитет. Ялтах, ялтах ун пурăнмалла! Ялтах телей тупмалла! Çăтмах тăвас тени пĕрре те айван шухăш мар. Сăмахран, акă, ял урамĕ тăршшипе халиччен те чул сарман. Мĕне пĕлтерет ку? Виççĕр çул ытла пĕрле пурăнаççĕ мижерсем, виççĕр çул ытла пылчăк çăраççĕ. Кашни çул тейĕпĕр, кашни çул пĕрер утăм

сарсан та кашни урам тахҫанах чул ҫуллӑ пулмалла. Мӗн туса пурӑнать халӑх?

Ял ватӑлса кайрӗ вӗт, шутлать мучи. Ҫамрӑксем пурте ытти хуласене ҫӗклесе унта пурӑнакансене лайӑх пурнӑҫ туса парас терӗҫ пулас. Килти ашшӗ-амӑшне юрать теҫҫӗ. Вӗсем пӗрех ватӑлса вилӗҫ. Тӗнчипе ӗҫлесе парать чӑваш. Хӑйне валли кӑна ним те тумасть. Пиншер ҫулсем иртнӗ – мӗн тунӑ. Палли ҫук. Пур-ҫук ҫурчӗсем юхӑнса кайнӑ, ҫуралнӑ пӗр ачисем тарса пӗтнӗ. Юта тухнӑ. Мучи ҫакна питӗ лайӑх ӑнланать. Мӗншӗн тарнине те ӑнланать. Ялта тамӑк пуҫланнӑ. Ҫын хӑйне ҫуратнӑ ҫӗре пӑрахнӑ. Пӑрахнӑ ҫеҫ мар, халь тин вӑл, ҫӗрпе ҫапӑҫма пуҫланӑ.

Ҫапла асапланса ларансем патне Антон чупса кӗрет. Хыпӑннӑ хӑй. Ҫӳҫӗ-пуҫӗ арпашсах кайнӑ.

– Нинукпа Ҫтаппан ялтан тухса кайрӗҫ, – пӗлтерет вӑл питӗ пӑшӑрханса. Ванюка ку хыпар чӗреренех пырса ҫапать. Тӳпе йӑтӑнса анчӗ тейӗр.

– Кайччӗрех, вӗсемсӗрех тӑвӑпӑр эпир хамӑр пурнӑҫа. Кайран, акӑ, килсе курӗҫ те тӗлӗнсе кайӗҫ. Мижерте те ҫӑтмах-ҫке, тейӗҫ. Пирӗн вара, пирӗн вара чӑтас пулать, – темле тархасланӑ пек калаҫать Ванюк. Хӑй вара ҫав вӑхӑтра, хӑй те сисмест пулӗ ҫав, «Чӑт-чӑт, тӑван, чӑт, тӑван, пире чӑтма тунӑ вӗт» юрра юрласа ярать. Мучипе ун мӑнукӗ Ванюка курса тӗлӗнсе лараҫҫӗ. Вӗсен шучӗпе халь унӑн сиксе тӑмаллаччӗ те Нинук хыҫҫӑн ыткӑнмаллаччӗ. Чармаллаччӗ. Ку вара юрласа ларать.

– Такам пӑснӑ пулӗ вӗсене. Ахальтен мар ку. Чиперехчӗ вӗт-ха, – шутлать мучи.

– Пурнăç йывăççи мар пулĕ те, – тĕшмĕртет Ванюк. – Ун куçĕ умне каллех Нинук йывăç улмине икĕ хутчен çыртса илни тухса тăрать. Вăл пурнăç йывăççи кăна мар вĕт-ха, вăл ырăпа усала та вĕрентет. Ванюка вăл ырра вĕрентрĕ пулĕ, Нинука усала... Ун пек те мар пулĕ. Ăшра камăн мĕн пулнă, çавă тухнă та шалтан. Çавна палăртнă та панулми. Нивушлĕ вара Нинук малтанах пăсăк кăмăллă пулнă?

– Пăснă пулсан эпир вĕсене час тӳрлетĕпĕр. Пирĕн вĕт чĕрĕ шыв пур, – бидонĕ çине тĕллесе кăтартать мучи.

– Чăн та, – ярса илет ку шухăша Антон. – эпĕ вĕсене Шупашкарта шыраса тупăп та çак сиплĕ шыва ĕçтерĕп. Ăна ĕçсенех чун тасалса вăйланса каять. – Таçта темле вилĕ шыв ĕçнĕ пулинех вĕсем.

– Ĕçнĕ, чăнласах ĕçнĕ! – тавçăрса илет мучи. – Çтаппан ашшĕ хуларан ещĕкĕ-ещĕкĕпе кĕленчесене тултарнă темле шыв илсе килнĕ. Çавна ĕçсе пурăнаççĕ вĕсем. Акă ăçта чăн сăлтавĕ!

– Çын чунĕ вара çапла шыв ĕçнипех улшăнма пултарать-и? – тĕлĕнет Ванюк. – Шыв ĕçнипех улшăнмасть пулĕ ĕнтĕ...

– Хăвна пăхса ил! – кулать мучи. – Ху та епле аванланса кайрăн. Чĕрĕ шыв ĕçрĕн те вăй илтĕн, вилĕ шыв ĕç – эсĕ те пĕтĕн.

– Чисти юмах! – аптраса ӳкет Ванюк. – Учительсем мĕн калĕç. Иккĕ паллă лартса парĕç.

Ачасем кулса яраççĕ. Кулса ячĕç кăна Ванюк чунĕ те çăмăлланса кайрĕ. Нинук, тен,

юратма та пăрахман ăна. Хĕрачана, тен, илĕртнĕ кăна, тен, пăснă та...

Ахăрса кулса ларакансем патне пĕр ушкăн врачсемпе медсестрасем пырса кĕреççĕ. Ванюка ун-кун çавăркаласа пур енчен те пăхса тухаççĕ. Темле приборпа, УЗИ теççĕ-и, ăшчикне те сăнаççĕ. Ним те çук. Операци туни те, кăвапа тални те – ним палли те çук. Врачсене ку аптратсах пăрахать. Ним те çук-тăк, ним те тăваймастăн. Ванюка килех яма тивет. Вара тин «сывă» тесе тесе хут çыраççĕ те киле кайма ирĕк параççĕ. Ачасене çавă кăна кирлĕ. Шăкăр-шакăр тухса каяççĕ пульницăран. Мучи те каятчĕ. Чарăнчĕ. Ăсатма тухнă врачсене чеен кулкаласа пĕрер курка шыв ярса пачĕ бидонран. Лешсем аптраса тăракансем хирĕç пулмарĕç. Ĕçрĕç. Ĕçрĕç те хавасланса кайрĕç. Çакна курса тăракан мучи те савăнăçлăн лĕхлеткелесе тухса кайрĕ. Тупрăм терĕ пулас ял пурнăçне чĕртсе тăмалли меслет.

## Чул вăрттăнлăхĕ

Мучипе ачасем пĕр калаçса тăмасăрах тĕпсĕр кӳлĕ патне çул тытрĕç. Çулĕ чылай вăрăм та калаçмалăх пур, калаççах кайрĕç. Чи кăсăкки кунта çĕр чĕлхи пулчĕ. Антон шухăшĕпе Çĕр-Аннерен хăйĕнчен пулăшу ыйтмалла. Вăл мĕн йăлт ăнланать. Эпир вара ниепле те çĕр мĕн каланине тăнкараймастпăр. Тăнкăр-танкăрсем пек çӳретпĕр. Çĕр-Анне пире пурăнмалăх кирлĕ условисем туса парасшăн тăрăшать. Чăн та, пĕр шутласан, çĕр çинче

яланах чӗрӗ организмсем пурӑнмалӑх пӗр пекрех температура, атмосфера, шыв пур. Вӗсем улшӑнмаҫҫӗ. Ҫӗр туртӑмӗ те пӗр пекрех. Килҫурта йӗркелесе тӑнӑ пекех тытса пырать Ҫӗр-Аннемӗр хӑйӗн хуҫалӑхне. Ҫӗр хуҫалӑхӗ ҫӗр ҫинчи пурнӑҫа тытса пӑхса пырать. Акӑ мӗн! Хуҫалӑхӗ вара вӑл вӑрттӑн япала. Япаласен ҫаврӑнӑшӗсемпе ҫыхӑннӑ. Пурнӑҫа кирлӗ газ, минералсен, шыв ҫаврӑнӑшӗсемпе ҫыхӑннӑ. Чӗрӗ япаласен хӑйсен ҫаврӑнӑшӗ. Ҫавӑн йышши пурнӑҫ ҫаврисем ҫинче тытӑнса тӑрать те тӗнче. Ӑслав тени те ҫавах. Ҫӗр шутлав машини пек шутласа пурӑнать. Мӗн талнӑ ҫаврана сыпать, ҫӗнӗрен пуҫарса ярать. Ҫав ӗҫре палӑрать ҫӗр ӑсӗ.

Ку шухӑшсем Антон шухӑшӗсем пулчӗҫ. Ҫӗре кирлӗ пек ял пурнӑҫне ҫӗр тавра ҫавӑрса яма шутларӗҫ те ҫӗневҫӗсем. Ялӑн ҫӗнӗ ҫыннисем ӗнтӗ. Тӗпсӗр кӳлӗ вӗсене хитрен кулса илӗртсе кӗтсе илчӗ. Кунта ним те улшӑнман. Шыв ҫийӗн вӗт хумсем чупаҫҫӗ. Пӑлт-пӑлт! тапать ҫӑл куҫ чӗри. Пурте пӗр сӑмах чӗнмесӗр ҫӑл хӗрринчи шур чул ҫине пырса ларчӗҫ. Чулран ӑшӑ ҫапать. Тин ҫеҫ ҫӑла пусӑрласах пек тӑнӑскер халь ӑна сыхласа выртать тейӗн. Ванюк чул катрашкисене алӑпа сӑтӑркаласа пӑхать. Тем пур пек ун ҫинче. Те ҫуркаланчӑксем, те саспаллисем...

– Кунтарах пӑхса илӗр-ха, – сӑмсипе тӗксе тенӗ пек тем шырать чул ҫинче Ванюк.

Пурте чул ҫинчен тӑрса ун ҫине ӳпӗнсе пӑхаҫҫӗ. Чул пичӗ темле питӗ пӗркеленчӗклӗ, ҫыруллӑ пек.

– Саспаллисем вӗт кусем! – чӑтса тӑраймасть Антон. – Савӑллӑ ҫыру! Питӗ

авалхи. Пĕр пилĕк пин каярах усă курнă ку çырулăхпа. Месопотамире. Çавăнта темле шумерсем пурăннă теççĕ.

– Эсĕ ăçтан пĕлетĕн çак? – тĕлĕнет тусĕнчен Ванюк. Михха мучи шарламасть.

– Вуланă. Сăмах май, эпĕ шумер чĕлхине кăна мар, китай чĕлхине те чухлатăп.

– Мĕн çырнă вара кунта, – хутшăнать калаçăва мучи. Вăл та питĕ интересленсе кайрĕ пулас.

– Час вулатпăр. – хăпартланать çамрăк тĕпчевçĕ. – Кунта темле таса çĕр çинчен çырнă.

– Таса çĕр! – харăссăн кăшкăрса яраççĕ Ванюкпа Михха мучи. Пĕр-пĕрин çине пăхса илеççĕ.

– Эпир тахçан икĕ çырма хушшинчи таса çĕр çинче пурăннă, – вулать малалла Антон. – Çĕр мĕн каланине итлесе туса пынă. Анчах та каярахпа хăш-пĕр çынсем çĕртен кулма, ун çине сурма пуçларĕç. Çĕр чухăнланса кайрĕ. Эпир ăна пăрахрăмăр. Çĕнĕ çĕр шыраса çакă икĕ çырма пуçне килтĕмĕр. Кунта тĕнче йывăççипе тĕпсĕр çăл куç тупрăмăр. Вĕсем пирĕн пурнăç туррисем. Анчах тăшмансем пире йĕркеллĕ пурăнма памарĕç. Самать патша тăрăшнипе тунă патшалăх саланса кайрĕ.

– Самать патша! Таса çĕр! Шумер патшалăхĕ! Ăçтан? – умлăн-хыçлăн ыйтаççĕ пĕр пĕринчен Мижер ачисем. Вĕсем хăйсем те çак патшалăхпа çыхăннине туйса илчĕç пулас та, чунĕсем çӳçенсе илчĕç, ирĕксĕрех пĕр-икĕ утăм туса, чула пăрахса чакса кайрĕç. Темле чул-ха вăл? Тен, тухатнăскер, тен вăл пире те пĕтерĕ.

– Темле тĕнче йывăççи пирки сăмах пур кунта, – каллех Ванюк куçĕ умне сиксе тухать

алчăртатса тăракан асамлă йывăç. – Çак икĕ çырма пуçне шăтса тухнă пурнăç йывăççи çинчен мар пулĕ те çырни?

– Çавах пулĕ. Тĕпсĕр кӳлĕ пирки те, – ăнланса илнĕ пек пулать Антон. – Анчах мĕнле-ха вĕсем, шумерсем ĕнтĕ, Сăхăт хĕрне çитсе ӳкме пултарнă? Хăйсене вĕсем субарсем тенĕ пулать.

– Субарсем? – анрасах каfive Михха мучи. – Ара, Антон, эпир вĕт субарсен йăхĕнчен!

– Илтмен. Мана каламан.

– Ара, мĕн каламалли. Мĕн ĕлĕкрен пире субарсем тенĕ. Аттене вăрçа илсе кайнă чухне вара «аçу сан мĕн ятлă» тесе ыйтнă пулать те хушаматне ашшĕ ячĕпе Михайлов тесе çырса хунă. Çавăн хыççăн эпир Михайловсене тухса кайнă, хамăрăн чăн хушамата çухатнă. Чăннипе Субаровсем пулмалла эпир. Акă мĕн!

– Тăхтăр-ха, тăхтăр! Чăн та! Нумаях та пулмасть пĕр палестина ялне кăтартрĕç. Ячĕ çав палестинсен ялĕ «Субарей». Латинла çырса хунă. Хам куртăм, – хĕрсех каять Ванюк. – Пирĕн рат ячĕ-хушамачĕ мĕнли пулнă-ши? Эпир те Иванов хушаматпа çӳретпĕр.

– Сирĕн ратнере Йемен ятлă çын пулнă теççĕ. Çавах ял масарĕн пуçĕ. Чи ватти, апла. Йеменевсем пулма кирлĕ эсир, – тем тĕшмĕртет чи ватти.

– Йемен тени çав Месопотами енчи патшалăх мар-и-ха вăл? Субарейĕ те çавăнта. Сăхăчĕ те... Согдиана – пĕр-пĕрне пулăшса каласа пыраççĕ çĕнĕ те çав вăхăтрах авалхи шумер çыннисем.

– Таса çĕр тени вара мĕне пĕлтерет? – ыйтать йăлт аптраса ӳкнĕ Ванюк. – Тахçан чăвашра та çав ăнлав пулнă пулмалла.

– Пулмасăр, – ăнлантарать мучи. – Эпĕ çамрăкрах чухне ку сăмахпа пĕрмаях усă курнă. Çĕртен-шывран таси çук тетчĕç. Çĕрпе-шывпа тупа тунă, вĕсене пуç çапнă. Çĕре те, шыва та сурма хушман.

– Халĕ вара тавлашса тенĕ пек сураççĕ, – хутшăнать Антон. – ку пуринчен ытла хулара палăрать. Çурт умĕсене, асфальчĕ-мĕнĕ таран йăлт сурса вараласа пĕтереççĕ. Сурса хумассерен хăйсем эпир культурăллă теççĕ. Сураççĕ те çын çине тăрăххăн пăхса илеççĕ.

Антон калани пурне те култарса ярать. Ара, чăн та, кам асăрхаман пуль, хула çулĕсемпе утма май çук. Çӳп-çап пăрахса кăна мар, сурса найлакалантарсах пĕтереççĕ. Юрать çумăрĕ тепĕр чух çуса каять те – нимех те мар пек.

– Вара вĕсем, çав субарсем, çĕре сурса пĕтернĕ пулать-и? Ĕненме те çук, – тĕлĕнет Ванюк.

– Сурни-мĕнĕ, ку сăнарласа калани çех пуль, халĕ унта çав ĕлĕкхи вырăнсенче, чăн та, пуш хир хуçаланать. Тахçан тулăхлă пулнă çĕр пĕтнĕ. Çыннисем те, апла, куçса кайнă. Тен, эпирех пуль, çав çĕре пĕтерекенсем. Кунта çитрĕмĕр те, акă, кунтине пĕтеретпĕр, – шухăша путать Антон.

– Пĕтерместпĕр, – хĕрӳленет Ванюк. – Эпир кунта чăнласах çăтмах тăватпăр. Мăн асаттесем Месопотамире тăвайманнине кунта тăватпăр. Тĕпсĕр кӳлĕ те пур пирĕн. Вăл пулăшать. Пурнăç йывăççи те...

– Темле çав, – иккĕленет мучи. – Хăй хальлĕн ним те пулмасть пулĕ. Тав сăмахĕ кала, ваттисем хăйсен шухăшне çак вăхăта çитерме пултарнăшăн. Вĕсен йăнăшне тепĕр хут тăвас марччĕ, паллах. Авалхи субарсем пире виçĕ асамлă япала ярса панă. Çакă чул çыру. Унта Таса çĕр вĕрентĕвĕн паллийĕсем сыхланса юлнă. Ку питĕ паха. Пурнăç йывăççи. Вăл çухалнă пулсан та пирĕн Ванюка ăс парса хăварма ĕлкĕрнĕ. Тен, вăл та пач пĕтмен пулĕ-ха. Тепĕр хут шăтса тухассăнах туйăнать. Виççĕмĕшĕ вара – тĕпсĕр кӳлĕ. Ун вăйне эпир куртăмăр ĕнтĕ. Усă курма вĕренсен, чăн та, пĕтĕм халăх валли çăтмах туса хурăпăр.

Ку хăйне майлă пĕтĕмлетӳ пулчĕ пулĕ. Ванюкпа Антон, Михха мучи пĕр кана чул çине, тĕпсĕр çăл куç çине тимлесе пăхса тăчĕç-тăчĕç те ун-кун çаврăнкаласа пăхса ялалла уттарчĕç. Вĕсем мĕнле кайнине икĕ çырма пуçĕ кăна курса пăхса юлчĕ пулас.

## Хула пăтăрмахĕ

Çтаппанпа Нинук ялтан пĕрле тухса кайрĕç. Шупашкар çулĕ вăрăм, шутламаллăх пур. Мĕн тесе тухса тарчĕ-ха Нинук хăй çуралса ӳснĕ савнă ялтан? Кăна вăл хăй те лайăххăн ăнланмасть. Амăшĕ малалла вĕренмелле тени те мар кунта. Ванюкăн кăвапи талнинче те мар ку хăтлану. Савнă каччине пăрахсах тухса тарать вĕт хулана... Çук, хĕртен халь хистесе ыйтсан та ним те калаймĕ вăл. Тен, чăн сăлтавĕ Çтаппанра? Нинук юнашар ларса пыракан

качча ҫине пăхса илет. Хитре ача Ҫтаппан. Унăн хура-хăмăр ҫавра куҫĕсем таҫта тинкернĕ. Ахăртнех, малашлăх ҫулне курсах пыраҫҫĕ. Малашлăхĕ вара ҫул хĕрринчи тĕмсем пек вĕлтлетсе иртет. Тин кăна ялтаччĕ. Халĕ акă иккĕшĕ те коопреци техникумне вĕренме каяҫҫĕ. Суту-илӳре кăна халь укҫа тума пулать терĕ Ҫтаппан. Ку, тĕрĕсех ĕнтĕ. Сутуҫăсем питĕ пуян. Вĕсем укҫаллă. Укҫа пулсан тем те илме пулать. Хĕр тени хитре япаласене юрататать. Хура чулха, норка кĕрĕк, чаплă машина... Ҫавăн йышши япаласене курсан Нинук чунĕ таҫта кайса кĕрет. Вăл тахҫанах тĕвĕлесе хунă. Ҫав хитре япаласем ун аллинче пулаҫҫех!. Ҫапла пултăр тесен хулана каймалла, укҫа тума вĕренмелле. Ку вăрттăн ĕмĕт пулнă. Тутлă ĕмĕт. Ăна вăл, тен, хăй те ăнланман. Анчах пурнăҫ йывăҫҫин улмине ҫинĕ хыҫҫăн куҫĕ яр уҫăлса кайнă. Ку тĕнчере пурте пĕрне пĕри улталаҫҫĕ. Чăн малтан сутса улталаҫҫĕ. Сутнăшăн укҫа параҫҫĕ. Пулчĕ те!

– Ҫтаппан, – тет хĕр хĕрӳллĕн. – Укҫа нумай ĕҫлесе илсен эсĕ мана мĕн илсе парăн?

– Машина илсе парăп. Мерседес.

– Ых! – каҫăхсах каять хĕр. – эпĕ унпа яла мĕнле ярăнса пырса кĕретĕп... Кашни тĕл пулан ҫын куҫне тусан кăна кĕрсе юлĕ.

– Ял тăрăх ярăнса ҫӳремелли япала мар вара вăл, мерседес тени.

– Мĕн тени вара?

– Престиж, тени.

Хĕрпе качча пĕр кана шăпланаҫҫĕ. Салонра шăп. Ҫул ҫинчи ҫынсем пурте тенĕ пекех тĕлĕрсе кайнă.

Çтаппанпа Нинук Шупашкара чиперех çитрĕç. Вĕсене иккĕшне те общежитине вырнаçтарчĕç. Документсем те йĕркеллĕ. Экзаменсем паркаласан, тен, вĕренме те кĕрĕç. Калас пулать, шкулта вĕсем начар мар вĕреннĕ. Учительсем малалла вĕренмелле, тетчĕç. Çавăнпа та каччăпа хĕр иккĕленмерĕç. Экзамен хыççăн экзамен пачĕç. Ăнăçлă килсе тухрĕ. Иккĕшне те техникума пĕрремĕш курса вĕренме илчĕç.

Вăхăт иртрĕ. Анчах Нинук яла килсе курăнас темерĕ. Намăс та ăна кăштах. Çтаппанĕ те хăпма пĕлмерĕ. унпа пĕрле вĕсем кашни каçах тенĕ пек дискотекăсене, тусăвкăсене çӳрерĕç. Студент пурнăçĕ хаваслă. Тепĕр чух вĕренме вăхăт çитмест. Кашни каçах тем тĕрлĕ концерт, спектакль, тĕл пулу... Ĕлкĕрсе кăна пыр. Хĕрача кун пек чаплă пурнăçпа пурăнса курманскер, халь тин ĕнтĕ ĕне сумалли çинчен шутласа тăмасть. Ун черетлĕ ĕçĕ – чаплă тум тăхăнас та савăнма каяс. Реххет вăхăт çитрĕ тейĕн. Ăт, çăтмах! Кăна хĕр халь хăй те пĕлет. Вăл пĕтĕм чунĕпе çакна кĕтсе пурăннă. Тавах Çтаппана. Енчен те укçа тума вĕренсе çитсен вăл, тен, ăна качча та тухĕ. Ĕмĕтленет, ĕмĕтленет хĕр. Пĕтĕм тĕнче юратать пек ăна. Кашни уйăхрах амăшĕнчен укçа ыйтса ярать. Укçа тени хулара шыв пек юхать, вĕрене çулçи пек вĕçет. Анчах Марье аппан ун чухлĕ укçа ăçтан пултăр?

Çапла питĕ савăнса ашкăнса пурăнсан-пурăнсан Нинукăн та укçа пĕтет. Çтаппанран ыйтас, парас çук. Халĕ те кашнинчех укçа çуккипе усă курса каппайланма пăхать. Сĕмсĕрленет. Пĕринче ресторанта ларнăшăнах мĕн ун ăна чуп тумалла тет. Ăт, йĕксĕк. Вăл

ăна ырă кӳнĕ мĕн! Эрех ĕçтернĕ те, тем те тума юрать тесе шутлать пулас. Тарăхать хĕр. Анчах ним те тăваймасть. Амăшĕ те юлашки вăхăтра чирлесе кайнăскер, нимпе те пулăшаймасть. Ирĕксĕрех каллех Çтаппан çумĕнчех пулма тивет. Таçтан тупать вăл укçа, паллă мар. Мана та вĕрент-ха тесен, сан ĕç мар тет.

Нумай вăхăт иртрĕ-и çапла, сахал-и, пĕрремĕш курс вĕренсе пĕтернĕ çĕре хĕр йăлт хăрса çитрĕ. Чăтайман енне çуркуннепе Çтаппанран укçа кивçен ыйтрĕ.

– Хе-хе–хе! – лекĕртетрĕ каччă. – Мана каччă тух, вара ылтăн ăшĕнче пулăн. Унсăрăн выçса вилĕн. Е проституткăна тухăн. Халĕ эпĕ пĕлетĕп, эсĕ общежитишĕн те тӳлемен. Сана, апла, час хăваласа кăларса ярĕç. Вара ăçта пурăнăн?

– Ку сан ĕç мар, – тарăхать хĕр. – Эсĕ мана халь пурăнмалăх кăна пар. Кайран тавăрса парăп.

– Кая юлсан каю шăтать. Эсĕ халех тавăрса пар, – çулăхать хĕр çумне каччă. Çак сăмахсемпе ăна кровать çине йăвантарса ярать те тапăлтаттарма тытăнать.

– Кай! – çутăлтаттарса ярать Çтаппана хĕр. – Акă епле эсĕ! Йывăрлăха кĕрсе ӳкнипе усă курас тнрĕн-им? Кĕтсе илеймĕн.

– Ăçта кайса кĕрĕн вара эсĕ? Пĕрех манăн пулатăн!

– Çук, – тет хаярланса кайнă хĕр. Çакна кĕтсе килчĕ-и-ха вара вăл хулана... Çăтмах терĕ пулĕ. Акмасăрах, вырмасăрах çăкăр çиетĕп терĕ. Çук мĕн! Кунта акă чăн кашкăрсем кăна тутă

мĕн! Çакна хĕр тин пĕтĕм чун-чĕрипе ăнланса илчĕ. – Çук! – терĕ хыттăн. – Эпĕ яла каятăп.

– Ха-ха-ха! – кулать Çтаппан. Халь тин сана аннӳ кăна мар, Ванюк та йышăнас çук. Эсĕ мĕнле асса пурăнни çинчен эпĕ йăлтах çырса пĕлтертĕм, пĕтĕм ял пĕлет. Кай, кай сысна фермине. Тăхăн хăвăн фуфайккуна. Тен, каллех телейлĕ пулăн хăвăн выльăхусемпе. Ха! Сан пеккисене эпир кунта хулара миллион тупăпăр. Таси паха!

– Каятăп, – татса хучĕ хĕр. – заочно вĕренме куçатăп та каятăп. Сана вара куç ан куртăр! – çапла сăмахсемпе хĕр каччă пӳлĕмĕнчен вăртлаттарса тухса кайрĕ.

Пулмарĕ, тесе пăхса тăрса юлчĕ Çтаппан. Ку хĕр ман алла çакланетех тенĕччĕ. Хытă тăчĕ. Амăшĕ хытарсах тăнă пуль çав. Темле илĕртсен те парăнмарĕ хĕр. Эй, терĕ каччă. Тепĕр тесен, чăн та, хĕр сахал-им? Çапла шутларĕ те Нинук çинчен пачах манса кайрĕ.

Нинук вара нумай кĕттермерĕ. Документсене заочно вĕрентекен пая куçарчĕ те яла тухса вĕçтерчĕ. Пĕтĕм чун-чĕрипе кĕтрĕ вăл амăшĕпе тĕл пуласса. Амăшĕ вĕт унăн чирлĕ! Мĕнле пит-куçрпа çапла пырса кĕрĕн ĕнтĕ халĕ, çухалса çӳренĕ хĕр? Ванюк пирки шутлама та хăрать. Каччă ăна хăй маннă пекех, манса та кайнă пулĕ. Тата сутрĕ вĕт вăл ăна. Çтаппанпа улăштарчĕ. Ырă пурнăç тăватăп терĕ. Ямăт пурăнса ырă пурнăç ăçтан килтĕр-ха ĕнтĕ? Кашни япала тӳлевлĕ вĕт-ха вăл!

Çапла шухăшсемпе пырса кĕчĕ хĕр яла. Амăшĕ вырăнпах выртать-мĕн. Хĕрĕ килнĕшĕн калама çук савăнса ӳкрĕ.

– Ах, мĕнле килме пĕлтĕн тулькkăш, хĕрĕм, – тет вăл питĕ шукăль тумланнă хĕрĕ çине ытарайми пăхса. – Эпĕ виличчен çитрĕнех. Питĕ кĕл турăм çав саншăн. Эсĕ калана пурнăç йывăççинчен те пулăшу ыйтрăм, турă амăшĕнчен те... Акă эсĕ персе те çитрĕн. Халь тин вилсен те юрать. Сана кураймасăрах каятăп пулĕ тенĕччĕ. – Марье аппа чăтаймасăр йĕрсе ярать.

– Ан хăра, анне! Халь тин эпĕ килтех пурăнăп. Заочно вĕренме куçрăм. Эсĕ те акă час сывалăн та эпир иксĕмĕр пĕрле чиперех пурăнса кайăпăр. Ан кулян, – йăпатрĕ амăшне Нинук. Хăйне вăрçрĕ. Чăн та, мĕн сулланса çӳремеллеччĕ çав ямăт хулара. Çăтмах пуль терĕ. Çăтмах мар, тамăк пулчĕ. Çыннисем те унта чисти кашкăрсем пек курăнчĕç халь хĕрачана. Çтаппанĕ те, Çтаппанĕ те çав! Нинук ял хыпарĕсене ыйтса пĕлет. Ванюксем мĕн тем çӳллĕш курăк ӳстерсе силос хывнă та ĕне выльăх йышне пысăклатасшăн. Хĕлле тепĕр ферма тума пуçланă. Хуçалăх ертӳçи те, Галина Ивановна, хавхаланса кайнă. Кун пек пулсан тĕнчипе мала тухатпăр, тет. Фермăри хĕрсем пысăк укçа илме пуçланă. Ял чĕрĕлет, тет амăшĕ.

Хĕре ку те савăнтарать, те хурлантарать, паллă мар. Çакă кăна паллă, шухăшлаттарать. Мĕнле пурăнмалла тет? Ванюка куçран мĕнле пăхмалла тет? Çĕр тĕрлĕ ыйту çуралать хĕр пуçĕнче. Пурнăç мĕнле татса парĕ ĕнтĕ вĕсене... Çав пурнăçа шанать халĕ хĕрупраç!

# *ИКĔ ТĔНЧЕ ХУШШИНЧЕ*

Фантазиллĕ повесть

## Ют тĕнче тапăнăвĕ

Турул çĕр чĕтреннипе вăранса кайрĕ. Тăр-тăр-тăрр! тăвать темĕскер пĕр вĕçĕмсĕр. Çавă саспах пулĕ чӳрече кантăкĕсем те вăхăтран вăхăта чăн-чанн! туса илеççĕ. Турул чӳречерен пăхрĕ те пӳрт умĕнчех темле тимĕр урапаллă «аçтаха» тăнине курах кайрĕ. Тимĕр çăварĕнчен тĕтĕм тухать. Хăй халь-халь чарăнас пек пăх-пăх-пăх! тутарса аран-аран сывлать. Ача хăраса кайрĕ. Ялта мĕн чухлĕ пурăнса та кун пеккине курманччĕ вăл.

Яла вĕри çĕлен аннă пулĕ, шутларĕ Турул. Урама тапса тухрĕ. Тен, ку аçтаха час вĕсен пӳртне те, çĕрне те çĕмĕрсе пăрахĕ. Ялти чи хитре хĕрсене тытса кайĕ! Тăван çĕр-шыва çăлас пулать!

Çапла шухăшпа чупса тухакан Турул хапхаран кĕрекен Илюхха бригадирпа пырса çапăнчĕ. Илюхха питĕ пысăк арçын. Кап! çеç ярса илчĕ вăл вирхĕнтерсе пыракан çамрăк ачана.

– Паян авăн çапма каятăн, яла Фордзон килнĕ. Молотилкăпа çапатпăр – терĕ те çав аçтаха çине хăпарса ларчĕ, тĕнчене кĕрслеттерсе тапранса кайрĕ. «Аçтаха» хыççăн темле йӳçĕк тĕтĕм кăна тăрса юлчĕ. Кайнă йĕрри те темле хăрушшăн курăнчĕ. Чĕрнеллĕ урăписем çĕре чавса пыраççĕ. Тем тарăнăш йĕрсем çеремлĕ çула амантаççĕ.

Аçтахи Фордзон ятлă, шутлать Турул. Молотилки вара мĕн? Ача аппăшĕ пĕçернĕ апата çикелерĕ те ял хĕрринчи йĕтем патне çул

тытрĕ. Аллинче пир хутаç. Унта кăнтăрлахи апат тумалăх çăкăр таткипе панулмисем. Паян Спас, терĕ аппăшĕ, панулми çимелле. Турула ку питĕ савăнтарать. Мĕншĕн тесен пахчари панулмисене Спас çитмесĕр татма юрамасть, аçа çапать. Паян вара юрать. Акă халĕ çав савăклă вăхăт çитрĕ те. Чылай йывăр хутаç ураран çапкаланса пырать. Ку пĕрре те кансĕрлемест. Тинтерех вырса кайнă тырă хăмăлĕ вара çара урана чикет. Ыраттарать. Уй тăршшĕпех урапапа турттарса пĕтермен çĕмелсем курăнкалаççĕ. Кашни çĕмелте хĕрĕх кĕлтерен кая мар. Кашни кĕлтине вĕт ал вĕççĕн, çурлапа кăна вырнă. Турул сулахай алăри качи пӳрни çине пăхса илчĕ. Унта тем пысăкăш çĕвĕ курăнать. Выр-ха, выр, терĕ çапла пĕринче ăна амăшĕ, тепĕр çĕмел тумалăх выр-ха. Турул ун чухне пĕчĕккĕччĕ, питĕ ывăнса çитнĕччĕ. Çапах та итлерĕ амăшне. Юнашарах çырмара шыва кĕмелĕх пĕве пур. Çавăнта пулă пек ишсе çӳреме питĕ лайăх. Ăшă-сулхăн шыв ӳте ачашлать, чуна савăнтарать. Ун вырăнне халĕ Турул тепĕр хут каçалăк ăшне чăмрĕ. Уйра ăрша вылять. Амăшĕпе пĕрле туса лартнă çĕмелсем тем чухлĕн курăнаççĕ. Кăчăрт-кăчăрт! тутарать ача çурлапа. Ывçи тытайми пулнă-ха ун, çапах та, чăтас пулать, анне ыйтнине тумаллах. Мĕн-ма тесен амăшĕ чирлĕ. Турул пулăшмасан ăна кам пулăшĕ? Тем пĕçерсе кайрĕ çав вăхăтра пӳрне вĕçĕнче! Ача пăхрĕ те, тĕлĕнсех кайрĕ. Кача пӳрни ӳт çинче кăна çакăнса тăрать. Юн юхать. Ыратнипе ача кăшкăрсах ячĕ. Амăшĕ чупса пычĕ. Ах! терĕ те кĕсйинчи шур тутăрне кăларса сурана çыхса ячĕ. Вырасси пулмарĕ терĕç пулас та иккĕшĕ те

çĕмел сулхăнне пырса ларчĕç. Суран чуна туртса ыраттарать. Анчах Турул макăрмасть, чăтать. Ăна чăтма вĕрентнĕ. Амăшĕ те ывăннă курăнать. Аран-аран сывлать. Шăрăх!

Çакă аса килчĕ уй тăрăх пыракан ачана. Паян тата мĕн кĕтет-ши ăна? Паян та питĕ шăрăх. Уй тăрăх тӳртен утакан ача çул çине тухрĕ. Çул тусанлă. Пашлаттарса кăна пырать халь Турул çул тăрăх. Ун хыççăн тарăн йĕр юлать.

Йĕтемре халăх нумай. Капансем хушшинче тем пысăкăш машина ларать. «Молотилка!» – шутлать ача. Аçтахи те кунтах! Турул килессе кăна кĕтнĕ тейĕн, кĕрр! кĕрлесе кайрĕ йĕтем. Пăх-пăх-пăх! тутарать аçтахи, Фордзон ятлăскер. У-у-у! улать молотилка текенскер.

– Молотилка выçă, – кăшкăрать Илюхха бригадир. – Кĕлте парăр. Çамрăкрах ачасем самантрах капан тăрне хăпарса кайрĕç те кĕлте ывăтма тытăнчĕç. Молотилка çăварне лекнĕ ыраш кĕлтисем таçта молотилка ăшне кĕрсе çухалаççĕ те хыçалтан ванчăк улăм пулса тухаççĕ. Кашнинчех, кĕлте çăтнăçем, молотилка усаллăн улласа илет. Турула ку кăштах хăрататать те. Ку шуйттан машини тăранма та пĕлмест, шутлать вăл. Çӳлте, барабан патĕнче, Илюхха хăй тăрать. Аллинче çĕçĕ. Кĕлте çыххине касать те ыраш кĕлтине саркаласа барабан ăшне тĕрте ярать. Молотилка пĕр вĕçĕмсĕр çапла уласа кăна тăрать. Хăлхана хуплать. Тусан тухать. Куçа çиет.

Кăнтăрлахи апат тĕлне таçтан Турул пĕлмен ют тĕнчерен илсе килнĕ машина Улăп пек курăнакан капансене кăна мар, çынсене те йăлт тылласа пĕтерчĕ. Ачасем те ывăнчĕç.

Анчах ларса канма май çук. Кĕлте памасан ку арçури тата хытăрах кăшкăрса улама тытăнать. Бригадир ятлаçать. Вăйсăрланса çитнĕ çамрăксем аран-аран хускалкалаççĕ. Хăçан апат вăхăчĕ çитет-ши, теççĕ.

– Баста! – тет Илюхха. – Апата!

Йĕтем шăпах пулать. Ай! мĕнле лайăх иккен вăл шăплăх! Машин шăв-шавĕпе ыратма пуçланă хăлхине сăтăркаласа Турул та хăй хутаçне илсе халăхпа пĕрле апат çиме капан çумне ларать. Ывăнса ним пĕлми пулса çитнĕ аллипе хутаçне уçать те тĕлĕнсех каять. Хутаçра аппăшĕ хунă пĕр чĕл çăкăр кăна выртать. Улмисем çук. Ыратса-ыратса кайрĕ çакна курнă ача чĕри. Ун юлташĕсемех ĕнтĕ, урăх кам пултăр, çавсемех ун панулмисене çисе янă. Спас тенĕ ĕнтĕ. Турулсен улма нумай. Килте те çийĕ... Ача юлташĕсем çине çилленсе пăхса илчĕ. Вĕсем вара ним пулман пекех амăшĕсем парса янă апачĕсене яваççĕ кăна. Уял аллинче какай татăкĕ те курăнать. Йывăр ĕçре, паллă, тутă тытакан апат кирлĕ. Чашла юлташне амăшĕ кукăль пĕçерсе панă. Акă епле икĕ аллипе тытса тутлăн-тутлăн кавлет вăл! Çĕрпи вара пĕремĕк çиет!

Турул хырăмĕ хыр тăрнех кайнă. Унăн та çиес килет! Анчах... Ача ирĕксĕрех хура çăкăр таткине кăшлама тытăнать. Хырăм выçсан, хура çăкăр та тутлă иккен! Çинĕçемĕн, ача чунĕ лăпланать. Юлташĕсене те каçарать. Паллă, вĕсен килĕсенче улмуççисем çукрах. Турул ашшĕ вара, чаплă пахчаçă пулнăскер, вĕсене нумай лартса хăварнă. Турулсен пахча тулли панулми! Вăйлă çиллĕ çумăр çуса кайсан пахчана чупса тухатăн та улма шăршипе ăнтăхсах каятăн. Пур

çĕрте те çерем çинче сап-сарă та хĕп-хĕрле панулмисем йăваланса выртаççĕ. Чи тутлисем! Турул вĕсене витри-витрипе пуçтарса кĕрет. Кайран аппăшĕпе иккĕшĕ тураса типĕтсе хураççĕ те хĕлле вĕретсе сиплĕ шыв туса ĕçеççĕ. Çавăнпа çирĕп сывлăхлă Турул.

– Турул! – чĕнет ăна Чашла. – Кайран шыва кĕме каятпăр–и?

– Тытмалла вылятпăр! – вылянтарать сăмахне Уял. Хăйне тем урăхларах тыткалать пек вăл. Çавĕ мар-ши, улма вăрри?

– Мансăрах–и? – кӳренем пекки тăвать Çĕрпи. Çакна вăл унсăр каймассине пĕлсех калать. Мĕн ас тăвасса хĕр арçын ачасемпе пĕрле.

– Каяс! – тет Турул. Ачасен хутне кĕнĕ пекех туйăнать ку. Ара, айăпа кĕнĕ те... Мĕнех, Турул мăн кăмăллă ача мар, çилленни те ун тахçанах иртсе кайнă. – Кайран пирĕн пата улма çиме каятпăр. Аппа улма кукли пĕçеретĕп терĕ. Паян Спас!

– Утăрья! – кăшкăрать Уял. – Улма çиес килет!

Улмасене кам çисе яни пурне те паллă. Пурте кулса яраççĕ. Тем мар ĕнтĕ вăл, çав улма тени! Юлташ хаклăрах.

Кĕрр! кĕрлесе ярать «аçтаха». У-у-у! улама тытăнать молотилка. Вăй илнĕ атьсем сиксе тăраççĕ те ку таранччен курман машинăсемпе «çапăçма» тытăнаççĕ. Тĕрĕссипе, çырлахччĕр тесе, мĕн вăй çитнĕ таран кĕлтепе тăрантас теççĕ. Кунĕпе тăрантаççĕ. Апшур «аçтаха» капансене йăлт çăтса ярать. Илюхха кăмăллă. Пуç çаппипе халь хĕлĕпе çапнă пулăттăмăр, тет. Машинăпа акă пĕр кунтах çапса пĕтертĕмĕр.

Тырри те лайăх тухрĕ. Çынсем кăмăллă. Ачасем шыва кĕме кайма хатĕрленеççĕ.

Пĕве тени Терентейсен тĕлĕнче. Вĕсен патĕнче Эль шывĕ темле пысăк кукăр туса илет. Çав кукăрта пĕвелесе хунă та юхан шыва. Çав шывра вĕт-ха, çав кукăрта чутах путса вилетчĕ те Турул. Ку тахçанах пулса. Турул ытти ачасемпе пĕрле тытмалла выляса чупса çӳрерĕ-çӳрерĕ те вĕсемпе пĕрле пĕве пуçĕнчен сикрĕ. Сикрĕ те, хăй ишме пĕлменнине аса илчĕ. Шывра халь тин ишме вĕренекен ача пек çапкаланма тытăнчĕ. Пулăшу ыйтса кăшкăрчĕ. Анчах кам сана илттĕр? Ачасем шывра та тытмалла выляççĕ. Пĕве çийĕн темле чăй-чай! тăрать, кăшкăрсан та никам та илтмест. Çав шава Турул халĕ те ас тăвать. Акă вăл, авăн çапнă хыççăн, тӳпери тăри пек вĕçсе пырать тусанлă çул тăрăх. Çĕрпи хăй пĕр хумлă-хумлă çĕр тейĕн, çĕр пулса куçать. Уял уйри вăштăр-вăштăр çил евĕр вăшлаттарать. Чашла чашлаттарса пырать. Тусан кăларса пырать пĕр ушкăн ача. Ăт, çавăн пек тусан кăларса чупса пырса сикрĕç те ачасем пĕвене. Турул та сикрĕ. Сикрĕ те каллех тахçан пулнине аса илчĕ. Ун чухне те çапла ĕрĕхтерсе пырса сикнĕччĕ вăл ачасемпе пĕрле шыва. Сикрĕ те, ишме пĕлменнине аса илчĕ. Пулăшу ыйта-ыйта çăра шыв ĕçсе тултарчĕ, пĕве тĕпне путса анса кайрĕ. Ача халĕ шывран та йывăртарах. Шывран вăл тек тухаймасть. Сивĕ-сивĕ пулса кайрĕ пĕве тĕпĕнче хутланса выртнă ачана. Вăл амăшĕн варĕнчи пек хутланса выртнă та, шыв тĕпĕнчен мĕнле хăтăлса тухмалли пирки шутласа выртать. Вилĕм пĕр аллипе ярса тытнă та ĕнтĕ ăна, пĕтĕм ӳт-пĕвĕ унăн халĕ пăр пек. Чунĕ те

йӑлт шӑнса кайнӑ тейӗн... «Эпӗ ишме пӗлместӗп, апла, шыв ҫине ишсе тухаймӑп, – шутлать ача. – Пӗве тӗпӗпе тесен вара, шывран йывӑр-ха та, рак пек упаленме пулать». Ӑҫталла каймаллине те пӗлет Турул. Тепӗр куҫ уҫӑлчӗ пек. Ҫӳлте ачасем вылянине те йӑлт илтет, курать. Акӑ, Терентей тӗлӗ. Ҫав ҫыран еннелле пӗве урлӑ упаленмелле ун. Ҫав вӑхӑтрах питӗ сывласа илес килет. Ӳпкери сывлӑш пӗтнӗ. Ан сывла, ҫӑвара ан уҫ, тет вӑл хӑйне. Ҫӑвара уҫсан пӗтетӗн! Ҫӑвара ан уҫ! Ҫапла пӗр вӗҫӗмсӗр каласа вӑл пӗве тӗпӗпе упаленме тытӑнчӗ. Ҫыран хӗрне ҫитрӗ те ҫӳлелле хӑпарма тытӑнчӗ. Хӑпарса та ҫитрӗ. Анчах ҫыран чӑнкӑ. Юшкӑнлӑ. Хӑпарсах ҫитнӗскер, аялалла пӗве тӗпнех персе анчӗ. Шывран йывӑр япала шыв тӗпнех ӳкет ҫав. Турул аптраса ӳкмерӗ. Таврара мӗн пулса иртнине вӑл йӑлт курать. Аякрах та мар пӗве таппинелле чуллӑ ҫыран пулмалла. Ҫавӑнталла упаленмелле. Ҫыран хӗррипе юлашки пӗтӗм вӑйӗпе тапаҫланчӗ ача. Ҫӑвара ан уҫ, тет хӑй пӗр вӗҫӗм. Ҫӑвара ан уҫ! Акӑ алла чулсем леке пуҫларӗҫ. Ҫакӑнта! Ҫакӑнтан тухма пулать. Ҫӗмрен пек тапса тухрӗ ача шыв тӗпӗнчен. Ҫыран хӗрне тухса ӳкнӗ пулӑ пек ҫӑварне карса пӑрахса каҫса кайса сывларӗ. Ача ҫапла пӗве хӗрринчи ҫерем ҫинче ҫапкаланса выртнине никам та курмарӗ. Пурте каҫса кайса тытмалла выляҫҫӗ. Пӗве ҫийӗн чӑй-чай! тӑрать.

Халӗ те ҫав чӑй-чаях мӗн. Турулсем, халӗ тин вӗсем пӗчӗккӗ мар ӗнтӗ. Акӑ, ӗлӗкхи пекех тусан кӑларса чупса ҫитрӗҫ та шыва сикрӗҫ. Пӗчӗккӗ чухне те ҫапла сикнӗччӗ Турул. Халӗ ишме пӗлет те, пулӑ пек ишсе кайрӗ. Каллех пӗр-пӗринпе тытмалла выляма пуҫларӗҫ. Кукӑрта

пĕр ватă йăмра пур. Турачĕсем ун шыв çинех йăтăнса аннă. Çав йăмра çине хăпарса трамплин çинчен сикнĕ пек сикеççĕ ачасем. Турул та сикрĕ. Пĕрре кăна мар тунă-ха та çапла. Хăрама та пĕлмерĕ. Анчах хăрамаллаччĕ те çав! Сиксенех темле пăрăнса шыв тĕпĕпе ишсе кайрĕ те. Хăйне хăваласа пыракан Чашларан таратăп терĕ пулĕ çав, пăрăнса кайрĕ те пуçĕпе тымарсенчен çакланчĕ. Унталла-кунталла турткаланать ача, турат вĕçертмест. Аллипе хыпашласа пăхать те тĕлĕнсех каять. Ун пуçĕ мĕн туратсенчен çыхнă ункăна çакланнă. Такам ун валли кунта ятарлă мăйкăч хатĕрлесе хунă иккен! Акă пĕр çакланчĕ те, туртăнать-тăртăнать ача – усси çук. Сывлăшĕ те пĕтрĕ ĕнтĕ. Туртăннин те усси çук. Кăштă тепре туртăнкаларĕ те, тăнне çухатрĕ. Таçта тĕпсĕр шăтăка ӳкнĕ пекех туйăнчĕ. Ӳкрĕ те çав тĕпсĕр шăтăка, тӳрех темле çап-çутă пулса кайрĕ. Шыврах пек. Шывра та мар. Унта питĕ савăк. Тата хăрушă та! Сасартăк ăна хирĕç шап-шурă мĕлке акăш пек ярăнса тухрĕ. Турула аллинчен ярса илчĕ те çӳлелле туртма пуçларĕ. Урăх Турул ним те ас тумарĕ. Тăна вăл шыв çийĕнче кĕчĕ. Ним пулман пекех Чашларан тарать. Ишет. Çав вăхăтрах тымарсен ункинчен епле хăтăлса тухни пирки шутлать. Мĕнле хăтăлса тухнине вăл пĕрре те ас тумасть. Кĕтрет! Кам çăлчĕ ăна вилĕм ункинчен? Амăшĕ мар пулĕ те? Çавă питĕ юрататчĕ Турула, хĕрхенетчĕ. Мансăрах тăрса юлатăн ĕнтĕ çакă тĕнчере, пăхаймарăм сана, тетчĕ. Чирлетчĕ вăл. Чĕре чирĕпе. Чăтаймарĕ. Вилсе кайрĕ. Турул ку тĕнчере аппăшĕпе кăна тăрса юлчĕ. Амăшех пулчĕ пулĕ? Иккĕмĕш хут çăлать вăл хăй ачине.

Малтан пĕве тĕпĕпе упаленнĕ чух «çăвара ан уç» тесе вĕрентсе пычĕ. Çавах, тен, чуллă çыран ăçтине кăтартса пачĕ. Халĕ те, акă, тымарлă мăйкăчран туртса кăларчĕ. Тĕлĕнтерет ку Турула. Ĕненес те килмест. Каласан кулса вилĕç. Çавăнпа та Турул шарламасть. Ним пулман пек атьсемпе тытмалла вылять. Акă вĕсем выляса тăранчĕç те симĕс çерем çине тăсăлса выртрĕç.

– Авăн çапса пĕтертĕмĕр, час шкула каймалла пулать, – савăнать Турул. – Эпĕ Туçари вăтам шкула вĕренме каясшăн. Çав шкула мухтаççĕ. Унта таса чунлă, хăвăрт шухăшлă, ырă ĕçлĕ пулма тата чăнлăха шырама вĕрентеççĕ теççĕ. Унти учителсен пĕртен пĕр тĕллев – чăн çын тăвасси.

– Атьăр, пурте чăн çын, çук, чăн чăваш пулма вĕренер! – хĕпĕртет Çĕрпи. – Эпĕ чăваш çĕрĕ пек таса пулăп.

– Эпĕ те çăл куç шывĕ пек таса пулма тăрăшăп, – лăпкăн хушса хурать Чашла. – Эпĕ шыв ятлă вĕт.

– Уял текенни вара уйра ӳсекен ырă тырă пек кашлатăр! Турул, эсĕ кам пулатăн?

– Эпĕ чăнлăха шырăп.

Ачасем пĕр кĕтмен çĕртен çапла хăватлă шухăшсем пырса кĕнинчен хăйсем те тĕлĕнсе кайрĕç пулмалла. Ватă йăмра айĕнче шăп. Вăштăр-вăштăр! çил кăна чуна лăплантаракан темле çемçе сасă кăларать. Чăйй! вĕçсе килчĕç çав вăхăтра чĕкеçсем. Пĕве çийĕпех вĕçсе иртеççĕ те çуначĕсемпе шыва чĕрсе илеççĕ. Чĕкеçсем те шыва кĕреççĕ иккен! Шăрăх! Умлăн-хыçлăн пĕрин хыççăн тепри питĕ хитре пикке тăваççĕ те чăр-р-р! тутарсах шыв питĕнче

йӗр хӑвараççӗ. Ачасем çак ӳкерчӗке куç илмесӗр сӑнаса лараççӗ. Хитре пулӑм!

– Атьӑр, пурте тупа тӑвар, – хӑй шухӑшӗнчен хӑтӑлаймасть Çӗрпи. – Чӑн чӑваш пулма сӑмах парар. Килӗшетӗр-и?

– Çӑмӑл пулмасть пире, – хирӗçлеме пӑхать Чашла. – пирӗн пӗр вӑхӑтрах таса та, ырӑ та, вӑйлӑ та пулма тивет.

– Уй пек, шыв пек, çӗр пек таса пулма тивет – шухӑшлать Уял.

– Чӑнлӑ тата! Чи кирли çавӑ. Чӑн çын таса та, ырӑ та...

Сӑмах парас тесен, малтан тупа сӑмахӗсене шыраса тупмалла пулать. Леш, мушкетерсен пекки. – ас илтерет Турул.

Турул калани аптратсах пӑрахать. Ара, мӗнле сӑмах каламалла пулать тет-ха, чӑн çын пулас тесен. Кӑна никам та пӗлмест. Çил вӗрнӗçем хашӑлл! сывласа илекен ватӑ йӑмра чухлать те, тен, анчах ӑна хальлӗхе никамах та илтмест. Тен, таса уйпа шыв каласшӑн – çук, вӗсем те шарламаççӗ. Шӑп. Ачасем шутлаççӗ. Кам вӑл, мӗн вӑл чӑн чӑваш? Чӑнлӑха мӗнпе танлаштарӑн ӗнтӗ ӑна? Вӑл хӑй пӗр тӗнче! Тӗп шухӑш. Ача чунлӑ япала. Таса ача чунӗсем кӑна чӑн çын пуласшӑн çунаççӗ. Апла, тен, ача ячӗпе тупа тумалла? Ачасем кӑна вӗт-ха вӗсем, хӑйсем те, çапла чӑрсӑрланса ларакансем! Çак шухӑш чӑн малтан Çӗрпи пуçне пырса кӗчӗ пулас. Çавӑ çунтарать, чӑн çын пулас тесе.

– Манӑн пур, манӑн, – тет питӗ хӗпӗртесе кайнӑскер. – Акӑ мӗнле! – хӗрача мӑнкӑмӑллӑн пӑхса илет. – Ача пек чӑн пулар! – тесе хушса хурать.

– Ача пек? – тĕлĕнет Турул. – Ку мана килĕшет. Ӳссе çитĕпĕр те пурте ачаллă пулăпăр. Пулас ачасен ячĕпе тупа тума юрать.

– Пулассисен ячĕпе кăна мар, хамăрăн таса чунсемпе те, вĕсем ан вараланччăр тесе пурăнас пулать пирĕн, – шырать чăнлăха Уял.

– Кунта тепĕр сăмах кирлĕ. Таса! Таса чунлă ача пек чăн пулар! Акă мĕнле! – юлмасть юлташĕсенчен Чашла. Вăл шыв пек таса пуласшăн.

«Таса чунлă ача пек чăн пулар!» – харăссăн каласа хураççĕ пĕр шухăш тытнă атьсем. Çав вăхăтра мушкетерсем пек ал пӳрнисене пĕр çĕре хурса пăхаççĕ. Çук, тем çитмест пек туйăнать вĕсене. Тĕрĕс мар ку! Вĕсем шпага йăтса çӳремеççĕ вĕт-ха! Вĕсем таса чунлă ачасем. Апла, тупа каланă чухнехи хусканусем те урăхла пулмалла. Чĕреллĕ пулмалла. Кусем хĕçпе çапăçма тухман, тухмаççĕ те. Чĕрепе кĕрешсен кăна! Чĕрепе... апла, тен, алла чĕре çине хурса каламалла çак сăмахсене? Ку шухăш та чăн малтан хĕрача пуçĕнче çуралчĕ. Хĕрсем арçын ачасенчен хăвăртрах та тĕрĕсрех шутлаççĕ пулинех!

– Ман çине пăхăр, – тет Çĕрпи. Аллине чĕри патне тытать. Тупа сăмахĕсене калать.

Ку килĕшет пек. Пурте сылтăм ал лапписене чĕрисем çине хураççĕ те, «Таса чунлă ача пек чăн пулар!» тесе калаççĕ. Анчах каллех тем çитмест пек, тен, ытлашши те. Тупа сăмахĕ ытла та вăрăм пек туйăнать. Ачасем пĕр-пĕрин çине ăнлануллăн пăхса илеççĕ те «Ача пек чăн пул!» тесе харăссăн каласа хураççĕ. Çакна тĕнче те илтрĕ пулас. Ватă йăмра та хашăлл! тет. Чĕкеçсем те харăссăн чă-й-йй! туса илеççĕ.

Сулхăн çил вĕрет, йăмра çулçи шапăлтатать, кайăксем шыв çийĕн туй тăваççĕ. Ачисем вара, пĕрре пăхсах курăнать, хăйсем те анраса кайнă. Уял уй пек çап-сутă тăрать. Чашла пичĕ пĕве çийĕ пек ялтăрать. Турула тӳпе сăнĕ çапнă. Вăл, темшĕн, çӳлелле пăхнă. Алли кăкăрĕ çинчех. Çĕрпи вара çĕртен вăй илес пек кукленсех ларнă. Хăйсем мĕн туса хунине те ăнланмаççĕ, курăнать. Вĕсем вĕт хăйсем кăна мар, вĕсем тĕнчене те улăштарчĕç. Çĕрпе шыв, çилпе хĕвел те ку ырă сăмахсене йышăнчĕç. Çакă таса атьсем пек таса та çутă, çемçе те ăшă пулма тытăнчĕç. «Таса чунлă ача пек чăн пулар!» теççĕ пек вĕсем те. Халĕ ĕнтĕ пĕтĕм тĕнче пулăшса пырĕ ку ачасене Туçари шкулта вĕренме, чăн çын пулма...

## Тĕнченавтсен шкулĕ

Туçари шкул сăртра ларать. Ăна Иван Яковлев хăй лартнă теççĕ. Вырăнне те хăех суйласа илнĕ, апла. Икĕ хутлă, пысăк чӳречеллĕ... Унта хăпарса çитнĕ çĕре çамрăк çын та пашкана ерет. Ватăрах учителсем чарăна-чарăна тăрса утаççĕ. Паян сентябрĕн пĕрремĕшĕ. Районти нумай ялсенчен пуçтарăннă ачасем шкул умĕнче ушкăнланса тăраççĕ. Кĕтеççĕ. Турулсем те кунтах.

– Мĕншĕн стени çине Туçари тĕнченавтсен шкулĕ тесе çырса хунă? – ыйтать Çĕрпи. – Эпир мĕн, тĕнче тĕпчекенсем пулатпăр-и?

– Тĕнче тĕпчекенсем кăна мар, тĕнчене тухса каякансем пулатпăр, – учитель пекех

вĕрентсе калать Турул. – Ку шкул вăл космонавтсен шкулĕ пекех пĕр тĕнчерен тепĕр тĕнчене илсе тухать. Уçлăх карапĕ, вара, çакă шкул пулать те.

– Шкул-карап? – тĕлĕнеççĕ ачасем.

Çав вăхăтра шкул гимнĕ янăраса каять. Гимн сăмахĕсем пит илтĕнсех те каймаççĕ, çапах хăлхана кĕнĕ пĕри шухăша ярать.

Эпир тĕнчен, тĕнчен чăн ачисем,

Çак тĕнчене çăлма тухнăскерсем.

Камран çăлмалла вара ку тĕнчене, шутлать кашни шкул ачи. Тапăнса кĕнĕ тăшман та курăнмасть. Пурте юратуллă, хаваслă тата чăнлă.

Çапла шутлакаласа та ĕлкĕреймерĕç пулĕ, ачасемпе учительсем умне шкул директорĕ Тинĕс Давыдович тухса тăчĕ.

– Тĕнченавтсен шкулне вĕренме кĕнĕ ятпа сире пурне те саламлатăп, – пуçларĕ вăл хăй сăмахне. – Туçа шкулĕ – мухтавлă шкул. Кунтан кашни çул çирĕме яхăн ача вĕренсе пĕтерсе тĕнчене тухса каять. Пурĕ вунă пин çын вĕренсе тухнă.

«Вунă пин çын», – шутлать Турул. Ялсенче мĕншĕн карчăксемпе стариксем кăна тăрса юлнине тин ăнланса илет. Вĕсен ачисене çултан çул тĕнчене ăсатнă. Пĕри те каялла таврăнман. Тĕнчерех пĕтнĕ. Турула ку хăратса пăрахать. «Нивушлĕ вара эпĕ, вĕренсе тухса кайăп та, тăван яла Эльчике те çитсе мураймăп, Эль шывĕпе тек чӳхенеймĕп...».

– Вĕренме çăмăл пулмасть. Сире пурне те классене пайланă. Пурĕ виçĕ класс. Тĕрĕслĕх, ырăлăх тата илемлĕх класĕсем, – аякран пек илтĕнет директор сасси. Вăл кам ăçта лекнине

вуласа парать. Турул тӗрӗслӗх класне, Ҫӗрпи илемлӗхе вӗрентекеннине, Чашлапа Уял ырӑлӑх пӗлӗвне параканнине лекнӗ мӗн. Атьсене уйӑрнӑ. Те лайӑх ку, те япӑх – калама хӗн. Вӗренме илнишӗн савӑннӑ та, хӑйсене малашне мӗн кӗтни пирки шутламаҫҫӗ.

Кӗпӗр-кӗпӗр! кӗрсе каяҫҫӗ ачасем хӑйсен класӗсене. Турулсен класс ертӳҫи – Ольга Васильевна Эрне. Вӑл питӗ хитре пек курӑнать, вӑл тӗнче чӗлхипе кӑна калаҫать. Малашне, тет, сирӗн тӑван чӗлхепе пуплеме юрамасть, тет. Тӗнчене тухас тесен, тӗнче чӗлхине алла илмелле. Ку сӑмахсем ачасене анратсах пӑрахаҫҫӗ. Вӗренмен мар-ха вӗсем тӗнче чӗлхине ялта, вӗреннӗ. Анчах нихӑшӗ те ҫапла килсе тухать тесе шутламан. Апла, тӑван ҫӗр-шыва кӑна мар, аннесен чӗлхине те пӑрахма тивет вӗсен! Ку та хӑрататать. Мӗнле шкул ку?

Ҫапла шутласа ларакан Турул вӑхӑтран-вӑхӑта хӑйӗн ҫӗнӗ юлташӗсем ҫине пӑхкаласа илет. Пӗри, Валери ятлӑскер, пӗрмай тӗхӗлтеткелесе ларать. Темле тӑсланкӑ хӑй. Тепри, Улатимӗр терӗҫ, тем ҫырать. Хыҫалтах пӗр хӗрача, вӑл ҫаврӑнкаласа ларнине чӑтаймасӑр Турула ашак хӑлхи туса кӑтартать. Тина ятлӑ терӗҫ пулас. Пурин ятне те ас туса юлаймарӗ ҫав класс списокне вуласа панӑ чух. Турул та хӗртен юлмасть, пӳрнипе кӑна ӑна чуп тунӑ пек туса кӑтартать. Хӗрача хӗрелсе каять. Пуҫне пӗкет. Турула ку, темшӗн, питӗ килӗшет. Чӗринче тем пӗҫертсех илет. Класс та темле ҫуталса илнӗ пек. Стена ҫине ҫакса тухнӑ темле палламан ҫынсен портречӗсем те тӗлӗнсе пек пӑхса илеҫҫӗ. Кам, мӗнле пит хӑюллӑ ача

ку, теççĕ пулас. Турул вĕсене пĕрне те палламасть. Ахăртнех, питĕ тĕрĕс çынсем пулас!

– Класс хăй пĕр организм. – каллех хăлхана кĕрет Ольга Васильевна сасси, – çавăнпа та вăл лайăх ĕçлесе пытăр тесен пирĕн класс старостине суйламалла. Кам хăй çине çак ĕçе илме пултарать, алă çĕклеме ыйтатăп. Класра шăп. Кама кирлĕ пултăр?

Турул Элчик шкулĕнче пĕрмай старостăра çӳренĕ-ха та, анчах кунта, ют çĕрте аптраса ӳкмелле. Юлташĕсем те çуккă, Урăх классенче вĕсем. Тем тумалла? Ху çине илес тесен пуринчен ытла тĕрĕс пулмалла. Кунта тĕрĕс шутлама, тĕрĕс пурăнма вĕрентетпĕр терĕç. Йывăр ку. Çапах та, тĕрĕс пулас тесен, класа кăна мар, тĕнчене те ху çине тиеме тивет вĕт-ха!

– Эпĕ, – тет Турул. – Эпĕ ку ĕçе хам çине илетĕп. Атьсем килĕшеççĕ пулсан, килĕшетĕп.

Хирĕç калакан çук. Анчах юнашарах такам тĕхĕлтетни илтĕнкелет, пăшăл-пăшăл тăваççĕ такам тутисем. Сассăр пулсан та илтĕнет.

– Мĕнех, килĕшетĕр пулсан питĕ лайăх. Кам пултăн-ха эсĕ, çапла хăюллăскер?

– Турул Ельмов. Элчикрен.

– Лайăх. Итле староста. Пĕрремĕш задани. Паян шкул пахчине йĕркелеме тухатпăр. Пирĕн тĕрĕс пурнăçпа пурăнма вĕреннисĕр пуçне хитре те пурăнма пĕлмелле. Тухрăмăр.

Ачасем пӳлĕмрен кĕпĕрленсе тухса каяççĕ. Шкул пахчи, калас пулать, питĕ кăмăллăн курăнать. Панулми шăрши сăмсана кăтăклать. Чие çырлисем шерепеленсех çакăнса тăраççĕ.

Кам мĕн çиес килет, тататть. Тутанса пăхать. Турулсемпе пĕрле ытти классем те тухнă иккен. Кашнин хăйĕн участокĕ. Туссем самантрах пĕрле пуçтарăнчĕç те хăйсемпе мĕн пулса иртни пирки калаçма пуçларĕç. Çĕрпин мĕн халь тин кирек мĕнле пулăмпа е япалапа тĕл пулсан та, чăн малтан, хитрелĕх çинчен шутламалла пулать. Хитре пурăнма вĕренмелле. Уялпа Чашла пĕр класра. Вĕсен вара ырă ĕç тума вĕренмелле. Акă, калăпăр, пахчари ĕçсене ырă ĕç тесе хаклама май пур. Чунтан-чĕререн тусан, паллах. Çавăнпа та туссем нумай калаçса тăмарĕç, çĕнĕ юлташĕсемпе пĕрле ырă та хитре ĕçсем тума васкарĕç. Уйăрăлчĕç.

Шкул пахчи питĕ пысăк. Ăна мĕн кашни çулах вĕренме килекенсем аслăлăтса пынă. Турулсен те паян малтанрах хатĕрлесе хунă улмуççисемпе чие ывăççисене лартма тивет. Ку йăлана кĕнĕ ĕç. Шкул йăли. Ку питĕ савăнтарать. Мĕншĕн тесен Турул йывăç лартма питĕ юрататть. Унсăр ун чунĕ те канмасть пулĕ. Акă вăл кампа пĕрле лартас-ши текелесе пăхкаласа тăрать. Участок тепĕр енчех пĕччен тăракан Тинăна асăрхать. Ун аллинче те улмуççи. Кĕреçе тытнă Турул хĕр патне васкать.

– Тина, – тем вăтанарах пуçлать ача. – Мĕн, тен, пĕрле лартăпăр çак улмуççине. Мĕнле сорт?

– Антоновка, – хуравлать хĕр. Вăл та вăтанать пулас. Çамки çинчи пĕр кăтра пайăрка çӳç çил çинче вĕлкĕшет. Куçĕ ачашшăн пăхать. Тути тăп.

– Эпĕ юратнă сорт, – тăрăшать каччă. Таса та тӳрĕ чунлă пулас ку хĕр, шутлать

ăшĕнче. Кунпа туслашма юрать. – Атя, эпĕ шăтăкне чавăп, эсĕ тытса тăр.

Хĕр килĕшсе пуçне сĕлтнине кура, Турул пĕтĕм вăйне хурса çĕр чавма тытăнать. Улмуççи лартмалăх шăтăк чавасси ним те мар вăл. Ун пеккисене çамрăк пахчаçă пинĕпе те чавнă пулĕ. Килĕнче те вĕсен, çавăнпах пуль, чăн-чăн сад ешерет. Пĕтĕм ял ăмсанать. Çĕр чавнăçем, каччă çумрах тăракан хĕр пĕвне аялтан пуçласа пуç тӳпи таран пăха-пăха илет. Ун хĕвелпе пиçсе çитнĕ йăлтăркка шурă урине тепĕр чухне алăпа та тытса ачашласа пăхас килет. Мĕн-ма тесен, вăл чисти кантăк пек яка, çутă. «Ун пек хитре ура та пулать-ши вара?» – шутлать каччă. Каччă шухăшĕ кĕни хăйне те тĕлĕнтерет. Тепĕр тесен, вăл вĕт вунă пиллĕкре!

Турул еплерех ĕçленине хĕр çӳлтен пăхса тăрать. Сарлака хул-çурăмлă кĕлетке куç умĕнче тенĕ пек тем пысăкăш шăтăк чавса пĕтерни ăна тĕлĕнтерет. Темле хăват пурри сисĕнет ку каччăра. Кăмăлĕ те питĕ çемçе. Куçĕ те, калаçнă чухне, вăтанарах пăхать. Тина хăй çине питĕ хăюлланса ясаррăн пăхнине юратмасть. «Лайăх çын ку, – шутлать хĕр, – кунпа туслашма юрать».

Акă, улмуççи лартма та вăхăт çитрĕ. Чылай анлă та тарăн шăтăка Турул ятарласа илсе килнĕ тислĕклетнĕ хура тăпра пăрахрĕ. Тина тӳп-тӳрĕ тытса тăракан йывăç тымарĕсене каччă тăмлăрах тăпрапа хупларĕ. Тăпри çине ухса ташларĕ. Хĕр çакна пĕр сăмах каламасăр пăхса тăчĕ. Вăл улмуççи лартса курман та Турул хăтланăвĕ ăна чисти шаман ташши пекех туйăнчĕ. Пĕрле тунă ĕçе каччă айккинерех кайса пăхса илчĕ. Улмуççи вуллине тытса тăракан

хĕре тепĕр хут курчĕ. Ытла та хитре-çке ку хĕр!

– Эсĕ хăш ялсем? – чăтаймасть вăл ыйтмасăр. – Эпĕ Эльчикрен.

– Туçаран, – тет хĕр. Сасси кĕмĕл пек. Тути уçăлмассерен шап-шур шăлĕсем хĕвел çинче тата шуррăнраххăн ялтăрса илеççĕ. Ку тата хытăрах тыткăнлать. Хĕр сăмахне татах илтес килет. Анчах вăл тек чĕнмест.

– Кам таврашсем? Пирĕн Ельме йăхĕсем те çук мар кунта. Тен, эсĕ пирĕн тăванах пулатăн?

– Çук, – кулса ярать хĕр. – Сирĕн тăван мар. Эпĕ Тăрăн йăхĕнчен. Эпĕ Турунова. Тина Турунова.

– Турунова! – анрасах каять каччă. – Эпĕ вара Турул. Ельмов. Тем, пирĕн ятсем пĕр пекрех илтĕнеççĕ мар-и?

– Пур темскер, – тата уççăнрах кулса ярать хĕр.

Ку каччă хĕр чунне шартсах ярать. Турулăн та çапла уççăн кулас килет. Хăй те хĕрпе пĕрле ахăлтатасх кулса янине те сисмест. Ачасем те кулкалам пек тăваççĕ. Мĕн пулнă кусене, теççĕ пулинех. Ольга Васильевна та пăхать. Ăнланать.

– Хитре те тĕрĕс лартнă, – мухтать учительница. – Шывĕ, сапмалăх, бассейнра. Çавăнтан илĕр.

– Ку ман ĕç, – ярса илет витресене Тина. Шыв ăсма чупать. Турулăн халь тем тумалла тет. Хĕре, пĕрре пăхсан, пулăшмалла пек. Тепре, тен, хăй мĕн тăвас тенине тутăр, чармалла та мар. Хăшĕ тĕрĕсрех? Каччă иккĕленет. Ольга Васильевна юнашарах, ку мĕн

тăвать-ха тесе, пăхса тăрать. Вăл пăхнине Турул пĕтĕм ӳт-пĕвĕпе сисет. Мĕн тумалла? Ялта хĕрарăмсем шыва хăйсемех каяççĕ. Хĕр тени те йĕтемре михсене çавăрать кăна. Мĕн пĕчĕкрен хăнăхнă та – вĕсене, тен, пулăшма та кирлех мар. Халь тин, кунта вара? Хăйĕнчен хăй ыйтса та пĕлеймерĕ каччă, ал-ури хăех çил пек çĕкленсе кайрĕ ăна, бассейн еннелле ыткăнтарчĕ.

– Час, – терĕ Турул. – Эпĕ сана пулăшăп. – Çапла каларĕ те, икĕ витре шыв йăтса килекен хĕре чарчĕ.

– Хамах, – тесе калама тăчĕ хĕр. Анчах каччă сăмахласа тăмарĕ, хĕр аллинчи туп-тулли витресене ярса илчĕ, улмуççи лартнă тĕлелле утрĕ. Витрери шыв чӳхенсе-чӳхенсе илчĕ, çĕре тăкăнчĕ, утнăçем икĕ йĕпе йĕр хăварчĕ. Çакна хĕр кăна асăрхарĕ. Васкарĕ çав каччă. Çавăнпа тăкăнчĕ. Хĕре вара ку пурнăç куççулĕ пекех туйăнса кайрĕ. «Икĕ йĕр, икĕ çул... Куççуллĕ çул», – пырса кĕчĕ ун пуçне пĕр кĕтмен шухăш. Чунĕ ыратса илчĕ. Паçăр кăна сарлака кĕлетки çумне тĕршĕнес килетчĕ вĕт-ху ун! Улмуççи лартнă чух. «Ай, Тина та хĕр пулса çитнĕ иккен!» – шутлать каччă хыççăн утакан хĕр.

Шыв ыттисене те кирлĕ. Турул пурин валли те йăтса парать. Акă, вăхăт нумай та иртмерĕ, пĕчĕк сад пахчи ӳссе те ларчĕ. Кунта халь кашни ачан хăйĕн улмуççийĕ пур. Ăна мĕн вĕренсе тухса кайиччен пăхмалла, ӳстермелле. Кайран унта мĕн пулĕ те, паллă мар. Кайран ыттисем пăхĕç. Шыв шăварĕç. панулмийĕсене татса тутанса пăхĕç. Çакă савăнтарать те!

Ĕç вĕçленĕ ятпа Ольга Васильевна пурне те тав сăмахĕ каларĕ. Пĕрремĕш тĕрĕслĕх урокĕ лайăх иртрĕ, терĕ. Пурте пĕтĕм чун-чĕререн, ырă кăмалпа хитре ĕç турĕç. Чи хакли çакă. Апла, сиртен чăн çынсем пулаççех.

Турул учительница каланисене пĕтĕмпех ăнланса пĕтерейменрĕ. Унăн хăйĕн шухăшĕ. «Улмуççи хуçисем ăçта-ши?» – шутларĕ вăл. Улма йăтнă улмуççисене хĕрхенчĕ. Татăр пире, теççĕ пек вĕсем. Анчах татакан çук.

## Ырă ĕç

Тепĕр урока пурте Туçа ял тăрăх тухса кайрĕç. Уялсен класĕ Йăлăмкаспа кайрĕ. Кам мĕнле ĕç туса пама ыйтать, çавна пулăшас пулать. Леш, Аркадий Гайдар çырнă «Тимур тата унăн команди» повеçри пек ĕçсем тумалла тет ачасен. Уялпа Чашла пĕрле темле пĕр ватă карчăк патне лекнĕ. Варкка аппа ятлă. Тăхăрвунă çулта тет. Мунча хутма вутă çурса памалла. Пахча-çимĕçне шăвармалла. Ĕç питĕ нумай, тет. Пĕччен тăрса юлнă та ватлăхра халь тин ăна никам та пулăшмасть. Кӳршĕсем пăхкаласа тăраççĕ. Анчах кашнин хăйĕн ĕçĕ пур. Карчăк хурланать. Çав вăхăтрах савăнать те. Юрать шкул ачисем пур, тет. Ăна иккен кашни çулах çапла тĕнченавтсем пулăшса пыраççĕ. Уялпа Чашламан та, апла, шкултан мĕн вĕренсе тухиччен пăхма тивет ку карчăка. Пĕчĕккĕ хăй. Шăммипе тирĕ кăна тăрса юлнă. Çапах та питĕ ăслă-тăнлă калаçать.

Çамрăк çыншăн вутă татса çурасси вăл ним те мар. Çын валли ĕçлесе пама та хăнăхман мар ачасем. Ялта пĕрмаях нимелле пурăннă. Пĕрле вăрман кăларнă, пĕрле çĕр улми лартнă, пĕрле утă çулнă, авăн çапнă... Акă икĕ яшă яшт! кăна сиксе тăраççĕ те пĕчĕк пĕренесене кусла çине хурса вутă татма тытăнаççĕ. Алă вĕççĕн татма çăмăл мар. Час ывăнтарать. Анчах ывăннине пĕрре те палăртас килмест. Мĕн вăй çитнĕ таран туртатăн та туртатăн вара пăчкăна. Чарăнма та юрамасть пек. Ара, карчăк ачасем епле ĕçленине крыльца çинчен пăхса ларать. Вăхăтран-вăхăта, эпĕ кунтах тенĕ пек, кăххăмлатса илет. Карчăк хĕр мар та, çапах та кăмăлласкер, çавăнпа та ун умĕнче пĕрре те намăс курас килмест. Мĕн вăйран кайиччен туртаççĕ пăчкăна Уялпа Чашла. Чăм шыва ÿкеççĕ. Малтанрах чашăлтатса ÿкекен йывăç кĕрпи халĕ аран-аран тенĕ пек ÿккелет кусла айне. Çапах та икĕ каччă пĕр-пĕрне парăнмаççех. Кам малтан пăрахать теççĕ пулинех. Çакна карчăк та курать. Кулкалать. Юлашкинчен, ах! кусем ывăнчĕç пулĕ текелесе, пÿртрен пысăк куркапа сăра ăсса тухать.

– Çитĕ-çитĕ сире, канса илĕр. Акă сăра ăсса тухрăм. Ĕçĕр, – сĕнет куркине ватă çын. Атьсем кĕттермерĕç. Кăпăклă сăрана чун каниччен ĕçрĕç. Килти сăра калама çук тутлă çав вăл. Çăра, кăпăклă. Хăйма пек.

– Тавах! – теççĕ çамрăксем. Каскасем çине канма лараççĕ. – Ачăрсем ăçта вара сирĕн, мĕн-ма пĕччен пурăнатăр? – ыйтать Уял.

– И-и-и! ачасем ăçта тетĕр-и? Ăçта пулччăр, хулара, паллах. Ÿстертĕм-ÿстертĕм те,

халĕ акă килсе те курмаççĕ. Вĕсен хăйсен ĕçĕ пулĕ çав, вăхăт çукрах теççĕ те...

– Вĕсем те Туçари тĕнченавтсен шкулĕнчен вĕренсе тухнă-и? – кăсăкланать Чашла. Вăл хăй те хулана каяс шухăшлă та...

– Çавăнта, пурте çавăнтан вĕренсе тухрĕç те... Питĕ лайăх ачасемччĕ... Ырăччĕ. Пулăшатчĕç. Тем пулчĕ. Мăнукĕсем çулла канма мĕн килсен «ты, баба, дура!» тесе каласа хăвараççĕ. Юлашки вăхăтра килме те пăрахрĕç. Ват çынна камăн пăхас килтĕр ĕнтĕ?

Каскасем çине улăхса ларнă ачасем шухăша каяççĕ. Ара, вĕсен те вĕт-ха ялта амăшĕсем пур. Вĕсем те ватăлса çитĕç те, вара, пĕччен юлсан, ăçта кайса кĕрĕç. Эльчикре тĕнченавтсен шкулĕ те çуккă. Шкул ачисем те тепĕр тесен, пĕрмай пулăшса тăрас çук.

– Ан кулян, Варкка аппа, эпир сана пăрахмăпăр, – хĕрхенет Уял. – Час акă вутă татса парăпăр та мунча хутса кĕрĕн. Мунчине те хутса парăпăр, шывне те кӳрĕпĕр...

– Турă пулăштăр ĕнтĕ сире, – тав тăвать карчăк. – Эпĕ кăшт кĕрсе канам-ха, – тет те туйи çине таянса пӳрте кĕрсе каfive.

Картиш пушаннă пек. Хуçи çуккă та... Крыльци кăна мар, хуралчĕсем те тайăлнă пек ку килĕн. Витере выльăх сасси илтĕнмест. Çук пулас. Картишĕ те питĕ çеремлĕ. Икĕ каччă ун-кун пăхкаласа лараççĕ. Вĕсенĕн килĕнче пĕрре те кун пек мар та, питĕ тĕлĕнеççĕ. Ялта пурăнса та мĕнле вара выльăх тытмалла мар тет? Вата пулсан та вăйсăрах мар-ха ку карчăк. Кирлĕ мар тенĕ ĕнтĕ.

Карчăкпа пĕрле темле инкеке лекнĕ пекех туйса илчĕç хăйсене Уялпа Чашла. Вĕсен

пуçĕсем çине тем йатăнса анчĕ. Çын шăпи. Халь тин ĕнтĕ мĕнле чунпа пăрахса хăварăн-ха çакă аран-аран çӳрекен ватă çынна? Халĕ кашни яваплă. Пур-и, çуккă-и ун ачисем, ĕç унта мар. Ĕç халĕ Уялпа Чашла аллинче. Тĕрĕсрех каласан, чĕрисенче. Тупайĕç-и вĕсем карчăка пулăшмалăх вăй, ырă-и вĕсен чунĕсем, е çук? Кăна вĕсем хальлĕхе хăйсем те пĕлмеççĕ. Эпир те пĕлместпĕр. Çавăнпа та, курăпăр, пурнăç кăтартĕ, тесе ларăпăр ачасемпе пĕрле çак каскасем çинче. Ларса та çитет пулĕ. Карчăк мĕн калĕ?

– Çитет ларса, – сиксе тăчĕ Уял. – Атя, татса пĕтерер те çурма пуçлар. Пăчки те ку, питĕ япăх татать. – Уял тутăхса кайнă пăчкăна тыткаласа пăхать. – Хăйрамалла кăна.

– Унсăрах, – ӳркенет Чашла. – Ман хырăм та выçса кайрĕ... Шкулта буфет пур терĕç, çавăнта апат çисен аванччĕ!

– Апат шухăшĕ кăна сан! Атя, тыт пăчкă авринчен, тĕнченавт, чăт. Мантăн-им, тупа сăмахĕсене? Ача пек чăн пул!

– Чашла Уял çине тем аса илнĕ пек пăхса илет те, ун хыççăн аллине чĕри çине хурса, «Ача пек чăн пул!» тесе хушса хурать. Çав вăхăтрах таçтан вăй кĕрсе каять. Канса илчĕç те, асамлă сăмах каларĕç те, вăй тупăнчĕ. Икĕ çамрăк тутăхса пĕтнĕ пăчкăпах татса пĕтерчĕç юлашки каскасене. Шкула таврăнма та вăхăт çитрĕ ĕнтĕ, апат çиме те... Çавăнпа та ачасем Варкка аппапа сывпуллашмасăрах тухса кайрĕç картишĕнчен. Вут çурма пĕрех килмелле терĕç.

Шкула вăхăтра çитрĕç. Ыттисем те пухăннă. Кашнин хăйĕн тĕл пулăвĕ, пăтăрмахĕ.

Кама кăна пулăшман-тĕр шкул ачисем! Ватти-вĕттине, вăйпиттине те... Ялта ĕç нумай. Туçа район центрĕ пулсан та пĕрех ял пекех курăнать. Кашнин хăйĕн хуçалĕхĕ-мĕнĕ. Кашни килтех ал çитмест. Мĕншĕнни паллă. Кашни кил ачине тĕнчене панă, тĕрексĕр тăрса юлнă.

Ырă ĕç тăвакансен класне директор хăй ертсе пырать. Акă, Тинĕс Давыдович ачасене пĕтĕмлетӳ пекки тума пуçтарнă та, сăмах калать.

– Ырă ĕç тума питĕ йывăр. Кăна хăвăр та ăнланса илтĕр пулĕ. Пĕрре-тепре çеç мар, мĕн ĕмрипе ырă туса пурăнма вĕренмелле пирĕн. Çын, паллă, чылай чухне пулăшу-мĕне йышăнмасăр та тăма пултарать. Кун пек чухне кӳренме юрамасть. Пысăк чунлă пулмалла! Вăйлă, таса, пысăк чунлă çын кăна ырă ĕç тума пултарать. Кăна эсир хăвăрах туйса илтĕр пулĕ.

Класс чĕнмест. Ку сăмахсем мĕне пĕлтернине тӳрех ăнланса илме те май çук. Паллах, кашни хăйне ăслă, вăйлă, чунлă курать. Анчах пурнăçра, лайăх тăвас тенĕ çĕртех, темшĕн, усалли те сиксе тухать. Ун пеккисем пулнă. Хăш-пĕр ачасем пуçĕсене пĕксе тăраççĕ. Эппин, вĕсем çынна пулăшма вăй çитереймен.

– Çын сан пулăшăвна йышăнмасть пулсан мĕн тумалла тет вара? – тĕшмĕртет Уял. – Вăйпа вĕт ырă пулаймастăн.

– Вăйпа ырă тума юрамасть, – ăнлантарать учитель. – Çавна пула ĕнтĕ усалланатпăр та! Усал мелĕ питĕ ансат. Вăл эпир йăнăшасса кĕтсе тăрать. Мĕне те пулин туса çитереймесен, çавă юлнă ĕçе усал йышăнать. «Усалне ан хăвар», теççĕ тепĕр чухне

чăвашсем. Вăйпа юратни те, вăйпа ырă тăвас тени те усала куçать.

Ачасем чĕнмеççĕ. Ку чăнласах кăткăс ыйту. Мĕн-ма-ха вăл, ырă тăвас тени, усалпа çаврăнса килет. Кăна никам та пĕлмест. Мĕн, Туçа ачисем ырă тăвас темен-им? Ырă тунă та, килĕсене йăлт пĕтернĕ. Ку, куç кĕрет. Уялпа Чашла ку ĕç мĕнле пулса иртнине вутă татса ăнланса илчĕç. Пĕтĕмпех мар пулсан та тĕшмĕртеççĕ.

– Тен, ырă тума пачах та юрамасть. Пурăнччăр, кам мĕнле пурăнас тет, – хырăм выççине чăтаймасть Чашла. Мĕн калаçнисем ăна пустуй сăмах пек туйăнаççĕ. Апат кăна чăн. Чăнне вара каламасть. Куласран хăрать.

– Ырăран ытла ырă шырамаççĕ, теççĕ, чăн та. Енчен те çын йĕркеллĕ пурăнать-тĕк, ăна нимле пулăшу та кирлĕ мар. Хăй тĕллĕн пурăнмалăх ун вăй та, кăмăл та пур. Ун пек чухне айккинче тăр.

– Мĕн айккинче! Апат çиес килет ман! – çухатать чăтăмне Чашла. Ку сăмах пурне те килĕшет. Пурте кулса яраççĕ. Пуçтахларах систершĕ пулсан та кунта тĕрĕсси пур. Ачасен хырăмĕсем пурин те выçнă. Кăна класс ертӳçи те ăнланать.

– Юрать, – тет вăл. – Апатран аслă пулаймастăн. Буфет иккĕмĕш хутра.

Çакна кăна кĕтнĕ ушкăн ача иккĕмĕш хута çĕмĕрсе тенĕ пек хăпарса каять. Директор пуçне пăркаласа пăхса тăрса юлать.

## Чăваш тĕрри

Çĕрпи илем класне лекнĕ те пĕрремĕш урокрах тĕрĕ тĕрлеме тивнишĕн питĕ савăнчĕ. Мĕн пĕчĕкрен вĕреннĕ япала чуна çывăх. Çĕр тĕрлĕ тĕрĕ пĕлет Çĕрпи. Кукамăшĕ вĕрентнĕ. Шел, вăл çĕре кĕнĕ хыççăн урăх пит ниме те вĕренймерĕ хĕр. Тен, шкулта вĕрентĕç, шутларĕ ача. Çавăнпа та вĕсен класс ертӳçи тĕрĕ хатĕрĕсене валеçсе парсанах ĕçе пуçĕнчĕ. Татьяна Васильевна, çапла чĕнеççĕ учительницăна, ачасем мĕн туние пăхкаласа çӳрерĕ. Çĕрпи мĕн тунине тӳрех ăнланса илчĕ. Сакăр кĕтеслĕ чăваш çăлтăрĕ.

– Мĕне пĕлтерет-ха ку çăлтăр сан, – интересленет вĕрентекен. – Ăнланса ӳкерсен аванччĕ. Эпĕ сире урăххине сĕннĕччĕ мар-и-ха?

Чăн та, Татьяна Васильевна ачасене юмахсенчи висĕ пăхаттир, темле акăшсем, Иванушкăпа Марья Моревнăна тĕрлеме сĕннĕччĕ. Ку хĕрача вара хăйĕн юмахне туртса кăларнă.

– Кашни юппи мĕне пĕлтернине пĕлсех те каймастăп. Кукамие ӳкереччĕ те... Ман шутпа, çăлтăр вĕçĕсем халăх ăс-тăнĕпе çыхăннă. Тен, калăпăр, пĕлместĕп, ахальтен шутласа кăларман вĕт-ха ăна халăх? Калăпăр, пĕри чăваш ăсне, тепри чунне, виççĕмĕшĕ, тен, сăмахне пĕлтерет.

– Лайăх каларăн, – савăнать Татьяна Васильевна. – Кун çинчен эпĕ хам та шутланă. Сакăр ретлĕ пулмалла пек чăваш пурнăçĕ. Мăшăрлă. Мĕнле калаççĕ-ха? Чăваш савăнăçпа хурлăх хушшинче, теççĕ. Çавăнпа та, эпĕ шутлатăп, çăлтăрăн кашни вĕçĕ икĕ юплĕ те,

кашни юппи хире-хирĕçле пулăма ăнлантарса параççĕ пулĕ тетĕп. Сăмахран, тин çеç каларăм, савăнăçпа хурлăх. Тепĕр икĕ юплĕ вĕçĕ – ырăпа усал.

– Виççĕмĕшĕ – чăнпа суя, тăваттăмĕшĕ – илемпе сăнсăрлăх, – самантрах ярса илет ку шухăша хĕр пĕрчи. Ку питĕ ансат-çке! Çав вăхăтрах тин çеç питĕ кăткăс пек курăнатчĕ. – Апла, çăлтăр тĕнче тытăмне сăнласа парать мар-и?

– Маттур! – ырлать Татьяна Васильена? – Эсĕ калани маншăн та çĕнĕ. Чăн та, хамăр шкултах вĕт-ха çавнах туса пыратпăр.

– Ку çăлтăр вĕт, куç умĕнче тытмалли пурнăç правили! – кăшкăрсах ярать Çĕрпи. Кăшкăрса ярать те çăварне аллипе хуплать. Ун çине пĕтĕм класс пăхать пек. Чăн та, пăхаççĕ те. Классра ытларах хĕрсем. Арçын ачасем пĕр-иккĕн кăна. Илем арçын валли мар, тенĕ-ши? Классене ача кăмăлне кура пуçтарнă та, акă, илем классне хĕрсем ытларах çыраннă. Çав хĕрсем халĕ Çĕрпипе Татьяна Васильевна çине малалла тата мĕн пулать-ха тесе куç илмесĕр пăхса лараççĕ.

– Çĕрпи çăлтăр ӳкерет. Вăл мĕне пĕлтернине питĕ хăйне майлă ăнлантарса парать. Эсир те хăвăрăн тĕрĕрсенче эпĕ кăтартнисене кăна мар, мĕне те пулин пĕлтерекен урăх япаласене те ӳкерсе кăтартма пултаратăр.

Класра шăп. Халь тин сывлăш та уçăлса кайрĕ тейĕн. Кашни ача хăй мĕн ĕмĕтленнине тĕрĕлет. Учительница хăй тĕрĕс тунăшăн савăнса уткаласа çӳрет. Мĕн вара, тепĕр тесен, мĕн-ма вара тĕнчене тухатпăр тесе, тĕнче япалисене ӳкермелле тет! Хамăр ăспа, тăван сăмахпа,

чăваш чунĕпе тухсан тата лайăхрах та мар-и вара? Çакна вĕт пĕчĕк хĕрача та ăнланать. Вĕрентекенсен куçĕсем çакна курмаççĕ. Хăйĕнчен хăй тĕлĕнсе шутласа утса çӳрет ӳнерçĕ. Ăна та академире вĕрентнĕ чухне такамсен, ют çĕршывра ӳссе çитĕннĕ çынсен ĕçĕсене вĕрентетчĕç. Пĕр академик та чăваш çĕрне ӳкерме вĕрентмен. Пултарайман та. Чăваш çĕрĕ вĕт вăл чунлă! Тăван çĕр чунне кăтартма вĕрентмелле мар-и вĕсене? Чăн илем çавăнта мар-и?

– Тĕссене мĕнлисене илмелле-ши? – ыйтать хĕр. Юпписем хире-хирĕçлĕ пулсан, тен, хура-шур курма ӳснĕ тенĕ пек, шурăпа хура тĕслĕ тăвар.

– Лайăх. Хĕресне хĕрлĕ çип яр!

– Тавах!

Классра каллех шăплăх хуçаланма тытăнать. Пĕр вунă ытла хĕрача пуçĕсене пĕкнĕ те тăрăшсах тĕрĕ тĕрĕлеççĕ. Кашнин хăйĕн ĕмĕчĕ-ӳкерчĕкĕ, кашнин хăйĕн туйăмĕ-шухăшĕ, кашнин чун юррийĕ. Çакă шалти пурнăç, чун ĕçĕ палăрмасăр тăма пултараймарĕ. Шăплăх пусăрăнсах çитрĕ те кĕвĕ пулса шăранса янăрама тытăнчĕ. Капланса-капланса килчĕ те сасартăк Çĕрпи сасăпах юрласа ячĕ.

Илемлĕ, илеимлĕ,
Илемлĕ чăваш юрри.
Илемлĕ чăваш юрри те
Юрлама пĕлсен кăна.

Илемлĕ, илемлĕ,
Илемлĕ чăваш тĕрри.
Илемлĕ чăваш тĕрри те

## Тĕрлеме пĕлсен кăна.

Янăрать класс. Янăрать пĕтĕм тĕнче. Юррине те пурте пĕлеççĕ те, алăри тĕррисем те сас кăлараççĕ тейĕн. Ачасемпе пĕрле вĕрентекен те юрлать. Юрă майăн тĕрлеме питĕ меллĕ. Пурнăç илемленсех каять.

Татьяна Васильевна пĕтĕмлетӳ тăвать. Тĕрĕре кашни хăй чунне уçса пама тăрăшрĕ, тет. Ку – лайăх. Юрри те вырăнлă пулчĕ. Пирĕн тĕллев, тет вăл, илем урлă çут çанталăк чăнлăхĕпе ырăлăхне уçса парасси. Çĕрпи пекех шутлать вăл. Хĕр тени, кашни самантра тенĕ пек хитререх пулма тăрăшать. Тĕкĕр умĕнче явкаланать-и пĕтĕм ӳт-кĕлеткипе, шукăль тум тăхăнать-и, е пĕр-пĕр ĕç тăвать – кашнинчех илемлĕрех курăнма тăрăшать хĕрупраç. Кăна ăнланма пулать. Урăхла каласан, пĕтĕм тĕнчене хитрелĕх витĕр курать. Пур япалана та, ĕçе те хитре тума тăрăшать. Хитре мар-тăк, кирлĕ те мар!

Вĕрентекен каланисем чĕресенех кĕрсе ларчĕç, пурне те килĕшрĕç. Çавăнпа та пуль паçăрхи юрă каллех хăй тĕллĕнех шăранса тухрĕ хĕрсен чĕрисенчен. «Илемлĕ, илемлĕ, илемлĕ чăваш тĕнчи. Илемлĕ чăваш тĕнчи те пурăнма пĕлсен кăна», – теççĕ ал-урисем, тутисем, куçĕсем... Ку юрă, ахăртнех, класс гимнĕ пулса тăчĕ.

# Суя çул

Туссем иккӗмӗш хутра вырнаçнӑ буфетра тӗл пулчӗç. Çур кунлӑха кӑна уйӑрӑлнӑ-ха вӗсем, нумай та мар, тӗл пулӑвӗ вара ӗмӗр курман пек килсе тухрӗ. Пуринчен ытла Чашла савӑнать, Çӗрпи пӗр кӗтмен çӗртен Турула ыталасах илчӗ. Чарӑнайми кулаççӗ хӑйсем. Мӗн пулнӑ тесе ыйтсан, хуравне тем пек шырасан та шыраса тупаймӗç. Пӗр пӗтӗмӗшле каласан, пӗрремӗш урок ӑнаçлӑ иртнӗ. Килӗшнӗ. Таса та çутӑ классем, тутлӑ шӑршлӑ буфет, çӗнӗ туссем... Тата ӗмӗр татӑлми мӗн ачаран аталанса çирӗпленсе çитнӗ туслӑх.

Тӑватӑ ача пӗр сӗтел хушшине кӗрсе ларнӑ та кашни хӑйӗнпе мӗн пулса иртнине кула-кула каласа парать. Буфетра пур çӗрте те çапла. Хавслӑ калаçу, кулӑ, шӑв-шав. Учительсем те вӗсемпе пӗрлех апатланаççӗ иккен.

Апачӗ тутлӑ пулчӗ те тӳлевӗ вара тата тӗлӗнмелле килсе тухрӗ. Кунта укçа ыйтакан çук, мӗн чухлӗ тӳлес тетӗн, çавӑн чухлӗ тӳлетӗн. Ачасем тӑрӑшсах кам мӗн çинӗ те мӗн хак тӑнине шутлаççӗ. Укçине буфет кассине кайса хураççӗ. Кам мӗн чухлӗ хывнине никам та шута илмест. Эльчик ачисем аптраса ӳкрӗç. Кун пеккине вӗсем курман. Ялти лавккара сутуçӑ хӑй шутласа парать, унта улталаймастӑн. Кунта вара? Ачасен пуçне тем тӗрлӗ шухӑш пырса кӗрет. Никам та тӗрӗслемест-тӗк, апатшӑн сахалтарах тӳлесен те юрать пек. Укçа мӗн, укçа вӑл никамӑн та нумай мар. Ял ачин пушшех те çук. Турул кӗсье тӗпӗнчи вак укçана

хыпашлакаласа пăхрĕ. Ал тупанĕ çине кăларса хучĕ. Шутларĕ. Çитмест пек. Мĕн тумалла? Ун-кун пăхкаласа илчĕ. Тусĕсем пурте укçисене шутлаççĕ. Ахăртнех, тен, вĕсен те çитмест пуль, шутлать ача. Çитменнине ыран та çитерме пулать. Çапла шутларĕ те çын курман чухне тенĕ пек хăвăрт çеç тăрса ывăçри укçине буфет кассине кайса хучĕ. Вăл мĕн чухлĕ хывнине никам та курмарĕ. Пулчĕ, терĕ. Суйрăм, терĕ пулас. Тĕрĕслĕх тени вара ăçта? Тĕрĕс тăватăп тенĕ çĕртех суя çул çине тухса пырать-и-ха вара вăл? Ачасенчен ыйтас – намăс пек. Турул аптрасах ӳкрĕ. Ăçта тет вара халĕ ун тупа тунисем, «Ача пек чăн пул!», тенисем? Пĕрремĕш тĕрĕслеврех чăн пулмалăх хăват тупаймарĕ вĕт! Темиçе пус кăна çитмерĕ вĕт-ха укçи! Ыран хывăп, çитменнине çитерĕп терĕ. Суя ку! Турул тарăхсах кайрĕ. Мĕнле чун вăл, суйма хăват тупаканскер? Тĕнчере тĕрĕс пурăнма мĕнлерех йывăр иккен. Тен, май та çук. Суйма вара çăмăл. Акă, ним пулман пек кайрĕ те пачĕ укçине буфет кассине, суйрĕ. Суйнине никам та курмарĕ. Халь тин савăнса кăна пурăн ĕнтĕ, суйрăм тесе. Çук вĕт, тем кăшлать ача чĕрине, пуçне те çĕклеймест. Çакна чăн малтан Çĕрпи асăрхарĕ пулас.

– Мĕн пулчĕ санпа? – кула-кула ыйтать вăл Турултан. – Ачасен савăнăçĕ куç тулли, эсĕ мĕн, хурланатăн-им?

– Çук-ха! – хĕрелсех каять каччă. – Эпĕ мĕн, киле епле кайăпăр тесе шутлатăп.

– Мĕн шутламалли? Тӳртен каятпăр, вăрман витĕр. – хăпартланать Уял.

– Икĕ çырма урлă каçăпăр, виçĕ уй урлă утăпăр, вăрман витĕр тухăпăр, – хушса хурать Чашла.

Турул чĕнмест. Калас-и, калас мар-и, тет вăл ăшра. Тем чарать. Каламасан та юрать пек. Ай, мĕнле иккен Турул чунĕ! Вăл йалт пăтрашăнса кайрĕ. Пĕр пĕчĕк япаларах суя çулпа уттарать. Юрĕ, тет вăл, киле çитсенех кирлĕ чухлĕ укçа илĕп те ыранах апат çинĕ вăхăтра пырса хурăп. Çапларах лăплантарать хăйне хăй ача. Вăл асапланнине никам та курмасть.

Апат çирĕç те туссем çула тухрĕç. Çулĕ вăрăм. Туçаран Эльчике çитсе ӳкмелле. Ытти ачасем те, пăхать Турул, хăйсен ялĕсене туртăнчĕç. Сăртри шкултан пур еннелле те шыв юххисем пек аялалла анса кайрĕç.

Тӳртен тесе тухрĕç те, мĕнле калаççĕ-ха, тӳртен каяканăн ăш хыпать, теççĕ. Çулĕ çук та! Шкула вĕсем аслă çулпа килчĕç. Киле кайма тухсанах, нумай та утмарĕç, вырман ыраш ани çине пырса тăрăнчĕç. Туçасем ыраш вырса пĕтермен иккен! Ăт, уй урлă тухатпăр тесе пыр халĕ. Сукмак та çук. Мĕн тумалла? Ыраш ватса çул тумалла-и, е каялла çаврăнмалла? Ачасем аптраса ӳкрĕç. Пурнăç хăех тепĕр тĕрĕслев йĕркелет мар-и?

– Каялла таврăнатпăр, – тет Çĕрпи. Ыраша ватма юрамасть. Çылăх пулать. Акă, пăхăр-ха, епле хитре ларать вăл.

Ыраш уйĕ, чăн та, питĕ хитре. Пĕр тикĕс ӳснĕ ыраш стена пек тăрать. Кĕрхи ăшă çил килсе çапать те хумлăн-хăмлăн сывласа илет. Нивушлĕ таптĕç мана ку ачасем тет пек.

– Мĕн? – хăпартланать Уял. – Ватнăшăн ним те пулмасть. Эпир ыраш тунисене алăпа айккинелле сирсе пырăпăр. Пĕр пучаха та пĕтермĕпĕр. Акă çапла тăвăпăр.

Уял аптраса тăмарĕ, ман хыççăн утăр тесе, ыраш ăшне аллисемпе хăлаçланса кĕрсе кайрĕ. Ача темле пит асăрханса утать пулсан та ун хыççăн ыраш ваннă йĕр юлать. Çакна пурте курса тăраççĕ. Чĕнмеççĕ.

– Чарăн! – кăшкăрса ячĕ Чашла. – «Ыраш» тени «ырă» сăмахран тухнă. «Ырă аш», тенĕ ăна пирĕн аттесем. Эсĕ вара ăна таптатăн. Пирĕн ырă пулма вĕренмелле вĕт-ха! Тинĕс Давыдович мĕн калĕ?

– Каялла каятпăр-и вара? – хирĕçет Уял. – Кайăр! Эпĕ каймастăп.

Çапла калать те, ыраш ăшнех кĕрсе каять. Самантрах çухалать. Ыраш çӳллĕ. Пуçĕ те курăнмасть. Çаврăнса пăхинччĕ хăть. Ыраш пусси, пăхсан, ваннă пек те курăнмасть. Сирсе хăварнă пĕр тунасем çил вĕрнипе тепĕр хут çĕкленсе те тăчĕç. Тепĕр тесен вĕсен ыран та çак çулпах шкула килмелле пулать вĕт-ха! Сукмакĕ те кирлĕ. Çулсăр мĕнле?

– Эй, мĕн пулать те мĕн килет! – ыткăнчĕ Уял хыççăн Турул. – Эпĕ пĕр хăмăла та таптамăп. Каялла каймастăп.

Çапла каларĕ те Уял пекех çӳллĕ ыраш хушшине кĕрсе çухалчĕ. Чашлапа Çĕрпи иккĕнех тăрса юлчĕç. Тем тумалла тет ĕнтĕ халĕ? Тусĕсем хыççăн кайса ыраша ватмалла, е каялла çаврăнса утмалла. Таврапа никамăн та каяс килмест. Тӳртен лайăхрах, хăвăртрах пек. Тӳртен кайсан вара çак илем те кăштах таптанать вĕт-ха. Ырă тăвас вырăнне усал килсе

тухать. Тĕрĕслĕхпе суялăх, илемпе сăнсăрлăх, ырăпа усал кашни утăмрах иккен! Мĕнле утăм тăватăн, чăваш ачи? Ним те мар ĕнтĕ вăл, пĕрре пăхсан, ыраш пусси тени! Таптаман мар ăна ял ачисем! Таптанă. Анчах та, шкулти тĕрĕслĕх, ырă, илем урокĕсем хыççăн епле-ха çак ыраш ани çине кĕрсе кайăн? Халь тин ачсем кашни утăма расна, урăхла кураççĕ. Суя, усал та илемсĕр çулпа та кĕрсе кайма пулать вĕт-ха! Çапла пурăннă мар-и вара вĕсем халиччен? Ним те пулман-иç!

Турул хăй мĕн тунине ыраш уйне кĕрсе кайсан кăна ăнланчĕ. Ун хыççăн, хăмăла темле тăрăшса сирсе пырсан та, палăри-палăрми пек сукмак, çаврăнса пăхать те, куçа пĕрех тăрăнать. Каллех вĕт, каллех суять мар-и ку ача? Ыраш чылай ванать. Тăп чарăнчĕ Турул. Мĕн тăвать вăл? Юрамасть! Каллех суять вĕт! Буфетра пĕрре, халĕ тепре... Ăт, тĕрĕс пурăнатăп тесе çӳре кунта... Çитет, хĕрсе çитрĕ ача. Хăй кăна мар, чунĕ те çаврăнчĕ. Асăрхануллăн, васкамасăр тухрĕ ыраш пуссиннчен. Чашлапа Çĕрпи пуçĕсене пĕксе тăнине курсан кулсах ячĕ.

– Ан кулянăр, час Уял та каялла тухать, – çупăрлать тусĕсене Турул. – Айăплă!

Халĕ тин виççĕнтен пăхаççĕ никам ишсе каçайми ыраш уйĕ çине. Вăшăл-вăшăл! килсе çапать сулхăн çил, хумлăн-хумлăн çĕкленеççĕ пуç тайса тăракан ыраш пучахĕсем. Ку питĕ хитре. Ырă тата. Ара, тĕрĕс турĕç мар-и ачасем, ыраш пуссине ватса кĕрсе каймарĕç. Вĕсен халĕ пĕртен-пĕр шухăш. Уял мĕнле-ши унта, теççĕ. Уял та кĕттермерĕ. Мĕнле чăмнă, çапла сиксе тухрĕ.

– Эпӗ сире кайнӑ тесе? – курнӑçланать вӑл. Хӑй темле вӑтаннӑ пек те пулать. Ачасен пуçтахланни пулать çав вӑл! Уял та çапла хӑтланса пӑхрӗ. Анчах та юлташӗсем хыçран пыманнине кура чарӑнчӗ. Кӑмӑлне те çавӑрчӗ. Туссемпе пӗрле пулмасан кампа пӗрле пулӗ вӑл?
– Ӑт, шӑм пуçсем! – Кулать вӑл. – Эсир Уял ыраш ватма кӗрсе кайрӗ тетӗр-и? Çук, Уял нихçан та уя таптамӗ. Эпӗ хам уй вӗт!

Кун пек калани пурне те килӗшрӗ. Кулса ячӗç те пурте ыталашсах илчӗç. Унтан пӗр калаçса татӑлмасӑрах пӗр утӑм каярах чакрӗç те, аллисене хӗрисем çине хурса, харӑссӑн «Ача пек чӑн пул!» терӗç. Кӑна пӗтӗм тӗнче илтрӗ. Уй тӑрӑх хумлӑн кусса кайрӗç ку сӑмахсем. Вӑрман çумне çитсе çапӑнчӗç те каялла ахрӑмӑн тепӗр хут килсе ача пек çулӑхрӗç. «Ача пек чӑн пул!», тет тӗнче. Çырма та илтрӗ çакна. «Чӑн пул, чӑн пул!», чӑнкӑлтатса юхрӗ шур чулсем çийӗн шыв. Çакна илтнӗ тӗнче, чутах суяна кӗрсе ӳкетчӗ вӗт, чӑнланчӗ. Чӑн тӗнчен чӑн ачисем таврараn каяс терӗç. Ыраш пусси хӗррипе тепӗр çул шыраса ял еннелле утрӗç.

## Çӗнӗ пурнӑç

Турул киле çитсенех çӗнӗ пурнӑç пуçлас терӗ. Килӗшрӗç ӑна шкулта мӗн вӗрентсе каланисем. Тӗрӗссипе, ыррипе, хитрипе пурӑнмалла терӗç. Тасипе, тесе ялта та калаçкалаççӗ-ха, уйӑрӑлнӑ чух унта, пӗр-пӗр ӗç тӑвас умӗн...

Çапла шутласа ларать киле çитнĕ Турул. Пĕчченех хăй. Аппăшĕ кĕтĕве хирĕç ĕне илме кайнă пулас. Картишĕнче шăп. Сайра-хутра чăхсем кăтиклетни çеç хускатать çав шăплăха. Чăхсен сасси ачана пĕрре те кансĕрлемест. Вăл мĕн ачаран ларма хăнăхнă çĕре пырса ларнă та хĕвел аннине пăхса ларать. Хĕвел час анассăн слива йывăççисем тăррине çакăнса ларнă. Таврана слива тĕс кĕртнĕ.

...Енчен те пурнăçăн чи паха енĕсене пăхăнса пурăнас-тăк, чăн малтан, хăвăн чăн пулмалла пек туйăнать Турула. Вара салам сăмахĕсем вырăнне, «чăннипе!», теме те пулать. «Ача пек чăн пул!» теме вĕренчĕç–ха вĕсем. Анчах ку девиза темле йывăрлăхсемпе тĕл пулсан, çĕнсе илес тесе анчах калакалаççĕ. Кулленхи тĕлпулу-уйрăлусенче вара «чăннипе!» тесен мĕнле лайăх пулмалла, шутлать çĕнĕ пурнăç тума шутланă çын. Çĕнĕ пурнăç – чăн пурнăç. Апла, унта пĕр суя та пулмалла мар. Чăннипе кăна пурăнмалла!

Капларах шутланисем Турула питĕ килĕшеççĕ. Хăйĕнчен, килтен пуçламалла терĕ. Анчах, ача йĕри-таврa çаврăнкаласа пăхать, мĕн хупăрласа тăрать-ха ăна? Картишĕнче унта та кунта çӳп-çап. Пахча енчи хӳме ишĕлсе аннăпа пĕрех. Ача хăй тăрăх пăхса илет. Шăлаварĕ темле лучăрканнă пек, пушмакĕ тусанлă, таса мар. Турул намăсланса каять. Мĕнле капла пурăнать-ха вăл? Кун пек пĕрре те илемлĕ мар. Ырă мар. Апла, чăн пулма та пултараймасть! Эпир пурте суя пурнăçпа пурăнатпăр мар-и, пырса çапать пуçа хăрушă шухăш. Буфета та, акă, укçа хывса çитереймерĕ...

Ялт! сиксе тăчĕ çĕнĕ пурнăç çынни. Халь тин кун пек пурăнас çук. Аппăшĕ ĕне хăваласа киличчен, хĕвел аниччен хăвăртрах картишĕнчи çӳп-çапсене пуçтарас терĕ. Хыпаланчĕ. Хӳмине ăна ырана хăварма тивет... Хĕвел те çакна курчĕ, анмах тăнăскер, тăхтарĕ. Вăл слива тăррисем çине çакăнса ларнă та таврана питĕ лăпкăн сăнаса пăхать. Çапла, ку чăваш ялĕ чăннипе пурăнмасть. Хитри те питĕ сахал. Пӳрчĕсем темле чăлăш-чалăш, урамĕсем тем тĕрлĕ япаласемпе тулса ларнă. Ырри те çукрах. Юлашки вăхăтра, яла темле тимĕр «аçтахасем» тапăннă хыççăн, пӳрт алăкĕсене питĕрсе хăварма тытăнчĕç. Вăрлама тума пуçларĕç ял çыннисем. Кун пекки нихăçан та пулман тет пек хĕвел. Йăлт пĕлет ял пурнăçне. Çӳлтен курăнарах парать пуль çав. Акă, Турул аппăшĕ, Мила, ĕне хăваласа килет. Ĕни, Хушка пуç,васкамасть. Çилли тăртăннă та сĕт тумлатса утса пырать. Шăнкăлт! çеç уçса кĕртрĕ ăна хăвалаканĕ. Картиш майлакан Турул пуçне çĕклесе пăхрĕ. Хашăлл! сывласа пырса кĕчĕ Хушка пуç. Çитрĕм, терĕ пулас. Часах витрене чаннлаттарса сĕт суни илтĕнсе кайрĕ. Сĕт шăрши сăмсана кăтăкларĕ. Турул аппăшĕ тин çеç сунă сĕте пĕр курка ĕçрĕ те, çывăрма выртрĕ. Хăйĕнпе вăл питĕ кăмăллă пулчĕ. Туса çитерменнине ыран туса çитеретĕп терĕ. Хĕвел те лăш пулчĕ. Эпĕ те ку тĕнчене кирлĕ чух çутатрăм терĕ пулĕ, слива тăрринчен куссах анса кайрĕ. Тĕттĕмленчĕ. Картишĕнче халĕ ĕне сывлани кăна илтĕнет.

Çенĕхре çывăракан Турул хĕвелпе пĕрлех сиксе тăчĕ. Туçа шкулне каймалла вĕт! Туссемпе ир-ирех тĕл пулма калаçса татăлнă. Ара, Эльчикрен Туçана утмалли чылай, хĕвелпе

тухсан авантарах. Çулне те, тӳртен каймаллине, тупрĕç тупрĕçех вĕсем. Ыраш уйĕ хĕррипе вăрман витĕр пачах урăх çул хыврĕç. Паян çав вăрман уçланкинче пуçтарăнмалла та вĕсен. Вара малалла пĕрле утĕç. Пĕрле утма хаваслăрах терĕç.

Кĕлт-калт! çырткаларĕ те Турул ĕнер каç хатĕрлесе хунă яка шалаварпа çутатнă пушмакне тăхăнса пахчари сывлăм ӳкнĕ сукмакпа Эль хĕррине чупса анчĕ. Шик-шик! шăхăрса саламларĕç ачана кайăксем. Хĕвел те ку чăн ачана каллех куртăм-ха тенĕ пек ăшшăн пăхрĕ. Çырмара чылай сулхăн. Çырма тăрăх тĕтре явăнать. Шывĕ шăнкăртатса юхни тĕнче тăршшĕпех илтĕнет. Ача мĕн иртмессерен шыв урлă каçнă чух яланах пит-куçне сип ыйтса çăваканччĕ. Паян та, çĕнĕ пурнăçăн пĕрремĕш кунĕнче, тен, иккĕмĕш кунĕнче теме те пулать пуль, хăй йăлине пăсмарĕ. Шăнкăртатса юхакан тап-таса шыв çинех ӳпĕнсе, «тасипе», терĕ те пĕр ывăç шыва пичĕ çине сапрĕ. Сивĕ шыв çӳçентерсех ячĕ. «Чăннипе!», терĕ те мăйне те çуса илчĕ. Ахаль чух ун пек тăвакан марччĕ-ха вăл. Халь тин, ĕнер ĕнтĕ, малашне чăннипе пурăнатăп тенĕскер, тĕплĕнрех çăвăнас терĕ. Тĕплĕнрех, тесен, ача тепре пăхса илчĕ çырма тăрăх. Çакăнтах вĕт пĕве пĕвелес пулать! Ир те каç Туçана кайнă е килнĕ чух Элĕн сиплĕ шывĕпе çăвăнса тухмалла пултăр! Чăннипе! Çакă сăмаха саспах каларĕ пулас та сасă çырма тăрăх янăраса кайрĕ. Кайăксем тата хытăрах юрлама тытăнчĕç. Хĕвелĕн пĕрремĕш пайăркисем шыв çинех ӳкрĕç. Юхан шыва татах та тасатса кăтартрĕç. Çакна курнă ача чĕрине калама çук пысăк савăнăç капланса килчĕ. «Чăннипе!», терĕ

те таса ача хĕвелпе ялкăшса тăракан çыран хĕрне сиксе тухрĕ. Умра вăрмана каякан çул. Тусанлă хăй. Сывлăмпа йĕпеннĕ çап-çут пушмака варалать.

Вăрман уçланки çăкаллă. Пĕр айккипе хырсем ӳссе ларнă. Лартнă пулинех. Турул пуринчен малтан çитрĕ. Никам та çук. Кĕтет ача. Çăка тăррисене пăхкалать. Унта хĕвел çути ӳкнĕ те ăшăрах пуль. Кĕрхи ир, мĕн калăн, сивĕрех çав. Ĕнтĕркесе кайнă çын кăвайт чĕртме шут тытать. Ара, кун пек вĕт шăнса чирлеме те пулать! Турулăн вара, кирек мĕн калăр та, вăл çĕнĕ пурнăç тума пуçланă вĕт, чирлеме юрамасть. Чирлени вăл хăвна кăна мар, вăл тĕнчене пăсни. Преступлени! Чирлĕ çын пурнăçĕ чăн пурнăç мар ĕнтĕ, чăн та. Çапларах шутлакаласа, шăнса кайнă ача хăрăк туратсене пуçтаркаларĕ те, пĕчĕк кăвайт чĕртсе ячĕ. Шăрпăк та тупăнчĕ. Турул кĕсйинче яланах пур вăл. Шăрпăк тата пĕр пĕчĕк пекĕ. Вĕсемсĕр мĕнле пурăнăн? Акă, кирлĕ пулчĕç те. Хыр турачĕсене çулăм яшăлл! çеç ярса илчĕ. Çатăртатсах çунаççĕ. Ăшă пулса кайрĕ. Халь пурăнатпăр, шутлать кăвайтçă. Аллине хăй çулăм çинех тытнă, кукленсех ларнă.

Çав вăхăтра вăрман чăтлăхĕнчен такам çатăртаттарса тухрĕ. Турул ачасем килеççĕ тесе. Çук, иккен. Уçланкăна тем пысăкăш пăши тухса тăчĕ. Кăвайтçă хăраса ӳкрĕ. Пăшипе хăй хушшине кăвайта хăварса куçса тăчĕ. Сыхшăн тенĕ пек кĕсьери пекĕне ал тупанĕ çине кăларса хучĕ. Кам пĕлет, тем шухăш тытнă ку выльăх? Пăши вара, шăнса кайнă-ши, кăвайт патнех пырса тăчĕ. Çунсах пĕтме пуçланă кăвайт шăршине пуçне тăссах сăмсипе шăршласа пăхрĕ.

Ку хăратмарĕ. Ку пăши, тем, алла иленнĕскер пулмалла. Кăвартан та хăрамасть. А-а! ăнкарса илчĕ ача. Шкул сумкине чикнĕ çăкăр шăршине сисет вĕт вăл! Акă мĕн! Турул аппăшĕ чиксе парса янă çăкăр таткине туртса кăларчĕ те вăрман ĕнине сĕт сунă чухне Хушка пуçа тăсса панă пекех тăсса пачĕ. Мĕн тетĕр? Пăши хăрамарĕ. Тутине тăссах кап! ярса илчĕ çăкăр таткине. Куçĕсем вара питĕ ăслăн пăхаççĕ хăйĕн. Выльăхăн ăс çук теççĕ. Мĕнле çук пултăр? Ача асăрханкаласа та пулин пăши пуçне ачашласа илет. Хушка пуç çапла тунине питĕ юрататать. Вăрман ĕни те хирĕç пулмарĕ. Куçĕпе хăй тата ыйтать. Çăкăр кирлĕ. Çукрах çав, тет Турул. Çăкăр тени килте те хĕрĕп. Кăна пăши те ăнланать пулас. Ара, ача аллисем пушă. Çимелли тек ним те çук. Çав вăхăтра вăрманта такамсем калаçни илтĕнсе кайрĕ. Кулни. Кăшкăрни те.

Пăши те илтрĕ çакна. Тăхтаса тăмарĕ, вăрман ăшнелле хăвăрт çеç тапса сикрĕ. Мĕнле хăватлă унăн кĕлетки! Шатăртаттарчĕ кăна. Çаврăнса та пăхмарĕ. Çав вăхăтрах уçланкăна тусĕсем утса тухрĕç. Вĕсем те вăрман ăшнелле темĕнскер çĕмĕртеттерсе кĕрсе кайнине курчĕç пулас.

– Мĕн пулчĕ ку? – тет хăй те тапса сикме хатĕр Чашла. – Такам ĕни аташса юлнă-и?

– Пăши, – лăпкăн кăна хуравлать Турул. – Кăвайт патне килчĕ. Шăнса кайнă та, – шӳтлерĕ ача.

Шӳт килĕшрĕ пулас. Пурте кулса ячĕç. Уял хыççăн чупса кайсах пăхрĕ. Анчах вăрман выльăхĕн ку темĕн йĕрĕ те çухалнă.

–Ай-уй! эпĕ хăратăп, – тĕршĕнет Турул çумне Çĕрпи. Ку та питĕ кулăшла. Пăширен кам хăратăр? Вăл кашкăр мар вĕт!

Кăшт лăплансан пурте кăвайт умне пырса тăчĕç. Пĕрре пăхсах паллă, атьсем çăмăл тăхăннă. Кĕрхи сивĕ ир вĕсене те шăнтнă. Акă вĕсем аллисене тăсрĕç. Тем шутлаççĕ. Шăп. Вăрман çывăрать-ха. Кайăксен сасси çеç тем вăхăтра вăрмана вăратам пекки тăвать. Ачасен пичĕсем çине çӳллĕ çăка тăррисене хĕвел шевле сапнă пекех кăвар çути ӳкнĕ. Лайăх ку, теççĕ ăшша сиснĕ кĕлеткисем. Унтан сасартăк çак пĕрлĕхе туйса илнĕскерсем, пĕр-пĕрин çине пăхса илчĕç те, халь тин хăнăхнă йăлапа ĕнтĕ, «Ача пек чăн пулар!» терĕç. Шкула çитме васкарĕç. Çук, васкарĕç çав. Çакна чăн малтан Турул сисрĕ, самантрах каялла çаврăнчĕ те, «чăннипе пултăр!» тесе, мăкăрланса выртакан кăвайта таптаса сӳнтерчĕ. Тем сиксе тухас пур!

## Тĕнче никĕсĕ

Кĕрхи кунсем хăвăрт иртрĕç. Кашни ир çапла ачасем вăрман уçланкинче кăвайт чĕртрĕç. Тĕрĕссипе, ыррипе, хитрипе пурăнма тăрăшрĕç. Уялпа Чашла Туçари Варкка аппана икĕ хĕл каçмалăх вутă татса çурса пачĕç. Çĕрпи хăйĕн сакăр кĕтеслĕ çăлтăрне тĕрĕлесе пĕтерчĕ. Турул чăнипе мĕнле пурăнмаллине шырарĕ. Юр ларчĕ. Халь тин ĕнтĕ ачасем килĕсене çӳрес мар терĕç. Шкул хваттерне тăчĕç. Турул Улатимĕрпе пĕрле пĕр пӳлĕме лекрĕ. Теней ял ачи сăвăсем çырать мĕн. Шурă хурăнсем, сарă чечексемпе хĕрсем

çинчен çырнăскерсем Турула та килĕшеççĕ. Ун чĕрине пăлхантараççĕ. Куç умне темшĕн пĕрре Çĕрпи, тепре Тина сике-сике тухаççĕ. Иккĕшĕ те килĕшеççĕ. Çĕрпипе мĕн ачаран пĕрле ӳснĕрен-ши, Тинăна пуçласа курнăран-ши, иккĕшĕ патне те туртăнать. Кашни каç тенĕ пек пĕрле çӳреççĕ. Юлташсемпе ют çĕрте те кичем мар. Çитменнине тата Турул фотографипе аппаланса кайнă та юлташĕсене ӳкерсе кăна çӳрет. Фотоӳкерчĕксем питĕ чĕрĕ тухаççĕ. Акă Тинăпа Çĕрпи пĕрле ӳкерттернĕ фотона вăл кĕсьерех чиксе çӳрет. Икĕ хĕрача пĕр-пĕрин патне туртăннă. Куçĕсем кăвак пĕлĕт пек таса, Турул чĕрине тĕллесе пăхаççĕ. Çавăнпа та савăнать пуль каччă чĕри. Ку çеç те мар, вĕреннĕçемĕн, ачасем тĕнче мĕн çинче никĕсленсе тăнине те ăнланса илчĕç. Ĕлĕкхи пек виçĕ кит çинче çеç мар мĕн тытăнса тăрать ку тĕнче. Тĕпре тăван чĕлхе, тăван çĕр, тăван кил! Пĕр пĕтĕмĕшле илсен – тăванлăх! Ăçтан пĕлсе çитрĕç-ха çакна атьсем? Ют çĕрте пурăнма пуçласанах тăван ял мĕнне тӳрех ăнланса илчĕç. Ашшĕпе-амăшĕсемшĕн тунсăхлама пуçларĕç. Шкул хваттерĕсем хăтлă пулсан та тăван киле çитмеççĕ çав. Тата кунта дисциплина текенни те пур. Ытла пит савăнса выляса кайма памаççĕ. Юрлама та кунта тĕнче юррисене кăна юрлама вĕрентеççĕ. Тепĕр чухне Турулăн, каçхи тĕл пулусенче «Ан авăн, шĕшкĕ, ан авăн!» тесе питĕ юрласа ярас килет те юрамасть теççĕ. Халь тин вĕсем пĕтĕмпех ют чĕлхепе калаçаççĕ. Мĕншĕн тесен вĕренмелли предметсене йăлт тĕнче чĕлхипе çырнă. Пĕли-пĕлми тенĕ пек лăпăртатаççĕ вара. Пуринчен ытла Улатимĕре йывăр килет. Вăл çырнă сăвăсене хальлĕхе Турул

кăна вулать. Ăмсанать. Манăн та çапла сăвăсем çырма вĕренсе çитесчĕ тет. Анчах сăвă çырас вырăнне ытларах тĕнче никĕсĕ çинчен шутлать. Çавна пулах хăйĕн вĕрентекенĕпе, Ольга Васильевнăпа, тавлашсах каять.

– Ольга Васильевна, мĕншĕн эсир пирĕнпе пĕр сăмах та чăвашла калаçмастăр-ха? – ыйтрĕ пĕринче хăйса çитнĕ ача. Ытти учительсенчен ыйтас çукчĕ. Ку вара питĕ килĕшӳллĕ те, лайăх пек курăнать те...

– Юрамасть, – тет вĕрентекен. Енчен те эпĕ сирĕнпе пуринпе те тăван чĕлхепе калаçма пуçласан, эсир тĕнче чĕлхине вĕренес çук. Тĕнченавтсен шкулĕн тĕллевĕ вара сире тĕнчене тухма хатĕрлесси. Тĕнчене чăваш чĕлхипе тухма май çук.

– Мĕн-ма май çук пултăр вара? – ĕненмест ача. – Енчен эпир тĕнчене кирлĕ япала тусан, тĕнче вăл хăех мĕн кирлине чăвашла вĕренсе куçарса илет. Мĕн кирлине кăна туса пар. Кирлĕ-тĕк, чăвашла кăна мар, тутарла та вĕренĕç.

– Тĕнчене кирлине тĕнче чĕлхипе кăна тума пулать пуль çав! – çине тăрать чăннине вĕрентекен учительница.

– Чăннипе вара, тăван чĕлхепе кăна! – парăнмасть вĕренекен. – Мĕн-ма тесен эпĕ кирек мĕнле япалана та чи малтан чăвашла шутлатăп. Çав шутлава пăрахăçласан вара манран мĕн тăрса юлĕ?

Кун пек каланă хыççăн Ольга Васильевна аптраса ӳкет. Темле тĕрĕсмарлăха вăл хăй те сисет. Мĕнле-ха, калăпăр, шăпчăка попугай теейтерес. Шăпчăкăн унăн хăйĕн юрри. Попугай вара ыттисем хыççăн кайса тем те пĕр каласа

хума пултарать. Ăнланмасăрах! Эпир те, тен, темĕн ăнланмастпăр? Хушнă та çапла тума...

– Пире çапла тума хушнă çав, – пытараймасть чăннине класс ертӳçи. – Ачасене тăван чĕлхепе ан калаçтарăр, тенĕ. Сирĕн, тĕрĕссипе, килте те чăвашла калаçма юрамасть. Ку тĕнче хушăвĕ!

– Тĕрĕссипе мар вара ку! Ку – суяпа! – килĕшмест Турул. Чăннипе çынна тăван чĕлхинчен уйăрма юрамасть. Ун чунĕ пăсăлать. Эпĕ, калăпăр, тĕнче чĕлхипе калаçнă чухне хама хам çын пек туймастăп. Такама сутатăп пек çав вăхăтра...

– Никама та сутмастăн эсĕ. Тĕнчене тухма хатĕрленетĕн. Унта тухсан пысăк çын пулатăн. Çитет ĕнтĕ пĕчĕк чăваш ялĕнче хĕсĕнсе суккăрланса ларма. Ялта нимле культура та çуккă.

– Ман тăвансем вара культурăсăр тетĕр-и? Халь тин пĕлетĕп. Вĕсем вăрçаççĕ те мана. Ан сут пире, теççĕ. Чăннипе пурăн! Эпир пиншер çул тытса пынă чĕлхене ан пĕтер, тĕнчене ан пăс, теççĕ. Чăннипе каласан, тăван чĕлхене пăрахни – тĕнчене пăсни!

Ку сăмахсем учительницăна анратсах пăрахаççĕ. Вăл пĕр хĕрелсе, пĕр кăвакарса каять. Чăн та, кун пек шутласан тĕнче питĕ усал килсе тухать-çке. Ку тĕнче çынна пĕтерсе кăна пурăнма пултарать. Çын çиен тĕнче ку! Кăна вĕт вĕрентекен хăй те пĕлмен! Анчах кун çинчен халь вĕрентекенсене мĕнле каласа памалла? Каласа пама та юрамасть...

– Кун çинчен эсĕ тек пĕр сăмах та ан шарла, – пӳлсех калать Ольга Васильевна. – Кӳрентертĕм пулĕ ĕнтĕ эпĕ сире, чăн та.

Пĕлменнипе кӳрентертĕм. Тĕрĕссипе пурăнма вĕрентес терĕм те, хам та суяна кĕрсе ӳкрĕм пулас. Темле питĕ пысăк суялăх пур кунта, чăн та, тăван чĕлхепе вĕренмелле мар тенинче. Кăна халĕ эпĕ те ăнланатăп.

– Калатăп çав, тем, тĕрĕс мар ку, тесе, – мăкăртатать ача. Хĕрхенет вăл вĕрентекене.

– Акă мĕн тăвăпăр эпир, – тет класс ертӳçи. – Эпир литература кружокĕ йĕркелĕпĕр. Унта сăвăсемпе калавсене йăлт тăван чĕлхепе вулăпăр. Тăван чĕлхене манмăпăр. Тăван чĕлхе кăна çынран çын тăвать. Пысăкрах çын. Тĕнче чĕлхи вара вăл сăнсăрлатать.

– Аван, – килĕшет ача. – Ман юлташ пур. Улатимĕр. Сăвăсем çырать. Чăвашла. Мана килĕшет. Атьăр, чăн малтан, ун сăввисене вуласа пăхатпăр! Сăввисене вуланă чухне хăй питĕ хитреленсе каять. Сăвва вăл мар, сăвă хăй ăна çырать, тейĕр.

Вĕрентекен килĕшет. Турул кружока хăй йĕркелеме пулать. Уялпа Чашла та, Çĕрпипе Тина та килĕшеççех ĕнтĕ. Çакна тусан вара вăл та чăнласа пурăнма пуçлĕ. Тен, суяран хăтăлмалли пĕртен пĕр çул ку. Тĕнче чĕлхине те пĕлмелле, кăна та ăнланать Турул. Анчах тĕнчене тăван чĕлхе çине таянса кăна тухма пулать. Тăван чĕлхе вăл – тĕнче никĕсĕ! Тĕнче никĕсĕ – тăван кил! Тĕнче никĕсĕ – тăван çĕршыв! Тăванлăхра анчах чăнлăх. Чунĕпе çирĕпленсе çитнĕ ача ку хыпара тусĕсене систерчĕ. Кружока хăвăртрах йĕркелесе ярас терĕç. Ольга Васильевна ырларĕ.

Пĕр тăманлă сивĕ каç пуçтарăнчĕç вĕсем Турулсем вĕренекен класа. Музыка тавраш та пултăр тесе, шкулти баяниста чĕнчĕç. Баянист

та мар-ха вăл. Баянистка. Шкула çак кунсенче кăна çитнĕ. Сап-сарă хĕрача. Хыçалти ретре ларать. Марина ятлă. Улатимĕр ăна тӳрех асăрхарĕ. Чунĕ темле йăлтăрса илчĕ. Сăввăмсене çак хĕрачана вуласа паратăп, терĕ. Çапла килсе тухрĕ те. Чăн малтан сăмах Улатимĕре пачĕç. Ачасем умне тухса тăнă сăвăç малтан вăтанса кайрĕ, анчах хастарлăхпа ялкăшса тăракан Марина куçĕпе тĕл пулсан хăй те темле вăй илсе кайнă пек пулчĕ те, хĕре халалласа çырнă сăввине вулама пуçларĕ. Марина шкула вĕрентме килсенех çырнăччĕ вăл ăна. Юратса пăрахнă вĕт-ха, мĕн тăвăн!. Ку сăвва вăл Турула кăна кăтартнă.

Çĕр çинче эс кăна.
Урăх çук. Кирлĕ мар, пулсан та.
Турă тунă пекех çанталăк
Чуп тăвать халь мана та.
Ăша илнĕ, эс тӳснĕ кун-çул
Ман тĕлех килсе тухрĕ.
Иккĕн курчĕç те икĕ куççуль
Пичĕсем тăрăх юхрĕç.
Пурнăçра вăл çапла. Нимсĕрех
Хăш чухне çĕкленет çутă туйăм.
Тĕнчере Турă пур. Çавăнпа
Эп сана çакăнта тĕл пултăм...
Çĕр çинче эс кăна.
Урăх çук. Кирлĕ мар, пулсан та.

Ачасем аптраса ӳкрĕç. Алă çупни-мĕн пулмарĕ. Марина Улатимĕр аллинчи сăвва илчĕ те баянĕпе пĕр-икĕ хутчен турткаласа пăхрĕ. Унччен те пулмарĕ хăйĕн тарăн та çав вăхăтрах тулли уçă сассипе романс юрласа ячĕ. Улатимĕр

сăввипе çырнăскер пулчĕ вĕт ку романс! Çакна тӳрех никам та ăнланса илеймерĕ. Мĕнле-ха капла, шутларĕ кашни, нивушлĕ çапла самантрах тенĕ пек юрă хывма пулать? Пулать пулĕ çав. Шкул сăрчĕ çӳллĕшпех халь чăвашла романс янăрать. Сасси те, сассийĕ таçтан урăх тĕнчерен тапса тухнă пекех илтĕнет. Вилĕмлĕ сас. Çав вăхăтрах тĕлĕнмелле юратуллă. Чуна пăлхатать. Вилсен те юратса вил, тет. Чăнласа юратни вилĕмпе пĕр тан, тет. Турул Тина çине вăрттăнтараххăн пăхса илет. Хĕр те иккен куçне ун çинех тĕлленĕ. Ку та тĕлĕнтерет. Мĕн пулса иртет ку класра?

## Пĕрремĕш вальс

Тĕнче пурнăçĕпе чĕлхине вĕренсех хĕл иртсе каять. Юрать ачасем литература кружокне çӳреççĕ те хăйсене çухатмаççĕ. Пурте тĕрĕссипе, ыррипе, хитрипе пулса пырать тесе шутлаççĕ. Çапла майĕпен çуркунне те çитет. Ольга Васильевна хăйĕн ачисене вальс ташлама вĕрентес тет. Шкула вăл хăйĕн патефонне илсе килнĕ. Ĕлĕкхи, авалхи патефон. Хĕр чухнехиех. Пластинкисем те çав вăхăтрисем. Акă «Амурские волны» ятлăскерне лартнă та кĕвĕ майăн çаврăнкалам пекки тăваççĕ. Никамăн та нимĕн те тухмасть. Ольга Васильевна кашнинпе ĕçлет. Урасене мĕнле пускаламаллине кăтартса парать. Турул, ку та питĕ тĕлĕнмелле, Тинăпа ташлать вĕт. Пурнăçри пĕрремĕш вальса вăл Тинăпа ташлать! Шăм-шакки ун йăлт хытса ларнă. Хускалкалама та, алăран çапла хытарса

тытса пыма та питĕ йывăр. Вăтанчăклă. Турул çапла кĕмсĕрт пулнăшăн хăйне вăрçать. Анчах ниепле те сывлăш çавăрса илеймест. Çăмăллăн кăна çаврăнкалакан Тина пилĕкĕ çине выртнă алли тарласа кайнă та, питĕ аван мар. Хĕр пилĕкĕ те йĕпенчĕ пуль ку темĕн çавă алă тытнă вырăнта! Тем те шутлать Турул. Çав вăхăтрах ăна калама çук савăк. Вальс çаврăнса курнă чунĕ кĕвĕ хыççăн кайнă та таçта çитсе тухнă, кăна никам та пĕлмест.

Улатимĕр Маринăпа ташлать. Кусен тахçанах май килнĕ те, питĕ меллĕ килсе тухать. Марина аслăрах çав вăл. Педагогика училищинчен вĕренсе тухнă. Ăна унта теме те вĕрентнĕ. Юрлама та, ташлама та пĕлет вăл. Ку ачасем вара ним тума та пĕлмеççĕ. Уял Çĕрпи аллинче. Хĕр ăна хăй çавăрттарать. Мĕнма çав хĕрсем юрă-кĕвĕ таврашне пит хăвăрт ярса илеççĕ-ши, шутлать Турул. Чашлапа вара, халĕ пурте тенĕ пекех вальс çаврăнма вĕренсе çитрĕç те, Ольга Васильевна хăй ташлать. Хумлă-хумлă вальс кĕввипе çаврăнкалаççĕ халь Туçа шкул ачисем. Тĕнче хумĕсем килсе çапрĕç тейĕрех. Килсе çапрĕç те тĕнчене çитиех çĕклесе илсе тухса кайрĕç ку чăваш ачисене. Чăнласа пулчĕ-ши ĕнтĕ ку? Кун çинчен никам та шутламасть. Тĕрĕссипе çак вальса ташламалаччĕ-и-ха вĕсен? Чăн илем çакă-и вара вăл? Çук, пĕри те çак ыйтусене пама ăс çитереймерĕ. Ташларĕç те ташларĕç. Пĕтĕм чун киленĕвĕпе. пĕтĕм кĕлетке хусканăвĕпе... Юрату вальсĕ пулчĕ ку.

– Атьăр чăвашла вальс ташлатпăр, – тет ташăпа хĕрсе çитнĕ Турул. Ку вальс темле тахçан вилнĕ паттăрсем çинчен. Атьăр, хамăр

çыратпăр. Пирĕн-мĕн, хамăрăн поэтсемпе композиторсем çуккă-им?

Вальс ташлама пăрахнă ачасем пурте Улатимĕрпе Марина çине пăхса илеççĕ. Ара. Пăхăр-ха, вальс ташлама пăрахнă пулсан та вĕсем пĕр-пĕринчен пĕрех уйрăлман. Çаплипех хытса тăраççĕ. Мĕн пулнă кусене?

– Чăн та, – ыйтать Ольга Васильевна. – Атьăр, халех çырар. Сирĕн Тур пани пур пулас. Романс кăна мар, вальс та çырса парăр.

Учительница ыйтни витĕм кӳретех. Хытса ларнă пек пулнă каччăпа хĕр тем пăшăлтатса илеççĕ те кулса яраççĕ.

– Час, – тет Улатимĕр. Хутпа каранташ илет те шкул умне тухса ларать. Ыттисем ăна кансĕрлес мар тесе, тухмаççĕ, ытти пластинкăсене итлесе ларса юлаççĕ.

Шкул умĕнчех вĕрене ӳсет. Çавăн айне кĕрсе ларать Улатимĕр. Вăшăл-вăшăлл! тăвать йывăç. Ачашлать çурхи çил. Çил майăн пĕлтĕрхи типсе кайнă вĕрене вăррисем вĕлтĕр-вĕлтĕр! тутарса вĕçсе анаççĕ. Ку питĕ тĕлĕнмелле пек туйăнать. Çурхи ăшă кун кĕрхи пулăм куçа кĕрет. Шутлаттарать. Маринăпа пек вăл. Юнашар. Каччă пĕр ывăç вăрра сӳсе илет те çӳлелле пуç тăрринех ывăтса вĕçтерсе ярать. Вăрăсем çил майăн таçта çитиех вĕçсе каяççĕ. Вĕсемпе пĕрле Маринăпа Улатимĕр те вĕçеççĕ пек. Тĕнче хĕрнех вĕçеççĕ. Хăй тĕллĕнех кĕвĕленме тытăнать ача пуçĕнче çурхи, е тĕрĕсрех каласан, кĕрхи кĕвĕ.

Иксĕмĕр эпĕр тăраттăмăр
Шкул умĕнче савăнса.
Шкул çумĕнчех, куратпăр,

Ларать вĕрене хурланса.

Хушса юрламалли:
Вĕлтĕр-вĕлтĕр! вĕҫсе анчĕ
Вĕрене вăрри.
Вĕҫсе анчĕ те хăпарчĕ
Чун таҫта ҫити.

Шкул пек сăртра ӳссе ларнă.
Хăй пĕтĕмпех вăрăра.
Ҫил ҫинче ăшшăн кашларĕ –
«Татăр ҫунатлă вăрра!»

Татрăм та хыт ывăҫларăм.
Петĕм ҫӳле мĕн вăйран.
Вĕҫнĕ чух, сăввăн каларăм –
Пултăр ҫак чăн пурнăҫра!

Пултăр вăл чăн фейерверк пек.
Чăн юратун чăн палли!
Тип вăрăсем вертолет пек
Вĕҫчĕр кăна ҫил валли.

Вĕҫĕҫ те ӳкĕҫ хаваслăн.
Ҫитĕ вĕсен те кĕтни.
Пирĕн куҫа пит асаплăн
Тухĕ тасан, мĕн иртни.

Улатимĕр сăвва тепĕр хут вуласа тухрĕ те, «Шкул вĕрени» вальс тесе ҫырса хучĕ. Ҫумĕнчех кашласа ларакан вĕрене ҫине пархатарлă куҫпа пăхса илчĕ те класа кĕчĕ. Ачасем пурте патефон ҫумне пуҫтарăнса ларнă та нихăҫан та хăлхана кĕмен юрăсене итлесе лараҫҫĕ. Тĕнче юррисем чаплă. Вĕсем мĕн пач урăхла! Пĕрре

те ялти пек мар. Йӑлт юрату юррисем. Чӑвашӑн вара тӑванлӑх ҫинчен. Лирика тени ҫукрах. Улатимӗр Маринӑна кӑчӑк туртрӗ. Иккӗшӗ те урама тухса кайрӗҫ. Кансӗрлес мар терӗҫ. Часах шкул крыльци умӗнче купӑс сасси илтӗнме пуҫларӗ. Юрлаҫҫӗ те пулас...

Нумай-и, сахал-и иртрӗ вӑхӑт, кӑна никам та шутламарӗ. Тепӗртакран класра ҫӗнӗ вальс янӑраса кайрӗ.

Вӗлтӗр-вӗлтӗр ӗҫсе анчӗ
Вӗрене вӑрри.
Вӗҫсе анчӗ те хӑпарчӗ
Чун таҫта ҫити... –

илтӗнет шкул сӑртӗнче вӗрене вальсӗ. Ҫакна вӗрене хӑй те тӑнлать тем. Кӗвӗ майӑн тайӑла-тайӑла илет. Вӑррине ҫил килсе ҫапмассерен аякка-аякка тӗнче хӗрнех вӗҫтерет. Турулпа Тина ку вальс чуна мӗнле ҫывӑх пулнине тӳрех туйса илчӗҫ. Турул Улатимӗре те ӑнланчӗ. Вӑл вӗт хӑй те ҫапла тума юратать! Талса вӗҫсе пӗтмен типӗ вӑрӑсене, вӗҫчӗр-ха тесе, вӑтӑрса илсе ҫӳле пуҫ тӑрринех персе ярать те, лешсем вара лӑпкӑн кӑна вӗлтӗртетсе вӗҫсе анаҫҫӗ. Турул чунӗ ҫав вӑхӑтра вӗрене пек ҫӳле каять, ун вӑррисемпе пӗрле вӗҫет. Халӗ те ҫапла килсе тухрӗ. Хальхинче вӑл Тинӑпа пӗрле вӗҫет. Тӗнче вӑрлӑхӗсем мар-и вара вӗсем? Ӑҫта ҫити вӗҫтерӗ вӗсене самана ҫилӗ? Тӑван ҫӗре ӳксе шӑтса тухсан аванччӗ. Юнашарах тепӗр йывӑҫ ӳссе ларӑччӗ. Ун вӑррине те ҫапла ҫил килсе сапаланӑ пулӗччӗ. Е, тен, пӗр-пӗр каччӑпа хӗр ун ҫумне пырса тӑрса татах вӑрӑ сапӗҫ... Вара пирӗн тӗнче йывӑҫлӑ та вӑрӑллӑ пулса кайнӑ

пулĕччĕ. Енчен те, ют тĕнчене çитиех вĕçтерсе кайсан вара? Унта ăçта мĕн туса пурăнасси те паллă пулмĕ. Шкул вĕренине кăна ас туса пурăнăн... Куç умне тасан кăна шкулта çакăнта çак самантра мĕн пулса иртни чăннипе тухса тăрĕ.

Çапла каласа юрларĕ шкул вĕрени. Марина сасси çĕр тĕрлĕ кĕвĕленсе чăн-чăн чăваш вальсне чун тĕпĕнчен туртса кăларчĕ. Халь тин ĕнтĕ ним хăрамасăр тĕнче хĕрне те вĕçме пулать. Тĕнче кĕтет!

## Лантăш сас парать

Çурхи кунсем çитнĕ те ачасем тахçанах ĕнтĕ Эльчике çуран çӳреме пуçланă. Тӳртен. Мĕн-ма тесен çурхи илем çут çанталăкпа пĕрле пулсан кăна чуна тыткăнлать. Тӳртен кайсан вăрман витĕр тухмалла. Унта вара лантăш чечек пур. Çавă тыткăнлать те. Шап-шурă шăнкăрав çеçкесем çын илтмен сас параççĕ пекех туйăнать. Турул ачасемпе пĕрле шкула кайнă чух кашни ир пĕр ывăç лантăш татать те çул тăршшĕпе ĕмĕтленсе шăршласа сăнаса пырать çак илеме. Шкула çитнĕ çĕре минресех каять. Лантăш наркăмăшлă чечек пулнине пĕлмест вăл. Телейлĕ хăй. Кашнинчех чечек пуххине учитель сĕтелĕ çине стакана шыв ярса лартать. Пурин валли те пултăр тет. Вăрттăн шухăшĕ те пур. Чечеке вăл Тина валли пултăр тесе татать. Чăннине вара калама хăрать. Суять. Ольга Васильевна валли татрăм тет. Ку та лайăх. Лантăш чăнласах пĕтĕм класа çутатса

ларать. Апла, кунта суйни çук. Вăтанать мар-и? Турул çурхи кунсем шуса çитсенех юратса пăрахрĕ. Хĕвел çути пек шуса кĕчĕ ун чĕрине юрату. Вăл чӳрече патĕнче ларатчĕ. Тина кăшт айккинччерех. Çавăнпа та вăл пуçне кăшт сылтăмалла пăрса хĕр çине пăхса ларма юрататчĕ. Тина çакна сисетчĕ пулмалла та пĕрмай çӳçне тирпейлем пекки тăватчĕ. Тĕлĕнмелле таса та хитрен курăнатчĕ вăл çурхи хĕвел çутинче. Каччă чĕри вут пек хыпса илетчĕ. Халĕ ĕнтĕ ăна нимпе те чарма çук. Улатимĕр хыççăн кайса тенĕ пек сăвăсем те çырма пуçларĕ Турул. Лантăш çинчен. Хĕрупраçа çав чечекпе танлашатарать.

Лантăш сас парать
Çурхи лăпкă ир, –

сăвăлать чĕри. Чупса пырса хăй чĕрине парнеленĕ пек парнелĕччĕ вăл çав чечеке. Çук вĕт! Тем чарать? Ахăртнех куласран хăрать. Тата Çĕрпи те вĕт-ха, сисет каччă, ун çумнерех пулма тăрăшать. Тепĕр чухне çапла шкул балконĕ çине тухса тăраççĕ те вара виççĕн... Çĕрпи ун çине тутлăн-тăтлăн пăхма тытăнать. Куçĕ çав вăхăтра темле çуталса пысăкланса каять. Малтан вăл хăйне мар, Улатимĕре сăнать тесе шутланăччĕ. Çук, иккен! Пĕринче унсăрах тĕл пулнăччĕ те... Çĕрпи çыпçăнсах ларчĕ. Мĕн пĕчĕкрен пĕрле ӳснĕ те ун пек ыталашса тăнисем пулман мар-ха. Çапах та, сисет Турул, кун пекки пулман. Çĕрпи те хĕр пулса çитнĕ. Ун чĕрине те хĕвел çутипе пĕрле юрату юхса кĕнĕ.

Çапла шутласа утса пырать Турул. Вăхăтран вăхăта юнашарти Çĕрпи çине пăхса илет. Хĕр пĕрчи те шухăшра. Ăна çурхи ăшă çил ыткăнлать. Çавна пулах пуль хĕр кăкăрĕ хĕвел çинех тапса тухнă. Кĕпе аркипе вылякан шухă çил шап-шур урине кăтарткалать. Хĕр çакна сисмест те... Уялпа Чашла хыçалта тем пакăлтатса калаçса пыраççĕ. Аллисенче – лантăш. Лантăш сас парать çурхи лăпкă ир. Çав сасса вара Турул кăна илтет пулас.

Тĕнче чĕлхи урокĕ яланхи пекех тĕнче юрринчен пуçланчĕ. Тăнкăр-танкăр тăвакан çав юрра пĕрре те итлес килмест Турулăн. Анчах та чĕлхе вĕрентекен Эмма Ивановна çакна сисмест. Ачасен пуçĕсене йăлтах çав юрăпа минретсе çитерес теет пулас. Хăйне вара ку питĕ килĕшет. Сап-сарă пуçне каçăртсах итлет. Вĕсемпе вăл пĕрре те тăван чĕлхепе калаçмасть. Кирлĕ мар, тет. Канаша çитсенех кăларса пăрахас пулать, тет. Турула вара ку килĕшмест. Шалти туйăм хирĕçлет. Тĕрĕс мар ку. Суя! Тепĕр тесен Канаша та çитмелле вĕт-ха. Тĕнчене те мĕнпе те пулин тухмалла. Пушă алăпа, хăнара вĕт-ха эсĕ унта, мĕнле пырса кĕрен? Çавăнпа та пĕринче Турул чăтса тăраймарĕ, чăннине калас терĕ.

– Эмма Ивановна, калăр-ха, енчен те эпĕ çак чĕлхене вĕреме пăрахсан манпа мĕн пулать?

– Ухмаха тăрса юлатăн. Çавă кăна. Сан юлташусем пурте тĕнче чĕлхине вĕренĕç те тĕнчене тухĕç, тĕнче çыннисем пулса тăрĕç.

– Тĕнче ухмаххи пулатăп-и? Тĕнче ăслисем тĕнчене тухса кайĕç-и? Эпĕ вара, ухмаххи, ялта тăрса юлăп...

– Чăн сăмахăн суи çук, – тет учительница.

Çакă калаçăва класс хăлха тăратса итлет. Пĕр кĕтмен çĕртен пĕр вĕренекен вĕрентекене хирĕç тăрать. Нимĕç чĕлхине, Эмма Ивановна çавна вĕрентет, вĕренмелле тет. Ку ачасене килĕшмест. Нимĕç чĕлхине, тĕнче чĕлхи пулсан та, никам та вĕренесшĕн мар. Гитлер ячĕпе, фашистсен тапăнăвĕпе те çыхăнман ку ăнтăлу. Кашни сисет, тем ку нимĕç чĕлхи чĕрене хирет, чуна туллаштарать. Мĕншĕнне никам та пĕлмест. Тен, ку пулăм Эмма Ивановнăна питех килĕштерменнинчен те килет пулĕ, кам пĕлет. Нимĕç учительници хăйне питĕ мăн кăмăллă тыткалать. Тăван чĕлхепе пĕрре те калаçмасть. Чăнлăха вĕренекенсене, чăнласа пурăнас текенсене ку пĕрре те тивĕçтермест. Суять ку учительница. Ют чĕлхе вĕсен чĕрине кăна мар, пĕтĕм ăс-тăнне пăтрататать. Тăван чĕлхене мантарать. Халь тин ĕнтĕ часах акă вĕсем чăвашла шутлама, чăвашла ĕмĕтленме, чăвашла ĕçлеме те манса кайĕç. Тăван çĕршĕн ют пулса тăрĕç. Çак пулăма, ăнлансах мар пулсан та, кашни кун вĕт куç умĕнче куратăн. Ахальтен-им, шутлать Турул, кашни вĕренсе тухнă пĕр ача тĕнчене тухса кайнă та – çухалнă. Пĕри те каялла таврăнман. Пĕтнĕ. Çук, Турулăн пĕрре те ун пек пĕтес килмест. Пĕтсен те вăл чăнлăхшăн çапăçса пĕтĕ. Тăван çĕршĕн, тăван çынсемшĕн. Çак шухăшсем йăлтах литература кружокĕнче калаçнисем. Ольга Васильевна литература вĕрентет. Тĕнчери чи чаплă хайлавсемпе паллаштарать. Вĕсенче вара ырă, чăнлă сăнарсем темĕн чухлех. Пуринчен ытла Турула Максим Горький çырнă «Изергиль

карчăк» калаври Данко сăнарĕ килĕшет. «Мĕн тăвăп эпĕ çынсем валли?» – кăшкăрса ярать вăл инкеке лекнĕ çынсене хĕрхенсе. Унтан кăкăрне çурса, юрату хĕлхемĕпе çунса тăракан чĕрине туртса кăларать. Çӳле çĕклет. Чĕре çутипе çынсем юлашки вăй-хала пухса тĕрĕс çул çине тухаççĕ. Турулăн та çав Данко пек пулас килет. Унăн та чĕри юрату хĕлхемĕпе çунма пуçланă. Чăнлăхшăн, тĕрĕслĕхшĕн, хитрелĕхшĕн çунать вăл. Эмма Ивановна вара çавă чаплă сăнара темле нимĕçсен сăнарĕсемпе улăштарать. Çук, килĕшмест Турул чĕри. Данкăн таса чĕри ун чĕринче те çунать пек. Вăй парать. Çакă пулăм Турула кăна мар пырса тивет пулас. Класс ырлать. Анчах сасартăк урăхла сас та илтĕнсе каять.

– Эпĕ санпа килĕшместĕп, – тет Тина. Тăван чĕлхе халь ним тума та кирлĕ мар. Сăмахран, эпир килте те тăван чĕлхепе калаçмастпăр. Ют чĕлхене мĕн чухлĕ хăвăртрах алла илетĕн, çавăн чухлĕ лайăхрах, тет манăн анне. Апла, тăван чĕлхе килте те кирлĕ мар. Кашнин амăшĕ çапла шутлать. Туçа ачисем халь тин тăван чĕлхепе калаçма та вăтанаççĕ. Эпĕ вăтанмастăп-ха, – хĕрелсе каять Тина.

– Тĕрĕс калать Турунова, – савăнать Эмма Ивановна. – Чăваш чĕлхи вăл питĕ чухăн. Унпа юрату çинчен те калаçаймăн. Наука та унпа усă курмасть. Вăл ним тума та кирлĕ мар. Çакна ăнланса илнĕ те ĕнтĕ амăшĕсем. Сăмах май каласан, чăвашла вĕт вĕсем ыйтнипе вĕрентме пăрахнă. Ашшĕ-амăшĕсем ыйтнипе. Сирĕн аçăрсемпе аннĕрсем хăйсем хирĕç пулчĕç. Тĕрĕс турĕç. Сиртен ăслă тĕнче çыннисем тăвас терĕç.

– Мĕнле апла? – кăшкăрсах ячĕ Турул. – Пиртен вара никам та ыйтмасть-и? Эпир çын та мар-и? Мĕнле шкул вара ку? Чăнлăх шкулĕ тетпĕр. Чăн пурăнма суйса вĕренĕпĕр-и?

– Кунта нимле суялăх та çук, – хĕрсех каять нимĕç чĕлхине вĕрентекен. – Чăваш чĕлхи тек никама та кирлĕ мар. Ку чи пысăк чăнлăх.

Кăна илтнĕ класс анрасах каять. Вара, шутлать кашни ача, эпир савăнса ӳснĕ чĕлхе халь тин мĕнле сасартăках никама та кирлĕ мар пулчĕ-ха? Халь тин нимĕçле шутласа пурăнмалла пулать-и-ха? Япăх мар пуль-ха вăл. Нимĕçсем хăйсем пит юратаççĕ пулĕ. Анчах вĕсем темшĕн тĕнчене тухатпăр тесе чăвашла вĕренес темеççĕ. Пирĕн вара тĕнчене тухас тесен нимĕçле вĕренмелле тет. Питĕ интереслĕ ку.

– Çук вара! – хирĕç тăрать Турул. – Тăван чĕлхе вăл халăх чунĕ. Ун чунĕ – чĕлхе. Енчен те эпир тăван чĕлхене пăрахас тăвас пулсан вăл халăха пăрахниех пулĕччĕ. Хăвна ху сутни, халăха пăрахни вара чăнлăхпа килĕшсе тăма пултараймасть. Тăван чĕлхе вăл пĕтĕм Уçлăх шифрĕ. Ăна пĕлсен кăна эсĕ çакă çут çанталăка ăнланса илме, унпа пĕр пулма пултаратăн. Тăван чĕлхене пĕлсен кăна эсĕ лантăш мĕнле сас панине илтме пултаратăн. – Турул сĕтел çинчи чечек пуххине хăлхи патне тытса силлет. Шап-шурă шăнкăравсем кĕмĕл саслăн чăнкăр-чăнкăр тăваççĕ пек. Çакна класра ларакан ачасем чăнласа илтеççĕ. Ку питĕ тĕлĕнтерет.

– Ан ухмахлан! – кулать учительница. – Эпĕ пĕр сас та илтместĕп. Укçа сасси вара, сутсан, илтĕнет.

– Эпĕ те! – хута кĕрет Тина. – Ку чечеке сутса укҫа тунă пулăттăм. Чăваш укҫа тума пĕлмест, ҫавăнпа тĕнчене кирлĕ мар пек килсе тухать. Тĕнчене укҫа кирлĕ!

Класра шăп. Турул чечек ҫыххине татах та чӳхентерет. Чăнкăр-чăнкăр! тăвать чăваш чĕринче темле ырă-ырă таса та тĕрĕс сас. Кăна, паллă, тăван чĕлхене, ҫут ҫанталăка манман чунсем кăна илтеҫҫĕ. Ыттисен хăлхине вăл кĕмест. Кĕрес те ҫук. Мĕншĕн тесен ҫын ҫут ҫанталăкпа чăн малтан чĕрипе калаҫма пуҫлать. Чĕресĕр тăрса юлнăскерсем мĕнле вара калаҫччăр? Вĕсен, ахăртнех, пĕртен пĕр калаҫу кăна тăрса юлнă. Укҫа калаҫăвĕ. Вĕсем ҫав укҫашăн сутаҫҫĕ те хăйсене хăйсем. Тăван ҫĕре, тăван ашшĕпе-амăшне... Вĕсем те сутрĕҫ мар-и-ха ачисене юта? Чуна ку питĕ ыраттарать. Халь тин камшăн пурăнмалла тет вара? Данко тек никама та кирлĕ мар пулать-и? Данко кăна мар, Эльчик ачисем те юрăхсăра тухнă. Тĕнче ачисем тесен вара, вĕсем сумлă, укҫаллă, чаплă. Тĕрĕсех-и ку? Тап-таса лантăш вара?

## Аслати вăййи

Лантăш вăхăчĕ часах иртсе кайрĕ. Каникул пуҫланчĕ. Эльчик ачисем ялта тăрмашаҫҫĕ. Тăван чĕлхепе калаҫса савăнаҫҫĕ. Тăвансемпе калаҫма мĕнле тутлă вăл, ҫакна ют чĕлхесене вĕренсе тин ăнланса илчĕҫ вĕсем. «Ача пек чăн пулар!» терĕҫ те мĕн ачаран вĕреннĕ чĕлхепе кăна юптарма тытăнчĕҫ. Юптарас тесен вара Эльчиксене панă. Кашни сăмаххи вăлтать,

кашни калаçăвĕ култарать. Пуринчен ытла ваттисем ăста. Яппун, Пĕчĕк Терентей, Хтинкка стариксем ахăрттараççĕ кăна. Вĕсем те тĕнчене тухса курнă, яла вара пăрахман. Ялах килнĕ. Яппун яппунсемпе мĕнле çапăçни çинчен каласа кăтартать. Пĕчĕк Терентей граждан вăрçи геройĕ. Хтинкка вара хăй пĕр клоун. Ялти кашни çынна евĕрлесе кăтартма пултарать. Култарсах вĕлерет. Çакăн пек йышпа ĕçлет Турул. Юлташĕсем те юнашарах. Вĕсем мĕн тетĕр? Вĕсем кĕтӳçсем. Лаша кĕтӳ пăхаççĕ.

Çил пек вĕçтерсе пырать Турул Ухта ятлă чăпар утпа Нар çырми еннелле. Тепĕр енчен Уялпа Чашла. Малта вара, мĕн тетĕр? Малта Çĕрпи. Вăл та ут утланчĕ. Юлташĕсене пăрахас мар терĕ. Мĕн тет, эпир, тет, авал амазонкăсем пулнă. Тинĕс Давыдович истори урокĕсенче каласа кăтартнă пулас та, ача хăйне чăн ама çын пекех туять. Ут кĕтĕвĕ уй тăрăх çĕр çĕмĕрттерсе пырать.

Нар çырми çутă çырма. Вăл васанланса кайнă та халĕ питĕ курăклă. Кунĕпе ĕçлесе выçса çитнĕ лашасем çавăнти сиплĕ курăка çисе вăй илеççĕ те. Утсем таçта тарса кайĕç тесе сыхламалли мĕн çукрах. Çавăнпа та ачасем кăвайт чĕртеççĕ те ун тавра ларса тухаççĕ. Ку питĕ вăхăтлă. Мĕн-ма тесен, каçпа çырмара сивĕ. Тĕттĕм. Кăштах хăрани те пур. Ара, кунта мар-и-ха вара икĕ кĕтӳç чăпăркка вĕçĕсене çĕçĕ ярса çапăçнă тет? Иккĕшĕ те вилнĕ вара. Хăратать ку! Лашасем лăпкăн кăна хăртлатса курăк çиеççĕ те, çавă лăплантарать. Анчах ку каç кăвайт тавра лăпланса ларасси пулмарĕ. Ара шывĕ енчен тухнă пĕлĕтсем Нар çырмине хупласа хучĕç. Çумăр çума пуçларĕ.

Вăл вăйлансах пычĕ. Аслати кĕрлесе ямассерен тата вăйлăрах çунă пек туйăнать. Çиçĕм çĕре çапать. Лашасем хăранипе пĕр çĕре пуçтарăнса тăнă. Кăвайт сӳннĕ. Ачасем аçа ан çаптăрччĕ тесе çĕре тăсăлса выртнă. Чупма, юпа пек хытса тăма юрамасть теççĕ.

Турул кун пек аслатилĕ çумăр айне нихăçан та лексе курман. Аслати такама шыраса çĕре çапса пырать. Çиçĕм хыççăн çиçĕм ярса ярăмăн-ярăмăн хыпашласа пырать Нар çырми тăрăх. Аçа кам çылăхлă, çавна çапать тет. Турул хăй çылăхĕсене аса илет. Ытла пит çылăхлă пек те туйăнмасть. Пĕртен пĕр, тен, буфета укçа хывманни. Йăнăшĕ те вăл укçа çитменнипе килсе тухрĕ. Ăна та тепĕр куннех тӳрлетнĕ. Халăх каланă тăрăх, аслати шуйттана шыраса çĕре çапать тет. Нар çырминче те пурши вара вăл çав, шуйттан тени?

Шарт! çапать аслати. Юнашарах сана тĕллесех çапать пек. Шари! çухăрса ярать Çĕрпи. Турул çумне тĕршĕнет. Каччă ăна аçа çапасран хăраса хăй айнех пĕтĕрсе чикет. Çапсан та мана çаптăр тет, ахăртнех. Каччă хӳтлĕхне туйса илнĕ хĕр лăпланать. Халь тин çумăр шултăран шапăртаттарса çуни те темех мар пек. Çумăрĕ Турул çурăмне çапать. Хĕр çурăмне йĕпе çĕр сивви çапать. Сивĕ. Çапах та Çĕрпи сасартăк вĕриленсе каять. Кун пек нихçан та арçын айĕнче выртса курман хĕр намăсланса каять. Хăрани пĕрре, тепре ун çинчех Турул. Йывăр тата хăй. Пусарсах, пăталасах хунă. Çылăх вĕт кун пек! Аслати вара чăнласах вĕсенех шыраса çӳрет тейĕн. Çумрах çапать. Хĕр хăранипе каччăна пĕтĕм вăйран ыталаса илет. Çак ыталану хăранипе

кăна мар пулса иртнине Турул та сисет. Ăна та вĕри. Çумăр çуни те ним те мар халь. Ун чунĕнче тĕлĕнмелле хăватлă туйăм, юрă çĕкленет тесен те тĕрĕс. Аслати юррине юрлать ун чĕри. Хăйне тин чăн Данко пек туять. Ăна та халь тин юмахри тăвăл юрласа хăвалать, çĕр çумнех пăталать. Анчах Турул хăрамасть. Унăн кама хӳтĕлемелли пур. Çĕрпи ăна шанса çыпçăнать мар-и? Хĕр ан хăратăр тесе каччă тата хытăрах ыталать. Ăнтăхтарсах ярать. Кун пек ытакланнă хыççăн мĕн тумалла тет ĕнтĕ? Çĕрпе пĕлĕт пĕрлештерчĕ вĕт каччăпа хĕре. Аслати хăй çиçĕм çиçтерсе пăталарĕ çĕр çумне. Çавах пулĕ Туçа хĕрне Тинăна мантарчĕ.

Аслатиллĕ çумăр мĕнле килсе çапрĕ, çапла иртсе кайрĕ. Тӳпе пĕлĕтсенчен тасалсанах кăвак çутă çапрĕ. Çутăлса пырать. Йĕп-йĕпе пулнă ачасем тăр-тăр! чĕтреççĕ. Лашасем вара ним пулман пекех курăк çиеççĕ. Мĕнле ăшăнмалла тет халь тин? Кăвайт сӳннĕ. Анчах аякра та мар тем йăсăрланнă пек курăнать. Пĕве хĕрринчи пĕр ватă йăмрана аслати çапнă тем? Ачасем пĕве хĕрне чупса анаççĕ. Çапла, ватă йăмрана чăлпарр! салатнă. Типĕрех туни йĕпенсе çитеймен пулас, е çиçĕм питĕ вăйлăн хĕртсе янипе халĕ те çунать. Акă сана валли кăвайт! Ачасем ватă йăмра тавра тăрса тухаççĕ. Йĕпе тумтирĕсене хывса шывне юхтарса пăраççĕ те çулăм çинех тытаççĕ. Тумтир пăсланать кăна. Çĕрпин тем тумалла тет? Турулпа юлташĕсем шăл йĕрсе тăраççĕ. Вĕсене мĕн, çук, вĕсен çарапакка çанçурăмĕсем вăтантармаççĕ хĕре, шыва кĕнĕ чух тем чухлех курнă, ăна хăйĕн çанçурăмĕ вăтантарать. Мĕнле куçпа тет халь пăхмалла Турула? Вăл вĕт ун айĕнче аслатирен

хăраса кăна мар тапкаланчĕ. Ăна питĕ ырă пулчĕ. Çавă вăтантарать. Халь тин ун умне мĕнле çарапаккан курăнăн-ха? Çакна чи малтан Турул сисрĕ. Шăнса шуралса кайнă хĕр çине пăхса илчĕ те тĕлĕнсех кайрĕ. Шăлĕ çине шăлĕ лекмест. Тути кăвакарнă. Хăй сиксе чĕтрет.

– Атьсем, пирĕн Çĕрпи шăнса кайнă. Атьăр-ха, йывăç тепĕр енне кайса тăрар, – тет каччă. – Вăл та кĕпине хывса типĕттĕр.

Турул хăйне каллех Данко пек туйса илет. Май килнĕ пулсан хăй чĕрине кăкртан кăларса парĕччĕ... Çук вĕт! Çук та, анчах ун çулăм çинех тытнă, вĕриленсе пăсланса тăракан пиншакĕ пур. Ăшă вăл. Каччă асăрхануллăн хĕр хулпуççийĕ çине уртса ярать. Ытаплать. Халĕ те хӳтĕлет пулинех. Анчах хальхинче питĕ асăрхануллăн тыткалать. Пуринчен ытла ăна хĕр кăкăрĕ вăтантарать. Йĕпе кĕпе витĕр вăл шап-шуррăнах мăкăрăлса курăнса тăрать. Куçа, пăхас мар тесен те, тӳрех тăрăнать.  Каччă ытамĕнче хĕр тата вĕриленсе каять.

– Кирлĕ мар, шăнса каятăр, – тет шурса кăвакарсах кайнăскер.

– Хăвăрт, мĕн пăхса тăран! – тет Уял.

– Эпир кайрăмăр, эпир шăнмастпăр, – шăл йĕрет Чашла йăмра тепĕр еннелле куçса.

– Ан хăра, – лăплантарать Турул.

Йăмра питĕ пысăк. Ăна, чăн та, тăваттăн та çавăрса илеймĕн. Аçа çапса чăлпар салатнăскер, темле авалхи вăхăта аса илтерет. Вулли пĕр çĕрте выртать, тĕпĕ çунать. Мĕнле вăй çапла тума пултарнă? Тĕлĕнтерет ку. Йăмра чи çӳллĕскер пулнă пулас. Çавăнпа çапнă та. Нар çырми те, географи учителĕ каланă тăрăх, Чăвашра чи çӳллĕ вырăн. Акă мĕншĕн вылярĕ

те кунта аслати. Ăна выляма çӳллĕ тусем кирлĕ!

– Эпĕ хатĕр, – илтĕнет çав вăхăтра хĕр сасси.

Йăмра хыçĕнчен тухнă ачасем кулса яраççĕ. Турул пиншакне тăхăннă хĕр хăй кĕпине çулăм çине тытнă та ун-кун вăр-вар çаврăнкаласа тăрать. Айккинчен пăхма ку питĕ кулăшла. Ара, пиншакĕ кĕске. Кĕпи йĕпе. Хĕрачи айван. Шап-шурă çара урисем чĕлтĕртетеççĕ кăна. Çакă килĕшет те... Хĕр вăййине йышăнса пурте йăмра тавра ташлама тытăнаççĕ. Çулăм çинех пырса кĕреççĕ те айккинелле тапса сикеççĕ. Пĕçертет! Вăр-вар! çаврăнкаласа илеççĕ çанçурăмĕсене ăшăтса. Ачапча темерĕн. Ачапча ачапча та, анчах Турул куçĕ Çĕрпи çинчен каймарĕ. Вăл халĕ ăна пачах урăхла курчĕ. Аслати куçĕпе курчĕ. Куçĕ çиçĕм пек çиçрĕ. Халь-халь çапать тейĕн. Хĕр, паллă, çакна сисет. Тата вĕриленсе каять. Ах, кулать хăй. Пĕве çийĕн тулса юхакан çумăр шывĕ пекех шăнкăртаттарать. Шăнкăр–шăнкăр! туса юхать пĕве шывĕ. Темле симĕс-кăвакăн йăсăрланса çунать аça çапнă ватă йăмра. Ун тавра вара чăн пĕчĕк ачасем пек тăваттăн тытмалла выляççĕ. Аслати вăййи малалла пырать.

## Çĕр кĕлетке

Яла çĕнĕ комбайн килнĕ. СК-2 комбайн. Хăй тĕллĕнех çӳрет. Ку молотилкăпа Фордзон трактор мар вара. Хăех вырса çапса пырать.

Улăмне уйра купаласах хăварать. Турул пулăшнипе, паллах. Каччă халь комбайн çинче ĕçлет. Копнитель патĕнче. Пысăк ĕçех те мар. Анчах улăм копнителе тулса ларсан, комбайн та малалла каяймасть. Çавăнпа та улăма вăхăтра пăрахса хăварас пулать. Ватă хурама çумĕнчи уй калама çук хитре. Сап-сарă улăм тутлă шăршлă. Комбайн бункерĕнчен тырă шăрши килет. Тырра Шусь ятлă шофер хăйĕн полуторкипе турттарса тăрать. Ял хуçалăхне çапла пĕр çултах темĕн чухлĕ техника килсе çитни Турула савăнтарать. Хурлантарать те. Халь тин ĕнтĕ çурлапа алă вĕççĕн тырă та вырса кураймăн, авăн çапасси те пĕтрĕ. Лайăх ку. Ĕç хăвăрт пулса пырать. Турула та акă пысăк ĕç шанса панă. Ача хăйне чăнласа пысăк çын пек туять. Ара, машина çинче вĕт. Ку лашапа çӳресси мар вара! Турул хăпартланать. Умра куç виççе илейми уй-хир хумханса выртать. Сайра-хутра мотор шавне çĕнтерсе путене авăтни илтĕнет. Хĕвел куçа çиет. Пĕрин хыççăн тепĕри ĕречĕпе ларса выртса юлаççĕ улăм куписем. Хитре ку! Каччă чунĕ хăпартлансах çитет, юрласа ярать. Юрлама пит пĕлсех каймасть те, юрать, комбайн шавĕ хуплать, никам та илтмест.

Хĕвел те пур, уйăх та пур.
Уйăх пулсассăн, çăлтăр пур.
Тăван çĕрпе пĕрле пулсан,
Тырă вырмалăх халăм пур.

Уй-хир те пур, тырă та пур.
Тырă пулсассăн, пурнăç пур.
Тăван çĕрпе пĕрле пулсан,

Пурнăç тумалăх ăсăм пур.

Çак юрра каччă темле хăй пĕр мотор пек кĕрлеттерсе юрлать. Комбайнпа пĕрле хăй пĕр оркестр пулса тăрать. Пур-пур-пур! Тăр-тăр-тăрр! илтĕнет ватă хурама çумĕнчи уйра. Кам юрлать кăна тесен, никам та уйăрса илеймĕ. Те комбайн, те Турул? Кăна илтсе путени те тарса пытанчĕ пулас. Копнитель çинче ĕçлекен те те хăй ĕçне манса кайрĕ. Вăхăтра кăларса пăрахман улăм тулса кайнă та копнитель уçăлмасть. Ним тума аптранипе ача комбайн çинчен сиксе анчĕ те улăмпа çыхланса ларнă решеткене алăпа турса усрĕ. Кăмпăлт çеç тухса ӳкрĕ тем пысăкăш улăм купи. Пулчĕ! Савăнса кайнă Турул чылай мала кайнă комбайна хăваласа çитсе сиксе ларма тăчĕ, анчах çав самантрах, мĕнле пулса иртрĕ ку, ăнланса та илеймерĕ – комбайн айне кĕчĕ те ӳкрĕ. Ача ним туса та ĕлкĕреймерĕ. Копнитель урапи ун урлă каçрĕ те кайрĕ. Кăшкăрма тет-и? Калама çук хăраса ӳкрĕ. Ун урлах! Комбайн!.. Çĕр ăшнех путарса хăварчĕ! Çĕрте выртакан ача çаврăнса пăхрĕ. Комбайн ним пулман пек малалла кайса пырать. Турул вара... ним пулман пек... выртать. Ниушлĕ ним те пулман? Чăн та, хыпашласа пăхсан та ним хуçăлни те туйăнмасть, ним те айăпланман пек. Чăлт! çеç сиксе тăчĕ Турул, Ара, вăл çĕр ăшĕнче выртнă чух комбайн чылай мала кайнă. Час, васкас пулать! Чупсах кайма тăнă ача çаврăнса пăхрĕ. Сап-сарă хăмăл хушшинче çĕрте темĕнле кĕлетке выртать. Турул кĕлетки. Хĕлле юр çине çапла пашш! кăна кĕрсе выртса юр кĕлетки туса хăваратчĕç вĕсем. Халь тин ку çĕр кĕлетки

пулчĕ пулĕ, мĕлтлетрĕ ун пуçĕнче шухăш. Мĕлтлетрĕ кăна. Аякках кайнă комбайнри улăм тулса çитнĕ пулĕ? Ача Ухта пек тапса сикрĕ, самантрах хăваласа çитрĕ. Сиксе улăхса ларчĕ те копнителти улăма педалне урапа тапса пăрахса хăварчĕ. Улăмĕ чылай, вăл, чăн та, тепĕр самантран каллех чăлханса ларатчĕ пулĕ.

Комбайн çинче çӳлте ларса пыракан ача, кăшт лăпланса çитсен, шухăша кайрĕ. Çав пaçăр мĕлтлетсе иртнĕ шухăш каялла вĕçсе таврăнчĕ пулинех. Мĕнле çапла килсе тухрĕ-ха ку? Комбайн питĕ пысăк вĕт-ха вăл! Теме те пашалу пек нимĕрсе хăварма пултарать. Кунта вара Турул урлă ним айăп тумасăрах каçса кайрĕ. Кам пулăшрĕ? Çĕр-анне хăй пулăшрĕ пулинех! Пĕлтĕр кĕркунне хăех мар-и-ха плугпа сухаларĕ çак çĕре? Ун чух вăл авăн çапса пĕтерсен пĕр кана плугарьте çӳренĕччĕ. Каçхине. Плуг çинчен ӳксе юлас мар тесе питĕ сыхланмаллаччĕ ун чухне. Ӳксен, паллă, плуг айне пулатăн. Çĕрпе варăнса юлатăн та, тек ура çине тăраймăн. Çакна питĕ асра тытса ĕçлетчĕ ача. Паян вара тем сыхланма пĕлмерĕ. Такăнса ӳкрĕ, Комбайн урапи айне пулчĕ. Анчах çак «аçтаха» ăна тивмерĕ. Мĕн-ма тесен, çĕр çемçе! Пашш! çеç путса анса кайнă вăл кăпăшка çĕр ăшне. Урапа ун урлă мар, çав çĕр кĕлетки урлă каçса кайнă. Турул вара çĕр турри пек выртса юлнă. Ăна ним те пулман!

Ача тепĕр хут савăнса кайрĕ. Вилмен вăл! Пурăнать! Уй тавра тепре пăхса илчĕ те паçăрхи юрра мотор пек кăлтăртаттарса малалла тăсса юрласа ячĕ.

Инкек те пур, телей те пур.

Телей пулсассăн турă пур.
Тăван çĕрпе пĕрле пулсан,
Тĕнче тумалăх чăнлăх пур.

Сăвви пит лайăхах тухманнине те ăнланать вилĕмрен тин кăна çăлăнса тухнă Турул. Улатимĕр лайăхрах та çырнă пулĕччĕ. Анчах кăмăлĕ турăланса кайнă та, халĕ вăл нимрен те хăрамасть. Кĕрлеттерет кăна. Хăйне чăнласа темле турă пекех туять. Турă ачи пек. Мĕн вара? Тĕрĕс мар-им? Çĕр-анне хăй ачине пăрахмарĕ – çăлчĕ. Çĕр мĕнне тин ăнланса илнĕ ача тата хытăрах юрлать. Чăнлăхпа суя хушшинче пулчĕ мар-и? Чăнни çĕнтерчĕ. Енчен те çĕрне сухаланă чухне, калăпăр, çывăрса кайнă пулсан, çĕр сухаланмасăр юлатчĕ. Мамăк тӳшек пек путмастчĕ. Кăпăшка çĕр хăй варне илчĕ вĕт. Апла, чиперех, чăнласах тытса пынă плуг рульне Турул! Халĕ, çавна пулах ĕнтĕ, пиçсе çитнĕ тыр-пул уйĕпе савăнать. Юрлать тата!

Ачана, юрланăçем, çĕр витĕр тухни аса килчĕ. Тахçанах пулнă ку. Манса та кайнă. Инкек аса илтерчĕ. Тахçан тем выльăх мурĕ ернĕччĕ пулас яла. Вара ватăсем пĕтĕм выльăха пухса çĕр айĕнчен кăларчĕç. Вĕсемпе пĕрле çыннисене те... Темле çĕр алăк тетчĕç пулас. Çĕр тасатать имĕш! Вут урлă сикни те çавах пулмалла. Çуркуннепе ачасем хĕвел çутипе чĕртнĕ кăвайт урлă сикетчĕç. Выляса кăна ĕнтĕ. Питĕ хитреччĕ те. Хитрипе пĕрле таси те, чăнни те пулнă пулĕ... Акă халĕ çав чăнлăхсем сасартăках Турул пуçĕ çине йăтăнса анчĕç те тем туса хучĕç. Ача халь ача та мар. Чăнлăхпа суяна, ырăпа усала, илемпе пакăçлăха халĕ вăл

пачах урăхла курать. Вилĕмпе пурнăç витĕр курать. Пĕрре вилсе те чĕрĕлсе курнă çын тек нихăçан та вилмест тет. Çапла калаççĕ ватăсем. Ку Турула та пырса тивет пек туйăнать.

Кĕрлет комбайн. Улăм куписем хитрен кăна ĕретленсе выртса пыраççĕ. Бункерти тырра Шусь машини турттарсах тăрать. Ĕç шавĕ пĕр самант та татăлмасть. Кун пек тухăçлă ĕçленине ача ас тумасть. Ку молотилкăпа çапнинчен çĕр хут ирттерет. Анчах, пĕр анчах пур. Путене авăтни илтĕнмест. Тырă пучахĕсем тек ĕнтĕ çемçен кăна хăшăлтатмаççĕ. Шăрши те, тырă шăрши кăна мар кĕрет Турул сăмсине. Солярка теççĕ-и? Бензин-и? Тырă машини килмессерен симĕс-кăвак тĕтĕм кăларса хăварать. Тырри бункертан юхнă вăхăтра Турул тепĕр чух Париш Сантăрĕпе калаçкаласа илет. Комбайнер тем те пĕлет пек туйăнать. Пĕр çирĕм центнер тырă тухмалла тет пĕр гектартан. Ача уна-куна чухламасть. Ăçтан пĕлет вăл ăна? Каннă вăхăтра ача уй-хире сăнать. Ыраш хумĕн чупать шухăш, юлташĕсем аса килеççĕ. Ăçта, мĕн тăваççĕ вĕсем халĕ? Уялпа Чашла çул хывнă çĕрте пулма кирлĕ. Çĕрпи вара йĕтемре, тырă сăвăрать пулинех! Каччă чĕри кăрт! туртăнса илчĕ. Тутлă пулса кайрĕ. Анчах çав вăхăтрах куç умне Тина сăнарĕ сиксе тухрĕ те Çĕрпи çутă сăнĕ самантрах таçта кайса çухалчĕ. Ку икĕ хĕр каччă чĕришĕн тупăшаççĕ пулинех! Пĕри ялта пĕрле ӳснĕ чи çывăх тантăш, тепри ютăрах та çав вăхăтрах тата илĕртӳлĕрех пек...Пĕри тăван çĕршĕн, тăван чĕлхешĕн. Тепри – тĕнче чĕлхишĕн, тĕнче пурнăçĕшĕн çунса хыпать. Иккĕшĕ те хитре, иккĕшĕ те ăслă! Хăшне суйласа илĕ-ши ĕнтĕ каччă, паллă мар. Чăнни

çĕнтерсен аванччĕ. Анчах суйни те питĕ вăйлă! Суя çур пурнăç теççĕ халăхра. Мĕншĕн çапла калаççĕ-ши? Çурри кăна чăн. Вара мĕн суймалла тет-и-ха? Е чăннишĕн тăмалла? Комбайн та, акă, чăн аçтаха. Анчах мĕнле вăйлă вырать вăл! Ку чăнах та питĕ лайăх. Суйни вара... Суйни те пур. Çавă хăратать те. Чутах вĕлеретчĕ вĕт!

Çак шухăшсем çапла пуçа пырса кĕни те тĕлĕнтерет Турула. Вилĕмрен çăлăнни пулăшрĕ тем! Вăл çеç те мар. Шкулта та тем чухлех тĕрĕслĕхшĕн тăма, ырă тума, хитре пулма вĕрентнĕ. Анчах хут вуласа, шкул вĕренсе пĕлни вăл пĕрре. Тепре эсĕ комбайн урапи айне лексе пăх-ха! Вара пачах урăхла шутлама тытăнăн. Каччă та, пурнăçпа вилĕм хушшинче пулса курнăскер, суяпа чăнлăх хушшинче тапаçланать. Хăшĕ çĕнтерĕ ĕнтĕ?

## Урам вăйyи

Турул тем пек ывăннă пулсан та каçхи вăййа тухас терĕ. Унтах тĕл пулĕ вăл юлташĕсене, Çĕрпие те. Кун тăршшĕпе пит тунсăхласа çитрĕ. Çăвăнчĕ, тумланчĕ. Апат çикелерĕ те Йăлăм урамĕпе Малтикас еннелле çул тытрĕ. Çавăнтан мар-и илтĕнет мур илесшĕ купăс сасси? Каçпа сивĕрех те, çурла уйăхĕ вĕт, пиншакне хулпуççи çине уртрĕ. Таçта тĕттĕмре тем пур пек. Темле асамлăх. Яртлаттарса утать Турул.Васкать. Утнăçем хăлхана купăс сасси кăна мар, шăрчăк авăтни те кĕрет. Кĕркуннепе вĕсем пушшех те асса кайса авăтаççĕ. Шăрчăк

хорĕ тесен те юрать. Вăл та чуна çĕклет. Паян Турул хăйне çĕнĕрен çуралнă пекех туять. Тӳперен тивлет çуса тăрать пуль, е шкулта литература кружокне çӳрени пулăшать, ача каллех юрласа ярать. Юрри ун хăй тĕллĕнех тухать. Пĕр шутламасăр тумасăр... Турул мар, юрă хăй юрлать тейĕн. Ачи ку, курăр-ха, çăварне ахальтен тенĕ пек кăна уçкаласа ырать. Мĕн-ма тесен ку вăл тахçанхи шухăш. Литература кружокне çӳренĕ чухнехиех. Мĕн-ма вăл паян килсе çапрĕ, паллă мар. Шкулшăн тунсăхлани пулĕ?

Икĕ тĕнче хушшинче çурт ларатчĕ.
Çутă çунатчĕ кĕрхи тĕттĕм каç.
Туслăх çинчен пĕрмай шухăшлатчĕ
Шкул пахчинче ӳсекен катăркас.

Çу тăршшĕпе шкул çути пек кĕтретĕн
Хăй тĕллĕнех ӳссе ларнă пулас.
Çав кăтăркас атьсене халь кĕтет пуль –
Анчах хăй ăçта пулнине кăтартмасть.

Çав катăркас пĕчĕк çеç, ним те мар вăл.
Ун çырлине те çиме юрамасть!
Шкул çутипе вăл вăраххăн çунать халь –
Чун çавăнпа никамран хăрамасть!

И-ях! тесе кăшкăрса ячĕ Турул çак юрра сăвăласа кăларнă хыççăнах. Ăçтан, мĕншĕн халь кăна сиксе тухрĕ вăл? Ольга Васильевна вĕрентнисемех пулĕ? Улатимĕр витĕмĕ, тен? Яртлаттарса кăна ырать Турул. Ури хăех Малтикаса çити тăсăлать.

Вăйă Керлесем тĕлĕнче пухăнать. Кĕрлет кăна. Каччăсем пурте, кĕрхи каçсем тĕттĕм, пĕчĕк хунарсемпе тухнă. Чăлт-чалт! тутарса çутатнисем хăй пĕр асамлăх. Хунар çутинче Чашла купăс калани, Уял ташлани, Çĕрпи ун умĕнче авкаланни, хĕрсем сăвă каласа алă çупни темле кинори пек курăнать. Тусан çĕкленет. Уял питĕ çăмăл ташлать. Ури çĕре лекмест тейĕн. Вĕттĕн-вĕттĕн саккăрла çаптарса илет те хĕр тавра автан пек çаврăнса илет, унтан вăйă çаврипе кайăкăн вĕçет. Çĕрпи вара акăш пек, шыва пĕр чӳхентермесĕр ишет. Утти-юххи сисĕнмест. Хăй чăвашла кĕпе тăхăннă. Ку та тĕлĕнтерет. Пырать-пырать те пăлтăрр! çаврăнса илет каччă умĕнче. Уял çав вăхăтра ăйăр пек кукалет. Ун пек чухне тусан тата хытăрах çĕкленет. Керле хапхи умĕнчи çереме ташласа çĕтсе пĕтернĕ мар-и ку ачасем? Шыв кирлĕ! Керле Вали самантрах пĕр витре йăтса тухать те шыв пĕрĕхтерме тытăнать. Ку хăй тепĕр кĕтрет. Тусан çĕкленет. Шыв сирпĕнет. Хĕрсем хĕрсе кайсах сăвă калаççĕ, шартлаттарса алă çупаççĕ. Вăйă вăйлансах çитет. Çакă Турула та вăй кĕртет. Вăл та вăйă картине сиксе тухать. Уял çакна çеç кĕтнĕ тейĕн, хĕр умĕнче урине тапрĕ те сак çине кайса ларчĕ. Вăйă картинче халĕ Турулпа Çĕрпи кăна. Çакна çеç кĕтнĕ хĕрсем çĕнĕ сăвă каласа яраççĕ.

Манăн савни сатана.
Çип татма та вăй юлмарĕ,
Татах чĕнет ташлама –

çунтарать каччă чĕрине юрă. Хăй вăл чăвашла пит ташлама та пĕлмест. Купăс сасси тата

Çĕрпи хăй йĕркелесе пынипе, унăн та чиперех тухать пулмалла. Уял «яра пар!» тесе чĕнсе каланисем илтĕнеççĕ. «Асса!» кăшкăрать Чашла. Купăсне хăй каçса кайса туртать. Чунĕпе каçса кайнă Турул малалла хăй мĕн тунине те ас тумасть. Çамрăксен савăнăçĕ тӳпене çитиех çĕкленет. Вăйă хăй пĕр симфони, пĕр театр пулса тăрать. Кунта куракан çук, пурте артист, пурте юрлаççĕ, ташлаççĕ. Ун пек чухне Çĕр чăмăрĕ те хытăрах çаврăнать пуль. Çуллахи çĕр кĕске. Тул çути те палăра пуçларĕ. Çакна чăн малтан Чашла сисрĕ пулас. Тен, купăс каласа ывăнчĕ. «Пулчĕ!» – терĕ. Тавралăха сасартăках шăплăх хупласа хучĕ. Хĕрсем темĕн техĕлтетсе калаçса илчĕç те килĕсене саланма тытăнчĕç. Турул та Çĕрпи хыççăн утрĕ. Йăли çапла. Акă вĕсем халĕ иккĕн урам тăрăх çавтăнса пыраççĕ.

– Эсĕ паян чăвашла тăхăннă-иç? – пуçлать сăмахне каччă.

– Ман мар ку, аннен, – хуравлать хĕр. – Акă, куратăн-и, епле çăлтăрсем ӳкерсе хунă кăкăр çине.

Хĕр пĕр вăтанмасăр çӳлĕ кăкăрне тата хытăрах çĕклесе кăтартать. Унта, чăн та, Çĕрпи илем урокĕнче ӳкернĕ чăваш çăлтăрĕсем пур. Уйăх çутинче вĕсем пушшех те хитрен ялтăрса илеççĕ. Каччă хăй те сисмест пĕр çăлтăрне алăпа тĕкĕнсе пăхать. Хĕр кăкăрĕ хып-хытă! Тăнк! тăратса тăрать. Вĕри, ăшă тата! Çăлтăр пек çуталса илет Турул чĕри. Пĕçертсе пăрахать. Хĕр те вăтанать.

– Кай! – тĕртсе ярать хăюллансах çитнĕ каччă аллине.

«Арçын алли тĕкĕнмесĕр хĕр кăкăрĕ çитĕнмест!», теççĕ халăхра. Çавăнпа каччă хĕр

сăмахне итлемест. Алли çав хĕреслĕ çутă çăлтăра тата хытăрах чăмăртать.

– Ай-уй! – кăшкăрса ярать те хĕр арçын аллинчен вĕçерĕнме тăрать. Ăçтан ĕнтĕ вĕçерĕнĕн? Вĕçерĕнес выръанне ун ытамнех кĕрсе ӳкет. Халь тин икĕ çăлтăрĕ те çунтарать каччă кăкăрне. Хĕр те, пĕр кĕтмен çĕртен пулнăран, сывлайми тăрать. Кун пекки пулман. Каччă ытамĕнче вăл пĕрремĕш хут. Пĕтĕм кĕлетки хытсах ларать. Пĕчĕккĕ-пĕчĕккĕ пулса каять хĕр. Унтан сасартăках вĕри çапать. Лăпкăн-лăпкăн хум пек чупать. Ăшă, çемçе туйăм çупăрлать. Темле çирĕп хӳтлĕх пур пек. Тин çеç хăраса ӳкнĕ хĕр халĕ нимрен те хăрамасть. Ăçта хăрама? Хăй те ун çумне тата хытăрах çыпçăнать. Кăна вăл хăй те сисмест. Иккĕн икĕ вăйпа чăмăртаса лартнă икĕ кĕлетке пĕр çын кĕлетки пек пулса каяççĕ. Пĕр çăлтăр. Çук пĕр уйăх. Халь тин Уйăх çинчи хĕр вăл. Уйăх ăна хăй çине илнĕ. Ĕмĕр-ĕмĕр çапла тăрăччĕ вăл çав çутă уйăх çинчи кĕвентеллĕ хĕр пек Çĕр чăмăрĕ çине пăхса. Юмахри пек таса, илемлĕ, ырă пулса тăрĕччĕ. Мĕн-ма тесен унăн каччи пур. Ăна юратаççĕ! Çавă мар-и-ха вара телей тени! Хĕр чĕри çак шухăшсемпе тулса ларнăскер, ирĕлсех каять. Юраман çĕртех вĕт. Хĕр пĕрчин каччăна чуп тума юрамасть. Анчах ăçтан чарăн-ха хăвна? Савăнса кайнă Çĕрпи Турула чăпăрт! тутурса чуп туса илет. Çăмăллăн, çӳхен, питĕ тасан кăна чуп туса илет. Хăй, пĕрремĕш хут! Кун пекки Чăвашра пулман вара! Тутлă-тутлă пулса каять хăйне. Каччă та анрасах каять. Вăл та ку кĕтрете кĕтмен. Каччă хĕре пĕтĕм вăйран тата хытăрах туртса илет те хăй патне, хыттăн-хыттăн темиçе

хут чуп туса илет. Ытла хытă пуль. Ыраттарать. Анчах ку çӳхен кăна чуп тунинчен çĕр хут ирттерет. Килĕшет ку! Арçын чуп туни Турă чĕре çине пичет çапни пекех. Ĕмĕрлĕхе! Ĕмĕрлĕхе упранса юлать çав тута тути, чун чĕтренĕвĕ... Хĕр кăна тек чăтса тăраймарĕ. Пĕтĕм вăйран туртăнчĕ те каччă ытамĕнчен хăтăлса килне чупса кĕрсе кайрĕ. Пĕр сăмах та каламарĕ. Тем пулчĕ? Тен, çилленчĕ те пулĕ? Турул пĕлмерĕ, пĕчченех тăрса юлчĕ.

Пĕр кана итлесе тăнă хыççăн, урăх тек пĕр сас та илтĕнмен пирки çӳлелле пăхса илчĕ. Тӳпе чун пек ялтăрать. çăлтăрсем тулса-тулса çитнĕ те халь-халь персе анаслăн çакăнса тăраççĕ. Час пуçланать ку çăлтăр çумăрĕ. Тӳпе тулсах çитнĕ. Алтăр çăлтăр та ӳпĕнсех кайнă. Хăй шерпетне Çĕр çине тăкать. Турул та çав шерпетех ĕçместь–и халĕ? Ӳсĕртсех янă ăна, çав шерпетпех. Турул чĕринче, Йăлăмалла утнăçем, темле çăлтăрлă кĕвĕ хăй тĕллĕнех шăранма тытăнать.

«Çăлтăр витĕр выртать чăваш çулĕ», – пырса çапрĕ ун пуçне пĕрремĕш йĕрке. Пĕрремĕш йĕрке килĕшсен вара каять. Ытти чăнласах хăй тĕллĕнех сиксе тухрĕ.

Çăлтăр витĕр выртать чăваш çулĕ.
Çул çинче пĕрмаях çăлтăр çурĕ...
Çавăнпа-ши пуçа пĕксе утрăм,
Çавăнпа-ши кăштах ыйха путрăм?

Пур-ха, пур куркари пыл шерпечĕ!
Йăлт пĕтмен-ха чăвашăн сипечĕ.
Тӳпери куркана тайăлтартăм,
Ĕçсе ятăм та тепĕр тултартăм...

Ĕçнĕ чух чун таçта кĕрсе кайрĕ –
Ӳсĕртет-мĕн кăштах çăлтăр «сĕчĕ»!
Пĕксе мар, çĕклесе пуçа утрăм...
Чăваш çулĕ çнче – çăлтăр тупрăм.

Ку сăвва никам та илтмерĕ. Турул, тен хăй те чунра мĕн çырнине ăнланса илеймерĕ. Мĕн курнă-туйнă, çавна çырнă. Анчах та сисет – ку сăмахсене вăл мар, такам çыртарать. Юрату мар-и ку?

## Чăваш çулĕ

Ялта пурăнакан кашни çыннăн çул тунă çĕре тухмалла. Норма пур. Çырмаран чул кăлармалла, турттармалла, çул хывмалла. Кашнин пиллĕк кубометр чул. Çавăнпа та тыр вырнă вăхăтрах хăшĕ-пĕри çул çинче ĕçлет. Турул та малтан комбайн çинче ĕçлекенскер, халь тин Эль çырминче чул пуçтарать. Тырра вырса пĕтернĕ. Мĕн вăл халь тин тыră вырасси? Комбайн хуçалăх тыррине пĕр эрнерех вырса пĕтерчĕ. Шăрăх тăчĕ тата. Çумăрсем килсе аптратмарĕç. Уйра халĕ улăм пуçтараççĕ. Турул вара çырмана анчĕ. Эль шыв тăршшĕпех шап-шур вак чул выртать. Шултрисене пуçтарса пĕтернĕ. Турул валли юлман та. Чул шыраса ача анаталла утрĕ. Эль çыранĕсем çӳлленсех пычĕç. Пĕр-тепĕр çĕрте çырма питĕ тарăн. Мĕншĕнне Турул тӳрех ăнланса та илеймерĕ-ха, çак çырмасене пĕтерсен аванччĕ тесе пыратчĕ, авкаланчăк шыв юххине сăнаса. Пĕр тĕлте чулĕ

чылай та çĕр айĕнчисене кăларса пĕр купа туса хучĕ. Аллинче ун пĕчĕк лум. Хайăрать кăна. Чул хыççăн чул тухать. Шап-шур. Çирĕп. Чанклатса кăна тăрать. Çапла çирĕп чул кирлĕ те çул хывма. Пĕр кубометр пек чул купа самантрах ӳссе ларчĕ. Ăçта тата мĕн пур-ши тесе пăхкаласа тăнă вăхăтра пуçа сасартăках тепĕр шухăш пырса кĕчĕ. Ара, çак чула кашни çул пуçтарса тăман пулсан çырми те çапла çурас çук вĕт! Ĕлĕк-авал, ашшĕ калани аса килчĕ, Эль çырмине сиксе каçнă тет. Халĕ вара кайăк та аран-аран вĕçсе каçать. Çапла шутласа пăхса тăрать ача çырма тĕпĕнче, киак-киак! тесе вĕçекен кайăксене. Вĕсем те чул пуçтараççĕ тем? Çук, çук, ан пуçтарăр, теççĕ. Çырма тата тарăнланса каять те уйри пĕтĕм пулăхлă çĕре юхтарса каять. Вара, тырăсăр тăрса юлатăр, теççĕ вĕсен сассисем. Турул кăна халь питĕ лайăх ăнланать. Анчах чулсăр та май килмест. Çул хывмалла. Яла килсе çитнĕ техника çулсăр-мĕнсĕр чупаймасть. Пылчăк çăрса тапаланса кăна ларать. Çул кирлĕ. Вара ял çынни те тĕнчене тухма пултарĕ. Тĕнче те яла пырса кĕрĕ. Çавна ăнланса ĕçлеççĕ те эльчиксем. Пĕр тӳлевсĕр. Çырма вара, çырма чăтать. Тарăнланнăçем тарăнланса пырать. Кунта халь тин ним тума та çук. Çакăнта-ши вара чăнни? Пĕрне пĕтерсе тепĕрне туни тĕрĕсех-и? Çут çанталăкра ун пек мар вĕт-ха вăл! Пĕри тепĕрне пулăшса пырать. Кансĕрлемест. Хирĕçлемест. Кунта вара темле суялăх. Пĕрне лайăх тăвас тени тепĕрне япăхлатать. Мĕншĕнне ача ăнланмасть. Çын темшĕн çапла ĕçлесе пурăннине кăна пĕтĕм чу-чĕрипе ăнланать, анчах ку тĕрĕсмарлăха мĕнле çĕнтермеллине пĕлмест.

Пěртен пěр ěçе пěлет вăл халь. Чул хайăрать. Унăн норма пур. Пиллěк кубометр чул. Чул вырăнне тупнă та... Пěр тěлте çӳллě çыран айěнчи пăрăнтăкра чул сийěн-сийěн выртать. Кăлар кăна. Чанк–чанк! тăвать тимěр лум, çирěпрех чулсене лексен. Ку лайăх. Шыв шăнкăртатса юхни те чуна лăплантарать. Ача чěринче çавна пула темле тепěр кěвě, çут çанталăк кěвви, çуралма пуçлать. Каллех сăвă çырать тем! Мěн ку? Ку ача литература кружокне Улатимěрпе пěрле çӳресе поэта тухса кайрě-и? Çук пулě? Уншăн мар пулě? Сăлтавě юрату юрринче. Турул чěри юратупа тулса ларнă. Кашни каç юратнă хěрěпе тěл пулать те! Кашни каç, кěрхи каçсем сивě те, пěрремěш хут чуп тунă чухнехи пекех çыпçăнса лараççě. Акă, çакă çырма чулěсем пек. Вěсем те сийлěн-сийлěн. Пěринчен теприне халь лумпа хайăрсан та уйăрма çук...

Турул пěтěм вăйне пухса ěçлет. Тем пысăкăш чулсем катрамăн-катрамăн хăйпăнса тухаççě. Кусем çул сарма кăна мар, çурт тума та питě меллě. Ача вěсене çырма тěпěнчен кустарса кăларать. Хăйне чăн Сизиф пек туять. Ас тăватăр пуль, вăл юмах тăрăх, мěн ěмрипе пěр пысăк чула ту тăрне хăпартасшăн тапаçланать. Хăпартса çитернě-çитермен чулě каялла персе анать. Кирек мěнле тарăхсан та халь ăна тепре хăпартма тытăнмалла. Шăпи çапла ун, Сизифăн. Турулăнни пекех. Акă, ача та çыр тěпěнчи чула хăпартсах çитерчě, тем вăхăтра майсăртарах ярса илчě-и, чул çырманалла каялла кусса анса кайрě. Ăт, сана, терě пулас. Ан кăлар мана çырма тěпěнчен. Унсăрăн шыв çурса пěтерě те, çырма сан

уюсене кăна мар, кил-çуртна та юхтарса илсе кайĕ. Вĕçерĕнет чул. Çук, тухасшăн мар выртнă çĕртех выртас тет. Аллине ваттарса пĕтернĕ ача юн тухакан вырăнсене ĕме-ĕме илет. Суранĕсем пĕр сăмахсăр ăнлантараççĕ. Чул вырăнĕ çырма тĕпĕнче! Урăх ниçта та мар! Унсăрăн, чуна та шыв çурать. Пĕтĕм пурнăçа çурать! Тарăхать Турул. Сăвă çырать. «Шыв-шур пĕрмай пĕр çырана çурать», – кĕвĕленеççĕ сăмахсем.

Шыв-шур пĕрмай пĕр çырана çурать...
Шап-шурă чул шыв хыççăн пухăнать.
Асаплă пурнăçа шап-шуррăн кăтартать.
Анчах эп шăп. Пĕр сас та кăлармастăп.
Çав шур чула ахах пек пуçтаратăп.
Ман пур халь мул, чăваш çулне хывмалăх...
Ман чунăма çав ĕмĕт тыткăнланă.
Çак çырмарах шыратăп çурт тумалăх...
Эй, пурăнăç çырми, çурсам пĕр хĕрхенӳсĕр!
Çурса кăлар çыр тĕпĕнчен шур чул.
Ман ĕмĕтĕм çак çырмара та çӳллĕ –
Пулин пĕтеп. Пĕтеп чул пуçтарсах!
Ман вырăна юлать чăвашăн аслă çулĕ!

Килĕшет ку сăвă. Таçтан вăй пырса кĕрет. Çук, эпĕ Сизиф мар вара, тет те каччă, тем пысăкăш чула машин пыма майлă çĕре кăларса пăрахать. Ыттисене те уяса тăмасть. Мелне тупрĕ-и, часах акă, чулĕ çук мар та, çыр хĕрринче тем пысăкăш купа палăрма тытăнчĕ. Кунта пилĕк кубометртан пĕрре те кая мар, шутлать Турул. Малтан пуçтарнă купара та пĕр-иккĕ... Ывăнса çитнĕскер, канма ларать. Кĕтет. Кăнтăрласем иртсен чул турттарма машина килме пулнăччĕ... Шухăш çавăрать. Вăл

çурт лартать. Чул çурт. Акă, часах тĕнченавтсен шкулĕнчен вĕренсе тухĕ те таçта тĕнчере мар, ялтах çĕнĕ çурт туса лартĕ. Яла кĕме-тухма чул çул та пулать. Тĕнчи вара хăй те пырса кĕме пултарать. Чăтса кăна тăр. Кĕчĕ те пулас. Çĕр çĕмĕрсе пырса кĕчĕ. Ялта халь тем тĕрлĕ техника. Радио, электричество. Шкул. Вĕсем ял ачин пурнăçне йăлт тепĕр май çавăрса çапрĕç. Тĕнче хăй çутипе илĕртсе тăрать. Юмах пек. Анчах таçтан сисет ача, юмах, хăрушă юмах. Кам унта тухса каять – пĕтет. Ялтан кайнисем пĕри те каялла таврăнайман. Ни вилĕ, ни чĕрĕ. Мĕн ку? Чăваш хăй ачисемпе пĕтĕм тĕнчене тăрантса тăрать мар пулĕ те? Тĕнче чăн аçтаха пекех туййăнса каять. Çавă çăтать. Кашни çул пĕр виçĕ класс ача памасан йăлтах пĕтеретĕп тет. Çынсем вара, ку çăткăн çырлахтăр тесе, çулран çул чи лайăх ачисене тĕнче чӳкĕ тăваççĕ. Ах! кăшкăрса ячĕ ача, пурнăç чăнне ăнланса илнĕскер. Пире улталаççĕ вĕт! Чăнласах суя пулма вĕрентеççĕ. Мĕн-ма вара, шкул пĕтерсенех, тĕнче пĕлĕвне илес те, ялтах çĕнĕ пурнăç туса хурас мар? Тĕнчери чи чаплă пурнăçран кая ан пултăр вăл! Ăт, сана!

Кĕр-кĕр-кĕрр! кĕрлесе каять çав вăхăтра çыр хĕррипе пыракан машина сасси. Кузов çинче ун юлташĕсем.

– Чул ăçта? – кăшкăрать Уял. Хăй питĕ хаваслă. Ара, машинăпа çӳрет вĕт! Машина сăртран вĕçтерсе аннă чухне хĕрлĕ кĕпи хăмпăланать. Çӳç-пуçĕ арпашăнсах кайнă. Ку хаваслантарать. Тем пур кунта!

– Тавай, тиес! – тет Чашла. Вăл таваскать.

Висĕ каччă чул тиеме тытăнаççĕ. Вăр та вăр ывăтаççĕ пĕчĕкреххисене. Пымăкраххисене виççĕн тытса пăрахаççĕ. Малтанрах аран-аран-кăларса хунă чулсене ку çамрăксем мечĕк пек тыткаларĕç. Кабинăри Шуç çитет, çитет текелесе ларать. Йывăр тиесен машина çырмаран хăпараймасть тет. Ачасен вара тата пăрахас килет. Çапах та, кăна кашни ăнланать, пĕр-икĕ кубометртан ытла турттараймăн. Машини те ку пысăках мар вĕт! Полуторка кăна. Купа пĕр пайне тиеççĕ те виççĕн кузов çине хăпарса лараççĕ.

– Кайрăмăр! – илтĕнет харăссăн station калану сасă.

Кĕрр! кĕрлесе каять машина. Хăвăрттăн чупса пырса вăй илет те сăрта хăпарса каять. Аран-аран хăпарса çитет. Шофер хăй ĕçне пĕлет. Чăн та, кăшт ытларах хунă пулсанах, машина чăхăмлатчĕ те пулĕ. Халь тин вăхăтлă. Сăрт тăрне хăпарса çитнĕ машина çил пек вĕçтерчĕ. Аслă çула халь палласа илме те çук. Çул тăршшĕпех хăйăр тăкса тухнă. Варринче пĕр тăвата çын чакаланаççĕ. Иккĕн чула якаткаласа çав хăйăр çине майлаштарса хураççĕ. Теприсем мĕн кирлисене алăран парса тăраççĕ. Ĕç вĕрет кăна. Чулĕ кусен пĕтсе çитнĕпе пĕрех. Çавăнпа та çамрăксем чула вĕсем умнех тăкса хăварчĕç. Тепре кайрĕç. Ĕçленĕ чухне те, кузовра ларса пынă чухне те хăйсем пĕрмай шкул çинчен калаçаççĕ. Тепĕр темиçе кунтан шкула каймалла. Сентябрь пуçланать. Акă, çул туса пĕтерĕç те çав çулпа шакăрт-шакăрт! тутарса вĕренме кайĕç. Тен, машинăпа та çӳреме май килĕ унта... Чăн та, машинăпа

çӳреме çăмăл. Турул кăларнă чула çав кунрах турттарса пĕтерчĕç. Турул пайĕ талчĕ.

## Шкулти тĕлпулусем

Учительсем ачасене питĕ тараватлă кĕтсе илчĕç. Туссем хаваслă. Кам мĕн те пулин çинчен юмах ярса парсанах харăссăн кулса яраççĕ. Пурте темле улшăнса пысăкланса кайнă пек. Калаçасса та питĕ сумлăн калаçаççĕ. Турул пуринчен ытла Улатимĕршĕн савăнчĕ. Çу каçа вăл темăн чухлĕ сăвă çырса тултарнă. Пĕрин хыççăн тепĕрне вулать. Турул темшĕн хăйĕнне кăтартма вăтанать. Тăхтать. Вăл та сăвă çырма пуçланине Çĕрпи те пĕлмест. Тина тесен, Тина вĕсене итлес те çук. Питĕ майралла курăнать. Чăвашла пĕрре те калаçмасть. Ку тĕнчене тахçанах тухса кайнă пулас. Кĕлетки кăна шкулра çапкаланса çӳрет. Хитре вара хăй! Шуйттан пек хитре! Çӳллĕ урисене кăтартакан кĕске юбка тăхăнса янă та, утмассерен хыçĕсем курăнса пыраççĕ. Каччă чунне мĕнле пырса тивмест пултăр ку? Турул куçне темле тартма тăрăшсан та ку хитрелĕхе курмасăр тăма пултараймасть. Çĕрпи вара чăвашла вăрăм кĕпе тăхăннă. Тутăр çыхнă. Кăкăрĕ те унăн хупă. Тинăнни пек мар. Лешĕ шурă кофта тӳмисене вĕçертсе янă та, патнерех пырса пăхсан куç алчăраса каять, пĕçертет. Иккĕшĕ те тата Турул çумнерех тĕршĕнеççĕ. Ыталаса илменни кăна. Каччă, чăн та, кĕрнекленсе кайнă. Тачăрах кĕпи туртăннăçемĕн кăкрти мускулсем катрамăн-катрамăн палăрса илеççĕ. Вăй çук мар, чăн та!

Терентей тĕлĕнче пĕрре кăна мар вăй виçнĕ вĕсем ялта. Икĕ пăтлă кире пуканне ачасем ним те мар çӳлелле мечĕк пек ывăтатчĕç. Жим тăватчĕç. Çакна хĕрсем таçтан пĕлеççех пулас. Хисеплеççĕ.

Улатимĕрĕн вара хурлăх. Инкек тесен те тĕрĕс. Унăн савнă хĕрĕ Марина, чаплă баянистка, шкултан пăрахса тухса кайнă. Кам мĕн каласа юрлаттарĕ, ташлаттарĕ халь тин! Марина хăй каччине пĕр сăмах каламасăр тухса шунă. Тăван ялне урăх района кайнă терĕç. Тин çеç вĕт-ха вăл пире, шутлаççĕ ачасем, çул çинчен юрă юрлаттаратчĕ.

Дорога, дорога, нас дальние дали зовет.
Быть может до счастья осталось немного,
Быть может один поворот, –

тесе купăс тăсса яратчĕ те Марина, ачасен чунĕ таçта кайса кĕретчĕ. Ку юрра пуринчен ытла Улатимĕр юрататчĕ. Паллă, ку унăн юрату юррийĕ пулнă. Халь тин вăл малалла мĕн тумаллине те пĕлмест. Шкултан каяс пек калаçать. Куççуль тухманни кăна ун. Турул ăна питĕ хĕрхенет. Анчах мĕнпе пулăшмаллине пĕлмест.

Глаза твои искрятся смехом,
Но мимо проходит мой путь, –

ĕнĕрлет çамрăк поэт Марина юррине. –

Быть может я счастье проехал
И надо назад повернуть? –

чăнласах макăрать Улатимĕр.

Турул куçĕ умне чул хывнă аслă çул тухса тăрать. Вĕсен те вĕт çав çулпа ялтан тухса каймалла пулать. Халь тин яла çавăн чухлĕ техника илсе килнĕ хыççăн мĕн туса пурăнас тет. Çавна каласа вĕрентеççĕ учительсем. Тĕнченавтсен шкулĕ ачасене тĕнчене тухма хатĕрлет. Ялта юлса çĕнĕ пурнăç тумалли çинчен кунта пĕр сăмах та çук. Тĕнчере чи чаплă та тупăшлă вырăнсене тупнă çынсен потречĕсене стенасем çине çакса тухнă. Вĕсене мухтаççĕ. Ялта юлнисене намăслантараççĕ. Çапла ĕнтĕ. Тĕнчене тухмалăх пĕлӳ илеймен те... ялтах юлнă теççĕ. Ăсĕ-тăнĕ çитмен... Турулăн ăсĕ-тăнĕ çук мар. Енчен те ялтах юлса пăхсан? Вăл хĕрсем çине пăхса илет. Мĕнле пысăк уйрăмлăх! Çĕрпи хупăрах кĕпе тăхăннă та çеçке çурма хатĕрленнĕ чечек пек курăнать. Тина вара çеçкере, мĕн пуррине йăлт уçса хунă. Пырса лар пыл хурчĕ, ĕмсе ил манăн пыллă ӳтĕме тенĕ пекех туйăнать. Хăй питĕ хаваслă. Хĕр кăлтăртаттарса кăна тăрать.

– Ай, мĕнле тӳрĕ сан куç харшисем, – тет Тина каччă çумне çыпăçса. Çакă Çĕрпие, пĕрре пăхсах курăнать, килĕшмест.

– Чăн та, эпĕ асăрхаман та! – ачашлать Çĕрпи пӳрни çăра та сарлака куç харшине. Кун пек туни Тинăна та кĕвĕçтерет. Пĕр-пĕрне ятарласа кĕвĕçтереççĕ пулинех!

– Мускулсем мĕнле ӳссе кайнă сан, – тӳнклеттерсе пăхать хĕр каччă кăкăрне. – Мана эсĕ халь ним те мар çĕклесе илме пултаратăн.

Кун пек каланисем каччăна астарсах яраççĕ. Турул хăй вăйне туйса илет. Мускулсене вылянтарса пĕр кĕтмен çĕртен Тинăна çĕклесе илсе пăлтăртаттарса çавăрать. Хĕре ку питĕ

килĕшет. Ихĕрсе тенĕ пек кăшкăрса савăнса каять, кулать. Çĕрпи кăна чăтса тăма пултараймасть. Вăрт! çаврăнать те Улатимĕр çумне пырса тăрать. Уялпа Чашла та Турул çине ним ăнланмасăр пăхса тăраççĕ. Мĕн пулнă кусене теççĕ пулинех. Хăй тĕрĕс мар хăтланнине Турул самантрах ăнланса илчĕ. Тусĕсем умĕнче пуçне тайса айăплăн пăхса илчĕ те, Тинăна пăрахса хăварса Çĕрпи патне пырса тăчĕ. Каçару ыйтса аллине ун хулпуççийĕ çине хучĕ. Хĕр кĕлетки чĕтренсе илчĕ. Çапах та вăл хирĕçлемерĕ. Каçарчĕ. Халь тин вĕсем каллех пĕрле. Чăнни çиеле тухрĕ. «Ача пек чăн пулар!» – теççĕ вĕсен хусканăвĕсем. Сылтăм аллисем чĕрисем çинче, сулахайĕсем хулпуççисенчен ярса тытнă. Вĕсем çапла карталанса тăнине Улатимĕр кăна мар, Тина та асăрхарĕ.

– Мĕн туса тăратăр эсир? – ыйтать хĕр. – Манăн та сирĕнпе пĕрле тăрас килет.

– Ку пирĕн тупа, – ăнлантарать Турул. Кам та кам чăн пурăнас тет, çавă аллине чĕре çине хурса, «Ача пек чăн пулар!», тет.

– Эпĕ халĕ те ача пулас, – тет Улатимĕр, тин çеç çухатнă савнă хĕрĕшĕн ача пек куççуль кăларса тăраканскер.

– Мана та юрать-и ун пек калама? – каллех тапăнать Тина.

– Юрать, енчен те... – Çĕрпи Турул çине пăхса илет, – ют пахчана кĕме пăрахсан, юрать.

Хĕрача мĕн каланине пурте ăнланса илеççĕ. Кулса яраççĕ. Тина пуринчен хавслăрах кулать.

– Юрě-çке, – тет вăл ачасем çумнех пырса тăрса. – эпě те сирěн пек пулма тăрăшăп. Чăннипе пурăнăп.

– Апла, тупа ту! Хěвелшěн, Турăшăн, – те, – Çěр-Аннешěн! Тупа тăватăп. Чăннипе пурăнăп, тек нихăçан та никама та суймăп.

– Ют пахчана кěмěп, те, – шăл йěрет Чашла. Ку пурне те килěшет. Каллех кулса яраççě. Тина шухăшлать. Тупа туни ахаль мар пулнине вăл питě лайăх пěлет. Енчен те панă сăмаха тытаймасан вара...

– Эпě килěшетěп! – тет Улатимěр, хěр иккěленсе тăнине кура. Нихçан та никама та тек суймăп, инкеке лекнě çынна пулăшăп, хама та хěрхенмěп. Хěрсене вара тек ěненмěп!

Ачасем каллех ахăрса яраççě. Ара, вăл Маринăпа çӳренине пурте пěлеççě мар-и? Çавăнпа та пěрремěш çухату тӳссе курнă тусне шеллеççě, çав вăхăтрах йěкěлтеççě те. Ача шӳтсěр пулмас çав вăл.

– Тупа тăватăп, – пуçлать Тина. – Турăшăн, Хěвелшěн, Çěр-Аннешěн! Чăннипе тата, – вăл хăй çине пăхса илет, – хитрипе пурăнма тăрăшăп. Ют пахчана купăста çиме кěмěп! – темле питě чеен пăхать çав вăхăтра хěр. Илěртӳллěн авкаланса калать вăл çак сăмахсене.

Ку пурне те килěшет. Хаваслантарать. Тина кăштах вăшкăртса каланине никам та сисмест. Хальхинче пурте пěр картана тăрса, «Ача пек чăн пулар!», теççě. Чăн ачасен йышě ӳснěшěн савăнаççě. Çав вăхăтра звонок та янăраса каять.

Пěрремěш уроксенче ачасен каникул вăхăтěнче мěн ěçлени, мěнле пурăнни çинчен

каласа кăтартмалла пулать. Чăннипе–и, ыррипе-и, хитрипе-и иртнĕ вĕсен пурнăçĕ? Кашнин явап тытмалла.

«Таса пурнăçшăн, Çĕршĕн, Хĕвелшĕн, халăхшăн мĕн тунă эпĕ?» – шутлать Турул, Ольга Васильевна урок пуçласа кашнине ятран чĕнсе тухнă чухне. Пĕр шутласан ним те туман пек. Ял халăхĕпе пĕрле ĕçленĕ. Ир-ирех тăнă та уя утнă. Çул хывнă. Ку ĕçсенче ача ытла пит нимех те курмасть. Мĕн пĕчĕкрен хăнăхнă ĕç. Çапах та, халь тин урăхла пăхса илет хăй пурнăçне Турул, кунта тем питĕ пĕлтерĕшлĕ япала пур пек.

Пĕрремĕшĕ, тĕшмĕртет Турул, эпĕ ĕçрен пăрăнман. Ку питĕ пĕлтерĕшлĕ. Тепĕр чухне ирпе питĕ çывăрас килет. Тутлă ыйăха татма вăй çитернĕ. Каçпа та... кĕтӳ кĕтнĕ, çĕр сухаланă, вăййа та тухнă. Апла, чăнласа, тĕрĕссипе пурăннă.

Иккĕмĕшĕ – яла юлас шухăш тытнă. Ку, паллă, никама та савăнтармĕ. Çапах та ку питĕ тĕрĕс. Хамăр пурнăçа пирĕн хамăрăнах тумалла.

Виççĕмĕшĕ – Турул хăйне турă пек туйса илнĕ. Вăл сăвăсем çырать. Анчах кун çинчен никама та пĕлтермест. Ку пĕр енчен усал ересрен сыхланă пек, тепĕр енчен пăхсан суйнă пек те килсе тухать. Çавăнпа та puринчен ытла Улатимĕр умĕнче хăйне аван мар туять.

## Ырă тусан усала кĕтсех тăр

Уялпа Чашлашăн ку урок тӳпе йăтăнса аннă пекех пулчĕ. Тинĕс Давыдович Варкка

аппа вилсе кайни çинчен пĕлтерчĕ. Çуртне вара хăйне пăхса пурăннă шкул ачисем çине çыртарнă пулать. Апла, Уялпа Чашла ун эткерлĕхĕпе усă курма пултараççĕ, карчăк çурчĕн хуçисем пулса тăраççĕ. Нотариус çирĕплетнĕ хута алла тыттарнă ачасем аптраса ӳкеççĕ. Пĕр енчен савăнмалла пек, тепĕр енчен – выртса макăрмалла. Вĕсем Варкка аппана кирлĕ пек пăхса çитереймен. Вăл вилсе кайнă. Халь тин мĕн тумалла тет?

Ырă тума çăмăл мар иккен. Каникулта кам мĕн туса пулăшма пултарнине итлесе ларсан аптрасах ӳкетĕн. Ырă, кĕттермест, часах усала куçать. Пĕрисем çĕр улми анине тасатса çум çумласа панă та, хуçисем япăх тунă тесе ятлаçнă. Теприсем кĕтӳ кĕтме кайнă – ĕнисене кӳпĕнтерсе килнĕ. Виççĕмĕшсем – картиш шăлса панă та тусан çĕклетĕр тесе ятлаçнă тет. Çуллахи вăхăтра тумалли ырă ĕçсен çути ачасен чĕринче темле тĕксĕмленчĕ пек курăнать. Мĕншĕн? Çак пулăма чăн малтан Тинĕс Давыдович асăрхать.

– Ырă тăвас тени чылай çынна тарăхтарнă пулас. Сăлтавне кам пĕлет? – ыйтать вĕрентекен.

Класс пĕр вăхăт шăп ларать. Унтан, тем кансĕрлет пулинех, шавлама тытăнать. Тавлашсах каять. Анчах никам та ку пулăмăн вăрттăнлăхне хальлĕхе уçса параймасть. Уял пуçĕнче тем тĕвĕленет.

– Ырă ĕçе ăна тума кăна мар, йышăнма та питĕ йывăр, – тет вăл темле питĕ хăюсăррăн. Иккĕленет пулинех. Ара, калăпăр, çурт лартма пулăшрĕç пулсан, мĕн-ма питĕ

йывăра илмелле тет вара çурт хуçин çав пулăшăва?

– Ăнлантарса пама май çук-и? – хутшăнать калаçăва Чашла. – Мĕншĕн йывăр пулмалла тет вара мана, калăпăр, апат вăхăтĕнче эсĕ маншăн укçа тӳлерĕн пулсан. Ман паян кĕсье тĕпĕ çӳхерех те, эпĕ çак пулăшăва санран пĕтĕм чун-чĕререн кĕтетĕп. Пулăшатăн-и?

– Пирĕншĕн те тӳлетĕн-и? – йĕкĕлтет класс. – Пирĕн те укçа çукрах.

– Паллах тӳлетĕп. Анчах сире пĕрре те çăмăл пулмасть. Апатне çийĕр-ха эсир ăна. Анчах кайран аптраса ӳкмĕр-и?

Ку пурне те савăнтарса ярать. Ара, паян кăнтăрлахи апата Уял шучĕпе тума пулать вĕт! Вăл хирĕç мар. Йывăр та мар. Çи те çи! Ĕç те ĕç! Пĕр тӳлевсĕр...

– Ямăт апат пыра ларать тет, – асăрхаттарать вĕрентекен. – ĕçлесе çини кăна усса каять. «Ĕçле-ĕçле çи», теççĕ-и-ха?

– Çапла, тĕрĕс, – хĕрет Уял. – Çинĕшĕн вĕт ăна тавăрса парас пулать. Ĕмĕр-ĕмĕр парăмра çӳреймĕн. Ырă туни хăй питĕ йывăрах та мар пулĕ, анчах парăмĕ чуншăн калама та çук йывăр. Ăна йăтса çӳреме эпĕ вăй-хал та çитерес çук. Çавăнпа та эпĕ парăма тӳрех татма тăрăшатăп. Мĕнле калаççĕ-ха? Ĕç татăлтăр тесен, ĕçшĕн виçĕ пус та пулин тӳлемелле тет. Çапла калаççĕ ялта.

– Вара мĕн, çав ĕçлесе панă ĕçсемшĕн пурне те йывăр пулнă-и? – парăнмасть Чашла.

– Йывăр пулнă çав. Пĕрре çум çумлама ал çитменшĕн, тепре таса мар пурăннăшăн намăсланнă. Хăйсен хал çитмен пек килсе тухать. Тавăрса парас тесен вара тата пысăкрах

хал тупмалла. Вăл çук. Çын ун пек чухне мĕн тăвать? Вăл тарăхать. Çавна куртăмăр та!

– Ăçтан çапла питĕ тарăн курса тăратăн вара эсĕ çак пулăмсене? – ыйтать Тинĕс Давыдович. – Кун пирки эпĕ хам та шутламан.

– Ваттисем вĕрентнипе. Пирĕн ялта «Ырă тăвиччен усал ту», теççĕ. Усалшăн тӳлемелле мар.

– Усалшăн тавăраççĕ. – юлмасть Чашла. – Кураймасăр тăраççĕ. «Шăпи тулать», теççĕ.

– Ку та тĕрĕс. Апла, мĕн килсе тухать, ырришĕн те, усаллишĕн те тӳлемеллех пулать. Апатшăн та тӳлес пулать! – кулать Уял. Вăл класс яланхи пекех кулса ярасса кĕтет. Анчах класс чĕнмест. ачасем пурте шухăша кайнă. Ахăртнех, кашнин пурнăçĕнче кун пек ырăпа усал хушшинчи пăтăрмахсем пулса иртнех. Халĕ, акă, кашни хăйне тĕпчет, ыйтать, ăçта мĕн эпĕ тӳлевсĕр хăварнă тет.

Шкул ачисем çапла калаçса тавлашса кайни Тинĕс Давыдовича килĕшет. Епле ӳссе пысăкланса кайнă вĕсем! Чунĕсемпе таса, кăмăлĕсем ырă, сăнĕсем хитре. Акă епле чăлтăртаттарса лараççĕ вĕрентекен умĕнче! Пурнăç йĕркине чухлаççĕ, ырă тума тăрăшаççĕ. Ах, йывăр пулать вĕсене пурăнма!

– Ырă тунăшăн тӳлемелле пулсан вара вăл ырă та мар! – каласа хурать çав шухăша татса Чашла.

Класс каллех аптраса ӳкет. Учитель чĕнмест. Мĕн ырри ĕнтĕ, чăн та, тӳлерĕн пулсан? Ку леш «баш на баш» кăна. Чăнла мар.

– Ырра, апла, чăнласа тăвас тетĕн пулсан, никама систермесĕр тумалла. Ун çинчен никам

та ан пĕлтĕр! – парăнмасть Уял. – темле кĕтрет пек курăнтăр. Калăпăр, картишне ăна хуçисем çывăрнă чухне, е килте çук чухне шăлса тухмалла пулнă. Çĕр улми анине те никам та курман чухне тасатса тухмаллаччĕ.

– Вăрттăн тунă ĕç ырă пулма пултарать-и вара вăл? – ыйтаççĕ ачасем. Вăрттăн ĕçре те чăнни çук. Вăрттăн вăрă тăваççĕ!

– Чăн ырă ĕç пурнăç йĕркине парăнса тунă ĕç пулĕ вăл, – шухăшлать учитель. Шухăшламалăх вара кунта çук мар. – Усалĕ те çав йĕркене пăссан кăна сиксе тухать мар-и-ха? Эпир ырă тăвас тетпĕр. Анчах çав вăхăтра пурнăç йĕркине те пăсатпăр, вара ырă тăвас тени усала куçса каять.

– Вăл çеç те мар, хама калатăп, – тет Уял. – Ĕçе вĕçне çитерменни пур. Вĕçленмен ĕç япăх курăнать. Усалланать. Усал тени, апла, хăй хальлĕн çук. Ырă кăна пур.

– Ырри усала куçать-и? – ăнланмаççĕ ачасем. – Апла, ырра тумалла та мар.

– Тумалла! – çине тăрать Уял. – Анчах вĕрентекен каланă пек йĕркене пăсмасăр, ĕçе вĕçне çитерсе, май килсен никама пĕлтермесĕр тумасăр...

– Ха! – кăшкăрса ярать класс. – Ун пек Турă та ĕçлеймест. Вăл та хăй ĕçĕнче усала пĕтерейменн. Тем шуйттанĕсем унта халĕ те пур. Çынна та çылăхлă туса янă теççĕ.

– Çылăхĕ те, усалĕ-шуйттанĕ те Турăран тухнă япаласем мар. Пурте эпир пурăнма пĕлменнипе çыхăннă. Енчен те тĕрĕссипе, ыррипе, хитрипе пурăнма вĕренсен, вĕсем нихçан та пулас çук. Çут çанталăк мĕн пани пурте ырă, çав ырăлăхпа усă курма пĕлменни вара

усала куçать. Çавă кăна, – вĕçлет урока Тинĕс Давыдович. Звонокĕ те çав вăхăтрах янăрать мар-и-ха? Апат вăхĕчĕ çитрĕ. Шӳт вăхăчĕ. Ачасем пурте Уял тавра кĕпĕрленсе тухса каяççĕ. Ара, хăй вĕт тӳлеме пулчĕ!

Апат вăхăчĕ çапла шӳтлесех иртсе кайрĕ. Кăшт канса илнĕ хыççăн Уялпа Чашла Варкка аппа килне, халь тин ĕнтĕ хăйсенех пек çуртне кайса килме шутларĕç. Çăва çине кĕрсе тухас тесе çул хĕрринче ӳсекен чечексене татрĕç. Карчăк вил тăпри умĕнче пуç тайрĕç. Кирлĕ пек пăхаймарăмăр тесе каçару ыйтрĕç. Вăхăт чылая кайрĕ. Юлашкинчен Варкка аппа килне çитсе курас терĕç. Тем мĕн юсакаламалли мĕн çуккă-и теççĕ.

Хапхаран пырса кĕнĕ икĕ ача шанк! хытса тăчĕç. Пырса кĕричченех тем пулнă пек туйăнчĕ-ха. Хапха умĕнчех такам машини чарăнса ларнă. Темле сассем илтĕнеççĕ пек. Ку ахальтен мар çапла курăнчĕ иккен. Пӳрт ăшчиккине такам йăлт тавăрса кăларнă тейĕн. Картиш талккăшĕпе кĕпе-йĕм куписем, сĕтел-пукан йăваланса выртаççĕ. Темле арçынпа хĕрарăм ачасем çине кĕлттĕн пăхса илчĕç-и, е çук, ку паллă пулмарĕ, хăйсен ĕçне малалла турĕç. Вăрăсем мар пулĕ те кусем? Ачасем хăраса ӳкеççĕ. Чĕрре кĕрсен акă çапса пăрахĕç те! Тен, милицине пĕлтермелле?

– Эсир мĕн тăватăр, камсем эсир? – хăйса-хăйса ыйтать Чашла. – Варкка аппа япалисене мĕншĕн тула кăларатăр?

– Кам, кам? Кам пултăр? Тăванĕсем! Эпĕ унăн ывăлĕ, ку ман арăм. Япалисем кусем пирĕн. Анне мана парса хăварнă.

– Çук вара! – чĕрре кĕрет Чашла. Уял чĕнмест. – Варкка япалисене пурне те пире халалласа хăварнă. Акă эткерлĕх хучĕ.

Арçын алличи япаласене çĕре хурсах хут таткине алла илет. Арăмĕ вара чарăнмасть. Сĕтĕрет кăна.

– А-а! тарăхса каять арçын. – Акă камсем вĕлернĕ манăн аннене! Сире пула мар-и вара вăл вилсе кайрĕ? Эсир пулман пулсан вăл халĕ те пурăннă пулĕччĕ. Хулана илсе каяс терĕм те, мана пăхакан пур, терĕ. Акă халь пăх та кур, кам пăхать халь?

– Намăссăрсем! – сасартăк сиксе ӳкет япала сĕтĕрекен хĕрарăм ачасем çине. – Тухса кайăр кунтан. Халех! Кĕççе питсем! Пире парса хăварнă теççĕ тата. Кунта сирĕн пĕр япала та çук.

Çавăн пек пăскăртса тăнă чухне хĕрарăм сăнĕ-пичĕ хĕремесленсе хитремарланса кайрĕ. Хăрушшăн курăнать. Мегера, тейĕн.

– Хăвăр пăхманнине пирĕн çине яратăр-и-ха вара халь, – парăнмасть Чашла, Уял ăна пaçăрах çаннинчен урамалла туртнине пăхмасăр. – Эпир пăхнă-ха, эсир ăçта пулнă?

– Ку сан ĕç мар! Пӳрт те сирĕн мар. Акă мĕн тăватăп эпĕ сирĕн эткерлĕх ĕнентерӳ хучĕпе!

Арçын алăри хута чĕрсе пăрахать. Ним калама аптранă ачасем кутăн чака-чака картишĕнчен тухса каяççĕ. Мĕн пулса иртнине, тата мĕншĕн çапла килсе тухнине ăнланмаççĕ.

# Кĕрхи бал

Кун йĕркипе кĕрхи уяв вăхăчĕ те çитрĕ. Шкулти бала ахальтен тенĕ пек пырса кĕме юрамасть. Кашнин мĕн те пулин хатĕрлемелле. Кашнин хăйĕн тумĕ, ташши-юрри, вăйă-кулли пулмалла. Çавна хатĕрленеççĕ те шкул ачисем.

Çĕрпи илем урокне хатĕрленнĕ пекех хатĕрленчĕ. Ун тумĕ чăн чăвашла килсе тухрĕ. Халĕ унăн çăлтăрлă кĕпиййĕ хăй пĕр уçлăх. Тухйи – тĕнче пуçĕ. Çĕрпи мар, Хĕвелпи, тейĕн. Ун тумĕ патша хĕрĕнни пек ялтăртатса çиçсе тăрать. Çакă таçти юн шайĕнчех упранса юлнă тарăн туййăмсене вăратать. Бала пуçтаранннă ачасем хĕре уççăнах куçлаççĕ. «Нивушлĕ вара Чăвашра та çапла хĕрсем пур?» – шутлать Турул хăйĕн савниййĕ çинчен куç илмесĕр пăхса.

Тина вара хăйне майлă тăхăннă. Çĕрпи хăйĕн чунĕпе ӳтне усал-тĕселтен хуплас тесе асамлă кĕпе тăхăннă пулсан, Тина вара хăйне йăлт уçса хунă. Тинкеререх пăхсан çӳхе кĕпи витĕр кăкăрĕсем кăна мар, купарчисем те курăнаççĕ. Ку вара каччăсене, паллă, астарсах ярать.

Каччăсем те пурте мĕнле те пулин хăйсене кăна тивĕçтерекен сăнар шыраса тупнă. Уял сарă уй пек курăнать, кăвак кĕпеллĕ Чашла хумлă-хумлă шыв пек, Улатимĕр чаплă поэт пек кăтра çӳçне хыçалалла ывăтса кăна тăрать. Турул та тăрăшнă, вăл ăмăрт çунатлă.

Учительсем те кая юлман. Ольга Васильевна хĕртсурт пек шап-шурă кĕпе тăхăннă. Тинĕс Давыдович дипломат костюмĕпе.

питĕ яка курăнать. Эмма Ивановна та çапларах. Ютрах. Татьяна Васильевна çук.

Залра çепĕç кĕвĕ янăрать. Пĕрремĕш ташă – вальс. Ачасем ку ташша Ольга Васильевна вĕрентнĕ хыççăн питĕ юратса пăрахнă. Чунĕсемпе чӳхенсе кăна тăраççĕ. Ташăра кам маларах ĕлкĕрет ĕнтĕ. Турул тем тăхтаса тăчĕ, сисмерĕ те, пĕчченех тăрса юлчĕ. Каччăсем хĕрсене самантрах суйласа илчĕç. Çаврăнаççĕ кăна çемĕ майăн. Турул пĕччен. Ку та питĕ меллĕ. Айккинчен пăхса тăма аван. Кам мĕн туни, мĕнпе сывлани йăлт курăнать. Турул турă пек пăхса тăрать.

Акă ун Çĕрпиййĕ Уялпа питĕ тикĕссĕн, хумлăн-хумлăн чӳхенсе вăштăр-вăштăр çавра çил пек çаврăнкалаççĕ. Тина вара Улатимĕр çумне çыпçăнсах ларнă. Вăл ташлама мар, ыталашма килнĕ тейĕн. Пуçне каччă хулпуççиййĕ çинех хунă. Хăй тем калать. Куçĕ вара, куçĕпе Турула тĕллет. Эй, ку тухатмăш хĕр! Чуна ку, йăлт арпаштарать.

Тинĕс Давыдович Эмма Ивановнăпа. Кусем чисти ледипе сеньор пек. Таса ташлаççĕ. Пĕр пĕринчен питĕ аякка та тăман, çыпăçса та ларман. Ку тĕрĕс. Суя мар.

– Турул, эсĕ мĕншĕн ташламастăн? – янăраса кайрĕ çав вăхăтра Ольга Васильевна сасси. Вăл та партнерсăр тăрса юпнă пулас та, теме тунсăхласа хăйĕн юратнă вĕренекенĕ патне пырса тăнă.

– Тем, питех ташлас килмерĕ те, сăнаса тăратăп. Çын характерĕ ташăра уççăнах палăрать иккен.

– Сăмахран? – интересленсе каять учительница. Вăл халĕ пĕрре те урокри пек

мар. Темле ăшă çапать унран. «Çамрăк-ха вăл! – шутлать Турул. – Кĕлетки тăпăлкка».

– Сăмахран, пĕрре пăхсах паллă, Улатимĕр романтик. Акă еплерех куçĕпе таçти тĕнче хĕрне çитесле пăхать, çумри хĕрне асăрхамасть те. Хĕрĕ вара... Тина ăна астарса пырать. Лайăх пара кусем.

– Уялпа Çĕрпи?

– Кусем Çĕр ачисем. Ял ачисем. Çирĕп чунлă. Пĕри тепĕрне тӳрех çывăха ямасть. Чыслăн ташлаççĕ. Кашнин хăйĕн шухăшĕ.

Çапла калать те Турул çав вăхăтрах Ольга Васильевнăн та ташлас килнине ăнланса илет. Вăл та хĕрарăм вĕт-ха. Турул та ача мар. Çак шухăш ăна вăй кĕртет те вăл «Аван, аван!» текелесе тăракан Ольга Васильевнăна ташлама чĕнет. Вальс кĕвви Турула та ярса илет. Халь тин ĕнтĕ вăл хăй çавăрттарать. Алăри хĕртсурт çапла унăн кашни хусканăвне сисни, ун кăмăлне пĕр ыйтмасăр тивĕçтерни тĕлĕнтерет. Питĕ çăмăл ташлать вĕрентекен. Турул аплах мар пулас. Тăрăшать. Ăшĕ пиçсех каять. Ури те чĕтрет. Юрать çавă вăхăтра ташă вĕçленет. Унсăрăн йăвансах каятчĕ пулĕ. Хашш! сывласа ячĕ ача çмăллăн, юлташĕсем çумне пырса тăчĕ. Пурте кăмăллă пулас. Калаçаççĕ кăна.

– Мĕнле вара, – йĕкĕлтешет Чашла, – учительницăпа ташлама лайăх-и?

– Çăмăл мар, – хуравлать Турул. – Çав вăхăтрах çăмăл та. Вăл таçтан эсĕ мĕн тăвассине сиссех тăрать. Çавăнпа çăмăл.

– Çĕрпи вара мана нимĕн чухлĕ те итлемерĕ, – хутшăнать Уял. Çав вăхăтра

шӳтлесе ыталам пекки тăвать. Хĕр хирĕçлет. – Куртăр-и, еплерех йĕвенсĕр кĕсре вăл. Итлемест.

Каччăсем ăйăрсем пек кĕçĕнсе яраççĕ. Хĕрĕсем те юлмаççĕ. Чăй-чай! тени пур çĕртен те хăлхана хуплать. Туссем мĕн калаçнине никам та илтмест. Улатимĕрпе Тина та илтмеççĕ. Вĕсем çыпçăнсах ларнă. Вальс кĕвви вĕçленни те ним те мар. Халĕ те ташлаççĕ пулинех! Акă çухалнă Марина вырăнне поэт валли тепĕр хĕр тупăнчĕ те!

Çапла тăпăртаткаласа калаçса тăнă вăхăтра темле хăлхана çуракан  кĕвĕ янăраса кайрĕ. Чуна такам питĕ хăвăрттăн тем тума васкатса ал-урана хăлаçлантарать. Твист! Твист! текелеççĕ пурте. Унччен те пулмасть зал варрине Тина вирхĕнсе тухать те ташша илтерме тытăнать. Кун пеккине курман ачасем хытса каяççĕ. Ку чисти упăте хăтланăвĕсем пек курăнать. Çав вăхăтрах илĕртӳллĕ те. Хĕр хусканăвĕсем пĕтĕм тĕнчене кĕлеткелентерсе яраççĕ. Тĕнчере кĕлеткесемсĕр пуçне урăх ним те çук тейĕр. Тĕнчене ку, паллă, астарать, ăссăрлантарать, ясарлантарать. Турулăн та Тина пек ясар пулас килсе каять. Акă вăл хăй мĕн тунине те ăнкарса илеймерĕ. Тина илĕртӳллĕн пăхнине чăтаймасăр унпа пĕрле ташлама сиксе тухрĕ. Мĕнле ташламалли мĕнне кунта пит пĕлни те кирлĕ мар. Авкалан кăна. Тата урасене хăвăрттăн-хăвăрттăн илтер. Пулчĕ те. Çакна никам та чăтса тăраймарĕ. Пурте твист ташлама пуçларĕç. Çĕрпи кăна темле сиввĕнтереххĕн пăхса илчĕ те вырăнтан та хускалмарĕ. Чăн та, чăвашла тумланнă ял хĕрне кун пек авкаланса курнăçланни пĕрре те илем кӳрес çук. Пакăçлатать кăна. Хĕр çакна пĕтĕм

чун-чĕрипе туйса илчĕ. Турула кӳренчĕ. Паçăр тесен паçăр Ольга Васильевнăпа ташласа ирттерсе ячĕ. Ун патне ташлама тесе пымарĕ. Çавăнпа та ун Уялпа ирĕксĕрех ташлама тиврĕ. Халĕ те... Тина хыççăн кайрĕ. Ку такамăн кăмăлне те хуçĕ. Хĕр вăрт çаврăнать те залран тухса каять. Çĕрпи çуккине Турул тепĕртакран кăна асăрхать.

Çĕрпи вара шкул умĕнчи вĕрене айне тухса ларчĕ. Шкул çути сарă-сарă çулçăсене тата саратса кăтартать. Каçхи сулхăн çил килсе çапать те хĕр питне уçăлтарсах ярать. «Тем мар, тем мар! – лăплантарать хăйне хăй хĕр, – иртсе каять». Çил вĕрни ăна кăшт лăплантарать. Чунĕ вăрканипе сисмесĕрех юрласа ярать. «Пĕлĕт, пĕлĕт, кăвак пĕлĕт савни куçĕ пек таса...» – тухать таçтан чун тĕпĕнчен тасалăха ыйтакан сасă. Тасалăх вырăнне вара хăлхана урăм-сурăм кĕвĕ пырса кĕрет. Халĕ тин упăте пек авкаланса ухмаха тухаççĕ мар-и ун тусĕсем? Хăшĕ-пĕрисем çарамасланма та хирĕç мар. Акă еплерех килсе çапать тĕнче хумĕ! Унăн хăйĕн кĕвви, хăйĕн ташши. Чăваш хĕрĕн чунĕ валли унта ним те çук. Ку хурлантарать. Вĕрене çулçисем çĕре тала-тала ӳкни те çĕклентермест халь. Ларать хĕр. Пуçне пĕкнĕ. Хăлхине ют кĕвĕ хуплать. Чунĕ йĕрет. «Ну. çук вара, – сасартăках тарăхса каять Çĕрпи, – Эпир парăнмастпăр!». Çав сăмахсемпе вăшт! çĕкленсе илет шкула чупса кĕрсе каять.

Зала чупса кĕнĕ Çĕрпие чи малтан Турул асăрхарĕ. Ăçта кайса кĕчĕ-ха вăл тесе куçлаканскер, хĕр пукан çинче ларакан купăс патне чупса пынине курчĕ. Хĕр купăса Чашлана тыттарчĕ, тем каларĕ. Унтан магнитофон лартнă

сётел патне купарчине ытти ташлакансем пекех пăркаласа чупса пычĕ те, урăм-сăрăм кĕввĕ чарса лартрĕ.

Ку питĕ кĕтмен çĕртен пулса иртрĕ. Пурте юмахри пек пĕр вырăнта хытса тăчĕç. Пĕрисем урисене çĕкленĕ те хăрах ура çине тăнă хурсем пек «мĕн ку, мĕн ку?» тесе какаласа тăраççĕ, теприсем пуçĕсене каçăртса пăрахнă та чĕвен тăнă лашасем пекех курăнаççĕ. Кулăшла ку!

– Чăвашла ташлатпăр! – тет Çĕрпи. – Чашла, яра пар! Çавна çеç кĕтнĕ каччă купăсне тăсса ярать. Чăваш ташши твистран та ирттерет. Питĕ хăвăрт ташă. – Кăна кам пултараять? – хастарланать хĕр. Хăй вара акăш пек юхса тухать карталанса тăма ĕлкĕрнĕ ачасем умне. Кĕвви вара илтерет кăна. Хĕр акăш пек ишсе пычĕ те Турул умне çитсен урипе тапрĕ, ташша чĕнчĕ. Халь тин пăрăнса юлаймăн. Тепĕр тесен, мĕн-ма вара пăрăнмалла тет ку чаплă ташăран. Яш! сиксе тухрĕ каллех Турул карта варрине. Ку ташша та вăл пултарать! Ăмăрт кайăк пек çаврăнма тытăнчĕ шур акăш тавра. Халь-халь тытаслăн пырса кĕрет те хĕрхенем пекки туса айккине вĕçсе ӳкет. Кайăк тытмалла вылять тейĕн. Акăшĕ вара илĕрттет, ун умĕнче пăлтăр-пăлтăр! çаврăнкалать. Ах, хитре те çав чăваш ташши. Турăсен ташши мар-ши вăл? Хĕвел хĕрĕ Çĕрпи ташлани малтанрах асса кайнă чунсене вырăна лартрĕ пулинех. Ачасен сăнĕсем çуталса кайрĕç. Шуйттанланнă кĕлеткисем турăланчĕç. Турула кăна мар, ыттисене те паттăрла вăй кĕртрĕ пулас. Харăссăн-харăссăн тапса тухрĕç Çĕрпипе Турул хыççăн ташлама каччăсемпе хĕрсем. Çук, пĕтмен-ха пирĕн чун! – терĕç пулас, тĕнче

илтмелӗхех кӗрслеттерчӗҫ. Ташӑра та чӑн пулчӗҫ чӑваш ачисен чунӗсем. Чисти ача пек чӑн пулчӗҫ.

## Тӗнче умӗнче

Вӗренӳ ҫулӗ хӑвӑрт иртрӗ. Ачасем чӑнласах тӗнче умне тухса тӑчӗҫ. Тӗнчи хӑй ҫӗмӗрсе кӗчӗ тесен те тӗрӗс. Ачасен чунӗсемпе ӑсӗсене тепӗр май ҫавӑрса хучӗ. Туҫари тӗнченавтсен шкулӗ сисмесӗрех чӑваш ҫӗршыв чикки пулса тӑчӗ. Учительсем ют чӗлхепе калаҫма, тӗнче ӑсӗпе шутлама вӗрентрӗҫ. Халь тин нумайӑшӗн чунӗсене тавӑрса пӑхсан, унта пӗр тӑван япала та тупаймӑн. Мӗн вӑл тӑван ҫӗр тесе ыйтсан, пӗри те атте ҫӗрӗ тесе калас ҫук, ял ҫине ҫаврӑнса пӑхас ҫук. Тӑван чӗлхепе калаҫ-ха тесен, вӑтанса хӗрелсе кайӗ... Тӗнче чӑнлӑхӗ пачах урӑх чӑнлӑх иккен. Ырӑ тӑвас тени те халь тин кам валли тетӗр? Тӗнче валли! Хитри те тӗнчен кӑна пулас. Хамӑр япала ачасене темле кӗрӗс-мерӗс курӑнать. Ӑна пӑрӑхӑҫламалла тет ача чунӗ. Унӑн таса чунӗ халь тин ҫут ҫанталӑка ҫӗмӗрме, пӑхӑнтарма вӗренсе ҫитнӗ те, ача хӑйне питӗ вӑйлӑ пек туять. Ҫак пулӑмсене тӗрӗссипе каласан, никамах та асӑрхамарӗ. Учителсем пӗлнӗ-ха ӗнтӗ. Ачасем тесен, ҫук, чӑн пулас текеннисем те ӑнланса илеймерӗҫ. Ҫакӑ лайӑх та, тен? Акӑ, вӗсем тӗнчене тухса кайӗҫ те ҫухалӗҫ. Ытла пит йывӑрах та пулмӗ пурӑнма ҫав ют уҫлӑхра... Мӗн-ма тесен, вӗсене лайӑх хатӗрленӗ. Чӗлхине вӗрентнӗ, ӑсне панӑ... Чунӗсене те улӑштарнӑ.

Çук, пĕрре те йывăр пулас çук ку ачасене тĕнчене тухма! Турула вара йывăр. Мĕнле-ха, тет ун чунĕ, кам пăхса тăрĕ-ха тăван çĕре? Пурте хулара инженер, артист, врач пулса ĕçлесшĕн. Ялта вара кам ĕçлĕ? Тĕнченавтсен шкулĕ тĕнчене тухма вĕрентет, ялта юлма никам та хистемест. Ку тĕлĕнтерет. Ăçта вара вăл, чăнлăх тени?

Тĕнче ăсне илнĕ ачасем халĕ кашни кун каллех çурран çӳреççĕ. Виçĕ уй, вăрман витĕр тухаççĕ, икĕ çырма урлă каçаççĕ. Чăнлăхĕ çак тăван çĕр-шывра пытанса выртнине чухлаççех ĕнтĕ. Анчах пуçĕсене минретнĕ те, ку илем халь тин кирлĕ мар теççĕ. Таçта тата хитререх пек. Чăн та, тĕнче таçта питĕ хытă йăлтăртатать, йыхăрать, илĕртет. Çав хитре çĕрсене çитсе курас килет.

Уйрăлу вăхăчĕ те çитрĕ. Юлашки каç. Юлашки тĕл пулу. Юлашки калаçу. Улатимĕрпе Тина Хусана каятпăр, теççĕ. Унта-мĕн хими институчĕ пур. Ачасене пурнăç малашлăхĕ химире тесе вĕрентнĕ те, вĕсем химик пуласшăн. Уялпа Чашла тĕнчене кайса укçа çапма ĕмĕтленеççĕ. Вĕсен те чунĕсем улшăннă. Чăнни тени, укçа тĕслĕ-мĕн. Çĕрпи те, чун савни, Мускава тухса тарма хатĕрленет. Унта мĕн чăн тĕнче! Турулăн вара мĕн тумалла тет? Малтанрахпа мĕн шутласа, ĕмĕтленсе хунисене пăрахăçламалла-и? Паллă, унăн чунĕ те хатĕррипе усă курас тет, хитри патне туртăнать. Анчах ку чăн пулас тенипе пĕр килмест вĕт-ха! Ача пек чăн пулма май çуккă-ши вара ку тĕнчере? Таса ачалăх тăван ялта кăна-ши? Тем те шутлать Турул. Тусĕсене те каласа пăхать, анчах лешсем кулаççĕ кăна.

– Пуҫа ан ил, – тет Улатимĕр тусĕ, юлашки хут шкул умĕнчи вĕрене айне пырса ларнă чух. Юлашки калаҫу пулчĕ ку. Туссем юлашки хут пĕрле тăчĕҫ.

– Ытла пит шутлатăн эсĕ, – сиктеркелет ҫара хулпуҫҫине Тина. Уйрăлу каҫне вăл тата шухăрах тăхăнса тухнă. Улатимĕр хулпуҫҫийĕнчен уртăннă хăй. Йăл-йăлл! кулкалать.

– Ялта укҫа пачах памаҫҫĕ, – пăшăрханаҫҫĕ Уялпа Чашла. – Эпир укҫа ҫапма каятпăр. Ялта юлмастпăр.

– Эпĕ те юлмастăп, – тет Ҫĕрпи. – Хĕрсем валли ялта ним те ҫук. Хулара вара...

– Эх, эсир те ҫав! – тарăхса каять Турул. – Ăҫта вара сирĕн пĕр ҫын пек пулас тенисем? Ăҫта пирĕн девиз?

– Вăл ачалăх кăна, – пăркалать тутине Тина. – Ку тĕнчере чăн пулаймăн. Тĕнче йăлтах суяпа тулса ларнă. Ку тĕнчере суймасăр пĕр татăк ҫăкăр та ҫиеймĕн.

– Ан калаҫăр-ха ун пек! Чуна ан ыраттарăр! – пусăрăнать Турул. – Суя мĕнне эпĕ хам та пĕлетĕп. Унран хăрушă япала та ҫук. Енчен те эпир «Ача пек чăн пул» тенĕ пулсан, тĕнче «Вăрă пек суя пул» тет. Тĕнчере пурте вăрлаҫҫĕ, суяҫҫĕ. Чăн ҫынсем ĕҫлесе мĕн тунине улталаса туртса илеҫҫĕ. Эпир те халĕ вĕсен йышне кĕрĕпĕр-и?

– Мĕн вара эсĕ кунта ялта чăн пурăнатăп тесе, чышкуна ĕмсе ларăн-и? – йĕкĕлтет Тина. – эсĕ унта, ху та сиссе юлаймăн, ҫĕрсе кайăн. Ĕҫке ерĕн...

– Ҫук вара! – чăна тухасшăн Турул. – Эпĕ мар, эсир пĕтетĕр. Тĕнчене тухса каятăр

та, йӗрсӗр-палсӑр ҫухалатӑр. Ӗҫлес тӑвас пулсан та, эсир хӑвӑра валли мар, ют валли ӗҫлесе паратӑр. Ют тӗнче вара лайӑхланса, самӑрӑлса кайӗ. Вӑл тата хытӑрах ялтӑрма тытӑнӗ. Тӑван ялсем пӗтсе пырӗҫ... Аҫӑр-аннӗрсем пӗччен пурӑнса ватӑлса вилӗҫ... Эсир ҫуралса ӳснӗ ҫуртӑр ишӗлсе анӗ... Хӑвӑр та таҫти никам та пӗлмен ҫӑва ҫине кӗрсе выртӑр. Тӗнчене эсир пурӑнма мар, вилме каятӑр!

Кун пек вирлӗ калани ачасене аптратса пӑрахать. Чӑн та, тӗнче суя ҫинче тӑрать пулсан, ӑҫтан чӑн пулӑн-ха! Вӗсен те ирӗксӗрех хӑйсен чунӗсене сутма тивет. Тӗнчере унта ҫӑкӑра хӑвна сутнӑшӑн кӑна параҫҫӗ. Тавар пасарӗ теҫҫӗ-и-ха? Пасар мӗнне пит пӗлсех каймаҫҫӗ пулсан та ял ачисем уна-куна чухлаҫҫӗ. Вӗрентмен те мар. Турул тӗрӗсех калать.

– Эпир тӗнче ӑсне илсе каялла ҫаврӑнса ҫитӗпӗр, – тӳрре тухма тӑрӑшать Ҫӗрпи. – Тӗнче туслӑхпа мар, укҫапа тытӑнса тӑрать. Чӑвашра вара, укҫа тени ҫукрах. Эпир нумай укҫа ӗҫлесе илӗпӗр те тӑван яла таврӑнӑпӑр. Ялта пурӑнма пуҫлӑпӑр. Вара... вара тепӗр хут ача пек чӑн пулӑпӑр!

– Суя ку! – килӗшмест Турул. – Тӗнчере пурӑнса, укҫа ҫапса, тӗнче ӑсне чуна илсе эсир йӑлтах пӑсӑлса каятӑр. Киле кӑна мар, эсир хӑвӑра та тек шыраса тупаймӑр. Тепӗр тесен, ҫапла пулма пире ҫак шкулта вӗрентнӗ те! Ахальтен мар вӗт вӑл «Тӗнченавтсен шкулӗ» ятлӑ. Ӑт, тӗнчене тухма вӗрентрӗҫ те пире. Тавах хаклӑ вӗрентекенсене! – Турул шкул енне тӑрса пуҫ ҫапам пекки тӑвать.

– Учительсем айăплă мар кунта, – хута кĕрет Уял. – Тĕнчи хăй çапла. Вĕсем çав тĕнчере пурăнма йывăр ан пултăр тесе вĕрентнĕ те пире.

– Вĕсен чунĕсем те ыратаççĕ, – пăшăрханать Чашла. – Ольга Васильевна калать, айăплă мар-ши эпир сирĕн умăрсенче, тет. Мĕншĕн çапла каланине халь тин ăнланса илтĕм. Вăл хăй айăпне туять. Пире вĕсем, чăн та, тăван çĕре пăхма, тăван яла çĕклеме вĕрентмен. Вĕсен пĕртен пĕр тĕллевĕ – пире тĕнчене кăларасси пулнă.

– Çапла пулнă пулсан та, юрать, уичтельсене тивмĕпĕр. Чăн та айăплă мар. – шухăша каять Турул. – Пирĕн вара каялла мĕнле таврăнмалли пирки шутламалла! Ан тив, тухса каяр. Пире çавна вĕрентнĕ. Анчах та тĕнче ăсне илнĕçемĕн, каялла таврăнас пирки пĕрмаях шутлăр. Мĕн илнĕ ăса йăлтах тăван халăха тавăрса парас пулать. Вăл пире çуратнă, тăрантнă, тепĕр тесен, çын тунă. Халь вара эпир ăна манса кайăпăр-и, сурса хурăпăр-и? Мĕнле çынсем вара эпир? Ун пек çынсене суя тĕнче те йышăнас çук!

Ку татах та шутлаттарать. Апла, вĕсене халь çула тухма вĕрентнĕ пулсан, каялла килме те вĕрентмелле. Тĕнчере таçта çухалса каймалла мар. Вара, енчен те пурте тĕнче ăслă, тĕнче пекех чееленсе килсен кунта, кунта, тăван ялта мĕн пулĕ-ши? Ял та йăлт чееленсе, суяланса кайĕ-ши?

– Атьăр, ĕлĕкхи пек тупа тăвар, – сĕнет Турул. – Атьăр парăнмастпăр çав усал тĕнчене! «Тăван халăхпа, тăван ялпа, тăван çĕрпе пĕр пулар!», теер, уйрăлас умĕн. Вара, вилсен те

каялла таврӑнӑпӑр. Ҫӑва ҫинче те пулин пӗрле выртӑпӑр.

– Каларӑн та! – кулать Улатимӗр. – Шухӑшӗ лайӑх. Чӑн та, темле питӗ ҫӗтсе кайсан та каялла килмелӗх вӑй тупас пулать. Кун пек шанчӑкпа тӗнчене тухса кайма та ҫӑмӑлрах.

– Юрать, Турул! – тӗршӗнет каччӑ ҫумне Ҫӗрпи. – Эпӗ вӗренсе пӗтеретӗп те яла таврӑнатӑп. Иксӗмӗр пӗр ҫурт ларса ача-пӑчаллӑ пулӑпӑр. Чӑнкӑ чӑвашсене ҫуратса тултарӑпӑр!

Кӑна илтсен пурте кулса яраҫҫӗ. Темле ӑшӑ ҫил вӗрсе иртрӗ тейӗн. Чунӗсем тинех лӑшш! пулчӗҫ. Апла, шкул татах та ҫутатать. Анчах тӗнче ҫути мар, яла мӗнле каялла килмелли ӑнкару пырать. Пурнӑҫ хӑй тӑн кӗртет.

– Эпир те, – теҫҫӗ харӑссӑн Уялпа Чашла. – каялла килӗпӗр те Варкка аппа ҫуртне ҫӗнетӗпӗр. Кив пӳрт вырӑнне икӗ хутлӑ коттедж лартӑпӑр. Пирӗн те нумай-нумай ача пулӗ.

– Юрать, мӗн вара! Эпир те хирӗҫ мар! – тет Тина. – Чӑнкӑ пулсан эпир те хирӗҫ пулас ҫук. Тӗрӗссипе вӗсем чӑнласа тӗнче ачисем пулса тӑччӗр. Тӗнче хӑй вӗсем патне вӗренме килтӗр! Ҫапла пулсан эпӗ килӗшетӗп.

– Ку йӑлтах хамӑртан килет, – савӑнать Турул. Ара, туссем саланса кайман. Пурте каялла килме сӑмах параҫҫӗ. Ҫук, вӗсем нихҫан пӗр-пӗрне манас ҫук. Тӑван яла та! – Апла, атьӑр, ҫапла калар. «Халӑхпа пӗр пулар!». Ачалӑха та, халӑха та манас мар. Чӑннине те пӑрахас мар. Ырӑ та вӑйлӑ чунлӑ, хитре те таса ҫынсем ялта сывлӑш пек кирлӗ. Шкулта пире ҫавна вӗрентнӗ мар-и?

Ачасем яланхи пек карталанса тăчĕç те аллисене чĕрисем çине хучĕç. Çук, кусем пĕтмен-ха! Кусем вилсен те тăван яла пулăшса пырĕç. Шăппăнтараххăн кăна, тĕнче ан илттĕр теççĕ-ши, «Ача пек чăн пулар!», «Халăхпа пĕр пулар!» теççĕ. Темиçе хутчен калаççĕ. Шкул та çак сăмахсене илтет пулас. Шкул чӳречисене çапăнса вăл Туçа ялĕ тăрăх каять. Юнашарти ялсене çитет. Вĕрене те кăмăллăн пĕр шавсăр итлесе тăрать.

Хăпартланса кайнă Турул сасартăках хăй çырнă сăвва кăшт улăштарса вулама тытăнать. Вăл сăвва пĕтĕм тĕнче илтет.

Икĕ тĕнче хушшинче çурт ларатчĕ.
Çутă çунатчĕ çурхи ăшă каç.
Туслăх çинчен пĕрмай шухăшлатчĕ
Шкул пахчинче ӳсекен катăркас.

Çу тăршшĕпе шкул çути пек кĕтретĕн
Хăй тĕллĕнех ӳссе ларнă пулас.
Çав кăтăркас атьсене халь кĕтет пуль,
Анчах хăй ăçта пулнине кăтартмасть.

Çав катăркас пĕчĕк çеç, ним те мар вăл.
Ун çеçкине те татма юрамасть!
Шкул çутипе вăл вăраххăн çунать халь –
Чун çавăнпа никамран хăрамасть!

# Эпилог

Нумай вăхăт иртрĕ-и, сахал-и, ачасем вара, чăнах та, тăван халăха манмарĕç. Туçана та манмаççĕ, тĕнченавтсен шкул сăртне кашни çулах пуçтарăнаççĕ. Хăшĕ-пĕрисем ялта пурăнма пуçланă. Хуласенче пурăнаканнисем çĕр ыйтăвĕсене ялтисемпе пĕрле татса пама тăрăшаççĕ. Чăн та, мĕнле лайăх пулнă пулĕччĕ вăл, енчен те ялтан тухса кайнă пин-пин çын вăхăтлăха та пулин çĕр ĕçне хутшăнсан? Çĕр тĕрлĕ специалист çĕр тĕрлĕ ĕç тума пултарать. Хуçалăхра строительсем те, врачсем те, педагогсем те, инженерсем те кирлĕ. Ĕç вара Эльчикре ал айĕнчех. Турул, хуçалăх ыйтăвĕсене хăй çине илнĕскер, тусĕсем патне çырса кăна ярать, лешсем пĕр-тепĕр кунтанах персе çитеççĕ. Ял ĕçне туса параççĕ. Çĕрпи яланах унпа юнашар. Вăл Мускаври ял хуçалăх академине вĕренсе пĕтернĕ те, тем те пĕлет. Ялта халĕ ĕлĕкхи пек ним чухламасăр пурăнма май килмест çав. Тĕнчере мĕн чухлĕ техника, технологи, информаци, çавсем ялта пурте пур. Космос техники те пур. Çанталăк мĕнле улшăнса пынине халĕ уçлăхран пăхса кăтартса пыраççĕ. Эльчикре хăй пĕр климатолог пур. Турулпа Çĕрпи икĕ хутлă çурт лартнă. Ачисем вара... Тĕпĕртетсе кăна чупса çӳреççĕ. Нумаях та пулмасть тĕнченавтсем шкул сăртне ачисемпе пĕрле пухăнма пуçларĕç. Ашшĕ-амăшĕсенчен вĕренччĕр теççĕ пулас. Пуçтарăнаççĕ те çапла ĕлĕкхи пек, ватăлнă пулсан та, «Ача пек чăн пулар!», «Халăхпа пĕр пулар!», тесе тупа тăваççĕ. Ку пысăк вăй парать.

Хӑйсем вара халӗ те ачасем пек вӑшлаттарса ҫӳреҫҫӗ. Тем тӗрлӗ ӗҫ тытса тӑваҫҫӗ. Турул тахҫанах академика тухнӑ. Сӑвӑсем те ҫыркалать. Улатимӗр вара – паллӑ поэт. Тина хими завочӗн пуҫлӑхӗ. Вӗсем те пӗрле. Уялпа Чашла бизнесменсем. Пӗри те, калас пулать, аслӑ тӗнчере ҫухалса кайман. Хӑй вырӑнне тупнӑ. Вӑл ҫеҫ те мар. Тӑван яла манман. Тӗнченавтсен шкулӗ вӗсене тӗрӗссипе. ыррипе, хитрипе пурӑнма вӗрентнӗ мар-и? Ҫавӑнпа та вӗсем тӗнчене чӑн ҫын пулса тухнӑ. Тӗнчене ҫӗнтернӗ. Тӗнче мар, хӑйсем ҫӗнтернӗ. Таҫта тухса кайса юр пек ирӗлсе кайман. Чӑваш чӑнлӑхӗпе тӗлӗнтернӗ. Вӗсене хитре, тӗрӗс, ырӑ пулнӑшӑн хисепленӗ. Тӗрлӗ тӗсмарлӑхпа, суяпа, пакӑҫпа тӗл пулма тӳр килнӗ вӗсене, анчах кусем парӑнман. Тӗнчери пустуй ҫынсем пек пулса кайман. Ҫавӑнпа та пулӗ, тӗнченавтсен шкулӗнче вӗренекенсем, учительсем шкул пахчиниче мухтав аллейине уҫас тенӗ. Пӗрремӗшсем унта камсем пулӗ тетӗр, паллӑ, пирӗн геройсем. Пырса курӑр Туҫари тӗнченавтсен шкулне, паллашӑр унта вӗренекенсемпе. Вара тин сире кашни шкул уҫлӑх карапӗ пекех туйӑнса кайӗ. Вӑл сире те пӗр тӗнчерен тепӗр тӗнчене куҫарӗ. Урӑх уҫлӑха вӗҫсе кайсан вара хӑвӑра ан ҫухатӑр, яла каялла, хӑвӑр тӗнченех таврӑнма тӑрӑшӑр. Унсӑрӑн, унсӑрӑн мӗн усси? Чӑн пурӑнакан кӑна хӑйне турӑ пек туять. Тӗнчене чӑнлатать. Ӑна вара пурте чӑн ҫын теҫҫӗ. Ҫавӑн пек чӑн ҫынсемпе, чӑн чӑвашсемпе, тӗл пултӑмӑр та эпир ку повеҫре. Кам ӑна вуласа тухать, ҫавӑ чӑн пулма тӑрӑшать.

# ТУПМАЛЛИ

## 1. ÇЫРМАРИ ÇĂТМАХ

Тĕлĕк....................................................................3
Тĕпсĕр кӳлĕ...........................................................10
Çил-тăвăл................................................................25
Хула ачи..................................................................33
Протоценоз..............................................................40
Пурнăç йывăççи.......................................................52
Халăх вăйĕ...............................................................76
Хăрушă ĕç.................................................................83
Юрату асапĕ ...........................................................95
Чул вăрттăнлăхĕ....................................................105
Хула пăтăрмахĕ.....................................................110

## 2. ИКĔ ТĔНЧЕ ХУШШИНЧЕ

Ют тĕнче тапăнăвĕ................................................117
Тĕнченавтсен шкулĕ.............................................128
Ырă ĕç.....................................................................136
Чăваш тĕрри..........................................................142
Суя çул...................................................................146
Çĕнĕ пурнăç...........................................................151
Тĕнче никĕсĕ.........................................................157
Пĕрремĕш вальс....................................................163
Лантăш сас парать...............................................168
Аслати вăййи........................................................174
Çĕр кĕлетке.........................................................179
Урам вăййи...........................................................185
Чăваш çулĕ...........................................................191
Шкулти тĕлпулусем..............................................197
Ырă тусан усала кĕтсех тăр.................................202
Кĕрхи бал.............................................................209
Тĕнче умĕнче........................................................215
Эпилог..................................................................222

Желтов Михаил Павлович

# *Икĕ тĕнче хушшинче*

# *Между двумя мирами*

Повести на чувашском языке

Печать принтерная
Бумага принтерная
Тираж 20 экз.
Самиздат «Семья»